А-23
21511-чув

# Леонид Агаков



# Вăрттăн упăшка

Национальная библиотека ЧР
4-021511

21511 чув

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Леонид Агаков

К С(Чув) А23



# Вăрттăн упăшка

*Кулăшла калавсем*

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1977

С(Чув)2
А23

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

**Агаков Л. Я.**
Вăрттăн упăшка. Чувашкнигоиздат, 1977.

248с

*Леонид Агаковăн фельетонĕсемпе кулăшла калавĕсем 1927—1928-мĕш çулсенчех «Капкăн» журналта пичетленме пуçланă. Унтанпа аллă çул — çур ĕмĕр иртрĕ.*

*Малтанхи кулăшла калавĕсем çут тĕнчене тухнă чух Л. Агаков вунçиччĕре çеç пулнă-ха, халь вара вăл утмăл çиччĕ тултарчĕ. Анчах унăн аллинчи перо тутăхмасть, чĕлхи мăкалмасть. Чăваш халăх писателĕ, çав-çавах ырми-канми ĕçлесе, хăйне юратакан вулаканĕсене кĕнеке хыççăн кĕнеке парнелет.*

*Л. Агаковăн пурĕ 54 кĕнеке тухнă, вĕсенчен тăххăрăшĕ — сатирăпа юмор, кулăшла калавсемпе камит кĕнекисем. Ку кĕнеке — вуннăмĕш. Ăна та пирĕн çынсем ăшă кăмăлпа йышăнĕç, юратса вулĕç, кĕнекери произведенисем пурнăçра тĕл пулакан çитменлĕхсемпе, тĕрлĕ суя çынсемпе, ултавçăсемпе, вĕсен киревсĕр ĕçĕсемпе, эрех ĕçсе иртĕхекенсемпе тата ытти çавăн пек йĕркерен тухса кайнă этемсемпе кĕрешме пулăшĕç тесе шанатпăр.*

21511-443

А $\frac{0733-151}{М136(03)-77}$ 27—77 © Чăваш кĕнеке издательстви, 1977 ç.




# Вăрттăн упăшка

Шăп çур çĕрте икĕ çамрăк дружинник хăйсен штабне пĕр аллă пиллĕксене çитнĕ арçынна илсе пычĕç те, штаб начальникĕн сĕтелĕ умне тăрса, пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех каласа пама тытăнчĕç...

— Ирĕклĕх урамĕнче тытрăмăр эпир ăна,— терĕ пĕри, пĕчĕкрех каçăр сăмсаллăскер, хура куçĕсене мăчлаттарса.— Тĕттĕм пралукран йăпшăнса тухрĕ те вăл пĕр калинкkене темиçе хут та тĕртсе пăхрĕ. Калинкки уçăлмарĕ. Вара нумай та шухăшласа тăмарĕ, пушмакĕсене хывса хулпуççи урлă çакрĕ, йĕм пĕççисене тавăрчĕ те хӳме çинелле чакаланма тытăнчĕ. Эпир ăна урамăн тепĕр енчен сăнаса тăтăмăр. Кăштах уйăх çути пулнипе пире вăл питĕ лайăх курăнчĕ...

— Унтан вара мĕн пулчĕ? — ыйтрĕ штаб начальникĕ.

— Унтан эпир часрах урам урлă чупса каçрăмăр та иксĕмĕр те урисенчен ярса тытрăмăр,— ăнлантар-

ма пуҫларӗ тепӗр каччи, сӗвекрех ҫамки ҫинчи тарнӗ шӑлса.— Ӑҫта кӗрсе каятӑн?! Халех аннӑ пултӑр!— тетпӗр. Анчах вӑл хӳме ҫинчен ним тусан та анасшӑн пулмарӗ, арҫури пек тапкаланма тытӑнчӗ. Унтан, темлерен, хӑрах урине вӗҫертрӗ те, Петюка пӗррех ура кӗлипе сӑмсинчен начлаттарчӗ. Ҫыннин сӑмси ахаль те пӗчӗккӗ, вӑл ӑна тата ытларах лапчӑтрӗ курӑнать. Ҫавӑн пек хулиганства хыҫҫӑн ӑна вӑйпах туртса антарма тиврӗ...

— Кам эсӗ? Мӗн тума ҫӗрле сапурсем урлӑ сикме хӑтланса ҫӳретӗн? — тесе ыйтатпӑр. Чӗнмест, мӑшлатать кӑна. Ним те каламасть! Петюкпа иксӗмӗр ик енчен тытса кунталла ҫавӑтса килме пуҫласан тин сӑмах хушрӗ: «Ярӑр мана, эп вӑрӑ та, шульӑк та мар. Йӑпӑрт пӗр хӗрарӑм патне кӗрсе тухасшӑнччӗ ҫеҫ, урӑх пӗр шухӑш та пулман манӑн»,— терӗ. Ну, паллах ӗнтӗ, вӑл ҫапла каласан, тӳсеймерӗмӗр эпир, ахӑлтатсах кулса ятӑмӑр! Шухӑшласа пӑхӑр-ха, начальник юлташ, ҫакӑн пек ват ҫын сӗм-ҫӗрле ҫӳллӗ хӳме урлӑ сиксе ют хӗрарӑм патне кӗрет! Хайӗн килӗнче сахалтан та сакӑр ача пулӗ-ха, тен, мӑнукӗсем те пур-тӑр! Пулать те этем, э? Ял кулли-иҫ!

— Эпир ӑна ӗненмерӗмӗр. Пирӗн шутпа, вӑл унта юрату ӗҫӗпе мар, ҫаратас ӗмӗтпе кӗме тӑнӑ... Ҫавӑнпа тытса килтӗмӗр те кунта.

— Тӗрӗс тунӑ эсир, ачасем...

Дружина штабӗн начальникӗ, вӑрҫӑра сылтӑм аллине ҫухатнӑскер, Чапаевӑнни пек уссийӗсене сулахай аллипе пӗтӗркелесе илчӗ те ҫамрӑксем тытса килнӗ «нарушителе» куҫӗпе шӑтармаллах пӑралама тытӑнчӗ.

Ун умӗнче вӑтам пӳллӗ, ятарласа самӑртнӑ сысна аҫи пекрех ҫын тӑрать. Пичӗ арбуз евӗрлӗ, ҫап-ҫаврака. Уссийӗ шӑрт пек, кӑштах кӑвакарнӑ. Янахӗсем виҫҫӗ. Малалла мӑкӑрӑлса тухнӑ хырӑмӗ ҫинчи кӗпи ҫурӑлнӑ (ку ӗнтӗ хайне хӳме ҫинчен сӗтӗрсе антарнӑ чух пулнӑ пуль) — ҫав ҫурӑк витӗр хура ҫӑм ӑшне путнӑ кӑвапа курӑнать. Чӗркуҫҫи таран тавӑрнӑ хӑрах йӗм пӗҫҫи те ҫӳлтен пуҫласа аяла ҫитичченех ҫурӑлса тухнӑ. Ҫара уран, анчах пуҫӗнче — самаях хаклӑ йышши шлепке.

— Чӑн-чӑн карикатура ку...— хӑй ӑшӗнче кулса илчӗ начальник.— Ӳкерсе илмелле те «Капкӑн» хуплашки валли леҫсе памалла ҫеҫ, тупата. Питӗ вӑйлӑ хуплашка пулать!..

— Ларăр,— терĕ вăл унтан, тытса килнĕ çынна хăй умĕнчи пукан çине кăтартса.

Ку ларчĕ. Ним каличчен малтан вăл начальник куçĕнчен çав тери хурлăхлăн пăхрĕ те:

— Пушмака тăхăнма ирĕк парсамăрччĕ, сирĕн урай сивĕ кунта, манăн урасене шăнтма юрамасть,— ревматис,— терĕ.

— Тархасшăн, тăхăнăр,—пуçĕпе сулчĕ начальник, хăй ăшĕнче çак этемрен халĕ те кулма чарăнаймасăр.

Пĕр вунă минут тăрмашрĕ вара çав çын хăйĕн пушмакĕсемпе. Пĕшкĕнме хырăмĕ кансĕрлерĕ ăна. Аллисем ниепле те пушмакĕ патне çитеймеççĕ. Асапланмаллипех асапланчĕ шеремет! Эхлетрĕ, ахлатрĕ, виçине пĕлмесĕр клевер çисе тултарнă ĕне пек мăшлатрĕ, хушшăн-хушшăн сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларчĕ курăнать. Хăй йĕп-йĕпе тарларĕ. Юлашкинчен, шнурокĕсене çыхкаласа пĕтерсен, пукан хыçĕ çине тайăнчĕ те, хырăмне ик аллипе ыталаса илсе, тепĕр пилĕк минут хушши сывлăш çавăрса ларчĕ. Çавăн хыççăн тин дружина штабĕн начальникĕ унпа сăмах пуçларĕ...

— Ну, хисеплĕ гражданин, халь ĕнтĕ калаçма пултаратăр-и? Пирĕн сирĕнтен ăна-кăна ыйтса пĕлмелле. Йĕрки çапла.

— Халь пултаратăп,— терĕ те лешĕ ăна хирĕç, тем аса илме тăрăшнă çын пек куçĕсене хупрĕ.

— Сирĕн хушаматăр, ятăр тата аçăр ячĕ мĕнле-ха?

— Поросенков, Макар Кузьмич.

— Ăçта пурăнатăр?

— Коммунальнăй слобода, 33. Частнăй хваттер.

— Çемьеллĕ-и эсир, хусах-и?

— Арăмран судпа уйрăлни пĕр уйăх çитет.

— Ачусем пур-и?

— Виççĕшĕ арăмпа, виççĕшĕ манпа.

— Мĕнле професси сирĕн, ăçта ĕçлетĕр?

— Бухгалтер эпĕ. Карттус-çĕлĕк çĕлекен мастерскойĕнче. Вунвиçĕ çул ĕçлетĕп унта.

— Так, так... Халь каласа парăр ĕнтĕ: мĕн шутпа, мĕн ĕмĕтпе эсир çакăн пек сĕм-çĕрле ют çын килне хӳме урлă каçса кĕме хăтлантăр? Тĕрĕссине калăр!

Поросенков ытла тăруках ответ параймарĕ, каллех хырăмĕ кӳпе пуçланă ĕне пек йыварран сывла-сывла илчĕ. Начальник тепĕр хут ыйтрĕ:

— Мĕншĕн эсир çĕр варринче çын хӳми çине хăпартăр? Калăр тӳррипе — мĕн сăлтавпа?

— Манӑн... манӑн ачасене курас килекен пулчӗ, ҫавӑнпа кӗрес терӗм... Хамӑн ачасем-ҫке вӗсем, ман юн...— чылайран тин мӑкӑртатса илчӗ Поросенков.

— Санӑн арӑму пулнӑ хӗрарӑм ҫав ҫуртра пурӑнать-им?

— Ийййа ҫав. Вӑл ҫурчӗ манӑн хамӑн-ҫке, анчах суд мана унтан хӑваласа кӑлармалла, ҫуртне арӑма памалла турӗ. Халӗ вӑл, эсремет, качча кайма шут тытнӑ пулмалла, нотариус патне кайса, кил-ҫурта пӗтӗмпех хӑйӗн йӑмӑкӗ ҫине ҫыртарнӑ, теҫҫӗ. Ну, парнеленӗ, эппин. Ахалех, пӗр пуссӑрах, тӑванла. Мана вара пуҫӗпех шӑхӑртса хӑварчӗ... Ҫвер мар-и ара вӑл!

— Эсир судпах уйрӑлнӑ пулсан, арӑму пулни сире киле кӗртет-и вара?

— Ачасем патне пыма чармасть. Эпӗ вӗсем валли кашнинчех кучченеҫ илсе каятӑп-ҫке. Хӑш чух канфет, хӑш чух шӑккалат...

Ҫак самантра Поросенков хӯмерен ҫакӑнса тӑнӑ чух хӑйне сӑмсинчен ура кӗлипе тӑхӑнтартса янӑ дружинник унӑн пиншакӗн шал енчи кӗсйинчен эрех кӗленчи пырӗ курӑнса тӑнине асӑрхарӗ те ӑна пӗррех туртса кӑларса сӗтел ҫине лартрӗ.

— Ҫакӑн йышши шӑккалат илсе каятӑн-и эсӗ ачусем валли? — ыйтрӗ вӑл унтан ҫилӗпе.— Мӗн ятлӑ-ха ку шӑккалат? Перцовка теҫҫӗ пулас ӑна? Ҫапла-и?

— Ку вӑл ачасем валли мар, эп унпа хама грипп ересрен карланка чӯхесе дезинфекци тӑватӑп...— мӑкӑртатрӗ Поросенков.

— Ҫапах та, тен, эсир суятӑр? Улталатӑр пире?— ун куҫӗнчен каллех чӑрлаттарса пӑхрӗ начальник.— Темле, эсир каланисем ытлах ҫыхӑнса пымаҫҫӗ. Арӑмупа уйрӑлни пӗр уйӑх ҫеҫ, анчах эсир ун патне ҫӳретӗр...

— Каларӑм-ҫке, эп ачасем патне ҫӳретӗп! — хирӗҫлерӗ Поросенков.

— Эппин, ма-ха эсир унта кун ҫутинче мар, ҫӗрле, пӑч-тӗттӗм чух ҫӳретӗр? Вӑрӑ пек, хӯме урлӑ каҫса кӗретӗр?

— Кӑнтӑрла... мӗн... аван мар!

— Мӗншӗн?

— Ҫынсем курма, кайран хамран кулма пултараҫҫӗ. Арӑмӗпе каллех пӗрлешесшӗн пуҫҫапма ҫӳрет, тейӗҫ. Анчах эпӗ мӑн кӑмӑллӑ ҫын, хама тиркенине тӳсме пултараймастӑп. Апломб вӑйлӑ манӑн...

— А-ав, мӗн иккен! Пӗлмен, каҫарӑр. Чӑн та, мӑн кӑмӑллӑ пулмалла ҫав эсир. Халь пӑхсан та курӑнать вӑл. Наполеон пек ларатӑр ав. Хырӑму ҫурӑк, йӗммӳ ҫӗтӗк, сӑмсу пиҫсе ҫитеймен помидор пек. Картинка вӗт, хуть те халех выставкӑна яр!

— Эсир мана кӳрентеретӗр, начальник юлташ!— сасартӑк паттӑрланчӗ Поросенков.

— Юрӗ, юрӗ, кӳрентерменӗпӗр. Ҫапах та сирӗн пирки ыран пурӗпӗр тӗплӗнрех тӗрӗслесе пӗлме тивет. Тем, питех шанас килмест-ха манӑн сире!

— Тархасшӑн, ара, тӗрӗслӗр! Ним чухлӗ те хӑрамастӑп, мӗншӗн тесен эп пур енчен те тап-таса ҫын! Анчах халӗ эсир мана киле кайма ирӗк парӑр: ирччен кунта юлма пултараймастӑп эпӗ, кам та пулин эп милицирен тухнине курсан, манӑн пӗтӗм авторитет пӗтсе ларма пултарать. Хулара мана пурте пӗлеҫҫӗ, паллӑ ҫын эпӗ.

— Чармастӑп. Вӗҫтерӗр,— пуҫӗпе алӑк еннелле сулчӗ начальник. Унтан ҫапах та тӗртсе илмесӗр тӳсеймерӗ: — Ҫӗрле пӗччен ҫӳреме хӑрамастӑр-и? Е хӑнӑхнӑ ӗнтӗ?

Поросенков хӑйӗнчен тӑрӑхланине сисрӗ, анчах начальника хирӗҫ нимӗн те каламарӗ, шӑрт пек уссийӗсене хӑвӑрт-хӑвӑрт хускаткаласа илчӗ ҫеҫ.

* * *

Кӳршӗсем каланӑ тӑрӑх, Макар Кузьмичпа унӑн арӑмӗ Варвара Федоровна нумай-нумай ҫулсем хушши пит лайӑх пурӑннӑ. Пӗр-пӗрне чунтан-вартан юратса, кӑвакарчӑнсем пекех килӗштерсе, пӗр сивӗ сӑмах каламасӑр. Пӗрне-пӗри вӗсем хуть те хӑҫан та «Макарушка», «Варварушка» тесе кӑна чӗннӗ. Ҫӳҫӗсем кӗмӗлленме пуҫланӑ пулин те, ялан пӗрле, хулран-хул ҫакланса ҫӳренӗ — пасара та, кинона та, шӑрӑх кунсенче Атӑл леш енчи хӑйӑр ҫинче хӗртӗнсе выртма та, кӑмпа татма та. Хӑш чухне ҫынсем умӗнчех чаплаттарса чуптунӑ...

Килӗ-ҫурчӗ вӗсен хӑйсен пулнӑ — ӑна Макар Кузьмич пӗр ҫирӗм пилӗк ҫул ӗлӗкрех, хӑй леспромхоз бухгалтерӗнче ӗҫленӗ чух укҫасӑр-мӗнсӗрех майлаштарса юлнӑ, пӗтӗм расхучӗ те директора пӗр эрне хушши урӑлма памасӑр эрех ӗҫтерни ҫеҫ пулнӑ. Темшӗнҫке, авланнӑ хыҫҫӑн малтанхи вунӑ ҫул хушшинче

ача тавраш҃ пулман вёсен, анчах кайран Варвара Федоровна, такам ҫине хытӑ тарӑхнӑ пекех, умлӑн-хыҫлӑн ултӑ ача туса панӑ, патшалӑхран пособи илме те тапратнӑ. Кӗскен каласан, Поросенковсен пурнӑҫӗ пур енчен те ӑнсах пынӑ, вӗсен пурнӑҫне хуть те кам та ӑмсанма пултарнӑ!

...Унтан сасартӑк ҫаксен килӗнче ырӑ мар шӑв-шав илтӗнме пуҫланӑ. Ятлаҫу, харкашу. Пӗрне-пӗри калама ҫук кӳрентермелле вӑрҫнисем, ылханнисем.

Кӳршӗсем шалт тӗлӗннӗ: мӗн амакӗ пулчӗ кусене? Мӗнле тухатмӑш пӑсса ячӗ вӗсен чип-чипер пурнӑҫне? Мӗн пирки ҫуйхашаҫҫӗ?

Хаҫатра Варвара Федоровна хӑйӗн упӑшкинчен уйрӑлма «ӗҫ пуҫарни ҫинчен» пӗлтерӳ тухсан (ун чух йӗрки ҫаплаччӗ), вӗсене пӗлекенсем пурте пӗҫҫисене шарт! ҫапса ах! тенӗ, турра ӗненекен карчӑксем темиҫешер хут сӑхсӑхса илнӗ.

— Кай, кусем ухмаха ернӗ пуль!

— Ачи-пӑчи те пӗр кӗтӳ, хӑйсем те ватӑ ӗнтӗ...

— Ҫынсенчен вӑтанасчӗ хуть...

— Тьху, каяннисем! Иккӗшне те чӗн пушӑ ҫеҫ кирлӗ!

Суд пулнӑ кун ӑна итлеме пӗр икҫӗр ҫын ытла пухӑннӑ. Ай тур-тур, мӗн кӑна илтмен вӗсем унта! Макар Кузьмиччи Варвара Федоровна ҫинчен, Варвара Федоровни Макар Кузьмич ҫинчен каламанни те хӑварман, тет, ҫав. Эс апла та эп капла, эп капла та эс апла! Хӑйсен сӑмахӗсене ӗненсен, вӗсем чӑн-чӑн вӗреҫӗленсемех пулнӑ, ҫирӗм пилӗк ҫул пӗрне-пӗри пӗр ҫутӑ кун та кӑтартман, пӗр-пӗрин юнне ӗҫсе кӑна пурӑннӑ. Упӑшки арӑмӗ ҫинчен темтепӗр каланӑ чух та, арӑмӗ упӑшкине кӑшлама тытӑнсан та залра ларакан тӳрӗ чунлӑ ҫынсем, тӳсеймесӗр, урисемпе тапӑртатсах кӑшкӑрнӑ:

— Тӗрӗс ма-ар! Эле-ек! Варвара Федоровна ырӑ ҫы-ын!

— Суять! Макар Кузьмич нихҫан та ун пек пулма-ан!

Анчах урса кайнӑ мӑшӑра мирлештересси ҫинчен сӑмах та пулма пултарайман. Вӗсем ҫав самантра пӗрне-пӗри тытса хӗнесе тӑкма та хатӗр пулнӑ...

— Уйӑрас,— тенӗ суд.— Пурлӑхне ҫурмалла, пӗр тан пайламалла тӑвас.

— Мана нимӗнле пурлӑх та кирлӗ мар,— халӑха

каллех тĕлĕнтерсе пăрахнă Макар Кузьмич.—Маншăн çак арçурирен хăпни те темех тăрать,— Варвара Федоровна çине тĕллесе кăтартнă вăл.— Анчах виçĕ ачи манпа пулччăр. Вĕсемсĕр пурăнма пултараймастăп, çакăнса вилетĕп эпĕ вĕсемсĕр.

Çак суд çинчен кайран чылайччен пĕтĕм хула калаçса пурăннă...

Анчах хулари шавлă пурнăçра тем те пулса иртет,— кулмалли те, хурланмалли те, тĕлĕнмелли те, тарăхмалли те,— пурне ăçтан астуса çитерĕн? Тата этем пуçĕ архив мар вĕт, унта ытла пурте упранмасть.

Поросенковсем çинчен те манса пынă çынсем. Çавăнпа та дружина штабĕн начальникĕ вĕсем çинчен кÿршĕсенчен ыйтса пĕлме тăрсан, ăна никам та ытлашши нимех те каламан.

— Уйрăлнă-тăк — уйрăлнах ĕнтĕ... Вĕсенчен тухман ку йăла, вĕсем пĕтерес çук ăна. Хăйсенне хăйсем пĕлеççĕ пуль!

Макар Кузьмич судпа уйрăлса тухса кайнă хыççăн хăй килне çÿренипе çÿременни çинчен ыйтсан, вĕсемпе юнашар пурăнакан йĕтĕн сÿсĕ пек сухаллă пĕчĕк старик ним тытăнса тăмасăрах каласа хунă:

— Сисĕнкелет тепĕр чух, палăркалать. Эп часчасах ыйхă килменнипе аптăратăп та асăрхакалатăп: чăн та, вăрă пекех килсе кĕрет хăйĕн килне Макаркка. Çур çĕрсем иртсен килет те кăвак çутăпа тухса шăвăнать вара. Хи-хи-хик! Эпир яш чухне çÿрекелеттĕмĕр çавăн пек, юттисем патне... Анчах ку вĕт хăйĕн арăмĕ патне килет, пĕр-пĕр çăмăл ăслă матка патне вăрра кайнă пек! Кулăш! Кам пĕлет, тен, кун пирки вĕсем малтанах соклаç тунă? Уйрăлнă пулсан та, ватлăхра ют килсем тăрăх сĕмсĕрленсе çÿрени те, ют çынна киле кĕртни те килĕшсех каймасть те-ха, ара... çавна шута илеççĕ пуль! Соклаççăрах мар ĕнтĕ ку, соклаç пурах вĕсен...

Çакăнсăр пуçне дружина начальникĕ урăх нимĕн те пĕлеймен. Юлашкинчен, вăл хăй те леш сÿс-сухал каланипе пĕтĕмпех килĕшнĕ: «Соклаççăр мар ĕнтĕ ку...»

* * *

«Соклаç» пулнă çав Поросенковсен. Питĕ пысăк та çирĕп «соклаç»! Пĕр-пĕринпе пур кÿршĕсене те илтĕн-

мелле ятлаçма-варçма пуçличченех, пите кĕççе çĕленĕ пекех намăса пĕлмесĕр суд умне, пĕтĕм халăх умне тухса тăрса пĕрне-пĕри çĕр çинчи чи усал сăмахсемпе хăртма тытăначчене пулнă вăл килĕшӳ...

Чăн та ĕнтĕ, çав килĕшĕве хут çине çырман. Ун çине пичет те пусман. Нотариус патне кайса та çирĕплеттермен. Анчах пĕр-пĕрне чунтан-вартан юратакан упăшкипе арăмĕ кăмăллăн калаçса татăлни пур йышши хутсенчен те çирĕпрех-çке! Вĕсем пĕрре ыталанса чуптуни те çитмĕл çичĕ пичет пуснинчен вăйлăрах.

Тĕп-тĕрĕссипе каласан, вĕсен пĕтĕм ĕçĕ-пуçĕ ак еплерех пуçланса аталанса пынă...

Юлашки çулсенче Поросенковсен нумай-нумай паллănă çыннисем, тусĕсем темиçешер хутлă çĕнĕ мăн çуртсене пурăнма куçнă. Хăшĕсем икшер, теприсем виçшер пӳлĕмлĕ хваттерсем туяннă. Пĕри, Яка Микула тенĕскер, тăвата пӳлĕмлине туянма та ăс çитернĕ. Поросенковсене пĕрре кăна мар çав хваттерсене «çума», ялти пек каласан — çĕн пӳрт ĕçкине — чĕннĕ.

Ах, ăшчикки хыпнă вара Варвара Федоровнăн! Кĕвĕçнипе, ăмсаннипе ниçта кайса кĕреймен, ун пĕтĕм шăмшакĕ кĕçĕтме тытăннă. Ытла та чаплă-çке хваттерĕсем: асли те аслă, тата, кунсăр пуçне, вутă-мĕн хутас, шыв патне каяс хуйхи те çук, мунчи те, тула тухмалли те пӳртрех — нихçан шăнса пăсăлмăн. Пăрăлтатса газĕ çунать, шăнкăртатса шывĕ юхать... Çулла пулсан, балкон çине çемçе кресло туртса кăларса, улпут пек саркаланса лар...

— Ы-ых, мĕн каламалли! Виличчен пурăнса курасчĕ пĕрре çавăн пек пурнăçпа! Тепĕр тесен, ун пек пурăнма тапратсан, вилес те килес çук пулĕ çав...

Варвара Федоровна малтан ытахальтен пек, унтан çине тăрсах хистеме тытăннă Макар Кузьмича:

— Атя-ха, эпир те çавăн пекех хваттер ыйтатпăр... Йăлăхрăм эпĕ çак йывăç лупасра пурăнса! Вутă хут та шыв çĕкле, хĕлле хĕрĕх градус сивĕре те сарай хыçне кай...

— Памаççĕ пире,— тенĕ Макар Кузьмич, пуçне пăркаласа.

— Мĕншĕн памаççĕ пулать? Эпир çынсенчен мĕнрен катăк?

— Пирĕн хамăрăн кил-çурт пур...

— Вăл ниме те пĕлтермест. Кала, хваттер илсенех çуртне сутса яратăп, те.

— Май килмест çав ун пек. Малтан çуртне хула Советне памалла, вара тин калаçма пулать...

— Мĕнле вăл... памалла? Ахалех-и? Пĕр пуссăрах-и?

— Ахалех çав.

— Ну, капла килĕшместĕп эпĕ! Çав териех ухмаха ермен-ха çакăн пек кермене пĕр пуссăр парса ларма!

— Эппин, мĕнле пĕлнĕ — çавăн пек ту.

— Эсĕ çапах та тăрăш! Черете çыраççĕ, тет, унта!

— Кил-çурт пуррисене черете те çырмаççĕ. Саккунĕ çапла.

— Ухмахла саккун вăл! Кала эс вĕсене!

— Эс ху кайса кала...

— У-у, çулламан пăру! Санран ĕмĕрне те нимĕн те пулас çук! Пĕр кĕтӳ ача туса тултартăн, анчах вĕсене этемле усраса ӳстересси çинчен шутлама та пĕлместĕн!

— Эп вуник çула çитиччен хура пӳртре пурăннă, çапах та çын пулнă, ыттисенчен кая мар...

— Тьху! Мĕн çынĕ пур сан çумăнта?! Мăкла ĕне вĕт эсĕ! Ват лаша! Тăнсăр така! Сурăх!..

Кĕскен каласан, малтанхи вăхăтра Макар Кузьмич чаплă хваттер илесси пирки питех шухăшламан, мĕншĕн тесен хăйĕн килне те тиркемен вăл (пятистеннăй пӳрт, сарай, нӳхреп, сад, ун варринче хитре кăна беседка...). Анчах шыв тумламĕ те, пĕрмай пĕр çĕре тумласа тăрсан, чула шăтарать, теççĕ. Варвара Федоровна атакисем ăна пурăна-киле чăннипех тăнран кăларма пуçланă. Тытăннă вара Макар Кузьмич çӳреме... Паян кунта çитнĕ, ыран унта,— ыйтнă, тĕпченĕ, сăнанă, çывăх тусĕсемпе канашланă... Опыт та пухнă хăшĕ-пĕрисенчен — патшалăха улталама май тупас енпе. Пĕррехинче вара, çакăн пек разведкăран питĕ ывăнса таврăнсан, сĕтел çине çур литр кăларса лартнă та, арăмне куçран тӳррĕн пăхса:

— Тавай, Варварушка, уйрăлатпăр! — тенĕ.— Заявленине эсĕ паратăн-и, эп паратăп-и — вăл пурпĕрех. Анчах пире уйрăлмах тивет, урăхла май килмест...

Варвара Федоровна тĕлĕнсе шак! хытса тăнă.

— Эс мĕн... эс мĕн, Макарушка, чирлемерĕн пулĕçке? Ăнсăртран, пуçу çаврăнмасть-и санăн? — хăраса ыйтнă вăл.

— Çук, чирлемен,— пуçне пăркаланă Макар Кузьмич, стакана эрех тултарса.— Нормальнă эпĕ.

— Эппин, кампа та пулин тĕл пулса, киле киличчен пĕр çур литрне ятăр пуль? Ӳсĕрпе лăпăртататăн эсĕ!

— Çук, Варварушка, эп санпа урăллах калаçатăп. Уйрăлмаллах пирĕн иксĕмĕрĕн. Пĕрле пурăнсан, ыр пурнăç пулмасть... Ан та тавлаш! Юлташсем те çаплах калаççĕ: арăмунтан халех уйрăл, вара тин этем ретне кĕретĕн, теççĕ...

Варвара Федоровна упăшки çине пĕр хушă ним ăнланмасăр, сывлайми пулса пăхса тăнă, унтан сасартăк диван çине тăсăлса ӳкнĕ те кăшкăрса макăрса янă. Унăн сасси пĕрре выçса çитнĕ ĕне мĕкĕрнĕ пек, тепре автомобиль кăшкăртнă пек, çавăнтах тата йытă вĕрнĕ пек те илтĕннĕ. Анчах та часах макăрнинчен усси çуккине тавçăрса илнĕ те вăл, йăпăр-япăр сиксе тăрса ухват ярса тытнă:

— Вĕлере-еп! Ан пул луччă эс çĕр çинче!..

Юрать-ха, Макар Кузьмич вăхăтра пăрăнма ĕлкĕрнĕ, ахаллĕн унăн пуçĕ тăм чӳлмек пекех арканса кайнă пулĕччĕ.

— Чипер хăтлан! — кăшкăрнă Макар, хăй сисмесĕрех чышкине чăмăртаса.— Итле эс малтан!

— Мĕн итлемелли ĕнтĕ, эс мана ачи-пăчипех пăрахса тухса тарма шут тытнă пулсан?! — сурчăк сирпĕтнĕ Варвара Федоровна.

— Никам та пăрахмасть! Итле теççĕ сана! Кăмăлна çемçетме ак çак стакана ĕç те...

Тепĕр минутран вĕсем, диван çинче юнашар ларса, тин çеç венчетрен таврăннă пекех шăкăл-шăкăл калаçма тытăннă:

— Ăнлан, Варварушка,— тенĕ Макар Кузьмич питĕ çепĕççĕн, арăмне хулпуççинчен лăпкаса,— килйышшăн çеç тăрăшатăп-çке эпĕ — саншăн, хамăрăн иксĕмĕрĕн ытарайми ачасемшĕн... Хваттер пирки хыпкаланатăп! Таçта та çитрĕм, такампа та калаçрăм, анчах та питĕ кансĕр, Варварушка! Ой, çав тери йывăр! Ниепле те ĕç тухасшăн мар. Кил-çурт пуррисене çывăха та ямаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн? Пĕртен-пĕр меслет кăна юлчĕ ĕнтĕ...

— Мĕнле меслет?

— Уйрăлас пулать... Тĕрĕсрех каласан, уйрăлнă пек тăвас пулать!

— Вара мĕн?

— Вара-и? Суд мана килтен хăваласа ямалла тă-

вать те, эпӗ пролетари пулса тăратăп. Килсӗр-çуртсăр, хваттерсӗр-мӗнсӗр çын. Çемйи çавах пулать манăн — виç ачине ман çума çыртаратпăр. Частнăй хваттерте мӗнле пурăнса çитеретӗн вӗсемпе? Мана тепӗр куннех хваттер илмелли черете çыраççӗ...

Упăшкин чее планне ăнланма пуçланă Варвара Федоровна сăн-сăпачӗ çуталнăçемӗн çуталма тытăннă, вăл Макар Кузьмича шăкăр-шăкăр тепӗр çур стакан эрех ярса панă.

— Кала, Макарушка, малалла кала, чунăм...

— Пӗр виç уйăхран-и унта, çур çултан-и,— мана хваттер параççӗ. Санăн çав вăхăт тӗлнелле кăмăлу çаврăннă пек пулать те, эс ман патăма пурăнма куçатăн. Хамăрăн кил-çурта рас! сутса яратпăр. Хайхи вара европейски хваттер те пулать пирӗн, укçа та пӗр купа... Ну, мӗн калăн ӗнтӗ халь, э?

Варвара Федоровна, упăшкине çатăрах ыталаса, çисе ярас пек чуптума тытăннă.

— Ой, ăслă-çке эсӗ манăн, Макарушка, çав тери ăслă! Хăвах шухăшласа тупрăн-и эс куна?

— Хам та пуç купташки ыратакан пуличченех шухăшларăм, шанчăклă юлташсем те каларӗç. Шупашкарта кун пек тăвакансем пулнă, теççӗ. Уйрăлаççӗ, хваттер илеççӗ те унтан килӗ-çурчӗсене сутса пуяççӗ. Эпир мӗнрен катăк?

— Катăк мар, Макарушка, ăçтан катăк пулар-ха эпир? Ылтăн пуç санăн, Макарушка... Ме-ха, ӗç!

Унтан вӗсем çак пӗтӗм ӗçе мӗнле тӗплӗрех тумаллине шухăшласа хунă. Малтан çынсем умӗнче хирӗçме-ятлаçма тытăнмалла, пӗр-икӗ хут тӳпелешсе илсен те кансӗрлемест,— пурте курччăр вӗсен пурнăçӗ пăсăлса кайнине! Судра пӗр-пӗрне ним шеллемесӗр кăшламалла, мӗн калама май пуррине пӗтӗмпех каламалла, судьясем вӗсене мирлештерес пирки çăвар та уçма ан пултарччăр!

Килӗштерсе пурăнакан патшалăхсен дипломачӗсем пекех питӗ мирлӗ, пӗрне-пӗри ăнланса калаçса татăлнă вӗсем. Пӗр ыйту çеç кăштах такăнтарнă, анчах вăл та кайран чиперех майлашăннă.

— А эсӗ, Макарушка, ун пек уйрăм хваттерте пурăнса, ман çинчен манма пуçламăн-и? — асăрханарах ыйтнă арăмӗ.— Çынни лайăх та эсӗ, çапах та, кукша пулин те, арçынах вӗт...

— Ан сӳпӗлтет кирлӗ мара,— тенӗ упăшки.—

Кампа улăштармалла-ха эп сана? Ĕмĕрне пулас çук-кине калаçатăн!

— Çапах та, мĕнле-ха, эппин...

— Эрнере пĕрре киле килсе кайăп эпĕ. Çĕрле, çын курман чух, ара...

— Пĕрре мар ĕнтĕ, иккĕ-виççĕ пултăр,— тӳрлетнĕ арăмĕ упăшкин шухăшне.— Расписани тăватпăр...

— Юрĕ, чунăм!

...Çакăн хыççăн мĕн пулнине вулакан пĕлет ĕнтĕ. Вĕсем судлашнă, уйрăлнă, Макар Кузьмич частнăй хваттерте пурăнма тытăннă, хула Советне кайса хваттер илмелли черете тăнă, эрнере ик-виç хут, пĕтĕм хула тутлă ыйха путсан, хăйĕн килне, арăмĕ патне пырса кайнă. Вăхăт хаваслăрах ирттĕр тесе, кашнинчех эрех чиксе пынă... Çавăн пек çӳренĕ чух пĕррехинче вара ăна дружинниксем çулса илнĕ те хăйсен штабне сĕтĕрсе кайнă...

Ни вилĕ ни чĕрĕ тухрĕ ун чухне Макар Кузьмич милици çуртĕнчен (дружинниксен штабĕ çав çуртрах). Унтан, çĕрлехи уçă сывлăшра ăсĕ-тăнĕ кăштах йĕркене кĕрсен, каласа памалла мар тарăхса кайрĕ... Мĕнле пурнăç пуçланчĕ вара ку?! Хăвăн килне вăрă пек вăрттăн çӳремелле, çитменнине тата, санах тытса каяççĕ, санранах мăшкăллаççĕ, допроссем тăваççĕ! Хăçан, ăçта пулнă ун пекки?!

Пĕр вунă кун каймарĕ вăл çавăн хыççăн арăмĕ патне. Кам пĕлет, тен, халь ăна леш дружинник тенисем кашни каçах сыхласа лараççĕ? Каллех ярса тытĕç те татах кăптăр-каптăр милицие илсе кайĕç. Ыррине кĕтме çук вĕсенчен. Карл Маркс урамĕнчи «Крокодил» çине те ӳкерсе кăларĕç! Пĕтĕм хула кулать вара...

Упăшки пыманшăн хыпăнса ӳксе, Варвара Федоровна ун патне çыру çырса пĕр ачине чуптарчĕ.

«Мĕн пулчĕ сана, Макарушка? Ма килместĕн? Кĕтсе ывăнтăм ĕнтĕ, пăшăрханса пĕтрĕм саншăн, çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймастăп. Чирлесе ӳкмерĕн пуль те? Е ăçта та пулин урăх урама çӳреме тытăнтăн? Пĕлтер часрах, хĕрхен мана, тăлăха юлнă çынна...»

Ку çыру Макар Кузьмича тата ытларах тарăхтарса ячĕ. Эккей, çын çумне хушас шут пур-ха çав ухмахăн! Юрать — унăн килтех лармалла, ни çĕрле тĕттĕм урамра пĕр-пĕр шăпана тĕл пулса çапса ӳкересрен хăрамалла мар, ни милицие лекес хуйхă çук. Хăйне усрасчĕ ман вырăнта! Пĕлĕччĕ вара!

— Кала аннӳне, кӗҫӗр пыратӑп,— хушса ячӗ вӑл ҫыру илсе пынӑ хӗрачине.— Калинккине ан питӗрӗр.

Пӗр вунпӗр сехетсем иртсен вара малтанах илсе хатӗрленӗ «померанцевӑйне» пиншакӑн шалти кӗсйине чикрӗ те черетлӗ «гастроле» тухса кайрӗ. Ҫын-мӗн курасран, яланхи пекех, питӗ улах урамсемпе утрӗ... Темшӗн, чӗри ҫав тери хытӑ шаккарӗ хӑйӗн, хушшӑн-хушшӑн пӗтӗм ӳт-тирӗ ҫӳҫенсе илчӗ. «Ырра мар-ха ку, чирлетӗп пулмалла...» — пӑшӑрханса шухӑшларӗ Макар Кузьмич.

Ырри пулман ҫав, чӑнах та. Кил патне ҫитесси нумай та юлманччӗ, пасар ҫывӑхӗнчи пӗр урамра, тахӑш ҫурт хыҫӗнчен, ун умне иккӗн тухса тӑчӗҫ. Сӳ! туса илчӗ Макар Кузьмичӑн пӗтӗм ҫанҫурӑмӗ, чӗри те яшт! тирсе илчӗ.

«Ак хайхи, лекрӗм! Ку ӗнтӗ милицие сӗтӗрсе кайнинчен те ҫӗр хут усалтарах... Чиксе ан пӑрахчӑрччӗ ҫеҫ...»

— Туртмалли пур-и сан? — хуллен ыйтрӗ пӗри, ун умнерех пырса.

— Ҫук ҫав, туртмастӑп,— терӗ Макар Кузьмич, тутисене аран хускатса.

— Вӑхӑт мӗн чухлӗ-ши тата, пӗлместӗн-и?

— Сехет таврашӗ нихҫан та пулман манӑн, тупата...

— Апла пулсан, эс пире пӗр ҫур литрлӑх кивҫен укҫа памӑн-ши?

— Хавасланса парӑттӑм та... ҫумра укҫа ҫук, пӗр пус та чиксе тухман хампа...

Пӗри Макар Кузьмичпа калаҫнӑ вӑхӑтра тепри хыҫалтан пырса ун аллисене ҫатӑр! тытрӗ те пӗррех каялла пӑрса лартрӗ. Тепри, умра тӑраканни, Макар Кузьмичӑн кӗсйисене ухтарма тытӑнчӗ. Чӑн малтан эрехне туртса кӑларчӗ, унтан бумажникне те тупрӗ.

— Ним те ҫук, тет тата... шӑршлӑ сысна! — терӗ те вӑл ҫилӗпе, Макар Кузьмича хӑлха чиккинчен янк! тутарчӗ. Макар Кузьмич сулӑнса кайрӗ, ӳкетчӗ те пуль, анчах ҫав самантра хыҫалта тӑраканни ӑна тепӗр енчен тӑхӑнтартса ячӗ те, вӑл каллех тӳрленсе тӑчӗ.

— А-аа!! Пулӑшӑр-ӑр!..— кӑшкӑрса ячӗ Макар Кузьмич мӗн вӑй ҫитнӗ таран.

— Ан ҫухӑр, навус купи!..— пӗррех сӑмсинчен

начлаттарчĕ ăна умра тăраканни.— Халех виле пулса выртатăн!

Çапах та Макар Кузьмич кăшкăрни аякка илтĕнчĕ пулмалла. Ытла инçетре те мар милици ши-и!.. шăхăртни янраса кайрĕ, ăна хирĕç кĕçех тепри сас пачĕ...

Мăнтарăн Макар Кузьмичне тапăнакансем тĕттĕм кĕтеселле тапса сикрĕç, анчах вĕсенчен пĕри ăна тепĕр хут та тута урлă питĕ хытă тăхăнтартма ĕлкĕрчĕ. Милици шăхăртнисем çывхарсах килчĕç пулин те, халĕ пĕччен юлнă Макар Кузьмич вĕсене кĕтсе тăрас темерĕ, часрах килĕ еннелле ыткăнчĕ. Çыхланас килмерĕ унăн милицисемпе — каллех отделенине кайма лекет, унта допрос тăваççĕ, протокол çыраççĕ, вĕçне-хĕрне те тупас çук...

...Чĕп-чĕр юн, лачкам тар, вунă çухрăм пĕр чарăнмасăр сиккипе чупнă лаша пек хашкаса пырса кĕчĕ Макар Кузьмич хăй килне. Тӳрех диван çине ӳкрĕ те алли-урисене вилнĕ çын пекех сарса пăрахрĕ, куçĕсене те хупрĕ, вăрахчен пĕр ним чухлĕ те хускалмарĕ...

— Ай, Макарушка, ай, чунăмçăм!.. Мĕн пулчĕ сана капла, кам мăшкăлларĕ кун пекех?! Ай тур-тур, турă амăшĕ, чипер пурăннă çĕртех шар курса ларас пулать-иç!..— ниçта кайса кĕрейми вĕтеленме тытăнчĕ Варвара Федоровна, хăй те вилнĕ çын тĕслĕ пулса кайса. Часрах алшăлли йĕпетсе упăшкин пит-куçне сăтăркаларĕ, пуçĕ çине нӳрĕ тутăр хучĕ, чĕрене лăплантармалли эмел ĕçтерчĕ, анчах лешĕ йӳçĕ пирки Макар Кузьмич ăна çавăнтах сурса пăрахрĕ.

— Эс мана... эрех пар...— аран пăшăлтатса ыйтрĕ вăл.

Юрать-ха, кун йышши «эмелĕ» те тупăнчĕ тĕплĕ хĕрарăмăн. Ăна умлăн-хыçлăн виç мăн черкке пушатсан, тепĕр пилĕк минутран вара Макар Кузьмича кăштах чун кĕчĕ пулас та, вăл майĕпе тăрса ларчĕ.

— Хам турра ĕненекен çын пулнă пулсан, эпĕ паянах чиркĕве кайса пĕр кило туртакан çурта лартнă пулăттăм,— терĕ вăл нимрен малтан.— Чăн вилĕмрен хăтăлса юлтăм-çке! Телей пулман пулсан, эп ĕнтĕ çак самантра урамра майĕпе хытса выртаттăм...

Чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ Макар Кузьмич, хурланса макăрса ячĕ.

— Ачасем тăлăха юлатчĕç... эсĕ те хусах арăм пулаттăн...

Варвара Федоровна ăна тем тĕрлĕ йăпатма, ачаш-

ласа лăплантарма пикенчĕ. Çапах та чылайччен йĕркене кĕреймерĕ вилĕмрен ăнсăртран хăтăлса юлнă Макар Кузьмич. Унтан тăрук пуçне çĕклерĕ те йывăр чышкипе сĕтеле чант! тутарчĕ.

— Çитет мана кун чухлĕ ыр курнипе, Варварушка! Тăрантăм! Мĕн пирки асапланмалла манăн?! Паян милицие сĕтĕрсе каяççĕ, ыран çапса пăрахма тапăнаççĕ... Мĕншĕн, кала эс мана, эсрел пуçĕ!

— Ара, лайăх хваттерлĕ пулас терĕмĕр-çке!..— ун куçĕнчен айăпа кĕнĕ анчăк çури пек пăхрĕ арăмĕ.

— Кирлĕ мар мана нимĕнле хваттер те! — каллех сĕтеле çатлаттарчĕ Макар Кузьмич.— Хамăрăн кил те çитет мана! Вăхăчĕ çитсен илĕпĕр-ха, тен, çакăн пек темтепĕр хăтланмасăрах! Хуть те тем ту эс мана, анчах эпĕ текех ун пек урçалла пурăнма килĕшместĕп! Атя, ыранах ЗАГСа кайса тепĕр хут çырăнатпăр!

— Ах, Макарушка... Тен, кăштах тăхтаса пăхăпăр? Хваттер илмелли черечĕ шăвать вĕт-ха унта,— йăлăнма тăчĕ арăмĕ.— Çынсенчен намăс тата, шухăшла-ха...

— Шухăшламастăп! Ан чĕн эс мана хирĕç! — виççĕмĕш хут сĕтеле çапрĕ Макар Кузьмич.— Намăсне ахаль те самаях куртăмăр ĕнтĕ сана пула. Ыранах мăшăрланатпăр! Туй тăватпăр! Тĕнчене тĕлĕнтерер тепре санпа!

Варвара Федоровна шăпах пулчĕ...

1962

21511-44В

Чувашская
...
...НОТЕКА
... М. ГОРЬКОГО



# Пурте дипломлă!..

Çирĕм пилĕк çулхи Андрон Андроновăн биографийĕ вăрăм мар: çуралнă, шкулта вĕреннĕ, малтан пионер пулнă, унтан комсомола кĕнĕ, тантăшĕсемпе пĕрле тăтăшах колхозра ĕçленĕ, ӳссе çитсен салтака кайса килнĕ, ун хыççăн ялхуçалăх институтĕнче агронома вĕренсе тухнă та виçĕ çул Çĕпĕрте ĕçленĕ...

Пĕлтĕр авланнă, кăçал унăн ывăл çуралнă.

Питĕ телейлĕ вăл.

Халь акă ашшĕ-амăшне, тăванĕсене курма отпуска килнĕ.

Пĕтĕмпе те çав кăна...

...Чугун çул станци çуртĕнчен тухсан, вăл картлашкасем тăрăх чупса анма васкамарĕ, чарăнса тăчĕ.

— Салам сана, тăван хула! Хĕрӳллĕ салам! — пăшăлтатса илчĕ кăшт тăрсан, йĕри-тавралла пăхса.

Станци умĕнчи сарлака площадьре унталла та кунталла халăх кускалать, пурте васкаççĕ, кăшт леререхре троллейбуссем, автобуссем, çăмăл машинсем чупни

куранать, тем тĕрли те пур — сенкерри, сарри, хĕрли, кăвакки...

— Шавлать, кĕрлет Шупашкар!..— шухăшларĕ Андронов.— Виçĕ çул каялла кун пекех шавлă марччĕ...

Унăн ĕнтĕ чăн малтан гостиницăна çитсе вырнаç-малла. Темиçе талăк пуйăспа килнĕ хыççăн тасалас, çăвăнас, канас, кайран хула тăрăх çӳрес. Каçхине, епле пулсан та,— театра!

Андронов таксисем тăракан çĕрелле утрĕ.

Унта халăх тем териех пухăнма ĕлкĕрнĕ. Арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-вĕтти. Чăматансемпе, çыхăсемпе, сум-кăсемпе. Пурте Андронов ларса килнĕ пуйăс çинчен аннăскерсем ĕнтĕ. Ах, çыннисем те çав, иртĕнсех кай-нă-çке халь. Станцирен хуланалла ĕлĕкхи пек çурран утма мар, троллейбус-автобуспа кайма та килĕшмеççĕ, пар вĕсене такси! Канлĕ пултăр, çемçе пултăр, крыль-ца умнех кĕрлеттерсе пырса тăтăр! Тупата, çакăнта вертолет анса ларас пулсан, пурте, таксисем çине ал сулса, ун патнелле ыткăнаççĕ пуль? Этем тени вăл ла-йăхран лайăххине шырать тесе ахаль каламаççĕ. Ытла лайăх пурăнма тапратсан вăл иртĕнме те, пăсăл-ма та пултарать...

Андроновăн та темшĕн таксипех каяс килчĕ те, вăл черет вĕçне пырса тăчĕ. Юрать-ха, черечĕ самаях хă-вăрт шурĕ. Пĕр таксийĕ тăватă çынна лартса каять те, хыççăнах тепри çитсе тăрать. Çирĕм минутсем çеç кĕт-рĕ вăл — «Т» саспаллиллĕ тимĕр юпа тĕлне шур «шашкăллă» йăм-хура «Волга» пырса та тăчĕ. Андроновран маларахра тăнă килйыш — упăшкипе арăмĕ тата пĕр вунă çулхи арçын ача — хыçала кĕрсе ларчĕ, Андронов шофер çумĕнчи вырăна лекрĕ. Пит аван ĕнтĕ ку: вăл виçĕ çул курман хула урамĕсене кур-са пыма пултарать.

— Вырнаçрăр-и? — хыçалти пассажирсем еннелле çаврăнса ыйтрĕ шофер.— Кама ăçта леçмелле?

— Пире Мир проспектне, вуннăмĕш çурта,— терĕ хыçалти арçын.— Агрегат завочĕ çывăхĕнче вăл...

— Пĕлетĕп,— куçне хупса илчĕ те шофер, Андро-новран ыйтрĕ: — Сирĕн ăçта çитмелле?

— Гостиницăна,— терĕ Андронов.

— «Чувашия» пĕр çын та йышăнмасть, нумай пул-масть кĕрсе тухрăм унта, темле делегатсем вырнаçнă, сирĕн «Атăла» кайса пăхма тивет. Эппин, малтан ку-

сене ăсатар, унтан «Атăла» анăпăр. Юрать-и? — Андронова куçран пăхрĕ шофер.

— Пит аван!

...Такси яп-яка («çатма пек!» теççĕ чăвашсем) асфальтлă сарлака проспектпа ыткăнса пычĕ. Ик енче те тем çӳллĕш çуртсем, пĕринчен тепри хитререх.

«Хăçан ĕлкĕрнĕ кусене туса лартма? — тĕлĕнчĕ Андронов.— Виçĕ çул каялла кунта ним те çукчĕ-çке! Ĕçлет çав пирĕн халăх, ай, хытă ĕçлет!..»

Çав хушăрах Андронов шофер çине пăха-пăха илчĕ. Çынни çамрăк-ха, Андроновран аслă пулас çук, питçăмартисем кӳпшек те хĕп-хĕрлĕ, пӳрнепе кăшт пуссанах юн тухас пек, анчах тем тума-çке сăнне-питне вăл авалхи генералсен евĕрлĕ туса лартнă: тулли янахĕсем çинче тем пысăкăш бакенбард, ик еннелле çунат пек сарса янă уссийĕ хăлха патнех çитет.

«Ку пĕтĕм çăма кассан, пĕр мăшăр алсиш çыхма та çитет пуль!» — кулса илчĕ Андронов хăй ăшĕнче.

Ĕçне вара пит лайăх пĕлет пулмалла шоферĕ, машинне вĕçтерет кăна, умри автобуссенчен, грузовиксенчен, тепĕр чух çăмăллисенчен те çил пек иртсе каять.

Тӳсеймерĕ Андронов, мухтаса илчĕ:

— Ытла та маттур-çке эсир... Нумайранпа çавăратăр-и баранкăна?

— Нумаях мар, ик çул кăна. Иртнĕ эрнере пĕрремĕш класшăн экзамен патăм...

— Унччен ăçта ĕçленĕ?

— Ĕçлемен, вĕреннĕ.

— Шоферсен курсĕнче пуль?

— Çук, институтра.

— Институтра?! Хăшĕнче?

— Сельхозĕнче.

— Вĕренсех тухнă-и, е...

— Ĕçе мĕншĕн çурмалла тăвас? Диплом илнĕ, чеçчеç. Арăмăн арчи тĕпĕнче выртать, пурçăн тутăрпах чĕркесе хунă.

Çакна илтсен, Андронов пырне темскер кĕрсе ларнă пек пулчĕ. Пĕр-икĕ хут ӳсĕркелесе те илчĕ вăл. Çав вăхăтрах шофер ун çине хулпуççи урлă пăхса йăл-йăл кулчĕ.

— Эсир мана паллаймарăр курăнать, анчах эпир пĕр вăхăтрах вĕреннĕ сирĕнпе, Андронов юлташ,— терĕ вăл.— Чăн та, тĕрлĕ факультетсенче пулнă: эп

зоофакра, эсир — агрономире. Лайăх астăватăп сире, комсомол пуххисенче пит çивĕч калаçаттăрччĕ...

— Хушаматăр мĕнле сирĕн? — ыйтрĕ Андронов.

— Купташкин. Институтра пурте пĕлетчĕç мана— спортпа вăйлăччĕ эпĕ. Кроссенче яланах мала тухаттăм,— ахаль чупса та, велосипедпа та, йĕлтĕрпе те...

— Астăватăп! — тем пирки хаштах сывласа ячĕ Андронов.— Анчах халь сире паллама та çук. Усси, бакенбард...

— Мĕн тăвас тетĕн — мода! Ман арăм çĕнĕ модăсене юрататъ...

Тек калаçасси пулмарĕ, такси çитес çĕре çитсе пат! чарăнчĕ.

Кайра ларса килнĕ килйыш майĕпен машинăран тухрĕ, арçынĕ шофера пĕр тенкĕ тыттарчĕ. Андронов счетчик çине пăхрĕ—вăл 40 пус кăтартать-мĕн. Эппин, 60 пус таварса памалла. Купташкин кĕсйисене хыпаланă пек турĕ те йăл кулчĕ:

— Каçарăр, гражданин, манăн вакки пĕр пус та çук...

— Юрĕ-çке, тепĕр чух шута илĕр, эппин! — ал сулчĕ тӳлекенни.

Купташкин ăна тав та тумарĕ, кабина алăкне чант! хупрĕ те машинне малалла ыткăнтарчĕ.

Андроновăн халь ку çын çинчен питĕ пĕлес килчĕ: мĕншĕн-ха дипломлă зоотехник такси шоферĕ пулса тăнă? Урăхла каласан — автоизвозчик... Тĕлĕнмелле-çке?

— Институтра панă специальноçпа ĕçлеме май килмерĕ-им тата сирĕн? — ыйтрĕ вăл хуллен, куншăн куляннă пекрех.— Ку чухне ялхуçалăхĕнче ĕç пит нумай-çке? Эп акă хам специальноçпах виçĕ çул ĕçлерĕм, ăна пăрахма та шутламастăп-ха...

— Хăш районта ĕçлетĕр? — ун çине чăрр! пăхса ыйтрĕ Купташкин.

— Кунта мар эпĕ, Çĕпĕрте. Диплом илсенех направлени унта пачĕç те, хирĕçсе тăмарăм. Пĕртте ӳкĕнместĕп уншăн. Ĕçĕ ăнса пынă пек туйăнать. Кандидат диссертацине хӳтĕлеме ĕмĕтленетĕп...

— Вăйлă! — терĕ шофер.— Кандидатсем укçана кĕреçепе хыраççĕ. Анчах манăн... специальноçпа ĕçлесси пулсах çитеймерĕ çав. Институт хыççăн пĕр района ячĕç те... кăмăла каймарĕ! Укçи сахал, хваттерĕ çук, ĕçĕ шуйттан чухлĕ,— выльăх-чĕрлĕх енĕпе районĕ

чăн кайра çапкаланса пырать. Малтисене хуса çитмелле, теççĕ. Çитсе пăх-ха! Пыршу-пакарту тухса кайиччен мекĕрленсен те çитейместĕн! Пăрахрăм та килтĕм—по семейным обстоятельствам. «Обстоятельстви», чăнах та, пурччĕ ĕнтĕ—арăм çамрăк манăн, ансамбльте ташлать. Ультиматум лартрĕ вăл — е Шупашкарта вырăн тупатăн, е мана çухататăн! Эс сысна пăхса пурăннă çĕре эпĕ вĕлерсен те каяссăм çук, терĕ. Килтĕм вара. Пĕр хушă ĕçсĕр пурăнтăм. Арăм кăшламах тытăнчĕ: харам пыр эсĕ, аçа хурт! тет. Кĕç хуса кăларса яратчĕ,— хваттерĕ унăн та-ха... Кайса кĕтĕм вара шофера — ку ĕçе эпĕ çартах, института кĕриччечех вĕреннĕ. Автобатра пулнă та... Малтан — калама та намăс! — ирсерен картишсем тăрăх çӳп-çап, лапраçĕпре пуçтарса çӳрекен грузовик çинче ĕçлерĕм. «Золотарь» теççĕ пирĕн ун пек шоферсене. «Ылтăн турттаракан» тени пулать вăл. Мĕнле йышши ылтăн çинчен калани паллă ĕнтĕ... Анчах каярахпа ыр çынсем пулăшнипе — эрех тем те тăвать! — такси çине лартăм. Икĕ çул ĕнтĕ...

— Килĕшет-и вара ку ĕç?

— Аптрамасть, тиркемеллех мар.

— Укçи лайăх килет-и?

— Çитет çăкăр-тăварлăх. Хăш чух мухмăр уçмалăх та пулать. Мĕн кирлĕ тата мана!

— Çапла ĕнтĕ, çапла... аван,— терĕ те Андронов, пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕ. Унтан тăрук ыйтрĕ:—Анчах совĕç пирки мĕнле?

— Мĕн? Мĕн? — ăнланаймарĕ Купташкин.

— Совĕç, тетĕп. Ăнланмалларах каласан — намăс.

— Мĕнле намăс? Мĕншĕн намăс пултăр? — тĕлĕнчĕ Купташкин.

— Сире институтра вĕрентсе çĕршывшăн усăллă çын тăвас тесе патшалăх мĕн чухлĕ тăкак туни çинчен шухăшламан-и нихçан та? Хăвăр арăмăн арчинче выртакан диплом мĕн хака ларнине пĕлетĕр-и?

— Э-э, ку сăмаха нумай илтнĕ эпĕ! — ал сулчĕ Купташкин.— Пустуй халап! Кашни çын хăйĕн телейне хăй пĕлнĕ пек шырать. Ман пеккисем, институт пĕтернĕ хыççăн яла кайманнисем, пĕлессĕр килет пулсан, Шупашкарта виççĕр çын ытла теççĕ!

— Пулма пултараймасть! — куçĕсене чарсах пăрахрĕ Андронов.

— Пултарнă çав!

— Мĕншĕн вĕреннĕ-ха вĕсем ялхуçалăх институтĕнче?!

— Диплом илме! Епле пулсан та — высши образовани. Ячĕ лайăх!

— Анчах вăл ята тӳрре кăлармалла-çке! Ĕçлемелле!

— Нихăшĕ те ĕçсĕр лармаççĕ. Пурте вырнаçнă. Хăйсен çăкăрне çиеççĕ. Эпĕ те, ав, иртен пуçласа каçчен, хул калакĕсем ыратакан пуличченех баранкăна çавăратăп, обществăшăн тăрăшатăп темелле, халь акă сире фон-барон пек лартса килтĕм... Стоп, çитрĕмĕр!

...Тӳсме çук тарăхса кайнă Андронов машинран вăшт кăна тухрĕ те тӳрех гостиница алăкĕ патнелле утрĕ, анчах самантранах Купташкин сассине илтрĕ.

— Эй, гражданин, тӳлес пулать! Вăтăр пус!

Андронов, таврăнса, Купташкина виç тенкĕлĕх хут тыттарчĕ те пĕр сăмах каламасăрах хăвăрт пăрăнса кайрĕ.

— Паразит...— пăшăлтатса илчĕ те вăл, лач! сурчĕ.

...Андронов гостиница алăкне карт! туртса уçрĕ те вестибюле — малти пӳлĕме — кĕрсе тăчĕ. Никам та çук иккен. Стена çумĕнчи диван та, пӳлĕм тавра лартнă чăх урииллĕ креслосем те пушă.

— Гостиницăсенче яланах халăх нумай пулаканччĕ-çке, мĕнле вара кунта пĕр çын та çук? — тĕлĕнчĕ Андронов.— Ахăртнех, килекенсене пурне те вырнаçтарнă пуль. Эппин, эпĕ те халех номер илсе вырнаçатăп лайăх кăна.

Анчах «дежурнăй администратор» тесе çырнă чӳрече патнелле темиçе утăм тусанах, вăл питĕ кӳрентерекен табличка курчĕ: «Пушă вырăнсем çук!» Чӳречи хупă. Андронов хуллен шаккаса пăхрĕ — сас паракан пулмарĕ.

— Мĕн тумалла капла? Кĕтсе пăхам-ха çапах та, мĕн пулĕ...

Вăл пĕр кресло çине ларса пирус тивертрĕ, сĕтел çинче выртакан хаçата тытса пăхрĕ — хаçачĕ иртнĕ эрнерискер иккен, ăна вăл Красноярск вокзалĕнчех вуланăччĕ.

Вăхăт шурĕ. Çул çинче ĕшеннĕ çынна ыйхă пусма пуçларĕ. Вестибюльте çав-çавах пушă пулчĕ, администратор чӳречи те уçăлмарĕ.

Çывăрсах каяс мар тесе, Андронов вăшт! сиксе

тăчĕ те, хулпуççисене выляткаласа илсе, чӳречерен шак-шак-шак! тутарчĕ. Каллех усси пулмарĕ. Тепре шаккарĕ. Унтан тата тепре. Тарăхса, çине тăрса! Вара тин çывăхри ансăр алăкран аллине урай сĕрмелли швабра тытнă хĕрарăм тухса тăчĕ.

— Ан хăнтăртаттар, ывăлăм, çук унта никам та,— терĕ вăл.

— Администратор ăçта сирĕн? — çилĕпе ыйтрĕ Андронов.

— Марье Левонттĕвнă-и?

— Пĕлместĕп, Марье-и вăл сирĕн, Тарье-и! Мана çак шăтăкра лараканни кирлĕ!

— Паян Марье Левонттĕвнă ларать унта. Анчах çук-ха халь.

— Ăçта вара вăл? Ĕç вăхăтĕнче унăн вырăнта пулмалла!

— Площăтри лавккара сакраничнăй хĕрарăм аттисем сутаççĕ, тет, тем тĕрли те пур, тет те, çавăнта чупрĕç-ха, тирехтăрĕ те, министратăрĕ те, кĕçтелянши те, пухвет майри те, пурте...

— Паçăрах кайрĕç-и?

— Пĕр-ик сехет çитет пуль.

— Пĕчченех хуçа пулса юлтăн, эппин?

— Мĕн тăвас тетĕн? Хушаççĕ те...

— Апла пулсан, кала-ха мана, инке: ак çакăнта «пушă вырăн çук» тесе çырнă. Ман валли пĕр çĕтĕк койка та тупăнмĕ-ши?

— Э-эй, суя вăл! — швабра аврипе сулса илчĕ хĕрарăм.— Епле-ха вырăн çук пултăр! Паян ирпе кăна харăсах çиччĕн тухса кайрĕç, вĕсен койкисене те пуçтарман-ха.

— Ма-ха, эппин, кунта «вырăн çук» тенине кăларса çакнă?

— Сан пеккисене улталама! Марье Левонттĕвнă вăл яланах çакăн пек: хăйĕн ĕç вăхăтĕнчех ăçта та пулин пăрахса тухса каймалла пулсан, çав вывескăна юриех çакса хурать. Чее мар-и? Çынсем килеççĕ те, «çук» тенине вуласа, каялла тухса каяççĕ. Нимĕнле черет те пухăнмасть, ятлаçакан-вăрçакан та пулмасть. Эс кăна пит тӳсĕмлĕ-ха, кĕтетĕн ав...

— Час-часах тухса каять-и вара вăл çавăн пек?

— Кунне виççĕ-тăваттă та çухалать!

— Директор ятламасть-им ăна уншăн? Юрамасть-çке ун пек!

— И-и, ятласси ҫинчен каларán-ха! Хӑй хӑрать унран! Майрин чӗлхи — тин ҫеҫ лупаткаланӑ ҫава пек, кастарма тытӑнать-тӗк — хуть те ҫӗр тӗпне анса кай!

— Мӗнле вара ун пекех паттӑр вӑл сирӗн?

— Ара, упӑшки... упӑшки пысӑк начальник, хулари пур гостиницӑсен пуҫлӑхӗ, тет! Ҫавӑнпа никамран та хӑрамасть Марье! Пӗррех ура тапать те, пурте шӑпӑрт пулаҫҫӗ...

Ҫав самантра урам енчи алӑк уҫӑлчӗ те вестибюле умлӑн-хыҫлӑн тӑватӑ хӗрарӑм кӗчӗҫ. Кашнин аллинчех пӗрер мӑшӑр хӗрарӑм атти.

«Ҫаксем пуль ӗнтӗ кунти пуҫлӑхсем...» — шухӑшларӗ Андронов.

Пуринчен малта питӗ ҫӳллӗ, вӑрӑм мӑйлӑ, кукӑртарах ҫинче ураллӑ, ҫӳҫне-пуҫне хӗп-хӗрлӗ сӑрласа лартнӑ ҫамрӑк хӗрарӑм патлаттарса пычӗ. Сӑнӗ-пичӗ тарӑхнӑ тӗслӗ — черетре ҫӑмӑлах пулман курӑнать. Те ҫапӑҫма та тӳр килнӗ-ха? Ун хыҫҫӑн утаканӗсем кӑшт аслӑрах пулмалла, тумланасса та начартарах тумланнӑ.

Вӗсенчен нихӑшӗ те Андронов ҫине пӑхмарӗ. Самантранах пурте ансӑр алӑкран кӗрсе ҫухалчӗҫ.

— Администраторӗ хӑшӗ? — ыйтрӗ Андронов урай сӗрме тытӑннӑ хӗрарӑмран.

— Малти, ара, тӑрна пекки...

— Хушамачӗ мӗнле унӑн? Ужова мар-и?

— Ҫапла пулас. Хӑй ҫук чух, куҫ хыҫӗнче, ӑна пурте ҫӗлен теҫҫӗ. Паллатӑн-им?

— Ҫук, ахаль ыйтрӑм...

Ахаль ыйтмарӗ Андронов, чӑнах палларӗ леш хӗрарӑма! Унпа пӗрле вӗреннӗ вӑл. Начарах вӗренместчӗ, анчах характерӗ шутсӑр усалччӗ. Хӗр-тантӑшӗсене ним сӑлтавсӑрах кӳрентернӗшӗн профкома пӗрре кӑна мар чӗнсе пӑскӑртнӑ ӑна. Дипломне пуринпе танах илчӗ, анчах — куран! — яла кайман, намӑссӑр, специальноҫӗ ҫине сурнӑ те «хӑна ҫуртне» килсе ларайнӑ!..

Андронов паҫӑр такси шоферӗ Купташкин каланине аса илчӗ: «Хӑйӗн телейне кашни хӑй пӗлнӗ пек шырать...» Мӗн телейӗ пултӑр-ха ӗнтӗ ҫакӑнта, килекенкаякансен ячӗ-хушамачӗсене ҫырса ларнӑ ҫӗрте? Ҫавна валли вӗрентнӗ-и ӑна патшалӑх пилӗк ҫул хушши?!

Питӗ тарӑхса кайрӗ Андронов! Ҫупа-ҫупа янӑ пулӗччӗ ҫакӑн пек намӑссӑрсене!

Çапах та, вырнаçас пулать-çке. Вăл администратор чӳречи патне пырса шаккарĕ. Пĕрре, иккĕ. Виççĕмĕш хут хытăрах тăкăртаттарсан тин сасă илтĕнчĕ:

— Ан çĕмĕрĕр! Апат вăхăчĕ халь, уçмастпăр!

Йăнăшман Андронов: Ужова сассиех, тăкăскă, сĕрмен урапа нăтăртатнă пек сасă!

— Уçăр-ха, администратор юлташ! — татах шаккарĕ Андронов.

— Каланă сире — перерыв пирĕн! Кĕтĕр! — илтĕнчĕ шалтан.

— Эп ĕнтĕ икĕ сехет кĕтетĕп!

— Хуть те пиллĕк кĕтнĕ пултăр! Мана мĕн?

— Тек кĕтме пултараймастăп!

— Пултараймастăр пулсан — тухăр та кайăр, чаракан çук. Эпир те сирĕншĕн выçă ларма пултараймастпăр!

— Уçăр, тетĕп! — Андронов тата хытăрах шаккарĕ.

— Сирĕн мĕн, гражданин, хулиганствăшăн пĕр вунă талăк ларса тухас килет-и? — çухăрсах ячĕ шалти хĕрарăм.— Халех чĕнетĕп!..

— Чĕнĕр, чĕнĕр! Манăн çав-çавах ăçта та пулин çĕр каçмалла!

Пĕрре куç хупса та илеймерĕ Андронов — хайхи хĕрарăм алăкран сиксе тухрĕ. Тигр пек! Халь тесен халь тытса çурма пултарать! Анчах Андроновпа питепитĕн тĕл пулчĕ те малалла ыткăнас вырăнне каялла чакрĕ.

— Андрошка! Ăçтан татăлса антăн эсĕ?! — Хĕрарăм кулса ячĕ, ун çăварĕ хăлхисем таранах сарăлса кайрĕ.— Салам сана! Хĕрӳллĕ салам! — аллине тăсса пачĕ вăл.

— Саламĕ салам та-ха, анчах питĕ хаяр-çке эсĕ, Маруся! Хăранипе чут çеç тухса тармарăм! — терĕ Андронов.

— Хаяр пулăн кунта! Кунсерен çĕршер çын килет, кашни хăйĕн характерне кăтартма, хăратма хăтланать. Пурне те парăнсан — вилес пулать, çисех яраççĕ!

— Вырăн тупăнать-ши ман валли?

— Тупăнмасăр! Пĕрле вĕреннĕ çын, çамрăк чухнехи юлташ валли те тупăнмасан тата! Уйрăм номер паратăп, «люкс», ваннăллă, телефонлă, йĕри-тавра — кавир. Лайăх çынсем валли яланах пур манăн! Хуть те уйăх пурăн. Пĕр-пĕр хитре пике илсе килме те чармас-

тăп... Ха-ха-ха! — лаша тулхăрнă пек кулса ячĕ администратор.

Андронова хулпуççинчен ыталасах илсе кĕрсе кайрĕ вăл. Анчах Андронова хăйне çав самантра хĕрарăм мар, çĕлен ыталанă пек туйăнчĕ. Номера вырнаçнă чух та, кайран та вăл çак Ужова мĕншĕн хăйĕн специальноçĕпе ĕçлеменни çинчен ыйтмарĕ. Ахалех паллă пулчĕ-çке: вăл ĕçлесси çинчен мар, çăмăл та канлĕ пурнăç çинчен çеç шухăшланă. Ыр курасчĕ, урăх ним те кирлĕ мар ун пек экземплярсене. Сăвăссем вĕт вĕсем...

Тарăхмалли кунпа пĕтмерĕ-ха Андроновăн. Çӳçпуçа тирпейлес тесе парикмахерскине кĕрсен, унта та институтра пĕрле вĕреннĕ Любка Свистуновăна тĕл пулчĕ — пĕр аллине пуç тури, тепĕр аллине çап-çутă хачă тытнă та клиент тавра авкаланать кăна! Шутсăр хаваслă хăй, шӳтлет, кулать, кĕçенкелесе илет... Питĕ телейлĕ пулмалла çав!

Каçхине, театр хыççăн апат çиме ресторана кайсан, ун сĕтелĕ умне шĕшлĕ пек сăмсаллă официантка пырса тăчĕ. Ăна та палларĕ Андронов — Клава Морковкина иккен вăл, институтра Люба Свистуновăпа шутсăр туслăччĕ вĕсем, вечерсенче пит лайăх ташлатчĕç...

Номере таврăнсан, Андронов нумайччен шухăшласа выртрĕ:

— Мĕн тума вĕрентнĕ пуль çав эсрелсене! Мĕн тума халăх укçине тăккаланă вăл путсĕрсемшĕн!..

1973



# Михал Михалчăн икĕ пурнăçĕ

*(Унăн килти йытти Барс каласа панă тăрăх)*

Тĕлĕнетĕп эпĕ сирĕнтен, çынсем!..

Хăвăрăн пурнăçра хăш чух пĕр-пĕр чăрмав пулать-и, ăнсăртран кансĕртерех самант килсе тухать-и (ку шута профсоюз пухăвĕнчи критикăпа самокритика, арăмĕ мĕншĕн те пулин пĕр эрне хушши мăртлатса çӳрени, пĕртен-пĕр юратнă ывăл ик-виçĕ хут вытрезвителе лекни т. ыт. те кĕрет),— ялан пире асăнса ӳпкелешетĕр:

— Ман пурнăç — йытă пурнăçĕ! Тӳсме çук!..

— Хăçан хăтăлас ку анчăк пурнăçĕнчен! — тетĕр.

Час-часах тата, ăçтан та пулин — ĕçрен-и, сакăртăхăр сехете тăсăлнă пухуран-и — хытăрах ĕшенсе таврăнсан, пукан çине лак! ларатăр та, хаш! сывласа:

— Йытă пекех ывăнтăм паян! — тесе хуратăр.

Анчах эсир çавăн пек каланисенче тĕрĕсси пит сахал вĕт! Пĕрре-пĕрре, пушă вăхăтра, эсир юриех шу-

хăшласа пăхăр-ха çавăн çинчен. Тупата туршăн, пирĕн пурнăç эсир шутланă пекех йывăр мар. Тата эсир каланă пек ывăнмастпăр та эпир. Паллах, пулкалать тепĕр чухне, пурнăç нихçан та пĕр пек килмест вăл... Ун çинчен каярахпа калăп-ха. Малтан эп сире хампа паллаштарам...

Мана Барс тесе чĕнеççĕ. Вăйлă ят! Барс вăл — Тянь-Шаньпе Памир тăвĕсем çинче пурăнакан хăрушă тискер кайăк, эпĕ — килти йытă кăна, çапах та — Барс! Ман анне — дворняшка, атте — овчарка пулнă теççĕ. Метис, эппин, эпĕ. Гибрид, урăхла каласан. Кирлĕ чух хаяр та, ачаш та пулма пĕлетĕп. Ку вăл таврари лару-тăруран килет. Пурăнасса эпĕ Михал Михалч Осламасов патĕнче пурăнатăп. Вăл мана эпĕ суккăр чухнех таçтан тупса пынă та хăй ачине пăхнă пекех пăхса ӳстернĕ. Ман телее, Михал Михалчпа Раиса Ивановнăн ача-пăча пулман, çавăнпа та вĕсен пĕтĕм юратăвĕ, ашшĕ-амăш туйăмĕ мана лекнĕ. Пит аван пулнă! Кашнинех тивмест ун пек телей...

Михал Михалч Осламасов, çынсем каланă тăрăх, хулара паллă çын, шултра работник пулнă. Ахаллĕн ма-ха ăна, иккĕн çеç пурăнаççĕ пулсан та (манпа виççĕн ĕнтĕ) виçĕ пӳлĕмлĕ, кухньăллă, сарай-нӳхреплĕ уйрăм çурт панă. Чăн та, каярахпа эпир, вăл çурта пăрахса, хула варрине, пилĕк хутлă çурта куçрăмăр, анчах унта та виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пулчĕ пирĕн. Пĕр пӳлĕмне эпĕ йышăнтăм — пĕчченех саркаланса пурăнтăм унта. Пули-пулми çынна çавăн пекки ăçтан лектĕр-ха, хăвăрах шухăшласа пăхăр эсир!

Михал Михалч пит шултра (пысăк мар, ш у л т р а!) çын пулнине çакăнтан та тавçăрса илме пулать: ăна кашни пилĕк-ултă уйăхранах урăх ĕçе куçаратчĕç. Паян акă вăл ată-пушмак çĕлекенсене ертсе пырать, тепĕр кунне хăма-пĕрене, тимĕр-шифер сутать. Таçта та пултарать!.. Пĕррехинче — икĕ эрне хушши — филармони директорĕ те пулса курчĕ! Анчах унтан вăл хăй заявлени парса тухрĕ, юрă юрланипе нумаях малалла каяймăн, ним тупăшĕ те çук, терĕ арăмне.

Вăл мĕн тери паллă çын иккенне Раиса Ивановнăран та пĕлеттĕм. Кӳршĕ хĕрарăмĕсемпе ятлаçнă чух (кун пекки кашни кун тенĕ пекех пулатчĕ) ман хуçа майри ялан çапла каласа парăнтаратчĕ вĕсене:

— Кампа çыхланатăр эсир, шăркалчăсем?! Ман упăшка сирĕнни пек шалттай-палттай çын мар, муку-

латурнăй роботник! Ăна пĕтĕм хула пĕлет, пирĕн хушамат телефон кĕнеки çинче те пур! А эсир мĕн? Çӳпĕ! Çапах та мана хирĕç çăвар уçма хăятăр, сыснасем!

Характерне кăтартма пĕлетчĕ вара Раиса Ивановна, питĕ пултаратчĕ вăл енчен, пĕр тапранса кайсан, манран та кая мар вĕретчĕ. Вăйлăччĕ ун характерĕ, тата... хаклăччĕ тес пулать. Эпир мăн çурта куçнă хыççăн малтанхи çур çул хушшинчех вăл хăйĕн характерĕшĕн виçĕ хут суда лексе штраф тӳлерĕ. Анчах манпа яланах кăмăллăччĕ. Ачашлатчĕ, ваннăра çуса яратчĕ, уйрăм апат пĕçерсе паратчĕ, ир-каç урам тăрăх уçăлтарса çӳрететчĕ. Мăна-аçлăн утаттăмăр эпир унпа парксемпе скверсенче...

Питĕ туслă, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнаттăмăр. Пĕррехинче эпĕ — хамăн шутсăр выляс килнипе — унăн хура хăмăр тилĕрен тунă çухавине йăлт туласа тăкрăм, ним хăвармарăм, тепри пулсан, мана уншăн çаксах вĕлермелле, анчах Раиса Ивановна чĕн пиçиххипе çурăм урлă ячĕшĕн виççĕ-тăваттă туртса çапнипех каçарчĕ.

Çавăн пекчĕ ман пурнăç. Мĕн хурламалли пур-ха ĕнтĕ унта? Тата мĕн йывăрри пур? Хăш енчен тиркемелле ăна? А эсир — «йытă пурнăçĕ», тесе ӳпкелешетĕр. Пĕлместĕр хăвăр нимĕн те!

Михал Михалч ялан пысăк вырăнсенче ĕçленĕ пирки пулас çав, ăна пурте хисеплетчĕç. Кашни кун пулмасан та, виç кунта пĕрре хăнасем пулатчĕçех пирĕн патра. Пĕри пырать, тепри... Уйрăмах Михал Михалч вăрман складĕнче ĕçленĕ чух хăнасем нумай пыратчĕç. Анчах ман хуçасем—перекетлĕ çынсемччĕ, эрех таврашĕ нихçан та илместчĕç, ĕçмелли-çимеллисене хăнисем хăйсем илсе пыратчĕç, Раиса Ивановна вĕсене сĕтел çине майласа вырнаçтаратчĕ çеç. Ку енчен вăл шутсăр ăстаччĕ вара! Тепĕр ресторанта та ун пек илемлĕ, куçа илĕртмелле хурса памаççĕ пуль ĕçме-çимесене! Эп аякран пăхса лараттăм та, манăн, вĕсене курсан, тӳрех сурчăк юхса анатчĕ çав... Ӳпкелешместĕп — Раиса Ивановна мана ун пек чух пĕрре те кӳрентермен: хăнасем умĕнчех сĕтел çинчи чи тутлă татăксене иле-иле хыптаратчĕ.

— Тутанса пăх, Барсик, çи, çи, Барсик...

Ĕçетчĕç-çиетчĕç те шавлатчĕç вара — тур çырлах! Пуринчен ытларах Раиса Ивановна хăй янратчĕ.

Юрлатчӗ — тепӗр качака та ун пек ҫухӑраймасть пулӗ, ташлатчӗ — урай варринчи юман сӗтел те унпа пӗрле тӗпӗрт-тӗпӗрт сикетчӗ.

Ҫапах та, хӑнисем тухса кайсан, ялан тиркетчӗ вӗсене:

— Нахалсем, шампанскине икӗ бутылка ҫеҫ илсе килнӗ! Кукӑлӗ краҫҫын тути калать, канфечӗсем ҫӑвар маччи ҫумне ҫыпӑҫаҫҫӗ! Ниушлӗ вара вӗсем ҫавӑн пек хӑналанипех пире юрама шутлаҫҫӗ?! Ай-ай, ытла та йӳнӗ хакпа туянасшӑн-ҫке хӑйсене мӗн кирлине! Те выҫӑхса ҫитнӗ ыйткалакансем вырӑнне хураҫҫӗ пире? Ан пар эс вӗсене нимӗн те, Мишенька, ҫӳреччӗр сан тавра шӑлӗсене кӑтӑртаттарса! Юрать-и?

— Юрӗ, Раечка, юрӗ, эс каланӑ пек тӑвӑп,—тетчӗ Михал Михалч.

Анчах сасартӑк хӑнасем пач ҫӳреме пӑрахрӗҫ пирӗн пата. Тем пулчӗ! Такам тухатса сивӗтрӗ, тейӗн. Ман хуҫасем хӑйсем те ниҫта та тухса ҫӳремерӗҫ. Михал Михалч кашни ир сухалне хырса, хаклӑ одеколонпа сапӑнса, якалса, хулӑн портфельне ҫӗклесе мӑнаҫлӑн тухса каяканччӗ. Халь, темшӗн, ир-ир ниҫта та каймарӗ, кивӗ пижамине тӑхӑнса, леш «вӗтӗ пӑта» текен йӳнӗ пирус йӑсӑрлантарса те-ек чӳречерен пӑхса ларакан пулчӗ. Унччен мана кашни ир пырса ачашлаканччӗ, халь ҫаврӑнса та пӑхмарӗ. Пӗррехинче эп хам, ачашланас килнипе, ун патне пырса пуҫӑма чӗркуҫҫийӗ ҫине хутӑм, анчах вӑл мана пӗррех тапса ячӗ:

— Пшол вон, харам пыр! Сансӑр та хӑсӑк тухать!..

Хӳрене ик ура хушшине хӗссе, алӑк патне кайса вы-ыртрӑм вара. Питӗ хурлантӑм хам...

Пӗр-икӗ эрне кӗрхи пӗлӗт тӗслӗ пулса ҫӳрерӗҫ Михал Михалчпа Раиса Ивановна. Мана ҫитерме те манчӗҫ, хырӑм выҫнипе хам нӑйкӑшма тытӑнсан тин мӗн те пулин пӑрахса паратчӗҫ. Хӑйсем ҫӗрле те ҫывӑрмастчӗҫ пулмалла, пӗрмай темскер пӑшӑлтатса выртатчӗҫ. Хӑш чух хам унччен нихҫан илтмен сӑмахсене илтеттӗм: ОБХСС, следователь, суд, штраф, тӗрме... Унтан иккӗшӗ те таҫта кайса ҫӳрерӗҫ — ир каяҫҫӗ те сӗм-ҫӗрле тин таврӑнаҫҫӗ. Выҫсах вилеттӗм ҫав кунсенче. Пӗр каҫхине вара Михал Михалч вил ӳсӗр таврӑнчӗ — ура ҫинче те тӑраймасть, вӑл ун пекех пулнине пӗрре те курманччӗ эпӗ. Арӑмӗнчен уртӑнса пӳлӗме кӗрсенех, кӑкран касса янӑ юман пек урайне хӗреплетрӗ, хӑй ҫапах та юрлама хӑтланать:

Помирать нам рановато,
Есть у нас еще дома дела...

Ирхине те, вăраннă-вăранман, вăл çав юррах юрласа ячĕ. Пăхатăп — куçĕ-пуçĕ çиçет кăна хăйĕн, ĕнер çеç авланнă, тейĕн. Йăлт улшăннă ман хуçа, унчченхи салхулăх таçта шăтăка кайса кĕнĕ. Темле питĕ пысăк савăнăç пулнă пулмалла çав, ахальтен мар!

Пит çума кайнă чух мана сăмсаран шаклатса илчĕ, çурăмран лăп-лăп-лăп ачашларĕ.

— Пурăнар-ха пурнăçне, Барсик! Тĕнчене тĕлĕнтерĕпĕр-ха эпир санпа! Çапла-и? — терĕ вăл хавассăн.

...Тĕнче тĕлĕннипе тĕлĕнменнине пĕлместĕп, анчах мана хама Михал Михалч шутсăр тĕлĕнтерчĕ вара! Çуркунне, çĕршыв типнĕ вăхăтра, кĕтмен-туман çĕртенех вăл мана, грузовик çине лартса, хуларан чылай инçете, темле вăрман хĕррине, илсе кайрĕ те çамрăк кăна улма-çырла йывăççисем хушшинче ятарласа ман валли тунă йытă вити, вырăсла каласан конура, çумне тем тăршшĕ сăнчăрпа кăкарса лартрĕ.

— Малашне санăн çакăнта пурăнма тивет, тусăм,— терĕ вăл.— Çитет сана тунеядец пулма! Ку — пирĕн сад, эп ăна пĕр тăсланкă та юлхав поэтран чĕрĕк хакпах илтĕм. Халь ĕнтĕ эс кунта пĕрремĕш хуçа пулатăн, пĕтĕм влаç — санра. Хуть те кам килсен те, тӳрех хăр-р... хам! Тыт та çур! Чăн-чăн барс пек пул, ăнлантăн-и? Асту эп сана! Çывăрнă чух та курса-илтсе вырт! — чышкипе юнарĕ вăл юлашкинчен.

Çав кунах Михал Михалч икĕ трехтонкăпа хăма тиесе пычĕ. Хăми сар çу пек, ик енчен те яп-яка саваланă. Унтан кирпĕч турттарса килчĕ. Цемент. Хăйăр. Шифер. Бетон плитисем. Кантăк. Пăта. Хăй кашнинчех мана асăрхаттарать:

— Куратăн-и, мĕн чухлĕ пуянлăх шанса паратăп эп сана? Мотри, лайăххах сыхла, бдительнă пул! Пĕр кирпĕч те, пĕр сыпăк шифер та, пĕр пăта та ан вăрлаттар. Çакатăп!..

«Вăрра вăрă шанмасть» тенине çирĕплетсе пани пулчĕ ĕнтĕ ку. Кайран пĕлтĕм эпĕ — çак пĕтĕм пурлăха Михал Михалч хăй склад заведующийĕ пулнă чух вăрласа тухса пĕр тусĕ патĕнче пытарса усранă-мĕн. Çавăншăн пĕр хушă арăмĕпе иккĕшĕ те ОБХССран хăраса таппа лекнĕ шăшисем пек чĕтресе пурăннă вĕсем!

Анчах вёсен пуҫӗ ҫине капланса килнӗ хура пӗлӗтсем шуса иртнӗ курӑнать, ним те пулман вӗсене. Кам пӗлет, те лайӑх кӑна ҫу сӗрнӗ-ха кама та пулин?

Ик-виҫ кунтан рабочисем пычӗҫ—пуртӑсемпе, пӑчкӑсемпе, кӗреҫесемпе. Эрнерен пирӗн садра дача ӳссе ларчӗ — юмахри кермен пек! Йӑлтӑр-ялтӑр, пӑхсан, куҫ алчӑраса каять. Ун пекки ку тӑрӑхра никамӑн та ҫукчӗ ҫав! Виҫӗ пӳлӗм — кашнин ӑшне урӑх тӗслӗ сӑрпа сӑрланӑ, веранда, ӑна тӗрлӗ-тӗрлӗ кантӑкпа картланӑ, ҫӳлте — мезонин, аялта — нӳхреп. Ҫук, нӳхреп те мар — бомбоубежище! Ытти дачниксем пыра-пыра пӑхаҫҫӗ те — ах! теҫҫӗ кӑна вӗт!

— Ну, туса лартрӗ те Михал Михалч, пӑх-ха эс ӑна! Эпир пур — йытӑ вити пек будкӑна виҫӗ ҫул тӑватпӑр... Ҫынсем-и эпир?!

Пурте ырлаҫҫӗ, анчах пӗр ватӑрах ҫын — пенсионер пулмалла — ҫав тери кӳренмелле сӑмах каласа хӑварнине илтсе юлтӑм:

— Михал Михалч мар вӑл, Нахал Нахалч! Пӗлетпӗр ку дачӑна мӗнлерех майпа тунине. Жулик! — терӗ те ҫав старик, лач! сурчӗ.

Анлантӑм кӑштах — вӑл ман хуҫа хӑйӗн дачине вӑрланӑ япаласенчен туни ҫинчен каларӗ. Анчах та тытман вӑрӑ — вӑрӑ мар. Ку сӑмахсем Михал Михалча нихӑш енчен те кӗҫӗттермерӗҫ. Вӑл хӑйӗннех турӗ, никама та пӑхмарӗ.

Пахчари ҫӗрне темле эп палламан ҫынсем пырса чаврӗҫ. Питӗ тӗплӗн, торфпа, тислӗкпе хутӑштарса. Уншӑн ман хуҫа вӗсене стройкӑна юрӑхлӑ пулман хӑмасене парса ячӗ. Ҫимӗҫӗсене те — хӑярӗ-помидорӗ, кишӗрӗ-ҫарӑкӗ, укропӗ-редисӗ — ҫавӑн пекех эп хальччен курман ик хӗрарӑм лартса-акса пачӗҫ. Мӗн тӑвас тетӗн, Раиса Ивановна пӗшкӗнеймест-ҫке ха пирӗн, кӗлеткине тем пекех сыхласа пурӑннӑ пулсан та, хырӑмӗ пичке пек пулса кайнӑ — пӗр икӗ пӑт ҫу унта. Пахчине те вӑл тахҫанта пӗрре пырса каятчӗ, хулари хваттерне ытларах сыхлатчӗ, мӑнтарӑн.

Анчах Михал Михалч манпа пӗрлех пурӑнатчӗ. Тӗлӗнмелле улшӑнса кайрӗ ҫын. Службӑра чух яп-яка та ҫап-ҫутӑ ҫӳрекенскер, халь сухалне те хырма пӑрахрӗ, питне те ик-виҫ кунта пӗрре ҫӑвать пулмалла. Таҫтан пожарниксенни пек брезент йӗм, ҫӗтӗк ҫанӑллӑ пиншак тупса тӑхӑннӑ, уринче — пуклак пуҫлӑ кив пушмак. Пӗррехинче эп ӑна хам та палламан. Йывӑҫ тӗми

хыçёнчен пĕр çĕклем çапă йатса тухатчĕ те вăл — вăрă пекех туйăнса кайрĕ, пĕррех сикрĕм çакăн çинелле! Пиншак çаннине лар-р! çурса антартăм...

Килте пурăннă чух, ĕçрен таврăнсан, Михал Михалч кашнинчех хаçат пăхкаласа тухатчĕ. Анчах пахчана куçса килнĕренпе ун аллинче хаçат тавраш пĕрре те пулмарĕ. Лăпкă пурăнтăмăр эпир, таçта урăх тĕнчене лекнĕ пекех.

Çапах та пĕр-икĕ хутчен ЧПсем («чрезвычайнăй происшествисем») пулчĕç-пулчĕçех, ăна пытармалли çук.

...Çимĕçсем пиçсе çитме пуçласан, Михал Михалч таçтан пĕр кĕпçеллĕ тутăхнă пăшалпа темиçе гильза илсе пычĕ.

— Ну, тусăм, халь эпир санпа нимĕнле вăрă-хурахран та хăрамастпăр! Кам килсе кĕрет — тӳрех шаплаттаратпăр! — терĕ вăл мана. Хăй çавăнтах гильзăсене тарпа хутăш шултра тăвар пĕрчисем тултарма тытăнчĕ. Темшĕн-çке, ĕçленĕ май лĕх-лĕх-лĕх кулкаласа илет...

— Вĕлерессе вĕлерместпĕр, ку вăл ытлашши пулĕччĕ, анчах таккойски çухăртатпăр кунпа! — терĕ юлашкинчен.

Çакăн хыççăн икĕ кун иртрĕ-и, виççĕ-и, ăна тĕптĕрĕссипе калама пултараймастăп — сĕм-çĕрле пирĕн пахчана, чăнах та, такам питĕ вăрттăн пырса кĕчĕ. Эп çакна сисрĕм те каçса кайсах вĕрме тытăнтăм. Куçпах куртăм — тĕмĕ хыçĕнче мĕлке тăрать. Сăнчăр çитнĕ таранах ун патнелле ыткăнтăм. Манран хăраса тарма мар, вырăнтан та хускалмарĕ çав мĕлке. Эп хытă вĕрнипе вăранса, кĕçех Михал Михалч крыльца çине сиксе тухрĕ. Аллинче — пăшал!

— Кам унта? Тух халех! Перетĕп!—кăшкăрчĕ вăл урмăшнă сасăпа.

Тĕмĕ хыçĕнчи çын сасă памарĕ. Вара Михал Михалч пĕррех шаплаттарчĕ пăшалпа. Çав самантрах леш çын тискеррĕн çухăрса ячĕ:

— Ай-вай-вай! О-о-о!.. Миша, Мишенька, вĕлертĕн эс мана! Вилтĕм, сыв пул! Вилтĕм!..

Мур çитĕрех! Раиса Ивановна сасси! Мĕне пĕлтерет ку?!

Михал Михалч та арăмĕн сассине уйăрса илчĕ курăнать, пăшалне аяккала ывăтса, тĕмĕ хыçнелле вăр-

кăнчĕ те Раиса Ивановнăн çичĕ пăт таякан тушкинĕ çĕклесе тухрĕ.

— Ай... ой... ох... вилтĕм эпĕ, вилтĕм...— йынăшрĕ Раиса.— Анчах эс ан авлан... ан авлан... мана асăнса пурăн...

Ним тума аптранă Михал Михалч арăмне верандăри диван çине илсе пырса нач! пăрахрĕ. Ăна хĕрхенесси пулмарĕ унăн, тӳрех вăрçма пуçласа ячĕ.

— Мĕн шуйттанĕшĕн çĕрле сĕтĕрĕнсе çӳретĕн эсĕ? Мĕн кирлĕ пулчĕ сана? Эп кăшкăрсан, ма хирĕç сас памарăн, йӳтенĕскер!

— Ах, Мишенька...—йынăшрĕ арăмĕ,—мана мĕн... çынсем каларĕç, эс кунта хĕрарăмсемпе аташса пурăнатăн, терĕç... Килсе курас терĕм хам куçпа... Анчах эс вĕлертĕн мана... Юри вĕлерес тесех петĕн пуль çав. Эпĕ ватă та-ха, сана çамрăккисем кирлĕ те...

— Хуп çăварна, ухмах! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç упăшки.— Никам та вĕлерес темен сана, вилместĕн те эсĕ: мăнтăр пĕççӳне темиçе пĕрчĕ тăвар çеç кĕрсе ларнă. Çынсем лĕпĕртетнине ĕненнĕшĕн сана, чăнах та, çарамаслантарсах пĕçертмелле!

Чылайччен ятлаçрĕç вĕсем, унтан çапах та майлашрĕç пулмалла та тин çеç авланнă мăшăр пекех вырăн çине кĕрсе выртса лăпланчĕç.

Кайран-малтан пирĕн пата пĕр вăрă тавраш те пыман вара...

Тепĕр «ЧП» тата вăйлăрах пулчĕ.

Пахчана темиçе грузовик тислĕк пырса тăкнă пулсан та, ман хуçана ку çителĕксĕр пек туйăннă курăнать. Пахча таврашĕнче ăçта пĕр ывăç тислĕк курнă— йăлт пуçтарса кĕртрĕ. Хăш чух — хаçатпа чĕркесе, алăра нимĕн те çук пулсан — пуçĕнчи улăм шлепкепе çĕклесе. Пухать те пухать çапла. Унтан тахăшĕ пирĕн пахча хыçне каç-каç ула кĕсре пырса яма пуçларĕ,— курăк пит вăйлăччĕ унта. Хайхи Михал Михалч çав кĕсрене куçран вĕçертмесĕр сыхлама тытăнчĕ: леш хӳрине çĕклет кăна — Михал Михалч тӳрех витре тытса чупать.

— Ах, лайăх япала! Ылтăн! — тет вара, пăсланакан витрене каткана пушатса.— Çăвĕпех çакăнта çӳретĕрччĕ ку кĕсре!

Анчах ула кĕсрене вăл çеç мар, тепĕр çын та куç хывнă иккен. Вăрманти тăманасен пыйтине тĕпчесе наукăсен кандидачĕ пулнăскер тет çынни. Вăл та кĕс-

ре патне витре йатса чупма тытăннă. Швежи, песплатнă тислĕк вĕт-ха! Михал Михалч пĕр ирхине ирех тăрса витрепе чупса каять — лешĕ пуçтарса илме те ĕлкĕрнĕ иккен. Эх, тарăхать вара ман хуçа!

— Эс мĕнле правăпа çын тислĕкне пухса çӳретĕн? — хаяррăн ыйтать кандидатран.

— Çыннăнне мар, кĕсренне,— тет лешĕ.

— Вăрă эсĕ! Ку тислĕк — манăн!

— Епле сан пултăр-ха вăл?

— Эп ку кĕсре хуçипе калаçса татăлнă!

— Контрактаци турăн-им? Кĕсре тислĕкне пуçтарса тăма договор çыртăн-и?

— Хуть те мĕн тунă пултăр, сан ĕç çук унта! Тавай тислĕкне, халех пушат!

Кандидат памасть. Ман хуçа вăйпа туртса илме пикенет. Леш ăна тĕртсе ярать. Ӳкерет. Ку сиксе тăрать те ăна хăлха чикки парать. Лешĕ хирĕç янклаттарать. Пĕрре-иккĕ, виççĕ-тăваттă. Вырăсла каласан, удар — контрудар. Иккĕшĕ те чĕп-чĕр юн пулаççĕ çаксем. Çапах та ман хуçа çĕнтерет-çĕнтеретех... Кандидат витринчи тислĕке туртсах илет, пуш витрине кандидат пуçĕ çине тăхăнтартса ярать. Анчах вĕсем кун çинчен никама та каламарĕç пулас, иккĕшĕ те шăпăртах пулчĕç — çынсем пĕлсен, намăса ăçта чикес? Чылайран тин пĕлтĕм: вĕсем çав кандидатпа иккĕшĕ пĕр чĕрĕк ĕçсе «по-джентельменски» калаçса татăлнă — мăшăрсăр (нечетнăй) кунсенче кĕсре пурлăхне Михал Михалч пухать, мăшăрлă (четнăй) кунсенче — кандидат...

Тата тепре çавăн пекех питĕ хытă тарăхрĕ ман хуçа.

Пĕррехинче Раиса Ивановна ăна темле çыру пырса пачĕ. Месткомран çырса янă иккен... пенсионерсем пулсан та, профсоюз укçи тӳлес пулать сирĕн, çичĕ уйăхшăн тӳлемен... Çав хута вуласа тухрĕ те Михал Михалч, тăрук кив çăпата тĕслĕ пулса кайрĕ, ăна лăрлар! çурса тăкрĕ.

— Эккей, укçа шăйăрасшăн манран! Тупнă ухмах! Кирлĕ мар мана нимĕнле профсоюз та! Çунса кайтăр!

— Уйăхне пилĕк пус кăна-çке...— терĕ Раиса.

— Пулин! Пилĕк пус — укçа мар-им? Шалиш! Тӳлеместĕп!..

Хулари пенсионерсен пуххине чĕнсе янă хута та çавăн пекех урлă-пирлĕ çурса ывăтрĕ:

— Çитет, хам ĕмĕрте пухусенче ларса сахал мар йĕм çĕтнĕ!

Анчах пахчара питĕ вăйлă ĕçлетчĕ вара, ăна пытармалли çук. Шăварать, кăпкалатать, кашни çумкурăкне, пуçне кăларсанах, татса ывăтать... Çимĕçсем пулма пуçласан — кашнине тыта-тыта пăхать, шутлать: миçе помидор, улмуççи çинче миçе панулми...

Суяс мар, малтанхи çул тупăш пысăках пулмарĕ пирĕн, анчах кайранхи çулсенче ай-ай усси лайăх пулчĕ! Раиса Ивановна май уйăхĕнчех укроп, симĕс сухан сутрĕ, унтан çĕр çырли, чие, хăяр, помидор, панулми, кишĕр... Хăйсем çиместчĕç те пулмалла, йăлт пасара йăтатчĕ. Укçа! Капитал!

...Хура кĕркунне мана киле, хулана илсе кайрĕç. Ну, ыр куратăп ĕнтĕ халь, хĕл каçах улпут пек пурăнатăп, тесеттĕм. Анчах ман пӳлĕме çынсем йышăннă иккен — Раиса Ивановна такамсене хваттере янă. Ман пӳлĕме çеç мар, иккĕмĕш пӳлĕмне те,— хăйсем пĕр пӳлĕмĕнче çеç юлнă. Чăнах та, йытă пурнăçĕ пулчĕ вара манăн, хĕлĕпех алăк патĕнче выртса пурăнтăм. Çăва тухсан, каллех пахчана илсе кайса кăкарчĕç. Каллех Михал Михалчпа иксĕмĕр пурăнма тытăнтăмăр. Ăна никам та кăкарман ĕнтĕ, вăл хăй кăкарăнчĕ. Ман пек сăнчăрпа мар, çăтлăх пăявĕпе кăкарăнса ларчĕ.

...Шеллетĕп эпĕ хамăн хуçана! Чăн та, йытă пурнăçĕ вĕт унăн, пĕртте этем пурнăçĕ мар!

1965



# Хаклă кĕрÿ

Ĕлĕк-авалтан пыракан йăли çапла ĕнтĕ: паллана çынсем хуть те ăçта тĕл пулсан та, чăн малтан пĕрне-пĕри ырлăх-сывлăх сунса ал параççĕ, унтан вĕсем хушшинче ак çакăн евĕрлĕрех кĕске кăна калаçу пулса иртет:

— Мĕнле пурăнкалатăр, Пет Петрович? Курманни нумай пулать...

— Чиперех-ха. Хăвăр мĕнле, Ехним Ехнимч?

— Эпир те аванах пурăнатпăр-ха. Ĕçлетпĕр, çăкăр чăмлатпăр. Арăм йĕкĕреш ача туса парса савăнтарчĕ.

— Пит аван, пит аван! Сывлăхăр мĕнлерех тата?

— Вăл енчен те аптрамастăп-ха. Иртнĕ эрнере кăвапа тĕлне ÿпне çăпан тухса ларнипе асапланнăччĕ те, халь вăл шăтса юхрĕ ĕнтĕ. Санăн хăвăн сывлăху епле?

— Мана... пыр ярăнни çеç аптраткалать, урăх ним пирки те ÿпкелешместĕп.

— Ну, ку чире ăна часах пĕтерме пулать, ун валли эппин, васкатăп. Иртсе çӳренĕ чух кĕрсе тухăр!

— Вăл çапла-ха, вăл — тĕрĕс... Ну, сыв пул-ха, эмелне рецептсăрах параççĕ!

— Хăвăр та ан манăр пире...

Çакăн хыççăн туссем уйрăлаççĕ те тепĕр минутран хăйсем мĕн çинчен калаçнине те манса каяççĕ, мĕншĕн тесен кун каçиччен мăн хулара ун пек тĕлпулусем темĕн чухлех пулма пултараççĕ. Астуса ил-ха эсĕ камăн-камăн арăмĕ йĕкĕреш çуратнине, кам-кам холодильник е телевизор туяннине, Сочине е Кувшинкăна кайса килнине, вытрезвительте выртса тухнине... Вĕсене пурне те астума сахалтан та така хуранĕ пысăкăш пуç кирлĕ вĕт!..

Нумаях пулмасть Конон Иванч Петрушкина Атăл хĕрринче ăнсăртран тĕл пулсан, пирĕн хушăра та çавăн пекрех стандартлă калаçу пуçланчĕ — мĕнле те епле, анчах та часах сăмах-юмах шаларах кĕрсе кайрĕ те, ăна вара эпĕ питĕ лайăх астуса юлтăм.

Конон Иванча эпĕ нумайранпа пĕлетĕп. Вăрçăра та пĕр хушă пĕрле пулнăччĕ. Хурламалла çын мар вăл. Сăпайлă, лăпкă, ĕçчен. Пĕрмаях суту-илӳре ĕçлет пулин те, следователь е прокурор умĕнче пĕрре те тарласа тăман-ха. Анчах арăмĕ вара... Мĕнле каласа парас-ши сире унăн арăмĕ çинчен? Эсир Николай Васильевич Гоголĕн «Ревизорне» вуланах ĕнтĕ, сцена çинче те пĕрре кăна мар курнă-и, тен. Çавăнти городничий, леш Сквозник-Дмухановский арăмне астăватăр-и? Епле вăл унта, хăйĕн хĕрĕпе тупăша-тупăшах, Хлестакова хăйне юраттарасшăн тăрăшать, э? Конон Иванчăн арăмĕ, чип-чипер чăваш Тарйинчен француз-ла Дора пулса тăнăскер, шăп çавăн йышши чĕрчун. Шутсăр ватăласшăн мар, эсрелĕ! Кашни виçĕ çултах паспортне улăштарса тăрать,— юриех çухатнă пек тăвать те, тивĕçлĕ штраф тӳлесе, çĕннине илет. Мĕн пирки ун пек хăтланать, тетĕр-и? Ара, кашнинчех хăй хăш çулта çуралнине улăштарса çыртарать иккен. Çулĕсене чакарттарса пырать!.. Çут тĕнчере пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă çул пурăнма тытăннăскер, юлашки паспорт тăрăх çав Тарье-Дора халь 1925 çулта çуралнă пек курăнать...

Пĕр сăмахпа каласан — пултарать! Упăшкине вăл килте иккĕшĕ кăна пулнă чух та, çынсем умĕнче те питех çăвар уçтармасть.

— Ан палка эсӗ, шӗпӗн! Такам хӑлхана чикет пуль сан сӑмаххуна! — тесе урипе пӗррех тапать те кушакӑнни пек симӗс куҫӗсемпе вӗтсе илет ҫеҫ.

Тӗрӗссипе, упӑшкине «шӗпӗн» тесе ят пама сӑлтавӗ те пур ӗнтӗ унӑн, мӗншӗн тесен Тарье-Дора Конон Иванчран сахалтан та пӗр икӗ шит ҫӳллӗ, анлӑшӗпе виҫӗ хут сарлакарах пуль. Центнера яхӑн туртакан хӗрарӑм мӗн калӑпӑш пулассине эсир хӑварах чухламалла.

Анчах эпӗ кӑштах аяккалла пӑрӑнса кайрӑм пулас. Манӑн сире Конон Иванч ҫинчен каласа кӑтартмалла вӗт-ха...

Ҫапла, эпӗ унпа нумаях пулмасть Атӑл хӗрринче тӗл пултӑм. Тин ҫеҫ тутлӑ апат ҫисе тухнӑ пӗр-пӗр вӑйпитти пенсионер пекех, вӑл кӑкрипе ҫыран хӗрринчи эрешлӗ чул хӳме — балюстрада — ҫумне тайӑннӑ та, Атӑл леш еннелле ним тӗлсӗр пӑхса, пирус мӑкӑрлантарса тӑратчӗ.

— Сывӑ-и? Мӗнле пурнан, тусӑм?

— Тавтапуҫ, сывах-ха, чиперех пурӑнкалатӑп...

Анчах эпӗ унӑн кив шӑналӑк тӗслӗ пулса кайнӑ сӑн-питне, шалалла чышса кӗртнӗ пекех путса ларнӑ куҫӗсене, тулалла хирӗнсе тухнӑ янах шӑммисене куртӑм та, тӳрех унӑн пурнӑҫӗ юлашки вӑхӑтра ытла туртлах пулманнине тавҫӑрса илтӗм.

— Чирлемен пулӗ те эс, Конон Иванч?

— Ҫук...

— Мӗн, эппин, тата... кӑшт улшӑннӑ пек? Хуйхӑсуйхӑ пулчӗ-им?

Конон Иванч, ывӑннӑ ват лаша пекех хашш! сывласа, ҫунса пӗтнӗ пирусне сурса пӑрахрӗ те ҫавӑнтах ҫӗннине хыпса тивертрӗ.

— Чим-ха, Конон Иванч, эсӗ туртмастӑнччӗ вӗт-ха? Иксӗмӗр вӑрҫӑран таврӑнсан тепӗр куннех пӑрахнӑччӗ!

— Ку пурнӑҫпа чӗлӗм туртма мар, ӗҫме те тытӑнӑн...— каллех хашлатса илчӗ вӑл.

— Мӗн пулчӗ вара ун пекех?

— Пулчӗ ҫав мӗн пулмалли. Ӗмӗр асӑнмалӑх пулчӗ! Юрать, саккунӗсем лайӑх халь пирӗн. Атту пулсан, татах тем курмаллаччӗ-ха...

Эпир ҫыран хӗррипе тӑварах кайса сак ҫине лартӑмӑр. Вара, эпӗ ҫине тӑрсах ыйтман пулин те, вӑл хӑйӗн килӗнче мӗн пулса иртнине, сӑнран мӗншӗн

çакăн пек ӳкнине каласа пачĕ. Чунĕ кӳтсе çитнипе унăн хăйĕн те пĕр-пĕр çывăх çынна пĕтĕмпех каласа парасси килнĕ пулмалла çав.

Хурлăхлă пулчĕ унăн калавĕ, анчах те Конон Иванч пурнăçра пур чух та хаваслă, шӳт тума юратакан çын пулнă пирки, те халь ĕнтĕ хуйхи-суйхи кăштах иртсе кайнипе, ăна итленĕ май кулмасăр та тӳсеймерĕм эпĕ...

— Ман çемьене пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ,— тесе пуçларĕ Конон,— виççĕн кăна пурăнатпăр эпир. Кĕлетке пăсăлать тесе, ман арăм пĕр ача çуратнă хыççăн урăх тăвасшăн пулмарĕ. Ну... çамрăк чухне пĕр-икĕ çул театрта актриса пекки те, унтан парикмахерскинче ĕçсĕр аптранă майрасен чĕрнисене хăйраса сăрлаканни, леш маникюрша тени те, пĕр хушă ресторанра «метрдотель» — официанткăсен пуçлăхĕ те пулса курнăскер, хăйне яланах шутсăр культурăллă çын вырăнне шутласа пурăнчĕ...

— А ма, Дора Петровна, чăнах та, культурăллă хĕрарăм пек туйăнать мана...— пӳлме тăтăм эпĕ.

— Э-эх, туйăнать кăна çав! — ал сулчĕ вăл.— Çиелтен пăхсан, питĕ лайăх: тумланма пĕлет, сăрланма ăста, унтан яланах чи çĕнĕ йышши духи шăрши кĕрет, çынсем ăслă сăмахсем калаçнă чух та çăварне шыв сыпнă пек тăмасть, палкать, анчах та хăй вăл букварь хыççăн виçĕ кĕнеке вуласа тухман вĕт! — Конон Иванч мана темшĕн айăпласа вăрçнă пекех калаçма пуçларĕ.— Мĕн чухлĕ тертлентĕм пуль эп унпа, мĕн чухлĕ вĕрентме тăрăшрăм пуль, тĕрлĕ курссене те вырнаçтарса пăхрăм, кружоксене çӳреме те хистерĕм — ним усси те пулмарĕ, веçех харама кайрĕ. Ача пулман пулсан, эп унтан тахçанах уйрăлнă пулăттăм, анчах ачана телейсĕр тăлăх тăвас килмерĕ. Питĕ шутсăр юрататтăм эп ăна! Çавăнпа тӳссе пурăнтăм. Анчах ачине те çынсем пек йĕркеллĕ ăстăн парса ӳстересси пулмарĕ... Тарье ăна мĕн пĕчĕкренпех хăй аллине çавăрса илчĕ те мана çывăха та ямарĕ. Эп — мужик, ачана ним лайăххине те вĕрентме пултараймастăп имĕш, çитменнине, манран яланах е краççын, е çĕрĕк пулă шăрши кĕрет (тавар базинче ĕçлетĕп-çке-ха!). Пуçлăхсем хушнипе манăн тата пĕр виçĕ çул хушши района кайса ĕçлемелле пулчĕ,— ун чух, ачана ялта усрама пултараймастăп тесе, Тарье вырăнтан хускалмарĕ, вĕсем ачапа иккĕшех хулара пурăнчĕç.

«Ленӑна эпӗ сансӑрах пит лайӑх воспитани парса ҫын тӑватӑп, эс мана укҫа ытларах илсе килсе пар кӑна!» — тетчӗ вӑл кашнинчех.

Воспитани панӑ вара вӑл хӗрачана, ҫын тунӑ,— хӑй каларӑш, ҫырлахтӑр турӑ! Ача мар, фарфортан тунӑ пукане ӳстернӗ. Ӑнсӑртран такӑнса ӳксенех чӑлпар ванса кайма пултарать! Ятне те улӑштарнӑ вӗт эп килте ҫук чух: Ленӑран, Еленӑран темле Элла туса хунӑ. Чӑваш мар топпер, француз! Хӑйне те Тарье вырӑнне Дора тетерет те-ха вӑл...

Паллах ӗнтӗ, хӗрачана нимӗнле ӗҫе те хӑнӑхтарман. Музыка шкулне ҫӳрет-ҫке, рояль калама вӗренет, епле-ха ӗҫлеме юратӑр ӑна? Ҫинҫе пӳрнисем хытса ларма пултараҫҫӗ мар-и!.. Шкулта та вара... мӗн каласси пур! Тройкӑсемпе, час-часах двойкӑсемпе, макра-макра, чирлени ҫинчен палланӑ тухтӑрсенчен справкӑсем илкелесе, класран класа аран-аран куҫкаласа пынӑ. Эп районран каялла таврӑнса пынӑ ҫул унӑн вуннӑмӗш класа куҫмаллаччӗ, анчах ӑна тӑххӑрмӗшӗнчех хӑварчӗҫ. Пӗр класра икӗ ҫул ларнинчен те уссиех пулмарӗ, мӗншӗн тесен кашни каҫ, пӗр кун сиктермесӗр, танцине чупатчӗ. «Кӗҫӗр пирӗн кружок пулать», «паян эпир репетици тӑватпӑр» тесе тухса каять те — ан кӗт вара ӑна!.. Эпӗ кун пирки арӑма калакалама тӑтӑм, кун пекех ҫӳресен, темрен тем ан пултӑр, ташши ниҫта та тармӗ-ха вӑл, малтан чипер йӗркеллӗ вӗренсе пӗтерес пулать тесшӗн пултӑм, анчах мана вӑл ҫӑвар та уҫтармарӗ.

Ну, аран-аран, унтан-кунтан сыпӑнтаркаласа, пирӗн хӗр вунӑ класс пӗтерчӗ. Ҫав ятпа амӑшӗ ун валли пӗр купа парне, тем шуйттанӗ те илсе тултарнӑччӗ! Укҫи шӑпах пурччӗ пирӗн ун чухне, ялта юлашки ҫулсенче пӗр-пӗччен пурӑннӑ атте вилсе кайрӗ те, эпӗ унӑн килҫуртне сутса килтӗм, кив укҫапа хӗрӗх пин пачӗҫ. Тарье вӑл укҫана тӳрех хӑйӗн перекет кӗнеки ҫине хучӗ те мана тӗсне те кӑтартмарӗ, веҫех хӑй пӗлнӗ пек салатрӗ, хам валли эпӗ пӗр сӑмса тутри те туянаймарӑм...

Илсе пычӗ пирӗн хӗр аттестат. Мана кӑтартасшӑн та мар, амӑшӗпе иккӗшӗ ӑна тӳрех комода питӗрсе хума тытӑнчӗҫ. Ҫапах та эп ӑна вӑйпа тенӗ пекех тытса илтӗм те — ман ҫамка ҫине нимӗҫ пӑрҫи пек шултра тар тапса тухрӗ.

— Ай-уй, çара тройкăсем кăна-çке санăн, хĕрĕм?..— йынăшсах ятăм эпĕ.

— А мĕн, япăх-им? — пĕкĕ пек куç харшисене çĕклесе, чалăшшăн пăхса илчĕ ман çине Элла.

— Мухтанмаллах мар...

— Пĕлместĕн эсĕ нимĕн те! Ку чухне тройка чи лайăх отметка шутланать. Ăна «международнăй» теççĕ!..

— Çапах та, ăçта та пулин вĕренме кĕрес пулсан, кăтартма та намăс вĕт-ха...

Эп çапла каланине илтсенех, Тарье бомба пек çурăлса кайрĕ.

— Мĕн намăсĕ? Мĕнле намăс? Шкултан кăларса яман вĕт ăна, вĕренсе тухнă вăл! Йытă хӳри кирлĕ-им тата сана? Сурнă эп отметкăсем çине — виççĕ-и унта, пиллĕк-и, саккăр-и, маншăн пурĕпĕр! Аттестачĕ пултăр! Тăп-тăр ухмахах çав эсĕ... Ачашăн савăнас вырăнне ăна кӳрентерсе тăратăн! Парăп акă пĕрре туту урлă...— аллинчи йĕпе алшăллипе хăмсарса илчĕ вăл.

Тек чĕнмерĕм вара, ытла чĕрре кĕрсе кайиччен хăвăртрах тухса шăвăнтăм. Аттестат пирки урăх çавар та уçмарăм...

Шкула çӳреме пăрахнă хыççăн ик-виç кунтанах Элла хăйĕн ал туни хулăнăш, тикĕт пек йăм-хура ик çивĕтне кастарнă та, юлашки çӳçне сап-сарă сăрлаттарса, ĕнси çинелле юпах тиха хӳри пек мăкăртса хунă. Чĕре çурăлсах каятчĕ çакна курсан, анчах... шарламарăм. Касса ывăтнă çӳçе пурпĕрех сыпаймастăн халь тин!

Хăй вара çу каçипех пĕрре те килте лармарĕ. Кăнтăрла Атăл леш енче, пляжра, вĕри хăйăр çинче ӳппĕн-питтĕн йăваланса хĕртĕнет, каçхине кинора та ташăра. Пĕр нимĕн те тумарĕ çу каçа, урай та шăлса тухмарĕ, хăйĕн кĕпи-йĕмне те пĕрре тытса çумарĕ. Хăш чухне Тарьене хăйне хĕрхеннĕ пек пулсах калакалаттăм:

— Ма, ара, çав Эллăна пĕр ĕç те хушмастăн, йывăр вĕт-ха сана...

Анчах ун пек каланăшăн хамах лекетчĕ.

— Сан ĕç çук унта, ват ухмах! Ачи ахаль те вунпĕр çул лăш курмасăр вĕренчĕ, унăн нервисем те веç пăсăлса пĕтнĕ. Халь кантăр ĕнтĕ, вăй илтĕр, килте мĕн тумаллине эпĕ пĕтĕмпех хам тăватăп, ĕçрен хăракан çын мар! Эс ан хутшăн кирлĕ мар çĕре!..

Мĕн калăн çавăн хыççăн? Анчах сисеттĕм эпĕ: кĕпи-йĕмне те, урайне те Тарье эпĕ килте çук чухне темле хĕрарăмсене тара тытса çутаратчĕ, эп таврăнсан вара: ах, ывăнтăм, ах, пĕтĕм çанçурăм ыратать, тесе выртатчĕ. Атте кил-çуртне сутса тунă укçа пулнă-çке-ха пирĕн...

Кĕр енне Эллăпа пĕрле вĕренсе тухнă çамрăксем унталла-кунталла хускалма пуçларĕç. Пĕрисем вĕренме каясшăн тăрăшаççĕ, теприсем ĕçе вырнаçасшăн. Пирĕн килте — шăпăрт. Эп те, тарăхни-мĕнĕпе, чĕнместĕп, мĕн тăваççĕ-ха кусем тетĕп. Çитменнине, пирĕн хĕр аслă шкул çывăхне те пыма пултарас çуккине пĕлсе тăраттăм та пăшăрхансах каймастăм пит. Анчах амăшĕпе хĕрĕ хăнк та тумаççĕ, ĕмĕр-ĕмĕрех çапла пурăнасшăн пулас.

Юлашкинчен çапах та тӳсеймерĕм — пĕрре, Элла килте çук чухне, хваттер алăкне питĕрсех, Тарьепе сăмах пуçларăм.

— Ну, юратнă та хаклă Дора Петровна, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ малашне?

— Мĕн пирки мăкăртататăн çак эс? — ыйтрĕ вăл.

— Хамăрăн хĕр çинчен калатăп...

— Мĕн калаçмалли пур ун çинчен? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Тарье.— Чиперех пурăнать-иç? Тав турра, ни чирлемест, ни ячĕ пăсăлман... Тата мĕн кирлĕ сана?

— Ара, унран çын тăвас пулать вĕт-ха!

— Вăл халь те тискер кайăк мар пуль? Пичĕ-куçĕпе те, станĕпе те хитре, хуть малтан, хуть кайран пăх — ытармалла мар, пĕр тумлам шывпа çăтса ямалла, теççĕ çынсем. Кашнинех тур патăрччĕ ун пек пулма, ахальтен мар тантăшĕсем пурте ăмсанса кĕвĕçеççĕ ăна...

— Çын хитре пулнипех унăн хырăмĕ тăранмасть-çке! Ĕçлеме вырнаçтарасчĕ ăна ăçта та пулин. Хăвах пĕлетĕн, унпа пĕрле вĕреннисенчен хăшĕсем тĕрлĕ шкулсене кĕчĕç, кĕрейменнисем ĕçе вырнаçрĕç, теприсем Печорăпа Братск таранах кайса пĕтрĕç...

Эп çапла каласан, Тарье сасартăк хăйĕн пырне пысăк пулă шăмми тирĕнсе ларнă пекех чыхăнса илчĕ.

— А-ав, мĕн çинчен çĕр çывăрмасăр шухăшласа пурăнатăн иккен эсĕ! — терĕ вăл унтан шăл витĕр.— Сана пĕртен-пĕр ачу йăлăхтарса çитерчĕ иккен? Эс ăна, куçран çухалтăр тесе, килтен хăваласа ярасшăн, çапла-и?

Симĕс куçĕсене çутăлтарса, вăл ман паталла утма пуçларĕ. Кунтан ырри нимех те пулас çуккине пĕлсе, вăл ман çинелле пынă май эпĕ каялла чакма тытăнтăм...

— Уншăн мар, эс чипер калаç-ха, хăйĕн тăван ачи çинĕ çăкăра кам шутлать, ăна кам килтен хăваласа яма тăрăшать? — терĕм.

— Мĕн тата апла пулсан, мĕн çитмест сана?! — çухăрса ячĕ Тарье.

— Калатăп-çке, ара, манăн ăна пĕр-пĕр ĕçе хăнăхтарса хăй тĕллĕн пурăнма пултаракан, усăллă çын тăвас килет...

— Ахаль те пулнă ĕнтĕ, эс вĕрентмесĕрех! Çитет ăна кун чухлĕ çын пулнипе! Ан хăра, выçсах вилмĕ, сан çăкруна та нумаях çисе пурăнмĕ. Унашкал сăнпитпе ăна пĕр-пĕр счетовод мар, полковник та, инженер та, даже писатель те антăхса кайсах качча илме пултарать, пĕлетĕн-и эс çавна, тăм писмен!..

Акă мĕнлерех план-программа пулнă иккен манăн ытарайми мăшăрăн! Вăл хамăрăн хĕре пысăкрах укçа илекен çын ĕнси çине лартса ярасси çинчен кăна ĕмĕтленнĕ.

— Элла хăй те çавăн пек шутлать-и вара? — тарăхса ыйтрăм эпĕ.

— Хĕрĕ амăшне ăнланатех ĕнтĕ! — татса хучĕ Тарье.— Мĕнле хĕрĕн ватта юлас килтĕр?

— Апла пулсан, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр, анчах кайран-малтан мана ӳпкелешнĕ ан пултăр,— ал султăм эпĕ.

Ну... пурăнатпăр хайхискер. Нимĕнле улшăнусем те çук пирĕн. Эп хам яланах ĕçре, амăшĕпе хĕрĕ — килте. Тем тăваççĕ вĕсем, пĕлместĕп. Анчах Элла кашни эрнере тенĕ пекех çĕнĕ модăллă платьесем тăхăнса тухса кайни куçа курăнать. Приданăй хатĕрлеççĕ пулмалла.

Хĕле кĕрсен, пирĕн пата час-часах Володька ятлă йĕкĕт çӳреме пуçларĕ. Шкултан вăл пирĕн Элларан пĕр çул малтан вĕренсе тухнăччĕ. Ашшĕ çук унăн, вăрçăра темиçе те аманнă пирки чирлесе вилнĕ, амăшĕ— шкулти техничка кăна. Анчах çавăн пек чухăн çемьесенчи ачасем луччă лайăх вĕренеççĕ. Çак Володька та шкултан ылтăн медальпех вĕренсе тухнă, анчах та, çемьене пулăшакан çук тесе, малалла вĕренме кайман, завода кĕнĕ те виç-тăват уйăхранах пит ăста слесарь

пулса тăнă. Çав вăхăтрах хăй политехнически института заочно вĕренме вырнаçнă. Аван ача ĕнтĕ, каламалли те çук.

Çӳрет те çӳрет çакă. Сисетĕп ĕнтĕ — Эллăна юратса пăрахнă, ун çине яланах кушак çу çине пăхнă пек пăхать, тем парĕччĕ уншăн. Анчах та манăн примадоннăсем — амăшĕпе хĕрĕ те — çав качча арçын выраннe те хумастчĕç пулмалла. Элли ялан епле те пулин тăрăхлама тăрăшатчĕ унран, амăшĕ пĕрмай ĕç хушатчĕ.

— Эй, слесарь, пирĕн çавăнта кран пăсăлма пуçланă, юса-ха! Володька, леш пӳлĕмре выключатель ĕçлемест, тӳрлет-ха! Туалетра шыв каймасть, тĕрĕсле-ха, мĕн унта?

Тепри пулсан, куншăн çилленме те пăхнă пулĕччĕ,— хĕр патне килнĕ вĕт-ха вăл, уборнăй ĕçленипе ĕçлеменнине тĕрĕслеме мар,— анчах Володя Тарье хушнисене хавасланса туххăм тенĕ пек туса хуратчĕ. Пулас хуняма карчăкне юрас килнĕ пуль çав!

Эллăпа иккĕшĕ хĕлĕпех пĕрле çӳрерĕç ĕнтĕ — кинона, театра, концертсене. Шатах каччин укçипе. Володя ман хĕре пырса илсе тухса каять, кайран килех кĕртсе хăварать, питĕ шутсăр йĕркеллĕ. Эп ĕнтĕ кусен чăнах та ĕçсем ăнса пыраççĕ, тен, часах туй та тумалла пулать-и тесе шутлама пуçласаттăм...

Çук, пулаймарĕ! Мĕншĕн, тетĕн-и?

Пĕтĕмпех çав эсремет «фуги-бугисем» пăсса хучĕç.

Çуркунне, йывăçсем пирвайхи ешĕл çулçăсем кăларсанах, хулари паркра нимрен малтан танцплощадка кĕрлеме тытăнать вĕт-ха, хула Совечĕ хăйĕн хĕл каçа хавшанă бюджетне тĕреклетме тăрăшать. Кашни каç, пĕр улт-çич сехетсенчен пуçласа çур çĕрччен ех, унта ĕçсĕр аптранă яшсемпе хĕрсем хăйсен пушмак тĕпĕсемпе урай хăмисене хыраççĕ,— чăшăл-чăшăл, йăкăш-йăкăш... Вĕсенчен нумайăшне эсĕ çăкăр ан çитер те — ташлама пар!

Манăн пĕртен-пĕр хĕрĕм Элла та пуринчен ытла пуçпа мар, урисемпе ĕçлеме юратакан чĕрчунсен ăратинченех пулнă çав. Ташă площадки уçсанах вăл унта чупма тытăннă... Малтанах вăл хăйĕнпе пĕрле Володьăна та илсе кайнă-мĕн, анчах лешин унта çурăмĕпе карлăка кăна тĕкĕлесе тăмалла пулнă — вăл ташлама пĕлмен. Элла вара ытти каччăсемпе ташланă — пĕринпе, тепринпе, пиллĕкĕмĕшĕпе, вуннăмĕшĕпе,—

Володя çав-çавах йĕтем юпи пек тăнă. Хăвах чухламалла: енчен те эс юратнă хĕре хăвăн умăнтах урăххисем ыталаса илсе çавăраççĕ, ташланă чух тата ăна хăлхаран пăшăлтатса тем калаççĕ-тĕк, санăн кăмăлу мĕнлерех пулса кайĕ? Чĕрӳ мĕнле тӳсĕ?

Лешсем, ташă площадкинчи архарсем (архар тесе тискер такасене калаççĕ, илтнĕ пуль...) ташласа пĕтерсен те, Эллăран хăпасшăнах пулман курăнать. Унпа юнашар пырса тăнă, ăна киле ăсатса ярасшăн çулăхнă... Паллах, Володя чĕрине ку питĕ хытă пырса тивнĕ. Вара вăл площадкăна çӳреме пач пăрахнă.

Анчах Элла куншăн ним чухлĕ те хуйхăрман. Володя пек мар «чаплă» каччăсем явăнма тытăннă ун тавра — леш-хайхисем, тăрна ураллисем, асар-писер тĕрĕллĕ кĕпеллисем, упăтеллĕ галстуклисем, çӳçĕсене арăслан çилхи пек ӳстерсе янисем, янахĕсем тавра басмачсенни пек сухал çитĕнтернисем. Ну, стилягăсем, эппин, пижонсем, тĕрлĕ-мĕрлĕ жоржик-моржиксем, хăйсем ниçта ĕçлемесĕр ашшĕ-амăшĕсен енчĕкне ĕмсе пурăнакансем, хальхи йышши сăвăссем!

Володя пирĕн пата киле пыма та пăрахрĕ.

— Ма курăнмасть çав ача, таçта урăх хулана куçса кайман-и вăл? — юриех ыйтрăм та пĕррехинче Эллăран, вăл, тутине мăкăртса, мăртлатса çеç илчĕ.

— Эпĕ мĕн, унăн хуралçи мар пуль?

— Ара, эсир унпа туслăччĕ те-ха...

— Тем тума кирлĕ пуль мана ун пек моммо!

— Мĕнле ăнланмалла куна? Чăвашла куçарса кала-ха.

— Ну, çулламан пăру, эппин.

— Мĕншĕн ун пекех тиркетĕн-ха чип-чипер çынна?

— Çирĕм çула çитнĕ хăй, анчах пĕр ташă та пĕлмест — каччă-и вăл? Арçын теме те çук ăна: чĕлĕм те туртмасть, чи йăваш эрех те ĕçеймест!

— Эппин, эсир халĕ çынна вăл урисене упăтелле апла-капла кукăртма, пирус мăкăрлантарма, çăвартан каялла тухиччен эрех пехлеме пултарнине шута илсе кăна хаклатăр?! — çилленсе кайрăм эпĕ.

— Культура вăл, атте! — куçĕсемпе мана пĕтерсе хураслах çунтарса илчĕ те Элла, çĕлен пек авкаланса, хулпуççийĕсене вылятса тухса кайрĕ.

«Культура... культура...» янраса тăчĕ ман хăлхара.

— Аçтан шуйттанĕнчен, хăш çĕршыври хупахсенчен килсе кĕчĕ-ши пирĕн пата ку упăте «культури»! —

тарăхса вăрçрăм эп хам ăшăмра. Чĕре ыратсах кайрĕ манăн, анчах тепĕр виç-тăват кунтан вăл çурăлса каяс патнех çитрĕ. Инфаркт пулассинчен ăнсăртран çеç хăтăлса юлтăм пулмалла...

Шăл ыратнă пирки эпĕ ĕç вăхăтĕнчех поликлиникăна кайсаттăм. Хайхи, шăл кăларттарса тухрăм та, кинотеатр енчен пĕр мотороллер лăкăртатса хăпарнине курах кайрăм. Руле темле сап-сарă та сип-симĕс, куçа йăмăхтармалла ула-чăла кĕске кĕпе тăхăннă стиляжка тытса пырать, ун хыçĕнче, ăна пилĕкĕнчен çатăрах ыталаса... ман хĕр, ман Элла ларать! Тӳрех пĕтĕм çанçурăм çӳçенсе илчĕ...

— Элла! Эллочка-а! — мĕн вăй çитнĕ таран кăшкăртăм эпĕ. Манăн ăна çав самантрах антарса хăварас килчĕ. Анчах вăл мана курсанах пĕр самантлăха каччине ыталама пăрахса аллине çĕклерĕ те пӳрнисене вĕл-вĕл-вĕл хускатса илчĕ. Сывă пул, чипер юл, тени пулчĕ ĕнтĕ ку...

Киле йĕп-йĕпе тарласа чупса çитрĕм...

— Хĕрӳ ăçта санăн, пĕлетĕн-и? — тӳрех кăшкăртăм Тарьене.

— Пĕлместĕп,— тет.— Нумай пулмасть çывăрса тăрса чей ĕçкелерĕ те тумланса тухса кайрĕ...

— Пĕлместĕн, эппин? Анчах та эп пĕлетĕп! Кашкăр тытса кайнă ăна!

— Мĕнле кашкăр? Ан лăпăртат, ухмах пуçупа эс тем те калăн... Ай ăçта та пулин черкке тĕлне пултăн-и? Кил-ха, сывла-ха ман çине...

Ку вара мана тата ытларах тарăхтарса ячĕ.

— Сан хĕре пĕр упăте Етĕрне çулĕ тăрăх леш качака таки пек машинăпа вăрмана илсе кайрĕ, пĕлетĕн-и. çавна, тухатмăш?

— Илсе кайрĕ пулсан, мĕнех вара уншăн? — хăнк та тумарĕ Тарье.— Чечек пухма кайрĕç пуль, çамрăксем чечек юратаççĕ...

— Чечек, чечек! — сĕтел çине çапсах кăшкăртăм эпĕ.— Пĕлетĕп эпĕ вăл чечексене!.. Пĕлтĕр авă Малинкинсен хĕрне те пĕр прохвост çăвĕпех ашшĕн «Москвичĕпе» катаччи чуптарчĕ-чуптарчĕ те, кайран хĕрĕ еплерех чечек илсе пычĕ амăшĕ патне? Виçĕ кило çурă туртнă терĕç ун чечек çыххийĕ! Паян кун та юрлаюрлах çĕклесе çӳрет авă: ачине-е, паппине... Шутсăр лайăх!

Эп çапла каланă хушăра Тарье куçĕсем чарăлнă-

çемĕн чарăлса пычĕç, тути хĕррисем кăвакарса чĕтрĕме пуçларĕç...

— Эс мĕн, хăвăн хĕрне шанмастăн-и, ăна пăсăк ăслă тесе шутлатăн-и? — чашкăрса илчĕ вăл.— Ăçта санăн намăс?!

— Эпĕ Эллăна мар, леш упăтине, ăна лартса каяканне шанмастăп! — терĕм ăна хирĕç.

— Ан лăпăртат! Вилли пур енчен те йĕркеллĕ ача, хĕре нихçан та кӳрентерес çук вăл! — парăнмарĕ Тарье.

— Мĕн вилли? Кам вилли? — юриех ăнланмăш пултăм эпĕ.

— Тем вилли мар, унăн ячĕ çавăн пек — Вилли!

— А эс ăçтан пĕлетĕн ăна?

— Хамăн хĕр хыççăн çӳрекен каччăна епле пĕлместĕп-ха вара? Эпĕ — амăшĕ пуль?

— Вăл мĕн, нимĕç-и? Ун пек ятлă çынсене эпĕ вăрçă вăхăтĕнче тыткăна лекнĕ фашистсем хушшинче çеç курнă.

— Мĕншĕн нимĕç пултăр? — тĕлĕнчĕ Тарье.— Пирĕн пек чăвашах!

— Ма-ха вăл, эппин, Вилли ятлă? Вилли... йытă вилли, сысна вилли... Тьху!

— Услап! — тесе хучĕ Тарье.— Нимĕн те пĕлместĕн çав эсĕ. Ку ята каланă чух ударенине малти «и» çине лартас пулать. Вилли! Интеллигентлă çамрăксем хушшинче халĕ моди çапла: Ивансем хăйсене Жан е Джон тетереççĕ, Петĕрсем — Пьер е Педэр, Василисем — Вилли...

— Тарьесем — Дора, Еленăсем — Элла,— мăшкăллаcа илтĕм эпĕ.

— А мĕн, япăх-им? Çынсем Европăран юласшăн мар...

— Кам вара вăл Васька-кот, ашшĕ-амăшĕ кам унăн? Ăçта ĕçлеççĕ?

— Ашшĕ çук, Вилли виç çулта чухнех тухса кайнă. Ухмах пулнă вăл, пĕррехинче, командировкăран таврăнсан, арăмĕн кравачĕ айĕнче такам пăрахса хăварнă ик-виç пирус тĕпĕ курнăшăнах уйрăлнă.

— Тĕрĕс тунă,— терĕм эпĕ.

— Амăшĕ кинотеатрти буфетра ĕçлет...

— Сăра сутать, кăпăкран укçа тăвать-и?

— Аптрамасть пулмалла, пит лайăх тумланать.

— Ачи хăй ăçта ĕçлет?

— Ачи-и? Ачи спортсмен. Иртнĕ эрнере чушкăлла выляса хулара пĕрремĕш вырăн йышăннă. Кунсăр пуçне тата — музыкант. Похороннăй бюро çумĕнчи духовой оркестрта ĕçлет.

— Мĕнле инструментпа калать?

— Чи пысăк параппанне çапать.

— Вăйлă специальность. Ха-ха! — кулса ятăм эпĕ.— Кун пек специальноçпа юрла-юрлах пурăнмалла: пат, пат, параппан, çак параппан мĕн калать...

— Сана шăл йĕрсе пултăр! — çилленсе кайрĕ Тарье.— Эсĕ мĕн, ку чухне сан валли кĕрӳсем урамра йăванса выртаççĕ, тетĕн-и? Шырас пулать вĕсене!

— Урамра йăванма памаççĕ çав халь, тӳрех вытрезвителе илсе каяççĕ,— терĕм эпĕ куна хирĕç.

— Ку ун йышши мар, ку интелегенцă! — кăшкăрчĕ Тарье.— Эллочка валли кун пек упăшка çаклатсан — турра шĕкĕрччĕ!..

Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ, хайхи Васька-Вилли пирĕн пата киле çӳреме пуçларĕ. Ирех, эпĕ ĕçе кайнă-кайман пырса ларать те, Эллăпа иккĕшĕ кунĕпех магнитофон çухăртаççĕ, йăлăхсан, çак брандохлыст таçтан сĕтĕрсе пынă ют çĕршыв журналĕсенчи картинкăсене пăхаççĕ, унтан Тарье вĕсене апат çитерет те, иккĕшĕ мотороллер çине утланса хирелле, вăрманалла вĕçтереççĕ... Хăш чух, ытла каça юлса таврăнсан, каччи пирĕн патрах çывăратчĕ. Кӳршĕсем пирĕнтен: «Эсир кĕрӳ кĕртнĕ мар-и çав?» — тесех ыйтма пуçларĕç. Аван та мар ĕнтĕ, хĕр пирки лайăх мар ят тухма пултарать, анчах ман Тарье ăна-кăна пăхса тăмарĕ, çав услапа ытларах та ытларах хамăр еннелле çавăрма тăрăшни сисĕнчĕ.

Эпĕ хам вара, тĕрĕссипех калатăп, ăна тӳсме пултараймастăм. Сăнĕ-пуçĕ те, тумланни те, йăли-манерĕсем те темле йĕрĕнмеллеччĕ унăн, йĕркеллĕ этемсен пек марччĕ...

Пĕррехинче эпĕ çак упăте телефонпа калаçнине илтрĕм. Ĕçрен таврăнсан, пĕчĕк пӳлĕмри диван çине кĕрсе выртсаттăм та, вĕсем эпĕ килнине пĕлмен. Тарье те таçта тухса кайнă-мĕн. Васька-Вилли трубкăна тытрĕ те тем шуйттанла чĕлхепе калаçма тытăнчĕ:

— Хэлло, монсиньор! Брякаю от чувихи. Предки в расходе. Хиляй до нашей хаты! Зацепи свою кобру.

Прошвырнемся по тракту, а там кирнем. Законно!

Нимĕн те ăнланмарăм! Вĕсен, çав ĕçсĕр аптранă стилягăсен, хăйсен упăтелле «чĕлхи» пур иккен, ăна эпĕ кайран, çак эсрелĕ пирĕн пата пурăнмаллипех куçсан тинех кăштах чухлакан пултăм. Çынна вĕсем «чувак», «чувиха» теççĕ, «хиляй» — кил, «прошвырнемся» — каяр, вĕçтерер, тени пулать, ашшĕ-амăшĕсене «предки» теççĕ тата ытти те, темĕн те пĕр. Хăсăк тухать вĕсем хăйсем хушшинче мĕнлерех калаçнине итлесен!..

Çĕр хут та каларăм пуль Тарьене: пăрахтар Эллăна çак гориллăпа çӳреме, ним ырри те пулмасть ăна кунтан, пурнăç тумалли çын мар вăл, халех чарас пулать, кая юлсан, каю шăтма пултарать... Эсĕ — амăшĕ, хĕрсем амăшĕсене ытларах итлеççĕ, калаç-ха эс унпа лайăххрах, ăнлантар, тетĕп. Çук, усси пулмарĕ вĕт, хăлхана та чикмерĕ ман сăмахсене, эсремет пуçĕ!

Кайран вара...

Кайран, чăнах та, каю шăтрĕ.

Кĕр енне пирĕн хĕр темскер чирленĕ пек пулнăччĕ, виç-тăват кун килтен тухмарĕ. Пĕр каçхине, эпир çывăрма выртнăччĕ ĕнтĕ, сасартăк чӳречерен шан-шан-шан! тутарчĕç. Тарье çенĕке тухса уçрĕ те — пӳлĕме пĕр кĕтӳ стиляга кĕрсе тăчĕ. Пурте ӳсĕр. Малта — пирĕн «кил тусĕ» Васька. Куçĕ-пуçĕ арканса кайнă ĕнтĕ. Эпир паян менелникре ыр куртăмăр, Элла унта пырайман пирки халĕ ăна киле килсе хăналама шутларăмăр, тет. Унччен те пулмасть, пиртен ыйтмасăр-тумасăрах, çаксем малалла иртрĕç, сĕтел çине бутылкăсем кăларса лартрĕç, тӳрех такам пăлхатнă хур аçисем пек шавлама пуçларĕç, иккĕн-виççĕн Элла пӳлĕмне кĕрсе кайрĕç, пĕри гитара тытса юрлама тапратрĕ.

Пуçланчĕ вара акăш-макăш ахăрсамана! Ĕçеççĕ, юрлаççĕ, ташлама хăтланаççĕ... Пĕр вунпилĕк минут хушшинче хваттертен чăн-чăн хупах пулса тăчĕ.

Анчах ку тата нимĕн те марччĕ-ха, тӳссе ирттерсе яма та пулатчĕ-и, тен. Темшĕн-çке, пĕлместĕп, сасартăк çапăçу пуçланса кайрĕ вĕсем хушшинче. Тытăнчĕç пĕр-пĕрин çине сикме, пĕр-пĕрине тӳнккеме, капăр кĕписене çурма, вăрăм çӳçĕсене тăпăлтарма — ним майĕ çук!.. Чарас — чарса çитерес çук, патне пыма та хăрамалла тата — хăвнах шаккаса хурĕç: чышкисем ыратакан пулсан, стакансем, бутылкăсем хута кайрĕç, унтан вазăсем, чечек куршакĕсем... Тур çырлах! Тахă-

шӗ варкӑнтарнӑ коньяк бутылки трюмона шӑп варринчен пырса лексе чӑнкӑр-р! тутарчӗ, унтан харӑсах икӗ чӳрече ванчӗ. Ним тума та ҫук, часрах милицие шӑнкӑравлардӑм — килӗр, ҫӑлӑр!

Пурне те пырса тиесе кайрӗҫ вара. Урӑлсан та киле яман, пурне те вунпилӗкшер талӑк панӑ.

Ирхине Тарье ик витре тӑп-тулли кантӑк ванчӑкӗ кӑларса пӑрахрӗ — трюмо юлашки, вазӑсем, тарелкӑсем... Хӑй нимӗн те чӗнмест.

— Суда паратӑп,— терӗм эпӗ.

— Кама? — шӑтарас пек пӑхрӗ ман ҫине Тарье.

— Кама пултӑр? Сирӗн ытараймиие упӑтене! Вӑл ертсе килчӗ вӗт хӑйӗн зондер-командине. Сахалтан та пӗр виҫҫӗр тенкӗ шыраса илетӗп!

— Памастӑн! — аллинчи щеткипе урайне тӑк! чышрӗ вӑл.

— Мӗншӗн памастӑп пулать? Халех, паянах заявлени ҫыратӑп!

— Ҫырмастӑн! Ҫырма мар, никама та пӗр сӑмах та каламастӑн, мӗншӗн тесен...— Тарье васкасах Элла пӳлӗмӗн алӑкне кайса хупрӗ те ман ҫывӑхах пырса тӑчӗ.— Мӗншӗн тесен Вилли халь... санӑн мӑнукӑн ашшӗ! Ӑнланатӑн-и?

— Мӗ-ӗн? Мӗнле мӑнук? Мӗн лӑпӑртататӑн эс, аҫа ҫапманскер? — чашкӑрнӑ пек пӑшӑлтатса илтӗм эпӗ. Хамӑн куҫсем ҫав самантрах куралса килчӗҫ, чӗре ҫӗҫӗпе яшлаттарнӑ пек ыратса кайрӗ.

— Ҫапла ҫав,— терӗ Тарье, ним хумханмасӑр,— халь тин ӗнтӗ каюра пек каялла тапмалли ҫук! Пирӗн Элла йывӑр ҫын пулнӑ. Виҫҫӗмӗш уйӑх...

Эп пукан ҫине лак! лартӑм. Умри пӗр Тарье виҫтӑватӑ Тарье пек куранса кайрӗ. Ал-урара пӗр вӑй та юлмарӗ, пуҫ ҫавранма пуҫларӗ.

— Вӗреҫӗлен эсӗ, ача пуҫне ҫисе ятӑн-ятӑнах пулать! Ылханатӑп сана, нихҫан та каҫармастӑп кунщӑн! — теме ҫеҫ пултартӑм.

...Анчах ылхан — ан ылхан, пулни пулнах ӗнтӗ. Леш шуйттанӗ вунпилӗк талӑк ларса тухсанах, Тарье ӑна хамӑр пата сӗтӗрсе пычӗ.

— Спаҫҫипӑ кала — ҫыннин кӑмӑлӗ лайӑх, килме килӗшрӗ, атту вӗт кун пек чух теприсем хӳри вӗҫне ҫеҫ кӑтартса хӑвараҫҫӗ. Телейлӗ пултӑмӑр эпир!—ҫине тӑрсах ӑнлантарма тӑрӑшрӗ Тарье.

— Мĕн каласси пур, шутсăр пысăк телей мар-и? — терĕм эпĕ.

Ну, ăҫта кайса кĕретĕн — туй та турăмăр вара. Хăнасем пычĕҫ, юрларĕҫ, ташларĕҫ. Анчах манăн макăрас килчĕ. Савăнмалли нимĕн те пулас ҫуккине пĕтĕм чĕрепех туйрăм ҫав. Йăнăшман эпĕ...

Кун иртет те ҫĕр иртет, вăхăт шăвать — эрне, уйăх.

Аякран пăхсан, чиперех пурăнатпăр пек. Ир тăратпăр — апат ҫиетпĕр, эпĕ ĕҫе тухса каятăп, таврăнсан — каллех сĕтел хушшинче ларатпăр, каҫхине ман хĕрпе ытарайми кĕрӳ уҫăлса ҫӳреҫҫĕ, кинона каяҫҫĕ, хăш чух хăнара пулаҫҫĕ... Васьки кăнтăрла тек ҫапкаланса ҫӳрет — ăҫта футболла выляҫҫĕ, ăҫта боксерсем пĕр-пĕрине тӳпелеҫҫĕ, мотоциклистсем ăмăртаҫҫĕ... Е тата хăйĕн хăлтăр-халтăр мотороллерне сӳтсе пăрахать те кунĕ-кунĕпе унпа чакаланать. Ҫимелĕх укҫа ĕҫлесе тупасси ҫинчен шухăш та ҫук. Анчах ҫиессе хăй лаша пек ҫиет — яшкине яланах икшер тарелка, катлет-мĕн шаритленĕ пулсан — пиллĕкрен кая мар хыпать. Эпĕ ҫак тарана ҫитсе те ҫавăн пек нумай ҫиекен ҫын курманччĕ! Тиркеме пăхать тата — сĕтел хушшинчен тăраннипе какăра-какăра тухать те: «Паян апат ытла вашнах пулайман, ашне ытларах ямалламĕн», — тесе хурать тепĕр чух.

Ку ҫеҫ те мар-ха. Малтан вăл хăйне май капăр ҫӳренĕ пек курăнатчĕ, анчах хăйĕн йĕмĕ те пĕрре кăна иккен, пушмакĕ те пĕр мăшăр ҫеҫ, кĕпи те иккĕ анчах, сивĕрех ҫанталăкра тăхăнма путлĕ тумтирĕ те ҫук! Ман Тарьен ирĕксĕрех тумлантарма тиврĕ ҫакна — ăна та илсе парать, кăна та. Ҫакăншăн кăмăлсăрланса Тарьене пĕр-иккĕ каларăм та, вăл каллех сиксе ӳкрĕ ман ҫине:

— Епле тумлантарас мар-ха ăна, хамăр ҫын вĕт! Ҫĕтĕк-ҫатăк ҫӳретсен, хамăрах намăс пулать! Кам кĕрӳшĕ? Ҫавсен, теҫҫĕ-иҫ?

— Ҫынсенчен намăс пуласран, унăн хăйĕн ĕҫлемелле пуль? Йĕмлĕх укҫа ĕҫлесе тупайман арҫын — арҫын-и вăл? — хирĕҫлерĕм эпĕ.

— Ĕҫлĕ-ха, ан васка! Шырать вĕт-ха ĕҫне. Ĕнер те цирка кайса килчĕ — унта ташлакан упасене тăрантараканни кирлĕ, тет...

Анчах пирĕн геройăн циркри упасем патне кĕресси те пулмарĕ, — шутламан та вăл ĕҫе кĕме! — ун вырăнне вăл пире урăхла «цирксем» кăтартма тытăнчĕ.

Элла ёнтё йывăрлансах пычĕ те питех тухса çӳреймерĕ, лешĕ вара кун каçа таçта çапкаланса çӳренĕ хыççăн кашнинчех хĕрĕнкĕ таврăнма пуçларĕ. Килет, кавлет-кавлет те çывăрма выртать — чӳрече кантăкĕсем чĕтренмелле харлаттарать... Унтан, пĕррехинче, вуçех те киле таврăнмарĕ. Ирхине вытрезвительрен шăнкăравларĕç — сирĕн кĕрӳ кунта, штраф тӳлеме укçа илсе килĕр, унсăрăн кăларса ямастпăр! теççĕ. Эпĕ вырăнтан та хускалмарăм, анчах Тарье çав самантрах ăна «çăлма» тухса вăркăнчĕ...

Тепĕр эрнерен лешĕ татах çакăн пек «номер» туса кăтартрĕ. Тарье каллех чупрĕ ăна хăтарма. Ак хайхи! Куллен-кун хакланса пырать пирĕн кĕрӳ тени! Тăрантар ăна, тумлантар, çиййĕнчен тата уншăн вытрезвителе кая-кая тӳле!..

Хальхинче тӳсеймерĕм, çакăн амăшĕ патне кайрăм. Чар ачуна, ятла пĕрре, тетĕп. Анчах амăшĕ сăрланă тутисене мăкăртрĕ, самăр хулпуççийĕсене вылятса илчĕ те:

— Тĕлĕнетĕп, ма пăшăрханатăр эсир кун пекех! Мĕнех тунă вара ман ывăл? Çын вĕлермен, магазин çаратман... Çамрăк çын пĕр-ик хут вытрезвителе кайса çĕр выртни ниме те пĕлтермест пуль вăл, унта сахал çын пулать-и? — тесе хучĕ.

Ак сана амăшĕ! Ывăлĕ шпанана тухса кайнăшăн пĕртте кулянас шут çук унăн, ăна тӳрре кăларасшăн!..

— Эс ун пек шутлатăн пулсан, тепринче вытрезвителе ху кайса укçа тӳлесе ил ывăлна, тек эпĕ пĕр пус та памастăп уншăн! — тарăхса каласа тăкрăм эпĕ.

— Ну, ку вара айванла калаçу,— кулса илчĕ вăл мана хирĕç.— Халь тин вăл ман ывăл мар ёнтĕ, сирĕн! Эсир ăна манран хăвăр илсе кайрăр, сире кĕрӳ кирлĕ пулнă вĕт... Çавăнпа та ыр курăр ёнтĕ унпа пурăнса!

Тек ку тăрри шăтăк хĕрарăмпа калаçса та тăмарăм, ал султăм та тухса кайрăм. Çавăнтанпа ун патне ура та ярса пусман. Анчах та хăй унпа эпĕ мĕн пирки калаçнине ывăлне каласа панă иккен. Лешĕ мана кун çинчен часах, тепре ĕçсе таврăнсанах аса илтерчĕ:

— Жалобăсем парса çӳретĕн, эппин, ват сăс? Эс тата милицине çырса пар ман çинчен, анчах та асту — малтанах асăрхаттаратăп — пĕр шăл та хăвармастăп вара! — терĕ те хайĕн çăмламас чышкине ман пит патнех илсе пырса çавăркаласа кăтартрĕ...

Ак хайхи, епле пурнăç пуçланчĕ манăн! Хам кил-

тех, эп тăрантарса пурăнакан этемех çапса пăрахасси-пе хăратма тытăнчĕ!..

Çакăн хыççăн эпĕ унпа вуçех калаçма пăрахрăм. Тарье те тек-текех ассăн сывласа ахлататчĕ, хăй ух-маххипе киле епле эсреле илсе килнине тинех ăнланма пуçларĕ курăнать. Эллăн та куçĕсем час-часах хĕп-хĕр-лĕ пулатчĕç — вăрттăн макăратчĕ пулмалла.

Анчах кĕрÿ тени çав-çавах ним хуйхи-суйхисĕр пурăнчĕ. Хуть те хăçан та хаваслă, темле этем ăнлан-малла мар юрăсем юрлать... Унтан пĕррехинче тĕлĕн-терсех пăрахрĕ: эп ĕçрен таврăнсаттăм кăна, вăл таç-тан çаврăнса çитрĕ те пысăк сумкăран çур литр коньяк, икĕ кĕленче шампански, çимеллисем, канфет коробкисем кăларса сĕтел çине купаларĕ.

— Атьăр-ха, пĕчĕк праçник тăватпăр...— терĕ хăй, пырне шаклатса илсе.

— Мĕн ятпа-ши тата ку? — хăюсăртараххăн ыйт-рĕ Тарье.

— Эп лайăх ĕçе вырнаçнă ятпа! — пĕççине çапса илчĕ кĕрÿ.— Ырантан пуçласа эпĕ музыка магазинĕн агенчĕ, халăх хушшинче культурăллă таварсем сарса çÿрекенни пулатăп. Малтанлăха аванс пачĕç...

— Таса ĕç ĕнтĕ ку... Шалу мĕн чухлĕ хураççĕ вара?

— Çирĕп оклад çук. Комиссионнăй илетĕп, про-цент. Хам тăрăшса ĕçлесен, укçа айнех пулма пулать!

— Тем пекехчĕ, тем пекехчĕ, атту укçа пĕтрĕ ĕнтĕ пирĕн. Часах çемйи те пысăкланать...

Эп калаçăва хутшăнмарăм, анчах сĕтел хушшине ларма хирĕç пулмарăм, пĕрре ыррине курас хуть хаклă кĕрÿрен! — терĕм.

Çакăн хыççăн Васька-Вилли, чăнах та, час-часах киле укçа илсе пыма пуçларĕ. Элла вара япаласем те туянкаларĕ. Тарье ĕнтĕ çунатлансах кайрĕ — унăн кĕ-рÿшĕ ĕçлет вĕт-ха! Эп те питех пăшăрханмарăм халь. Пĕр-икĕ уйăх ытла иртрĕ çапла. Пурнăç йĕркене кĕнĕ пекех туйăнчĕ.

Анчах та эпĕ, ват ухмах, тÿсме çук хытă йăнăшнă иккен! Ăнланман, тавçăрса илмен Элла упăшки укça епле майпа тупнине. Кайран тин... Ну, йĕркипе калас-тăк, çапла пулчĕ: Эллăн çуратмалли вăхăчĕ çитнипе ăна больницăна ăсатсан, тепĕр каçхинех пирĕн ыта-райми кĕрÿ, темле пысăк чăматан йăтса, вил ÿсĕр тав-рăнчĕ.

— Мĕнле чăматан ку! Ăçтан илсе килтĕн? — хăрăрах ыйтрĕ ăна алăк уçса кĕртнĕ Тарье.

— Хуп шăршлă çăварна, санăн ĕç çук унта! — пĕррех хăмсарчĕ ăна Васька.— Асту, катлет тăватăп!..— Унтан кравать патне аран-аран сулкаланса çитсе, хывăнмасăрах ун урлă выртрĕ те тӳрех харлаттарса çывăрса кайрĕ.

Ирхине, тул çутăлнă-çутăлман, тата хăрушăрах япала пулчĕ: пирĕн пата кĕтмен çĕртен уголовнăй розыскри çынсем пырса хăйсен документсене кăтартрĕç те малтан çав кĕрӳ тенĕ шуйттана силле-силле вăратрĕç, унтан пĕтĕм хваттерĕпех ухтарса тухрĕç. Васька çĕрле çĕклесе пынă чăматана уçсан, ун ăшĕнче çĕр ытла килте тунă патефон пластинкисем тупрĕç...

— Çакна шыранă та эпир,— терĕ пирĕн пата пынисенчен пĕри.— Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ кунта... пирĕн çамрăксен шухăш-кăмăлне пăсмалли япала: рок-н-ролĕ, буги-вуги... океан леш енчи лапра!

— Чимĕр-ха, вăл пирĕн музыка магазинĕнче ĕçлет вĕт-ха, ăна яланах унтан сутма параççĕ...— хута кĕме тăчĕ сиксе чĕтрекен Тарье.

— Тĕрĕс мар ку, сирĕн кĕрӳ ниçта та ĕçлемен, сире ахаль улталаса пурăннă,— терĕ розыск çынни.— Тĕрĕссипе вăл — хулари спекулянтсен шайкин утаманĕ пулнă. Эпир ăна чылайранпа сăнаса пурăнтăмăр.

Эпир çăварсене карсах пăрахрăмăр...

Ну, паллах ĕнтĕ, çав «музыка чăматанĕпе» пĕрле ăна хăйне те илсе тухса кайрĕç. Тарье ӳлесех макăрчĕ. Тепĕр ик-виç эрнерен суд пулчĕ. Пĕр вуннăн ларнă, тет, вĕсем айăпланакансен хытă тенкĕлĕ çинче. Пурте пирĕн хаклă кĕрӳ пекех ниçта ĕçлемен çапкаланчăксем, хайхи «пурнăçа çунтарса пурăнакансем» пулнă, тет. Хăйĕн кĕрӳшне çăлма Тарье адвокат та тытнă иккен те — усси пулман, пилĕк çуллăха шаплаттарса хунă! Вара çийĕнчех кунтан ытла çывăхах мар вырăна илсе кайнă, тет.

...Конон Иванч çăмăллăн сывласа илчĕ.

— Паçăрах каларăм-çке сана: юрать, саккунĕсем лайăх пирĕн,— терĕ вăл юлашкинчен.— Атту пулсан, тата тем курмаллаччĕ-ха, тата тем хака кайса ларатчĕ вăл кĕрӳ. Халь ĕнтĕ лăпкăнах пурăнатăп. Питĕ лайăх!

1958



# Вăрăм Ваçли—качака патши

Юлашки вăхăтра эпĕ вулаканран хăрама пуçларăм. Мĕншĕн, тетĕр-и? Ара, шутсăр ăсланса кайрĕ-çке вăл! Ытла нумай пĕлет. Тем те курнă, тем те вуланă. Пурне те астăвать тата. Эс пăртак йăнăшсанах, пурнăç çинчен кă-ăшт та пулин хăвна майлă каласа пама пикенсенех ярса тытать сана:

— Э-э, тусăм-тăванăм, эс мана çав тери айван чĕрчун вырăнне ан хур, улталаймăн! Пурнăçне эпир те санран кая мар чухлатпăр! Çырасси çыр эсĕ, çапах та ытлашши иртĕнсе кайма ан пар хăвăн фантазине! Пур ĕçре те виçе пулмалла!

Енчен те эсĕ — ăнсăртран — хăвăн çĕнĕ произведенинче (романра, повеçре, калавра, сăвăра, юптарура т. ыт.) ху ĕлĕкрех çырнипе чĕрне хури тăршшĕ те пулин тепĕр хут усă курнине сиссен вара хăлхаран тытса пăрмах хатĕр вăл сана:

— Эсĕ, тусăм-тăванăм, мана тахçан пĕçернĕ пăтта çитересшĕн пулас, э? Шалиш, браток! Аппетита ан пăс

манне, атту çилленетĕп те акă, эс çырнисене вуçех вулама пăрахатăп! Ан ман çавна!..

Паян та акă хăра-хăрах çырма тытăнтăм çак калава. Пĕр вунă-вуникĕ çул каялла эпĕ качака такисем çинчен çырсаттăм ĕнтĕ. Халь каллех сăмахăм качака таки çинчен пулать. Каçарĕç-ши мана куншăн хисеплĕ вулакансем?

Хама хӳтĕлес шутпа малтанах каласа хурас пуль: ĕлĕкрех çырнă калавра ман сăмахăм чăн-чăн качака такисем çинчен мар, ик уралисем, килте ним ĕçлемесĕр эрни-эрнипе доминолла çапса пĕр-пĕрне качака такин хисеплĕ ятне пама тăрăшакансем çинчен пынăччĕ. Час-часах тĕл пулаççĕ вĕт-ха пурнăçра çавăн пек тава тивĕçлĕ (вырăсла каласан—заслуженный) качака такисем. Халь вара манăн чăн-чăнни, леш кукăр мăйракалли, шĕвĕр сухалли, тăватă ураллі çинчен калас килет...

Тата тепĕр шухăш пур манăн. Качака такине ĕмĕрĕмĕр ним усăсăр чĕрчун, харам пыр тесе шутлаççĕ. «Мĕн усси пур унтан — ни çăмĕ, ни сĕчĕ...» Хӳме урлă пахчана ялт! сиксе кĕрсе сăтăр тăвать кăна иккен вăл. Анчах, ман шутпа, çакă пĕртте тĕрĕс мар. Пачах йăнăш шухăш, ăна качака хӳри пекех кĕске ăслă этем шухăшласа кăларнă та, ыттисем ун çине критикăлла куçпа пăхмасăрах, пĕр-пĕр ученăй советра пур енчен те тишкермесĕрех йышăннă. Кайнă вара çав шухăш тĕнче тăрăх! Паян кун та çӳрет...

Эп халь çав шухăша çапса аркатасшăн. Тĕппипе, ним юлми! Мĕншĕн тесен качака таки, чăнах та, усăллă чĕрчун. Вăл хамăр планета çинчи качака йăхне пĕтме паманшăн, ăна çуллен ӳстерсех пырас ĕçе активлă хутшăннăшăн çеç каламастăп эп куна. Качака таки, унăн ни çăмĕ, ни сĕчĕ çук пулсан та, тепĕр çынна чип-чиперех тăрантарса усрама пултарать. Чăнах, ара, чăнах! Ан кулăр эсир! Тăрантарма çеç те мар, кашни кун ӳсĕр çӳретме те пултарать вăл. Хуçи ĕçмен çын, пурнăç тума пĕлекен çын пулсан... пуйтарма та пултарать, во!

— Ан сӳпĕлтет кирлĕ мара, гражданин писатель, этемлĕх историйĕнче ун пекки пулман-ха, пулма та пултараймасть! — теççĕ ĕнтĕ мана хурçă кăмăллă критиксем.

Анчах эпĕ вĕсене хирĕç питĕ хăюллăн калатăп: пулнă ун пекки! Пулнă! Ман алăра фактсем пур, сире

ним сăлтавсăр суйма эпĕ асанне юмахĕсем тăрăх «историллĕ» романсем çыракан писатель мар!

Акă, сăмахран, пĕр питĕ кăтартуллă истори...

Таçта хăяматра, кунтан пин-пин çухрăмра, çитмĕл çичĕ кун утсан та çитес çук çĕрте мар, хамăр Чăваш çĕршывĕнчех, Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун çул çывăхĕнчи пĕр ялта (хăш ялтине каламасан та юрĕ) Вăрăм Ваçли ятлă çын пурăннă. Вилмен пулсан, тен, паян кун та пурăнать-и-ха. Ятне ăна çынсем сăлтавсăрах паман ĕнтĕ, вăл, чăнах та, шутсăр çӳллĕ (вăрăм) пулнă, тет, хирте пĕччен утнă чух ун кĕлетки телефон юпи пекех курăннă, хуть те мĕнле хӳме урлă та урине пĕрре ярсанах вăшт кăна каçма пултарнă, çавăнпа та нумай чӳхне калинккесем уçса чăрманас хуйхă пулман ӳнăн, вăл тӳрĕрен тӳрĕ çӳренĕ имĕш.

Пĕррехинче çапла та пулнă, теççĕ: таçтан ытлашширех хĕрĕнкĕ таврăннăскер, тек утма пултарайманнипе, шоссе урлă тăсăлнă та выртнă çак. Шоссене картласах хунă вара. Пĕтĕм транспорт чарăнса ларнă ăна пула, пĕр машина та иртсе каяйман, ни унталла, ни кунталла. Аллă машина таран пухăнса тăнă, тет, çул çинче. Шоферсем пĕринчен тепри хытăрах кăшкăртнă — нарт, нарт, нарт! — анчах Ваçли хăнк та туман, яка асфальт çинче харлаттарнă кăна. Тен, ырă тĕлĕксем те курнă-и. Шоферсен ирĕксĕрех кабинăсенчен тухса, çакна пĕрене пек çĕклесе çул хĕрринчи канава кайса пăрахма тивнĕ. Тин çул уçăлнă вара.

Ав мĕн таран вăрăм пулнă çак Ваçли! Тĕлĕнсе каймалла!

Анчах çынсене вăл хăй çав тери вăрăм (çӳллĕ) пулнипе çеç те мар, хăй шутсăр кахал пулнипе те тĕлĕнтернĕ. Ашшĕ-амăшĕ пăхса пурăннă чухне ытла ачаш пулнипе, пĕччен юлсан хăвалакан çуккипе, нихçан та нимĕн те ĕçлемен. Пĕр-икĕ хут авланса та пăхнă — арăмĕсем туха-туха кайнă. Аçтан пурăнса çитеретĕн çавăн пек наянпа? Анчах ун хыççăн та ĕçе тытăнман Ваçли. Пурăнма ашшĕ-амăшĕнчен юлнă кил-çурчĕ пулнă-ха унăн: пӳрчĕ те пысăк, ампарĕ-кĕлечĕ те йĕркеллĕ, анкартинче мунчи те пур. Анчах çынна кил-çурт тăрантармасть-çке, пĕрене пуçĕсене татса чăмлаймастăн! Çăкăр çиес тесен, ĕçлесех пулать мĕн те пулин!

Ваçли ĕçлемен. Хуть те хăçан пырсан та, çынсем вăл çывăрнине курнă. Ир пыратăн-и, каç пуласпа-и,— пурĕпĕр харлаттарать вăл. Туртать кăна ыйха!

— Мĕнпе пурăнатăн эсĕ, Васса, мĕн çикелетĕн? Пĕтетĕн-иç капла, ĕçлес пулать санăн ăçта та пулин! — тенĕ ăна хăш чух кӳршĕсем. Хăйне хĕрхенсе каланă.

— Пĕтместĕп, мана, пĕччен çынна, нумай кирлĕ-им? — лăпкăнах ответ панă Васли.— Тата арçын вĕт эпĕ...

— Арçынĕ—арçын та-ха, анчах çынна çара арçын пулниех тăрантармасть-çке, унăн та çиес пулать!

— Пурăнма пĕлсен — тăрантарать. Çиме мар, кашни кун ĕçме те пулать,— парăнман Васли.

Ăнланнă вара çынсем Васли мĕншĕн нимĕн те ĕçлеменнине. Кунĕ-кунĕпе мĕншĕн çывăрнине те тавçăрса илнĕ.

Унтан сасартăк çакăн пек хыпар сарăлнă: Вăрăм Васли хăйĕн килне тракторист çемйине хваттере янă та хăй Йĕлмекассине пĕр матка патне киле кайса кĕнĕ... Матки хăйĕнчен вунçичĕ çул аслăрах, тет, ĕнтĕ, анчах пит пуян, тупри нумай, тет...

Çур çул та иртмен,— тепĕр хыпар сарăлнă яла: Васли халь Йĕлмекассинче мар, Çарăккассинче пурăнать, урăх матка патĕнче.

Виçĕ уйăхран тата çĕнĕ хыпар:

— Вăрăм Васли хăй адресне татах улăштарнă...

— Халь ăçта вара вăл?

— Чĕрĕккассинче пурăнать, çĕнĕ арăмпа!

Ял çыннисем вар тытса кулнă:

— Ара, унăн профессийĕ — арçын та-ха, пĕкĕ пек кукăрăлса ларса, уринчен ури иртми пуличченех авланать ĕнтĕ вăл!

— Арăмĕсем мĕне кура киле кĕртеççĕ пуль вăл аça хурта! — тенĕ хăшĕсем. Пуринчен ытларах хĕрарăмсем вăрçнă: — Мĕн пур-ши çав усал çумĕнче? Ĕçлет-и вăл, пурнăç тăвать-и?

— Арçын вăл, арçы-ын! — ахăлтатса кулнă упăшкисем.

Анчах арçын званийĕпе те ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнма çук иккен çĕр çинче. Пĕри кутран тапса кăларса янă Васлие, тепри ун çурăмĕ çинче ухват аври хуçнă, унтан никам та киле кĕртми пулнă. Таврари вунпилĕкçирĕм çухрăмра йăлтах пĕлсе çитнĕ ун çинчен:

— Ĕне пек çиет, сысна пек çывăрать, ĕçсен—чисти кашкăр, ĕç патне пырас шухăш та çук, ĕмĕрне пĕр хул хушши шанкă та йăтса кĕмест, мур çименскер!

Кĕскен каласан, Васлин арçын авторитечĕ пĕтет

ларать. Чапӗ сӳнет, ҫав тери ыра профессийӗ ҫухалать. Отставка! теҫҫӗ ун пек чух.

Таврӑнать Ваҫли киле.

Пӳртӗнче ют ҫынсем пуӑннипе мунчана вырнаҫать (ӑна хутма вутӑ нумай кирлӗ мар, чулӗсене пӗрре лайӑхрах хӗртсен, эрне те пуранма пулать), анчах хырӑм выҫҫи ытларах та ытларах аптратма тытӑнать ӑна. Темме выҫмалла тунӑ-ҫке вӑл этем хырӑмне! Пӳртре пурӑнакансенчен хваттер укҫине ҫитес ҫур ҫулшӑн та илсе пӗтернӗ ӗнтӗ...

— Мӗн тумалла?

Шухӑшлать-шухӑшлать Ваҫли, анчах выҫӑ хырӑмпа ун пуҫне пӗр йӗркеллӗ шухӑш та пырса кӗмест. Шухӑшлама пуҫлать ҫеҫ — пуш-пушӑ пыршӑсем касса каяҫҫӗ...

Тухса утать Ваҫли станцие. Пӗр-пӗр охранник вырӑнӗ ҫук-ши? Йывӑр ӗҫ мар-ҫке охранник пуласси: алла ӗмӗрне пӗрре персе пӑхман тутӑхнӑ пӑшал тыт та, лар та лар питӗрнӗ алӑк умӗнче шӑхӑркаласа!

Ҫук иккен ун пек вырӑн. Складсем валли рабочисем ҫеҫ кирлӗ, теҫҫӗ ӑна. Ай-ай вӑл ӗҫ! Сакӑр сехет хушши тем йывӑрӑш ещӗксемпе, михӗсемпе, контейнерсемпе кӗреш-ха эсӗ! Пыршӑ-пакарта тухса кайӗ! Наччас ал-урасӑр, пилӗксӗр тӑрса юлатӑн! Ҫав териех ухмах мар-ха Ваҫли ун пек ӗҫпе ҫыхланма!

Станци начальникӗ патӗнчен шутсӑр кӳренсе перрон ҫине тухнӑ хыҫҫӑн вӑл пӗр хушӑ ним тӗлсӗр тӑрать. Хырӑмӗ пӑкӑр-пӑкӑр тӑвать ҫав хушӑра...

— Пӗр-пӗр пассажирски килсен, кама та пулин чӑматансем йӑтма пулӑшсан, пӗрре ҫимелӗх укҫа пулатчӗ те-ха...— шухӑшлать Ваҫли ун-кун пӑхкаласа.

Чӑнах та, аякран кӗҫех пуйӑс килни илтӗнет, тӗтӗм курӑнать, анчах станцие пассажирски мар, товарнӑй пырса тӑрать. Тем вӑрӑмӑш, ҫӗр вакун та пулӗ, анчах мӗн усси унтан?

Ал сулса аяккалла утма пуҫлать Ваҫли, ҫав вӑхӑтра сасартӑк питӗ тӗлӗнмелле япала курах каять: пӗр хӗрлӗ вакун пуҫӗнче, тамбурта, к а ч а к а тӑра парать! Уласкер, шурӑпа кӑвак хутӑш. Хӑй тӗреклӗ, сухалӗ вӑрӑм, мӑйракисем те шеп!

— Мӗнле пассажир ку? Хуҫипе пӗрле килет-ши, пӗчченех-ши? — интересленсе каять Ваҫли.

Качака патӗнче ҫын курӑнмасть. Пӗчченех, эппин. Пуйӑс тахӑш станцире чарӑнсан, ку шуйттан тем

шутпа сиксе хăпарнă та ĕнтĕ, состав тапранса кайсан сиксе анма хăюлăх çитмен унăн. Килнĕ вара «мулкачла», билетсăр-мĕнсĕрех. Ах, жулик!

Качакана ытараймасăр, Васли ун патнелле пырать. Хытă пăхать ун çине, тепĕр лайăх картин çине пăхнă пекех. Çавăнтах унăн кукшаланма пуçланă пуçĕнче калама çук хăюллă шухăш çуралать:

— Ку чĕрчуна кукăр майракисенчен çаклатса илсе кайсан, мĕнле пулĕ-ши? Вăл кунтискер мар — ку пĕрре, хуçи çук унăн — ку иккĕ, сĕт параканскер пулсан, ăна суса сĕт çиме пулать — ку виççĕ, пурăна киле сутма та май пур — ку тăваттă, пусса çиме те çылăх мар,— ку пиллĕк... Ак ăçта тупăш!

— Кача, кача...— кăчăк туртса йыхăрать ăна Васли.— Кил кунта, сик, сик, иксĕмĕр туслă пулăпăр...

Качаки ытла мăн кăмăлласкерех мар-мĕн, сикет те анать, Васли ăна çавăнтах майракисенчен çулса илет, анчах çав самантрах питĕ кӳренмелле пулать унăн: т а к а иккен!

— Вăт, майракаллă шуйттан! — вăрçса илет Васли.— Усăллă чĕрчун мар-çке эсĕ, ман йышшиех иккен! Ик аçа, мĕн тума пĕлĕпĕр эпир? Выçса вилес пулать санпа...

Çапах та аллинчен вĕçертмест-ха качака такине, майракинчен тытсах тăрать. Темле пулсан та, тупнă япала-çке! Çăмĕ-сĕчĕ пулмасан та, усси пулĕ, тен? Калăпăр, пуссан... ашĕ те, тирĕ те...

Васли часрах пиçиххине салтса такана майракисенчен явалаcа илет те станцирен аяккарах илсе каять. Унтан вĕсем поселок урамĕпе утаççĕ. Васли малта, качака таки — ун хыççăн. Иккĕшĕ те мăнаçлăн пыраççĕ, халь кăна ялхуçалăх выставкинче ылтăн медаль илсе тухнă пек.

Ытла инçе те каяймаççĕ çаксем — вĕсене пĕр ватăрах хĕрарăм тĕл пулса чарса тăратать.

— Ку... ку выльăх санăн хăвăн-и? — тесе ыйтать вăл Васлирен.

«Лекрĕм!.. Тытрĕç!..» — çурăм тирĕ сӳ! туса каять Васлин, çапах та хăй чун-чĕрери пĕтĕм паттăрлăхне пухса хуравлать:

— Хамăн пулмасан, камăн пултăр тата? Ют выльăха çавăтса çӳреместĕп ĕнтĕ! Килтен тухса тарнă та, эсремет, пĕр эрне шыраса аран тупрăм!

— Така-и?

— Така çав, племеннойскер, çавăнпа тытса чарма çук. Шутсăр аскăн мар-и! — ним шиксĕрех мухтанма тытăнать Васли хăйĕн халь çеç вăрланă выльăхĕпе.

— Апла пулсан, хăта... йăпăрт ман пата кĕрсе тухмăн-ши? Чăрмав пулать те-ха сана...— ун куçĕнчен пăхать хĕрарăм.

— Мĕн тума кĕмелле сан патна? — каллех хăраса каять Васли: «Ку такана палларĕ пуль те, мана милицие тыттарса ярасшăн пуль...»

— Ман пĕр усал качака пур, чуптарма вăхăт çитрĕ çавна, анчах пирĕн поселокра никам та качака таки тытмасть. Ахаль тумăп сана уншăн... Ыр çын пул ĕнтĕ!

— Э-э... йеттă мошнă! Куна пултаратпăр эпир, ку вăл пирĕншĕн ним те мар! — сасартăк хĕпĕртесе, çунатлансах каять Вăрăм Васли.

Ара, хĕпĕртемесĕр! Кĕтмен çĕртен пĕлĕтрен татăлса аннă телей-иç ку! Тупăш! Паллах, качака такине илсе кĕртнĕшĕн вăл укçана та сăптăрать-ха çак карчăкран, хырăмне те тултарса тухать! Ĕнертенпе нимĕн те ăша яман атту...

...Çур сехетрен Васли, чăнах та, карчăк килĕнче, сĕтел хушшинче, ыр курса ларнă. Умра чĕрĕк кĕленчи, çуллă яшка, шаркку — пехле кăна хырăму параппан пек пуличчен! Тепĕр ресторанта та ун пеккине курас çук! Çитменнине — пĕр пуссăр! Э-эх, пурнăç!..

Эрехне сыпа-сыпа шарккуне çăвар туллин çавăрттарнă май, Васли пĕр чарăнмасăр качака такине мухтанă:

— Пит чаплă ăратлă вăл манăн! Эп ăна виçĕмçул Самар патĕнчи пĕр совхозра туянса килтĕм. Пĕтĕм республикипе те çук ун пекки! Туркменски поротă, теççĕ. Икçĕр тенкĕ патăм, анчах халь ăна пилĕкçĕре те памастăп... Сан качаку сахалтан та улт-çич путек туса парать акă, курăн! Ĕмĕр асăнса пурăнăн мана! Кирлĕ пулсан, килес çул каллех чĕнме пултаратăн — рас анчах персе çитетпĕр. Эп мăн кăмăллă çын мар, çынсене пулăшма яланах хатĕр...

Тайкаланса, юрла-юрлах тухса кайнă Васли. Вăрман хĕрне çитсен, çемçе курăк çине ларнă та качака такине ыталаса чуптума тытăннă:

— Э-эх, мăйракаллă тусăм, шуйттан хăраххи! Ăçтан кăна тур пачĕ пуль сана! Пурăнатпăр халь санпа шик шăхăрса, çапла-и? Ним те хăрушă мар пи-

рĕншĕн! Сыттăй та, пьяннăй та пулатпăр кашни кун. Эс ăслă пул кăна, ан ÿркен нихçан та, итле каланине! Ы-ых, эп сана, сăттана юлашкине, кÿр-ха, тепре чуптăвам!

Пĕр-икĕ эрне таврăнман Вăрăм Ваçли. Çÿренĕ вăл упа кăтартакан чикан пек ялтан яла. Пырса кĕрет те пĕр-пĕр ял пуçĕнчи киле, хуçинчен тÿрех ыйтса пĕлме тытăнать:

— Сирĕн ялта качака усракансем пур-и?

— Пурри пур та, нумаях мар,— тет кил хуçи.— Ытларах ĕне усраççĕ халь, вăрçă вăхăтĕнчи пек мар.

— Çапах та, пур, эппин?

— Çиччĕ-саккăр тупăнать пуль.

— Таки пур-и вĕсем валли?

— Çукрах çав. Камăн усрас килтĕр вăл шăршлă шуйттана?

— Апла пулсан, хуш ачусене, халех качака хуçисене кайса систерччĕр: племсовхозран ятарласа сире валли швецарски качака таки илсе килнĕ, теччĕр. Анчах хакне малтанах калаччăр: кашни качакаран виç тенкĕ те çур литр аншарли. «Московски» пулсан— чĕрĕк те çитет, ытлашши хаклă илес мар. Сан ачусене куншăн эпĕ канфет çимелĕх укçа парăп, ахаль тумăп...

Ĕçсем пит аван пынă Ваçлин. Хăй ĕмĕтленнĕ пекех пулнă: хырăм та тутă, ĕçки те какăричченех. Укçа та пур. Ма пурăнас мар?!

Çÿресен-çÿресен, качака таки начарланма пуçласан, вăл пĕр хушă килте пурăннă.

— Отпуск патăм-ха Орела,— йăл-йăл кулкаланă вăл,—кантăр пăртак, вăй пухтăр... (Качака такине вăл Орел — Ăмăрткайăк — тесе ят панă иккен!)

Ялта та çивĕч чĕлхесем, хаяр сатириксем пур çав. Вăрăм Ваçлие наччас «Качака патши» тесе ят панă. Çыпăççах ларнă ун çумне çав ят. Тахăшĕ тата Ваçли мĕнле майпа, кам шучĕпе ыр курса пурăнни çинчен райхаçата çырса пĕлтернĕ те, унта пĕр райпоэта сăвăллă фельетон хайлаттарнă — Шупашкарти Дымилов-Тури поэтран та кая мар çырнă лешĕ, шельмă!

Атя, Ваççа, тухар-и,
Ют качака тытар-и,
Ялсем тăрăх çÿрер-и,
Çынсене улталар-и,
Уншăн эрех ĕçер-и,
Тăпăр-тăпăр сикер-и!

Ах, кулнă та вара çынсем çакна вуласан! Ниçта кайса кĕреймен! Халăхпа пĕрле Вăрăм Ваçли хăй те ахăрнă. Питĕ яка çырнă-çке такмакне! Савăннă:

— Чапа тухрăм ку качака такипе! Пĕтĕм район пĕлет халь мана! Тăхтăр акă, часах пĕтĕм республика пĕлекен пулĕ! Пĕр сăмахпа каласан—эй, ну, яра пар!..

Çав кунах Ваçли хăйĕн мăйракаллă Орелне çавăтнă та каллех «гастроле» тухса кайнă. Хальхинче тепĕр еннелле, аякками кайнă, мĕншĕн тесен ку тăрăхра пĕр хĕсĕр качака та юлман.

Пĕр яла çитнĕ, виç яла, çич яла. Аптраман. Лайăхах пулнă. Эрех те ĕçет Ваçли, укçа та çапать.

Унтан сасартăк...

Пырса кĕреççĕ Вăрăм Ваçлипе унăн мăйракаллă тусĕ пĕр пысăк яла. Хваттере вырнаçаççĕ. Ваçли кил хуçипе калаçать: систерĕр-ха качака усракансене, чăрмантарнăшăн укçа тӳлетĕп, тет. Кил хуçи качака таки çине пăхать — унтан, кунтан. Мухтаса та илет:

— Вăйлă качака таки санăн, чаплă! Кун пеккипе тăванлашма хуть те мĕнле качака та килĕшмелле. Халех кайса систерĕп кама систермеллине,— тет.

Çавăнтах тухса каять те, тепĕр çур сехетрен колхоз председательне илсе пырать. Темшĕн-çке, председательпе пĕрле хитре кăна милиционер та пырса тухать.

— Нивушлĕ милици те качака усрать? Шутпа, унăн пĕр-пĕр овчарка çеç пулмалла-çке? — тĕлĕнет Ваçли.

— Ăçта-ха санăн чаплăран та чаплă таку? — тесе ыйтаççĕ çаксем Ваçлирен.

— Сарайĕнче канать-ха,— тет Ваçли.

— Кăтарт тавай. Курар: мĕн тĕслĕ, мĕн пысăкăш...

— Тархасшăн, ара. Така — первăй сорт. Вышши теме те пулать.

Сарай алăкне уçсанах колхоз председателĕ милицие калать:

— Пирĕн выльăх! Кăçал çуркунне çухалчĕ. Шырарăмăр — тупаймарăмăр, халь акă хăех таврăнчĕ, турра шĕкĕр.

— Епле сирĕн?! Çу-ук, хаклă юлташсем, йăнăшатăр...— Хăранипе Вăрăм Ваçлин аллисем сивĕнсе каяççĕ, çапах та парăнмасть-ха, хирĕç çаптарать: — Манăн сопченăй така ку, эп ăна çичĕ çул усратăп ĕнтĕ, кун çинчен пĕтĕм район пĕлет!

— Çичĕ çул çӳретĕн-и вара эс унпа çакăн пек? — ыйтать милици.

— Çиччех мар, анчах чылайранпа уш. Халăх ыйтнипе çӳретĕп...

— Ну-ка, документ кăтарт-ха, эппин! Пур-и санăн ялсем тăрăх çакăн пек случной кампанисем туса çӳреме ирĕк паракан хут? Ветврачран справка пур-и? Тен, санăн таку чирлĕ? Тен, эсĕ юриех пĕр-пĕр сап е сибирски язва сарса çӳретĕн? Хăвăн личнăй документна та кăтарт — пĕлес пулать пирĕн: кам эсĕ, ăçтан килсе тухнă фокусник-гастролер?

Вăрăм Вáçлин, паллах, нимĕнле документ та пулман.

— КПЗ! — тенĕ милици.— Вырăсла каласан, камера предварительного заключения, акă мĕн вăл. Вăхăтлăх тĕрме. Унта эс камне питĕ хăвăрт пĕлĕç! Колхоз выльăхне вăрласа унпа усă курса пурăннăшăн — суд! Обществăлла пурлăха çаратнăшăн пуçран ачашламаççĕ...

Вăрăм Ваçлин вăрăм урисем лĕнчĕрех хутланса аннă.

Эх, ма кайнă-ши вăл ют çĕре! Ухмах! Тăр-ухмах! Аякка кайман пулсан, тен, паян кун та пурăнатчĕ-и качака такине суса!

1969



# Йывӑр кун

Мина Мироновна Энтипова, хулари нумай-нумай кантурсенчен пӗринче машинисткӑра ӗҫлекен хӗрӗхрен иртнӗ мӑтӑк хӗрарӑм, эрнекун службӑран таврӑнчӗ те хваттерне кӗнӗ-кӗмен диван ҫине ҫӳлтен пӑрахнӑ чул пек ӳкрӗ. Кивӗ диванӑн тутӑхнӑ пружинӗсем чӑкӑртатса, ҫав тери хурлӑхлӑн йынӑшса илчӗҫ. Ултӑ пӑт таякан тушкана ҫӗклесе тӑма ҫӑмӑлах мар ҫав!

— Мӗн эсӗ, анне, чирлемерӗн пулӗ-ҫке? — хӑрарах ыйтрӗ сӗтел хушшинче уроксем хатӗрлесе ларакан вунултӑ ҫулхи хӗрӗ Нинуҫ.

— Чирлесси чирлемен те... шутсӑр ывӑнтӑн, хӗрӗм, кунӗпе тислӗк турттарнӑ лаша та ун пек ывӑнмасть пулӗ! — терӗ Энтипова, тимӗрҫ лаҫҫинчи вӗркӗче пуснӑ пек сывласа ярса.— Ал-урана хускатма та вӑй юлмарӗ, киле те аран-аран ҫитрӗм... Ффу-у...

— Ҫав териех ӗҫ нумай пулчӗ-и вара? — амӑшӗ ҫине хӗрхенерех пӑхрӗ Нинуҫ.— Каллех пӗр лав кирлӗ-кирлӗ мар хут ҫаптарчӗҫ-и?

— Хучёсене паян куҫпа та курман-ха, турра шӗкӗр, машинкин пӗр клавишӗ ҫине те пусман,— ал сулчӗ амӑшӗ.

— Мӗн туса ывӑнтӑн, эппин, ун пекех?

— Ах, ан та кала, хӗрӗм... Кунӗпе чупрӑм, кунӗпе, вӗшле йытӑран та кая мар!

— Ма чупрӑн, кам чуптарчӗ? Директор-и? Эс курьер та, рассыльнӑй та мар-ҫке, эс машинистка? Санӑн чупса мар, ларса ӗҫлемелле...

— Пурнӑҫ вӑл, ачам, пур чухне те директортан килмест.

— Службӑра ҫапах та пуҫлӑх хушнисене тумалла пуль? Вӑл — начальник, эсӗ ӑна пӑхӑнаканни...

— Э-эй... ялан вӑл хушнипе пурӑнсан... нихҫан та пурнӑҫ тӑваймастӑн! — Диван пружинӗсем тепӗр хут йынӑшса илчӗҫ. Энтипова халь хӑяккӑн ҫаврӑнса выртрӗ.— Службӑра чухне те хӑвӑншӑн тӑрӑшма пӗлес пулать, хӗрӗм!

— Кала-ха, эппин, мӗн турӑн? Ҫав териех васкамалли ӗҫсем капланса килчӗҫ-и?

Энтипова выртнӑ ҫӗртех сӗтел ҫинчен пирус илсе тивертрӗ те, вырӑнтан тапранайман ҫӗтӗк мотоцикл пек тӗтӗм мӑкӑрлантарса, чыхӑна-чыхӑна каласа кӑтартма тытӑнчӗ.

— Службине эпӗ паян пӗр сехет ытла кая юлса ҫитрӗм — универмаг тӗлӗнче кӗпе ҫумалли порошок сутатчӗҫ те, ҫавӑнта черетре тӑма тиврӗ. «Лотос» тенине сайра хутра ҫеҫ сутаҫҫӗ-ҫке, тӗл пулнӑ чух илесех терӗм... Эп пынӑ чух пурте вырӑнтаччӗ ӗнтӗ, кам хӑҫан килни-кайнине ҫырса пыракан журнал ҫине ал пуснӑ, никам та ман пек кая юлман. Ӗҫ диспиплинине тытса пыма пӗлеҫҫӗ пирӗн сотрудниксем! Хама тем каласран, кая юлнӑшӑн сӑмах тивесрен, эп тӳрех айӑпне автобуссем ҫине ятӑм: остановкӑра хӗрӗх пилӗк минут кӗтмелле пулчӗ, хӑҫан йӗркеллӗ ӗҫлеме тытӑнӗ пирӗн хулари транспорт?! Пурте ӗненчӗҫ те мана, хӑйсем те час-часах ҫавӑн пек нумайшар кӗтни ҫинчен калама тытӑнчӗҫ, пӗри ҫав автобуссене пула туя вӑхӑтра ҫитеймен, тепри пумилккерен юлнӑ, кайран ӑна ҫавӑншӑн «штрафнойсем» парса пӗр наччасра тӑнсӑр тунӑ та, ирхине вӑл арӑмӗ ҫумӗнче мар, вытрезвительте вӑраннӑ... Калаҫнӑ майӑнах эпӗ ӗҫе хатӗрлентӗм— машинка чехолне илтӗм, саспаллисене щеткӑпа тасатрӑм, копировка, таса хут кӑларса хутӑм.

Стена çинчи сехет вунпĕр çапрĕ.

— Камăн мĕн шаккамалли пур? — тесе ыйтрăм хайхискер.— Тархасшăн, ман агрегат на ходу!

Нихăшĕ те чĕнмерĕç. Чылайран тин плановик сас пачĕ:

— Кан пăртак, Мина Мироновна, ним те хатĕрлеймерĕмĕр-ха сан валли. Ав, журналсем илсе килчĕç паян, тытса вула, хăвăн культурăллă шайна хăпарт май килнĕ чух...

Эпĕ ун еннелле пăхрăм — вăл хăй умне çĕнĕ «Огонек» сарса хунă та çамкине картлантарса, тути-çăварне пăркаласах кроссворд тупсăмĕсене шырать иккен. Кулас килсех кайрĕ, тӳсеймерĕм, каларăм:

— Эсĕ, Пал Степанч, хăвăн культуруна хăпартма тытăннă та пулас?

— А какшă? — терĕ вăл мана хирĕç самаях мăнкăмăллăн,— кроссворд шутлани — этем майсăр усăллă япала, çыннăн ерудицине сарать!

— Мĕнле ерундицине тата? Ерунда сăмахран пулать-и ку сăмах? — калаçăва тăрук хутшăнчĕ Шакайкин счетовод.

— Ерундици мар, ерудици, ырă çыннăм! Этем нумай пĕлни! — çирĕппĕн ăнлантарчĕ плановик.—Тавракурăм сарлака пулни!

— Ерудици те мар, Пал Степанч, э-ру-ди-ци! — пуçне йăпăрт çĕклесе тӳрлетрĕ ăна главбух, унччен тăрăшсах футбол чемпионачĕн таблицине туса ларнăскер.— Сăмахсене тĕрĕсрех калама вĕренес пулать!

— Эп халь те тĕрĕс калатăп, эсĕ ху яланах йăнăшатăн, хисеплĕ Нихват Ильич! — терĕ ăна хирĕç плановик, хăйне тиркенине хуть те хăçан та тӳсме пултарайманскер.

— Тавлашатпăр-и? — сиксе тăчĕ главбух.

— Тавлашатпăр! — пуçне ухса илчĕ плановик.

— Мĕн чухлĕ лартатăн?

— Хуть те мĕн чухлĕ пултăр! Пурĕпĕр санран тухать!

— Санран хăвăнтан пулсан?

— Манран пулмасть!

— Ну, кала, эппин, ставкине! Мĕн чухлĕ?

Вĕсене Шакайкин пулăшрĕ:

— Ставки паллă ĕнтĕ — çур литр! Кам йăнăшнă — çавăнтан... Кăнтăрлахи апат умĕн виççĕмĕре как рас пулать!..

— Сахал! Килӗшместӗп! — ал сулчӗ главбух.— Мӗн вӑл виҫҫӗне ҫур литр? Ял кулли! Тутана йӗпетмелӗх кӑна-иҫ?

— Четвӗртех мар ӗнтӗ, ытлашши ярсан, хӗрарӑмсен мунчине лекӗпӗр тата,— асӑрхаттарнӑ пек турӗ Шакайкин.

— Эс мӗн, арӑмунтан хӑратӑн-и? Арӑму тип мунча кӗртесрен-и?

— Ҫук, вытрезвитель хӗрарӑмсен мунчипе юнашар, ара.

— Ун ҫинчен кайран калаҫӑпӑр. Халь ставки пирки...

Ҫав самантрах телефон питӗ хытӑ чӑнкӑртатрӗ. Главбух трубкӑна ярса тытрӗ.

— Кам кирлӗ? Мӗн пирки? — кӑшкӑрса ыйтрӗ вӑл. Кӑшт тӑхтасан тата хытӑрах кӑшкӑрчӗ: — Кун пирки эсир кӑнтӑрла иртсен е ыран ирпе шӑкӑравлӑр, халь ерҫместпӗр, пирӗн кунта васкавлӑ канашлу пуҫланчӗ, май килмест!

Главбух трубкӑна чанк! пӑрахрӗ, анчах телефон татах янраса илчӗ. Главбух каллех кӑшкӑрчӗ:

— Каларӑм вӗт сире — ыран, ыран шӑнкӑравлӑр, лару пырать пирӗн, пленарнӑй заседани! Ҫук, хӑҫан пӗтессине пӗлместӗп! Тек ан чӑрмантарнӑ пултӑр, ӑнлантӑн-и?

Вӑл ҫавӑн пек тарӑхсах ҫухӑрашнӑ вӑхӑтра директор приемнӑйӗнчен Люся-секретарша, леш ара, ялан питне-куҫне сӑрласа, капӑр тумланса ҫӳреме тӑрӑшаканни, вобла пек хытканни, тухса ман пата пычӗ те айӑкран кӑт! тӗкрӗ:

— Мина, итле-ха...

— Мӗн?

— Ҫӳлти универмага тавар нумай кӑлараҫҫӗ, тет, паян. Заграничнӑй япаласем, тет. Кайса пӑхмастпӑр-и?

— Ӗҫ вӑхӑтӗнче епле-ха...— иккӗлентӗм эпӗ.

— Сӑлтавне туп! Кала мӗн те пулин. Манӑн хуть причин пур ха — почтӑна заказнойсем яма каймалла...

— Эппин, эпӗ машинка валли лента пӗтнӗ, тетӗп...— тӳрех ӑс ҫитрӗ манӑн.— Юрать пуль ҫапла каласан?

— Юрамасӑр! Пит аван!

Арҫынсем ҫав хушӑра тавлашу «ставки» пирки

калаçса татăлчĕç — литр! Унтан таçтан мурĕнчен пĕр çĕтĕк словарь туртса кăларса «эрудици» сăмаха шырама тытăнчĕç. Шутсăр васкаççĕ — чăлт, чăлт, чăлт! уçаççĕ кĕнеке страницисене.

Эпир вĕсен тавлашăвĕ мĕнле пĕтессе кĕтсе тăмарăмăр. Главбуха хамăрăн çав-çав ĕçсемпе кайса килмелли çинчен каларăмăр та, вăл пирĕн çине пăхмасăрах ал сулчĕ:

— Вĕçтерĕр!

Пире çав кăна кирлĕччĕ. Чăн та, тухса вĕçрĕмĕр вара. Нимĕнле почтăна та кĕрсе тăмарăмăр, тӳрех универмага ярăнтартăмăр. Чыла-ай çӳрерĕмĕр унта. Люся тени вăл çавăн пек: укçи çук пулсан та, кашни хитререх япала умĕнче чарăнса тăрать, ăна тыткаласа пăхать, хакне ыйтса пĕлет. Тата пур продавщицăсене те паллать иккен — Маня та Таня тет кăна вĕсене, ал парать, калаçса-кĕçенсе илет.

— Хăçан паллашнă вара эсĕ вĕсемпе пуринпе те? Тата мĕн тума кирлĕ сана кашнинпех пакăлтатни? — ыйтрăм çакăнтан хамăр урама тухса тăрсан.

— Э-эх, Мина Мироновна, чухлаймастăн иккен эсĕ нимĕн те! — ассăн сывласа ячĕ вăл мана хĕрхеннĕ пек.— Манашкал мода хушнă пек çӳреме юратакан хĕрарăмшăн ку чухне продавщицăсемпе туслă пурăннине ним те çитмест, чи кирли, чи хакли вăл! Акă, кур-ха, манăн пĕтĕм çипуç заграничнăй: калпакĕ венгерски, жакет — польски, атă французски, аялти кĕпе югославски, кăкăр çакки пулса — вăл та испански вĕт! Туп-ха вĕсене!

— Сăмсу кăна чувашски, эппин, лапчăк! — кулса ятăм эпĕ.

— Ăна туянма çук çав, Калайкасси сăмсипех ĕмĕр ĕмĕрлес пулать ĕнтĕ,— каллех ассăн сывласа ячĕ Люся.— Эп çав пур япаласене те ăçтан туяннă тетĕн? Урăх çĕршывсенче пулман, тĕрлĕ Одесса-Ригăсене кайса çӳремен, йăлтах çакăнти продавщицăсем тупса панă мана! Эс пĕлместĕн те пуль-ха, анчах сана вăрттăн калама пултаратăп: лайăх япаласем килсен, вĕсене нихçан та прилавок çине кăлармаççĕ — хăйсем хушшинче валаçеççĕ те тусĕсем валли хăвараççĕ. Вăл шутра — ман валли те...

Эпĕ самаях тĕлĕнсе ыйтрăм:

— Мĕншĕн ун пекех хисеплеççĕ-ха вĕсем сана?

— Тыттаркалатăп хăш чух: пĕрине шоколад, теп-

рине пĕр коробка канфет. Вĕсен менелникĕсене те пуш алăпа каймастăп...

— Ун пек кучченеçсем пама укçа нумай кирлĕ-çке?

— Укçи пур-ха манăн... Хăвах пĕлетĕн — ик упăшкаран алимент илсе тăратăп!—кулса ячĕ Люся. Унтан мана хулран ярса тытрĕ: — Атя, станци патĕнчи «Экспресс» магазина çитсе килетпĕр!

— Инçе унта, тата ĕçе те каяс пулать, эпир магазинсем тăрăх йăрккаса çӳренине пĕлсен, директор пире... лектерет! — килĕшмерĕм эпĕ унпа. Анчах вăл ал сулчĕ кăна:

— Çук директор, командировкăра! Тĕрĕссипе, Елчĕке туя кайрĕ-ха вăл, пиччĕшĕ хĕр парать, тет, анчах та пурĕпĕр командировочнăй удостоверени туса кайрĕ хăй. Туйра та расхут тухать-çке, хакне кăларас пулать епле те пулин!

— Ăçтан пĕлетĕн эс куна?

— Фи! Эп те пĕлмесен тата! — йĕрĕннĕ пек туса илчĕ вăл.— Кун каçа директор пӳлĕмĕнче миçе хут пулатăп? Пурне те куратăп, пурне те илтетĕп...

— Хăш чух ун пӳлĕмĕнче питĕрĕнсе те ларатăр, çапла-и?

— Сайра хутра пулкалать... Уйрăмах секретлă хутсем çапнă чух...

— Секретсене пытарма пĕлес пулать çав,— йăл култăм эпĕ.

Люся хăй те хихиклетсе илчĕ те мана хулран туртрĕ.

— Кайрăмăр тавай, кайрăмăр, ав, троллейбус килет!

«Экспресра» та чылай çӳрерĕмĕр эпир. Люсьăн кунта та палланă продавщицăсем туллиех-мĕн. Нумайăшĕпе каласса, çине тăрсах тĕпчерĕ вăл: юлашки кунсенче мĕн илсе килнĕ, çитес эрнере мĕн кĕтетĕр?.. Хăй хальхинче те нимĕн те илмерĕ, «вăл-ку пулсан» шăнкăравлама хушрĕ çеç. Унтан тухсан вăйпах агрегат завочĕ патĕнчи «Илеме» илсе кайрĕ мана. Каллех çавăн пек: пĕринпе пакăлтатать, тепринпе...

— Ну, çитĕ кун чухлĕ çӳренипе, атя ĕçе! — терĕм «Илемрен» тухсан, пăшăрханма пуçласа.

— Мĕн тума-а?! — тĕлĕнсех кайрĕ Люся.— Ара, халь кăнтăрлахи апат вăхăчĕ-иç? Саккунлă перерыв! — вăл аллинчи ылтăн сехечĕ çине пăхса илчĕ.

Сехечĕ пы-ысăк, арçынсем çыхса çӳрекенни, чĕнĕ те ал лаппи сарлакăш.— Пирĕн те çимелле пуль? Атя, çавăнта çĕнĕ кафе уçнă! Çитсе тĕрĕслер, мĕнлерех пĕçерĕççĕ, еплерех çитерĕççĕ унта?..

Кайрăмăр, «тĕрĕслерĕмĕр», хырăмсене пит лайăх тултартăмăр. Анчах каферен тухиччен малтан Люся сасартăк жалобăсемпе сĕнӳсен кĕнекине пама ыйтрĕ. Куна илтсен, ун патне виççĕн-тăваттăн чупса пычĕç. Пурте хыпăнса ӳкнĕ:

— Мĕншĕн кӳрентерес тетĕр пире?

— Мĕн килĕшмерĕ? Хăш енчен юраймарăмăр?

Поварĕ, хăранипе, тытăнчăклă калаçма тапратрĕ:

— Апачĕ т-тутлах п-пулмарĕ п-пулсан, п-пĕррелĕхе к-каçарăрсам! Х-хальччен пĕр ж-жж...жалоба та пулманччĕ. Ч-ч-чуна парса ĕçлетпĕр, т-тупата туршăн!

— Тутлă пулчĕ çав апачĕ, çавăнпа çыратăп! Тав тăвас тетĕп! — ик аллине хире-хирĕç çапса илчĕ те Люся, шанкă пек урисене вашт! явса хучĕ.— Илсе килĕр часрах кĕнекине!

Э-эх, хĕпĕртесе кайрĕç каферисем! Люся умĕнче ташлама та, ăна хуть те ăçтан чуптума та хатĕр çав!

Люся çамкине пĕркелентерсе шухăшлакаласа ларчĕ те шурă хут кĕнеки çине çаврака та шултра почеркпа çырса хучĕ:

Хырăмăрсем хыт выçсассăн
Çак кафене кĕрĕр!
Тутлă апат çитернĕшĕн
Повăра тав тăвăр!

Тĕлĕнсе хытсах кайрăм: сăвăлла çырчĕ мур пуçĕ! Унтан тата «Мухтав ку кафене!» тесе хушса хучĕ те ал пусрĕ: «Люся Линарская, республикăн тава тивĕçлĕ артистки».

Пĕтрĕ пуç! Кĕтмен-туман çĕртен артистка та пулса тăчĕ! Çитменнине — ахаль артистка та мар, тава тивĕçли вĕт!

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, ма ун пек ал пусрăн? — ыйтрăм урамра.

— Авторитета хăпартма! — терĕ Люся.— Куншăн мана вĕсем ӳлĕмрен патша майрине пăхнă пек пăхаççĕ.

— Анчах эсĕ тава тивĕçлĕ артистка пулманнине пĕлсен тата? Çурăмран аялахран тапса кăларса ямĕç-и?

— Аçтан пӗлччӗр вӗсем ăна? Хушаматăм янравлă, сăнран-питрен эпӗ театрти хуть те хăш артисткăран та ирттеретӗп, тава тивӗçлисен шучӗ те çук халь...

— Ну, пултартăн та иккен! Ăслă-ă...— пуçа пăркаласа илтӗм кăна эпӗ.

— Виççӗ качча кайса килнӗ хыççăн та ухмах пулсан тата! — кулса ячӗ вăл.— Пӗр упăшки манăн кандидат наук пулнă, тепри писатель, виççӗмӗшӗ артист. Вӗренме май килнӗ!

Утрăмăр. Гагарин урамӗпе пыратпăр. Вăхăт — виççӗмӗш сехет.

— Атя часрах,— васкатрăм Люсьăна,— çухатрӗç пуль пире ёçре...

— Ан хыпалан! — ал сулчӗ Люся.— Ёлкӗрӗн-ха главбух мăкăрлантаракан махорка тӗтӗмне шăршласа ларма! Май килнӗ чух парикмахерскине кӗрсе тухас пулать. Прическа тутарăпăр. Паян эпӗ театра каятăп пуль-ха, пӗр ватсупнăпа калаçса татăлнăччӗ. Санăн та çӳçӳ-пуçу ним латти те çук, эс те ытла карчăках мар вӗт, тирпейлӗ çӳрес пулать. Атя, кутăнлашса ан тăр!

Парăнтарчӗ мана. Кӗрсе лартăмăр парикмахерскине, çӳççене кăтралатрăмăр. Виç сехет иртрӗ. Унтан гардероб умне тумланма пырсаттăмăр кăна — кӗтментуман çӗртен калама çук хăрушă япала пулчӗ-тăчӗ. Пире хирӗç урамран тин çеç кӗнӗ хӗрарăм Люся çине витӗр шăтарас пек пăхрӗ те тăрук çухăрса ячӗ:

— Аха-а! Тинех тытрăм-и сана-а! Лекрӗн-и, йыт ами!..

Çавăнтах Люсьăна сулахай аллинчен ярса тытрӗ.

— Тавай сехете! Салт! Ман старик сехечӗ ку! Салт, теççӗ!

— Эс ухмаха ернӗ пуль, гражданка! — терӗ ăна хирӗç Люся, тăруках помидор пек хӗрелсе кайса.— Псих пуль! Сумашедши!

— Эп псих-и? Эп шумашетши-и? Эп сана! Эп сана...— чалт! çутăлтарса ячӗ çав хӗрарăм Люсьăна.— Ют арçынсене хăвăн патăнта çӗр каçаратăн та ирхине сехечӗсене вăрласа юлатăн пулать? Эп кăтартăп сана! Таккуй вӗрентӗп сехетсем вăрлама! Манăн ку сехет паспорчӗ те пур! Вăрă, вăрă! — чалт, чалт, чалт! çиçеçиçе ячӗ хӗрарăм хайхи «тава тивӗçлӗ артисткăна».— Тавай сехете, кӗççе пит!..

— Краву-ул! Пулăшă-ăр!..— çухăрма тытăнчӗ Люся.

Эп чарма пикентĕм — шалккă-çке юлташа! — усси пулмарĕ, урса кайнă хĕрарăм мана пĕррех аяккалла ывтăнтарса ячĕ те Люсьăна тин çеç кăтралатнă çӳçĕнчен ик аллипе харăс ярса тытса ласкама тапратрĕ. Хай темтепĕр, темтепĕр калать çав!..

— Шулĕк! Крапиттĕл! Эп сана халех милицине... тĕрмене!

Парикмахерсем пурте ĕçлеме пăрахсах чупса пычĕç, сухалĕсене кăпăклантарнă клиентсем те сике-сике тăчĕç. Çухăраççĕ:

— Чарăр хĕнеме, вĕлерет вĕт! Пуçран çапса сотрясени мозга туса ярать! Астăвăр, пурне те суда сĕтĕреççĕ!

— Милици чĕнĕр! Часра-ах!..

Кĕç-вĕç, чăнах та, икĕ çамрăк милици пырса кĕчĕ— тахăшĕ систерме ĕлкĕрнĕ курăнать. Калаçса та тăмарĕç — пире хăвăрт кăна отделение илсе кайрĕç. Люся пăру макăрнă пек ӳлет, леш хĕрарăм çаплах çĕтĕлет— тем те калать, ним чаракĕ те çук! Урампа пыракансем чарăна-чарăна пăхаççĕ пирĕн çине. Ниçта кайса кĕме çук намăс! Ма тухрăм-ши кантуртан, ма çыхлантăм ку шуйттан Люсипе, тетĕп хама хам тарăхса.

Çитрĕмĕр милицие. Протокол çырчĕç. Ал пустарчĕç. Унтан «ыран татах чĕнетпĕр» терĕç те кăларса ячĕç. Эп часрах ĕçе чупрăм. Люся нăшăкла-нăшăкла килне кайрĕ.

— Кала унта ман пирки, чĕрипе аптрарĕ, те,— хушса ячĕ мана.

Цилĕк сехет çине кайнăччĕ ĕнтĕ эп кантура таврăннă чух.

«Вăрçаççех мана кунĕпе сĕтĕрĕнсе çӳренĕшĕн...— хăраса шухăшласа пытăм çул çинче.— Прогул вĕт ку, урăх ним те мар!»

Анчах никам та пĕр сăмах та шарламарĕ. Ман çине пăхакан та пулмарĕ. Главбухпа плановик шашкăлла выляççĕ. Счетовод вĕсем çумĕнче канашсем паркаласа тăрать.

— Çи, çи, Нихват Ильич! Дамкăна тух!

Эп хамăн сĕтел умне ларса машинкăна пушăллах тăкăртаттаркаласа илтĕм те ыйтрăм:

— Ну, мĕнпе пĕтрĕ сирĕн ирхи тавлашу? Кам çĕнтерчĕ?

— Паллах, эп çĕнтертĕм, кам пултăр-ха тата! —

терĕ главбух.— Пал Степанчăн ерундици кăна пулса тухрĕ.

— Литр илет, эппин?

— Паçăрах илчĕ! Юхса та тухрĕ ĕнтĕ вăл...

— Ан мухтан, уншăн эсĕ халь илетĕн! Акă, сахвута кĕрсе те лартăн вĕт, шапаш! — терĕ çав самантрах пландвик.— Чуп тавай литр патне!

— Пултараймастăп! — пуçне пăркаласа илчĕ главбух.— Ак, Шакайкин кайтăр, вăл çамрăк-ха, швежи!

— Швежиех мар çав паян, манăн та пуç çаврăнать,— терĕ лешĕ.— Тен, Мина Мироновна пулăшĕ пире, эрне хушши ырми-канми ĕçленĕ арçынсене, э? Ырă çын пулса...

Эп хирĕçсе тăмарăм. Хамăн айăпа та каçарттармалла-çке, кунĕпе ĕçре пулман. Укçа пачĕç те, тухса чупрăм. Эрехĕ час тупăнмарĕ тата, виç-тăват çĕре çитрĕм эсрел шĕвекĕшĕн, урараан ура иртми пулчĕ. Пырса патăм та вара — вĕсем тӳрех ыр курма тытăнчĕç. Эп килелле лăпсăртатрăм. Çавăн пек пулчĕ паян, хĕрĕм...

— Чăнах та, йывăр кун пулнă санăн, аннеçĕм,— терĕ Нинуç, Мина Мироновна каласа пĕтерсен.— Хам пулсан, паянхи куншăн сирĕнтен пĕрине те ĕç укçи памăттăм. Ĕçри ханттарсем эсир, акă мĕн!

1971




# Пулă шăмми пыра ларать...

Пĕррехинче ирех — эпĕ пит те ҫуманччĕ-ха — ман патăма Йăкăнат Митрафанч Куҫуков ятлă ҫын пырса кĕчĕ. Чылайранпа паллатăп эп ăна, Шупашкартан пĕр ҫирĕм километр тăварахра, Атăл хĕрринчи ялта, пурăнать вăл. Ĕлĕкрех суту-илӳре ĕҫлетчĕ, унтан вăрман хуралҫи те пулчĕ, кайран тата пилĕк-ултă ҫĕре ҫитрĕ пулмалла, анчах ниҫта та нумаях тытăнса тăраймарĕ курăнать. Ҫынсем каланă тăрăх, алли кукăртарах имĕш унăн — хуть те ăҫта вырнаҫсан та патшалăх пурлăхне е хăй килнелле сĕтĕрме тытăнать, е «сулахаялла» ярать. Ну, хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн халăх ун пеккисене юратсах каймасть, этемĕн чунĕ таса маррине сиссен наччас ĕнсерен ярса тытать те хĕвел ҫутине туртса кăларать.

— Вăрлатăн, эппин, эсрелĕ?! Тар юхтармасăрах кулач ҫиесшĕн? Тухса вăркăн кунтан!..

Вара лармалли вырăнтан самаях ыратмалла тапса сиктерет те — ĕçĕ те пĕтрĕ. Айăпĕ куçа курăнса тăрать пулсан, суд умне тăратса «срок» — виçĕ çул-и унта, пиллĕк-и, е унтан та ытларах, хăçан мĕнле! — пама пултарать. Ан тив, ан тĕкĕн халăхăнне!

Йăкăнат Митрафанч ун пекех лекеймен курăнать, çапах та ăна аларан ярса тыткаланисем пулнă. Ку тĕрĕсех.

Юлашки хут эпĕ ăна çуркунне хула пасарĕнче курсаттăм. Унта вăл ал лаппи хулăнăш çуллă сысна ашĕ сутса тăратчĕ. Мĕнле пурăнатăн тесе ыйтсан, вăл мана:

— Мухтанмаллиех çук-ха, майлă ĕç тупаймастăп хам валли,— терĕ.— Укçаран катăкрах, çавăнпа ачасем çиес аша та пасара илсе тухмалла пулчĕ...

Хăй кăштах хĕрĕнкĕрехчĕ, куçĕсем чеен кулатчĕç. Суять-ха ку, терĕм эпĕ хам ăшăмра ун чухне, анчах хăйне нимех те каламарăм.

Халĕ вăл ман хваттере пачах та кĕтмен-туман çĕртен пырса кĕчĕ. Тĕлĕнсех кайрăм: мĕн кирлĕ пулнă ăна? Сисрĕм — хăй хĕрĕнкĕ...

Ну, пынă çынна хăваласа кăларса ямастăн ĕнтĕ, калаçатăн унпа, юнашар ларса чĕлĕм туртатăн, апат тĕлне пулсассăн, сĕтел хушшине те чĕнетĕн. Эпĕ те çакна хампа пĕрле чей ĕçме чĕнтĕм.

— Чейĕ темех мар-ха вăл, шыв кăна, шыв нумай пулсан, пĕвене те татса кайма пултарать,— терĕ Йăкăнат мана хирĕç,— эпир луччă çакна пуçласа пăхар-ха санпа...

Çапла каларĕ те пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах сĕтел çине хĕрлĕ эрех кăларса лартрĕ.

— Витĕр курăнаканнине тупаймарăм, çак причаш шывĕпех çырлахмалла пулать...

— Çук,— терĕм эпĕ,— манран сыпасси пулмасть, манăн ĕçе каймалла. Чиксе хур каялла! Калаçмалли пур пулсан, унсăр та пит лайăх пуплеме пултаратпăр, пĕрне-пĕри палламан çынсем мар.

— Юрĕ, эппин,— хирĕçсе тăмарĕ Йăкăнат Митрафанч,— эс каланă пек пултăр. Сăмахĕ, чăнах та, пур çав манăн, çавăнпа килтĕм...

Вăл ассăн сывласа илчĕ.

— Хурлăха лекрĕм-ха эпĕ, Иван Васильч. Çавăнпа килтĕм. Тем тесен те, эсĕ манран ытларах чухлакан çын, хулари йĕркесене те лайăххрах пĕлетĕн. Таçта кай-

малла манăн, тем тумалла... Ара, тĕттĕм çынсем мар-и эпир, академисенче вĕренмен вĕт! Пулăш-ха, ăс пар-ха мана...

— Кала, ара, кала, çынна пулăшма май пулсан, ма пулăшас мар? — терĕм эпĕ.

Ман кĕтмен хăна татах тимĕрç лаççинчи вĕркĕч пек хашлатса илчĕ те унăн-кунăн пăхкаланă хыççăн хуллен кăна калама тытăнчĕ.

— Эс пĕлетĕн вĕт-ха, эпĕ ĕнтĕ чылайранпа ниçта та службăра тăмастăп...

— Çапла, çапла, çуркунне пасарта тĕл пулсан та каланăччĕ эс мана...— пуç сулса илтĕм эпĕ.

— Пĕр енчен шутласан, служби мана ытла кирлех те мар-ха вăл. Капла та пурăнма пулать. Кил-çурт тиркемеллех мар манăн, пӳрчĕ икĕ хутлă: аялта — чул, çӳлти — йывăç, сад пур — вăтăра яхăн улмуççи, вишнисем, сливăсем, çĕр çырли; сад варринче — çулла пурăнмалли тепĕр пӳрт ларать, кашни çуллах хуларан дачниксем пыраççĕ, халĕ те пĕр писательпе тепĕр художник çемйисемпех пурăнаççĕ-ха... Уйăхне çирĕмшер тенкĕ илетĕп вĕсенчен, ĕлĕкхи пек шутласан, икшер çĕр пулать ĕнтĕ вăл... Ĕне усратăп, карчăк сĕт сутать, чăхсем çăмарта тăваççĕ, вунсакăр хур, çирĕм икĕ кăвакал çитĕнеççĕ. Икĕ сысна — çĕр шăниччен сахалтан та пилĕк-ултшар пăт пулаççех вĕсем. Ну, тата моторлă кимĕ те хамăннах манăн. Икĕ çул тытатăп ĕнтĕ. Вутти-шанкине укçа парса илместĕп, çуркунне-кĕркунне Атăл тăрăх пĕрене сахал мар юхать, çурт тума юрăхлисем те лекеççĕ. Тур панă япала ĕнтĕ вăл, тытмасăр ăçтан чăтатăн? Пирĕн кил таврашĕнче пĕр пуленкке те сая каймасть. Садри пӳртне эпĕ çав йывăçранах турăм... Кунсăр пуçне, пирĕн анлă Атăлта пулă та пур-ха, ху пĕлен! Стерлячĕ те лекет, çăрттанĕ те, çупахĕ те, уланкă е кăртăш кăна лексен те сĕрекерен каялла кăларса ямастпăр... Тĕттĕм пулсан тухса каятăн та ирччен тепĕр чух ик-виçĕ пăтах тытатăн. Вăл та турă панă япала, çăраççи çĕмĕрсе çаратни мар!

Малтан, çак Йăкăнат каласа пама тытăниччен, эпĕ унăн килĕнче, чăнах та, пысăк хурлăх пулнă пуль тесе, ăна хĕрхенме те пăхрăм. Анчах халĕ, унăн сăмахне итленĕçемĕн, хам сисмесĕрех унран йĕрĕнме, ун çине сиввĕн, çилĕпе пăхма тытăнтăм, ăна тăрукках курайми пула пуçларăм. Ара, ман умра чăн-чăн кулак чунлă çын, пĕр хăйшĕн çеç тăрăшакан, пуясси çинчен

кăна шухăшлакан, ăçта мĕн май килнĕ — çавна вăрлама, ют çынсенне кăна мар, тăван ашшĕн тирне те сĕвме пултаракан, нихçан тăранас çук çăткăн этем ларать вĕт! Тăшман!..

Анчах та вăл çакна сисмерĕ, хăйĕн пурлăхĕпе мухтанма тытăннипе хĕрсе кайнăскер, малалла каларĕ.

— Пĕр сăмахпа, аптрамастпăр,— трахом ермен, йĕмсĕр çӳремен! Атăл хĕрринче кил-çурт çавăрнă хыççăн нушине те, хурлăхне те курманччĕ-ха. Ывăла авлантартăм, кин кĕртрĕм — вĕсене те хам пек пурăнма вĕрентетĕп. Пурнăçа пĕлсе пурăнсассăн, килтех ик-виç сарплаттă ытла тума пулать вĕт. Çитменнине тата, эсĕ хăвăншăн ху хуçа, никама та пăхăнмастăн, пуççапмастăн... Анчах юлашкинчен вăт, леш эрнере, таçтан шуйттанĕнчен инкек йăтăнса анчĕ-ха ман пуç çине! Никама та айăпламастăп уншăн, хамах ухмах пултăм çав, хамах айăплă!

— Мĕнле инкек сиксе тухрĕ-ха вара? Тӳшек ăшне çĕлесе хунă укçуна çаратса каймарĕç пулĕ-çке? — ытларах тарăхса, çилĕпе пăхса ыйтрăм эпĕ.

— Çук-çук,— ал сулчĕ Йăкăнат,— мĕн укçи пултăр пирĕн? Пулнă пулсан та, ăна ăçта хумаллине пĕлĕттĕмĕр-ха эпир, вуникĕ вăрă пĕр харăс пырса тапăнсан та тупаймĕччĕç!

— Мĕн-ха, эппин, тата?

— Улталарĕç мана! — чышкипе сĕтел çине çапсах илчĕ вăл.— Шутсăр хытă улталантăм! Сăмса шăлайман айван ача пек! Пĕрре чуптуса курман вунултă çулхи хĕр пек! Çавăн пирки ниçта кайса кĕрейместĕп те халь, çавăншăн пĕтĕм ăшчик вутпа çунать.

— Темскер сутнă чух йӳнĕпе патăн-и?

— Çук, ун пек мар. Йӳнĕпе панă пулсан, татах юратчĕ-ха, япалана ăна пур чухне те хакла хакпа сутма çук, атту вĕт — пĕр пуссăр парса ятăм, çитменнине тата, çиелтен хамах штраф тӳлеттерчĕç! Çавă шутсăр кӳрентерет!..

Халь çеç питĕ хаваслăн калаçнă Йăкăнат Митрафанч куçĕсене мăч-мăч хупса илчĕ, кĕç-вĕç макăрса ярас пек. Сасси те темле хурлăхлăн илтĕнме пуçларĕ.

— Чим-ха,— терĕм ăна,— ăнлансах çитейместĕп эпĕ... Камсем, мĕнпе улталарĕç вара сана? Тата ниушлĕ сан пек пултаруллă этеме улталама ăс çитерекен çын та пур? Ман шутпа, эсĕ ху кирек те кама та çит-

мӗл ҫичӗ хут чике тӑршшӗ лартма пултаратӑн! Ҫапла мар-им?

Йӑкӑнат мана куҫран тӑй-й пӑхса темиҫе самант хушши нимӗн те чӗнмерӗ. Унтан каллех кавлесе ывӑннӑ ӗне пек хашлатса илчӗ те малалла каласа пама тытӑнчӗ.

— Сан сӑмахху тӗрӗс те пулӗ, ку таранччен эпӗ хама, чӑнах та, ултапаттарсах кайманччӗ, анчах хальхинче...

— Мӗн хальхинче?

— Икӗ сар туталлӑ йӗкӗтпе мӗлке ҫӳҫлӗ хӗрача манран пин хут чеерех пулчӗҫ! Пӗр наччасра мутаеласа хучӗҫ мана!..

— Эс йӗркипе каласа пар! Ӑнланмалларах пултӑр!

— Йӗркипе... Йӗркипе каласан — ак мӗнле пулчӗ. Иртнӗ эрнере, хӗртсе хӗвел пӑхнӑ кун, туран, канмалли ҫурт енчен, пирӗн ял патнелле пӗр пысӑках мар катер анчӗ. Ун ҫинче виҫҫӗн, ҫав икӗ каччӑпа пӗр хӗр, ларатчӗҫ. Эпӗ шӑпах Атӑл хӗррине тухнӑччӗ. Малтан катер анаталла анса кайрӗ, унтан тӑрук каялла вӑр-р ҫаврӑнчӗ те пирӗн ҫыран патне пырса тӑчӗ. «Канмалли ҫуртрисем ярӑнса ҫӳреҫҫӗ»,— шухӑшларӑм эпӗ. Унччен те пулмарӗ, ҫаксем пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫырана сиксе тухрӗҫ. Хӗрӗ — малтан, каччисем — ун хыҫҫӑн. Тӳрех ман паталла ҫул тытрӗҫ. «Кусем тем ҫинчен ыйтса пӗлесшӗн-ши?» — тетӗп. Ҫав самантрах пӗри мана: «Салам пултӑр, мучи!» — терӗ. Эпӗ те саламларӑм... Унтан, виҫҫӗшӗ те ман ума пырса тӑрсан, пирӗн хушӑра ҫакӑн пек калаҫу пуҫланса кайрӗ:

— Итле-ха, мучи, сирӗн ялта ӑнсӑртран чӗрӗ пулӑ тупса илме пулмасть-ши?

— Пӗлместӗп ҫав... Илтмен.

— Ҫакнашкал Атӑл хӗрринчи ялта пулӑ тытакансем пурах пуль ӗнтӗ!

— Тен, пур та пулӗ... Анчах сире пулӑ мӗн тума кирлӗ? Сире канмалли ҫуртра ахаль те ҫитереҫҫӗ вӗт? Е хӑвӑрӑн ӑҫта та пулин вӑрманта пӗҫерсе ҫиес килет-и?

— Эпир канмалли ҫуртран мар ҫав, мучи, эпир Шупашкартан хӑпартӑмӑр. Киле валли илсе каяс шут пур...

— Нумай кирлӗ-и вара сире?

— Мӗн тери ытларах, ҫав тери лайӑхрах пулать. Хамӑр ҫисе яраймасан, юлташсене паратпӑр.

Ёненсех лартрăм çаксене. Ёненмесĕр тăма майĕ те çукчĕ çав... Виçĕ çамрăк çын катерпа хăпарнă, çула май чĕрĕ пулă туянасшăн. Тĕлĕнмелле япалах мар! Пирĕн еннелле ун пеккисем час-часах пыраççĕ, хакĕ пирки те кутăнлансах тăмаççĕ,— мĕн чухлĕ ыйтнă, çавăн чухлĕ параççĕ... Шăпах манăн çĕрккаç тытнă пулă пурччĕ. Нумаях та мар, пĕр пăта яхăн. Ывăлпа иксĕмĕр ир енне таврăнтăмăр та карçинккипех нӳхрепе, юр çине кĕртсе лартрăмăр. Тавай, сутса ярас çаксене! Пĕтĕмпех илетпĕр, теççĕ вĕт-ха! Сутма таçта урăх çĕре кайса чăрманса çӳриччен—питĕ ансат пулать-иç!

— Пуллине тупма пулать те пуль,— терĕм хайхискер,— анчах хакне мĕнлерех пама шутлатăр?

— Хакне эсĕ ху калатăн ĕнтĕ, эпир пĕлместпĕр, таварĕ сирĕн, укçи пирĕн,— терĕ пĕри, кăшт аслăрах пек курăнаканни.

— Килограмĕ пĕр тенкĕрен кая пулмасть,— терĕм эпĕ.— Пăрахут çинчи повăрсем те сăмахсăрах çавăн чухлĕ параççĕ...

Çамрăксем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Мĕнле, юлташсем, пĕрер тенкĕпе хаклă пулмасть-ши? — ыйтрĕ аслăраххи.

— Çук, çук, хаклă мар! Атя, часрах илес те килелле вĕçтерес, хăвăртрах çитсе ăшаласа çиес! Манăн хырăм выçса кайрĕ! — терĕ вĕсен хĕрĕ.

— Пулли камăн пур вара? Санăн хăвăннах-и е кӳршĕсен? — ыйтрĕ аслăраххи.

— Хамăннах тупăнать пăртак,— терĕм.

— Инçе пурăнатăн-и эс?

— Çук, çывăхрах, а-ав çав симĕс тăрăллă çурт...— хамăн кил çине тĕллесе кăтартрăм çаксене.— Хăшĕ те пулин атьăр манпа. Тараса пур, виçетпĕр те çĕклесе килетпĕр...

Ёç йĕркеллех пулса пычĕ пирĕн. Хĕрĕ катер патĕнче юлчĕ, каччисем иккĕшĕ те манпа утрĕç. Çул çинче калаçса кайрăмăр — вĕсем манран эп кунта хăçантанпа пурăннине, мĕн ĕçленине, ман ятпа хушамата ыйтса пĕлчĕç, хайсене: «Эпир Мускавра вĕренекен студентсем, туристла походра çӳретпĕр, халь пĕр-ик кунлăха Шупашкарта чарăнса тăтăмăр»,—теççĕ... Ну, çитрĕмĕр ман пата, эп нӳхрепе антăм, пулă тултарнă карçинкkана çӳлелле çĕклесе патăм, унтан ăна тараса çине лартса турттарса пăхрăмăр — шăп вунтăвата кило пулчĕ.

— А-ах, пуллисем хитре-е! — тулли кăмăлпа мухтарĕç студентсем, хĕр пĕççи пек çăрттансене тытса пăха-пăха.

Каялла, катер тăнă çĕре, карçинккана хăйсемех çĕклесе кайрĕç, мана, ват çынна, йăттарса чăрмантармарĕç. Питĕ ыр кăмăллă, культурăллă каччăсем мар-и, ара! Пулла катер тĕпне пушатрĕç те карçинккине хам ума пырса лартрĕç. Манăн ĕнтĕ вĕсенчен укçа илсе лавккана пĕр чĕрĕк ĕçме каясси кăна юлчĕ...

Анчах та темшĕн-çке укçине пама васкамарĕç çаксем. Виççĕшĕ те катер çине кĕрсе тăчĕç те пĕр-пĕринпе тем çинчен мăр-мăр-мăр калаçма тытăнчĕç. Шикленмех пуçларăм: катерне тăрук тапратса ярса, мана укçа памасăр-тумасăрах тарасшăн мар-и кусем? Ахальтен мар пуллине пушатнă хыççăн катерне çыранран пĕр виçĕ метр аяккарах илсе кайса тăратрĕç пуль! Пĕр хускалсан, вĕсене шуйттан та хуса çитес çук, шăхăрса юл вара çыран хĕрринче, çил арманĕ пек хăлаçланса!..

Вăхăт шăвать, пĕр вунă минут иртрĕ пулмалла, анчах вĕсем çаплах калаçаççĕ-ха. Те укçи çитмест... Студент тенисен вăл та пулма пултарать, çара çерçисем вĕт вĕсем!

Тăрсан-тăрсан, тӳсеймерĕм:

— Граждансем, манăн васкамалли ĕç пур, эсир манпа хăвăртрах рашчот тăвăр-ха,— терĕм.

— Ан пăшăрхан-ха, мучи, халех рашчот пулать санпа! — терĕ çаксене хĕрĕ, ман еннелле аллипе вĕлвĕл-вĕл сулса.— Юлташсем умĕнче отчет тума санран расписка илес терĕмĕр-ха.

Каллех ĕнентĕм...

Тепĕр икĕ минутран çаксем, чăнах та, çырана тухрĕç. Аслăраххи тӳрех мана хут тыттарчĕ.

— Акă, вуласа тух та — алă пус! Икĕ экземпляр кирлĕ. Пĕри — пире, тепри — сана...

— Мана мĕн тума? — тĕлĕнтĕм эпĕ.— Эпĕ никам умĕнче те отчет тумастăп, пулли хамăн, хам алăпа тытнăскер!

— Эс вула, вула малтан...

Хайхискер, хута вулама пуçларăм та... манăн куçсем чутах çамка çине сиксе тухатчĕç! Сасартăк, пĕр самантрах тарласа кайрăм...

«Акт... çав числара, çав çул, эпĕ, рыбнадзорăн общество инспекторĕ... çав-çав свидетельсем умĕнче...

çав ялти çав çыннăне саккунсăр тытнă вунтăватă кило пулă конфискаци турăм... Çав постановленин çав пункчĕ тăрăх, çав çынна... (мана ĕнтĕ) аллă тенкĕ штраф тăватăп... Укçине госбанк кантурне çав числаран кая мар кайса хывма хушатăп...»

Тур çырлахтăр! Вуланă çĕртех пуç çаврăнса кайрĕ манăн, ал-урасем те чĕтреме тытăнчĕç... Ак сана «студентсем!» Ак сана Атăл илемĕпе киленсе çӳрекен туристсем! Пĕтерчĕç, çĕçĕсĕрех пусса хучĕç! Чи ухмах пулă пекех сĕрекене пырса çаклантăм вĕт! Хам ирĕкпех, хам килĕшнипех! Тăм писмен мар-и ĕнтĕ эп çавăн хыççăн?

Пĕр хушă, çамкипе юман каскана пырса çапăннă така пек анра-сухра пулса, эпĕ ним ăнланмасăр, çăвар та уçаймасăр тăтăм. Çаççим тăн çухатрăм!

— Ну, ну, алă пусса пар часрах,—терĕ хайхи малтан студент пек курăннă инспектор,— санăн та, пирĕн те васкамалла!

— Эсир мĕн... мĕн... шӳт тума пăрахăр-ха, ачасем,— терĕм вара эпĕ, тинех кăшт тăна кĕнĕ пек пулса.— Эп сире ыр тăватăп, хам çиес пулла парса яратăп пулать те, эсир пур, тав туса укçа тӳлес вырăнне, мана темле хут татки парса мăшкăллатăр... Чипер хăтланăр-ха, эсир ăнланакан яшсем, комсомолецсем пулĕ-ха...

— Ыр тумастăн çав эс пире,— терĕ инспектор, куçĕсене ялкăштарса илсе,— сиен кăна тăватăн!

— Пулă çини сиен пулать-и вара? Мĕн эсир?

— Пулă çини сиенлĕ мар, анчах та пулă вăрлани— питĕ сиенлĕ! Эсĕ халăх пуянлăхне намăса пĕлмесĕр вăрласа, укçа çапса пурăнатăн!

— Ним те вăрламан эпĕ! Атăл хĕррине уçăлмалăх тухса пулă тытни — вăрлани-и вара вăл? Чипер каласăр-ха! — плахая пеме тытăнтăм эпĕ.

— Ан лăпăртат! — терĕ тепри, ман патарах пырса тăрса.— Çакăн чухлĕ пулла эсĕ вăлтапа тытрăн-и-мĕн? Эс ăна вăрă-хурах пек сĕм-çĕрле çӳресе, усă курма чарнă хатĕрсемпе тытнă вĕт! Чи усал браконьер, пулăçă-спекулянт эсĕ!..

— Сан пеккисене штраф тумалла çеç мар, судпа айăпласа тĕрмене хупмалла! — хушса хучĕ мелке пуçлă хĕрĕ те.

— Алă пус, теççĕ! Штрафне те ыранах кайса тӳле, атту-тăк ĕçе, чăнах та, суда яратпăр, куратăн вара ун

чухне мĕн курмаллине! — кăшкăрчĕ инспектор, мана вăйпах авторучка тыттарса.

Чун кӳтсе çитнипе, çурăлса каймалла тăрахнипе манăн вĕсемпе тавлашас, кăшкăрашас, актне çурса çилпе вĕçтерсе ярса çапăçма тытăнас килсе кайрĕ, анчах вĕсем мана виççĕн виç енчен хупăрласа илсе, темĕн тĕрлĕ намăслантарма тытăнчĕç те, эпĕ вĕри шыва чиксе кăларнă чĕпĕ пеçех пулса кайрăм курăнать, хевте пĕтсе ларчĕ манăн. Ним те калаймарăм, хама тыттарнă икĕ хучĕ çине те чăр-чар алă пусса патăм...

— Асту, тепре лексен тата хытăрах хĕсетпĕр! Хăвăн пырнах ларать акă вăрланă пуллу!—çилĕпе асăрхаттарчĕ инспектор юлашкинчен.

Вĕсем хăйсен катерĕ çине ларчĕç те анаталла вĕçтерчĕç, хĕрĕ — юри мăшкăлласа пулĕ çав — мана аллипе паçăрхи пекех вĕл-вĕл-вĕл сулчĕ, эпĕ вĕсем хыççăн пĕччен тунката пек тăрса пăхса юлтăм. Тен, хам пурнăçра эпĕ пĕрремĕш хут çавăн чух мĕскĕн пултăм пулĕ...

Анчах каçхине хуйхи-суйхипе, тарăхни-çилленнипе ĕçсе лартрăм та урсах кайрăм вара! Мана улталаса пĕтĕм пулла тытса илнĕ, çиелтен штраф хунă леш икĕ каччăпа хĕр çав самантра ал айне лекес пулсан, эп вĕсене пуртăпах вакласа тăкнă пулăттăм-и, тен! Ы-ых!.. Çилле ниçта чикейменнипе хамăн ним айăпсăр карчăка питĕнчен чăнт-чант çутăлтарса илтĕм, ун хутне кĕме тăнă кине те лекрĕ, куç тĕлне пулнă кушака та тытса çавăрса çапрăм, унтан хамăрăн сад хуралĕнче выртакан ывăла чĕнтертĕм те тӳрех команда патăм:

— Пуçтарăн, ыйхă муклашки! Халех пулла тухса каятпăр! — терĕм.— Вĕсем пирĕнне пĕр пăт пулă илсе кайрĕç, эпир уншăн кĕçĕр вунă пăт тытатпăр! Штраф хакне те кăларатпăр тата унтан икĕ хут пысăкрах тупăш илетпĕр! Атя хăвăртрах!..

Карчăкпа кин мана чарма пикенчĕç, каллех темрен тем пулса тухĕ, кĕçĕрех ан кайăр, терĕç, анчах эпĕ вĕсене тепрер хăмсартăм та — çăварĕсене хупрĕç. Эпĕ хам пурнăçра хĕрарăм сăмаххисене нихçан та хăлхана чикмен, анчах хальхинче итлемеллех-мĕн...

Çур сехетрен эпир Атăл варринче пултăмăр. Пулă аван кĕчĕ. Сăптăратпăр кăна. Эп паян шар курнăшăн мана хĕрхеннĕ пекех, пуллисем пирĕн сĕрекене пĕрпĕринпе ăмăртсах пырса кĕреççĕ пулмалла. Пĕр-икĕ сехет хушшинче çур кимĕ тултартăмăр.

— Атте, çитет пуль кун чухлĕ тытнипе, тул çутăлса килет, лекме пултаратпăр,— терĕ ман ывăл, çавăн пек тытсан-тытсан.

— Ан палка! Нимĕнле хăрушлăх та çук çĕртех йĕм тĕпне ан тултар! — кăшкăрса пăрахрăм ачана.— Çитмест-ха, пире тата кирлĕ! Леш надзорсене лайăхрах тавăрас пулать пирĕн, ăнлантăн-и çавна? Вăрт-вартрах çаврăнкала!

Ывăл мана хирĕç ним те калаймасть. Татах тытатпăр, татах. Пӳлли кĕнĕçемĕн ытларах тытас килет вĕт ăна, мура!

Чăнах та, тул çутăла пуçларĕ. Атăл çийĕнчи çăмăл тĕтре майĕпе сирĕлсех пырать.

— Каяр пуль, атте! — сас пачĕ ывăл каллех.

— Тăхта, тепре туртса кăларар-ха,— терĕм эпĕ.

Анчах çапла каларăм çеç — пирĕнтен ытла инçе те мар хăвăрт çӳрекен катер моторĕ кĕрлесе кайрĕ.

— Ак хайхи, килеççĕ! — ахлатса илчĕ ывăл.— Хăтăлаймастпăр халь! Тытаççĕ! Итлемерĕн мана...

— Ан çухăр, мотора часрах хута яр! Леш еннелле кайса затонри хăмăшсем хушшине пытанатпăр!

Ывăл мотор патне ыткăнса тăрмашма тапратрĕ. Пĕрре туртать кантраран, тепре туртать, анчах мотор ӳсĕр çын хăснă пек лăкăрт-лăкăрт! тăвать те каллех чарăнать.

— Каймасть, ара, мĕн тăвас-ха манăн...

Аптрамалли çитрĕ вĕт! Вара эп хам часрах сиксе тăтăм та, ывăла айккинелле тĕртсе ярсах, мотор патне пытăм. Апла та туса пăхатăп, капла та — çук, хускалма мар — сасси те тухмасть. Анчах леш катер кĕрлени çывăхрах илтĕнет ĕнтĕ.

— Пуллине шывалла вăркăнтар! — кăшкăртăм та эпĕ ывăла, моторпа тăрмашма пăрахсах тĕттĕмре те çап-çутă курăнакан пулăсене Атăла каялла чăмтарма тытăнтăм. Анчах çавăн чухлĕ пулла ăçтан тăруках ывăтса пĕтеретĕн? Унччен те пулмарĕ, леш катер ыткăнса çитсе пирĕнпе юнашар тăчĕ те, çав самантрах ун çинчи çынсенчен пĕри пирĕн кимĕ çине сикрĕ.

— А-а, паллана çынсем-çке! Ирхи салам сире, тур пулăштăр! — терĕ вăл, аллине çĕклесе.

Пăхатăп — ку лешĕ, кăнтăрла ман çине штраф хураканни, студент-инспектор! Мĕн калăн ĕнтĕ ăна? Вăл ман çинчен ахаль те пĕтĕмпех пĕлет: ятпа хушамата та, эп ăçти çын пулнине те.

Ну, малалла мĕн пулни ахалех паллă ĕнтĕ. Каллех акт. Пĕр талăк хушшинче иккĕмĕш хут! Анчах хальхинче ахаль штрафпа çырлахмалла мар, судпа айăпламалла, теççĕ. Пулă тытмалли хатĕр-хĕтĕрсене шăкăр-шакăр пуçтарса илчĕç, спаççипă та каламарĕç. Ку çеç те мар: çав катер çинчех çиелтен ахаль тум тăхăннă милици çынни пулнă. Çырана тухсан, вăл пирĕн кимĕ пирки тĕпчеме тапратрĕ. Моторне хăçан туяннă, ăçта, хăçан регистраци тунă? Анчах эпир ун пек тăвасси çинчен шухăшламан та! Моторлă кимме çӳретмелли права пур-и? Çук!.. Апла пулсан, çак саmантран пуçласа эсир ку кимĕ çине ларма та пултараймастăр, ку таранччен çӳренĕшĕн — штраф, тет. Ак хайхи! Пур енчен те пĕр харăсах пĕтерсе хучĕç, ик çуната та çапса хуçрĕç. Малашне мĕн-мĕн пулассине те пĕлместĕп-ха. Штрафсем тӳлеттерсех кил-çурта суттараççĕ пуль ĕнтĕ. Е тĕрмене кайса лартĕç-и... Çапла, Иван Васильч!

Йăкăнат Митрафанч паçăрхинчен те хурлăхлăрах сывласа илчĕ.

— Кала-ха эс, тĕрĕс-и вĕсем мана çакăн пек хĕсĕрлени, манăн хаклă хатĕрсене туртса илсе, çиелтен хама айăплани? Эс ăслă çын, каласамччĕ ĕнтĕ! Ăçта кайса хӳтлĕх шырас манăн? Кам ман хута кĕме пултарать, э?

— Пĕтĕмпех тĕрĕс,— терĕм эпĕ.— Пулă шăмми тепĕр чух пыра ларать çав вăл! Сана, прохвоста, тахçанах тытса питĕ хытă айăпламалла пулнă. Шел, халь тин тытнă!

Йăкăнат Митрафанчăн куçĕсем чарăлса чăх çăмарти пысăкăш пулса кайрĕç...

1958



# Пăшăл-пăшăл...

Тен, эсир ёненсех каймастăр пулĕ, анчах пирĕн ялта çавăн пек ятлă çын чăнах пур. Пурте — ватти те, вĕтти те — вăл çынна яланах «Пăшăл-пăшăл» тесе чĕнеççĕ. Хамăр ялсем кăна мар, кӳршĕ ялсенче те çаплах калаççĕ ăна...

Паллах ĕнтĕ, ку ята ăна тĕне кĕртнĕ чух паман, паспорт тăрăх вăл Стратон Хомич Шумов тесе шутланать, анчах унăн çак чăн-чăн ятне пĕлекенсем питĕ сайра.

— Мĕншĕн-ха çав Шумов (янракан, кĕрлекен, шавлакан çын) Пăшăл-пăшăл (шăппăн, пăшăлтатса калаçакан çын) пулса тăнă апла? — тесе ыйтма пултаратăр эсир.

Çак саккунлă ыйтăва хирĕç тивĕçлĕ ответ пама тăрăшса, манăн сире кĕскен те пулин унăн пурнăçĕпе, ун кунçулĕн кукрашки-макрашкисемпе паллаштарма тивет, унсăрăн ăнланмаллах пуласса шанмастăп.

Çав Стратон Хомич Шумов, хальхи пек каласан —

Пăшăл-пăшăл, ĕлĕк-авал (ытла авалах та мар ĕнтĕ, пĕр... аллă çул каялла) пирĕн тăрăхра питĕ паллă çын пулнă. Паллă кăна та мар, хисеплĕ çын тес пулать. Хуть те ăçта тĕл пулсан та, кашниех ăна пуç тайса саламланă, ырлăх-сывлăх суннă, май килсенех, ăна хăнана чĕннĕ, хăнана пырсан вара часрах малти кĕтесе, кĕрекене кĕртсе лартма васканă.

— Тавтапуçах сана, Стратон Хомиччă, пирĕн пата килсе чыс тунăшăн...

— Ĕç-ха, Стратон Хомич, çырт-ха...

Сĕтел çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех ун умнелле шутарнă, вăл алтăрти кăрчамана сарлака карланкине юхтарнă чух та, автан тукмаккине шăмми-мĕнĕпех шатăртаттарса çинĕ чух та пĕтĕм хăна халăхĕ сывламасăр пăхса тăнă. Вăл хăйне хăй мĕнлерех тыткалани те, калаçни те çынсене питĕ тĕлĕнтернĕ. Çынна тĕл пулсан — ăна курмасть вăл, унăн пуçĕ урлă таçталла, хур аçи пек каçăрăлса пăхать, калаçма тытăнать—шартах сиктерет, ĕçет пулсан — четвĕрт, унтан кая йышăнмасть. Хĕрсе çитес тĕлĕшпе хăй виçине ларма пуçласан вара темиçе çаврăм юрласа илет... (Юрри яланах пĕрре унăн — «Расскажи, расскажи, бродяга...», вăл урăхла юрланине никам та илтмен), юлашкинчен вара, сĕтел çинче юлнă ĕçме-çимене ик аллипе пĕр харăс ик еннелле сулса çĕре шăлса тăкать те, пуçне сĕтел çине хурса, тӳрех çывăрса каять. Пĕр-икĕ минутранах пӳрт чӳречисене чĕтрентермелле харлаттарма тытăнать, вара ăна виççĕн-тăваттăн йатса, çĕмрĕлме пултаракан хаклă япалана тытнă пек, кутник çине кайса хураççĕ...

Ирхине Стратон Хомич, хăй каларăш, пуçне «ремонт» тăвать, унтан тăрантас çине лашт! кĕрсе ларать те (тăрантас каштисем шатăрах авăнса илеççĕ), хуçине тав тумасăрах, ун çине çаврăнса пăхмасăрах, тухса каять. Пĕкки çинчи икĕ шăнкăрав сасси ял вĕçĕнче çухалсан тин кил хуçи лач! сурса пӳрте кĕрет. Анчах тепринче пурпĕр вăл Стратон Хомича çав-çавах кăмăллăн йышăнать:

— Тавтапуçах сана, Стратон Хомич, пире хисеп тунăшăн...

Чаплă çын пулнă çав ун чух Стратон Хомич. Волисполком председателĕ, пысăк власть! Хăнара хĕрсе кайсан, хăех çапла калатчĕ, тет: «Эп хушсан — пĕтĕм вулăс сывлама чарăнать!» Ара, пурин те тем пирки те

ун патне пымалла-çке: пӳрт юсама темиçе пӗрене туп-малла-и, вут-шанкă илмелле-и, налог чакарттарасси пирки калаçмалла-и,— ыйтмалли сахал пулать-и пур-нăçра? Кам татса парать пур ӗçсене? Стратон Фомич!.. Анчах та унăн кăмăлӗ çирӗп, ăна çавăрма пӗлес пу-лать. Пушă алăпа каяймастăн ун патне. Малтан хăна туни те питӗ усăллă. Вара ӗç хăвна кирлӗ пек пулса тухасса чиперех шанма пултаратăн. Ăçта каймасть çур витре ханша е вит тăвату кăвакал!

Тӗрӗснех калас пулать, хытă янăранă ун чух Стратон Шумов ячӗ!

Пурте каланă ун çинчен:

— О-о, шутсăр хăватлă çын вӗт вăл! Асăрхăр-ха: унăн пуçӗ те лаша пуçӗ пысăкăш!..

— Ыр тума та, хур тума та пултарать...

— Шуйттан вăл сирӗн Стратон, шалчи тулӗ-ха хăçан та пулин, кăларса çапӗç-ха! — хирӗçленӗ тата хăшпӗрисем.

Чăнах та, сирпӗтнӗ çакна, кăларса пăрахнă ăшă вырăнтан. Пӗтӗм вулăс пӗр-икӗ эрне хушши хӗпӗртесе калаçнă ун пирки. Эп хам пӗр вунвиççӗсенче пулнă та вăл вăхăтра, лайăх астăватăп: çав Стратона кăларса çапнăшăн пӗрисем савăнчӗç, çав хушăрах хӗрхенекен-сем те тупăнчӗç.

— Пăх-ха, Стратона мăкăлтама пултаракан çын-сем те пур иккен! Шутламанччӗ...

— Епле шутламан?! Эпир Совет влаçӗ вăхăтӗнче пурăнатпăр пуль?

— Çавă чух-ха ăна! Текех шавлаймӗ!

— Çапах та — кирлӗ çынччӗ вăл эсрел, унпа яла-нах ӗç кăларма пулатчӗ. Пӗрре хăна тăватăн та...

— Çавăнпа кăларса ывăтнă та!

Пӗр çур çул ытла илтӗнмерӗ Шумов сасси. Таçта кайса пăчланнă пекех пулчӗ вăл. Унтан сасартăк... каллех асăнма тапратрӗç çавна! Халăх судне секрета-ре кӗнӗ, терӗç.

— Ну, тыткалать халь ку!

— Пуять... Курăр акă! — уççăнах сăмахларӗç çынсем.

Эпӗ хам суд таврашӗпе пӗрре те çыхланса курман та, Стратон кунта хăйӗн пултарулăхне мӗнлерех па-лăртнине пӗлместӗп, анчах «вăрман хăлхаллă, уй куç-лă»-çке-ха. Хăйма вăрлама вӗреннӗ кушак аçи хăйӗн йăлине пăрахмасть, теççӗ,— Шумов каллех пуринчен

те «кучченеҫсем» илме тытӑннӑ. Ёлӗкхи пек шавламан вӑл халь, кӑшкӑрман, хӑнана кайсан, сӗтел ҫинчи чашӑк-тирӗксене вӑркӑнтарман, пӗтӗмпех шӑппӑн, пӑштӑн-пӑштӑн туса пынӑ: пӗринчен ӑна илнӗ, теприччен куна, уншӑн суя хутсем тума пулӑшнӑ, ӗҫсене арпаштарнӑ...

Темиҫе ҫул пурӑнчӗ вӑл ҫакӑнта. Арӑмӗ хӗн курса вилсен, тепре авланчӗ, лавккари пӗр самӑр майра-прикащике илсе ячӗ. Малтанхине вӑл нихҫан та ҫутӑ кун кӑтартман, ялан хӗнет, тетчӗҫ, ҫӗнӗ арӑмӗпе вара ҫав тери килӗштерсе пурӑннӑ. Унччен те пулмарӗ — район центрӗнчех садлӑ кил вырӑнӗ илсе петистеннӑй пӳрт лартрӗ, ӗне туянчӗ. Пӳртӗнче — диван, трюмо, ҫемҫе пукансем, кавирсем, тетчӗҫ. Хырӑмӗ те самаях ӳсме пуҫларӗ унӑн...

Кил таврашӗнче хӑй мӗн те пулин тунине никам та курман вара. Такамсем пырса вуттине татса ҫураҫҫӗ, такамсем паранкӑ лартса, кӑларса нӳхрепех хурса параҫҫӗ, ӗнине ҫулла такам ачи пӑхать, шывне те ҫӑлтан суд технички ӑсса пырать...

Ҫынсем тӗлӗнеҫҫӗ кӑна:

— Пултарать Стратон! Улпут пек пурӑнать вӗт, чур ҫапманскерсем!

Уйӑхсерен илекен шалу укҫипе ҫавӑн пек «пыл та ҫу» пурӑнма ҫуккине пурте пӗлнӗ те-ха ӗнтӗ — мӗн тӑвӑн? Тытман...

Анчах вӑрӑ тем пек чееленсе, этем шутсӑр ӑста вӑрласан та — хӑҫан та пулин лекетех теҫҫӗ-и-ха ҫав? Тӗрӗс каланӑ ҫавна.

Пӗррехинче Шумов ячӗ каллех янраса кайрӗ район тӑрӑх:

— Арӑмӗпе иккӗшне те хупнӑ,— терӗҫ.— Хӑй службӑра пысӑк преступленисем тунӑ, арӑмӗн — растрата!

Кӗҫ — суд, пурлӑхне конфискаци турӗҫ, хӑйсене — кирлӗ ҫӗре, ытла ҫывӑхах мар вырӑна ячӗҫ...

Нумай-нумай вӑхӑт иртрӗ ҫавӑнтанпа.

Мантӑмӑр эпир Шумов ҫинчен. Ҫухалчӗ Стратон. Анчах яланлӑхах мар иккен. Темиҫе ҫул каялла чиперех ҫаврӑнса ҫитрӗ ҫак чӗрчун хӑй ҫуралнӑ ҫӗршыва. Ну... ытлашши чиперех темелле мар ӗнтӗ... Пичӗсем пӗркеленнӗ, пуҫӗ кукша, ҫӑварӗнче те виҫ-тӑват шӑл кӑна — тутӑхнӑ пӑтасем пек курӑнаҫҫӗ. Сасси те ӗлӗкхи мар, ҫӗтсе ларнӑ, аран илтӗнет — нӑй-нӑй-нӑй,

сăмса витĕр. Кусĕсем хĕсĕннĕ, хĕрлĕ сухалĕ сайралса кайнă, хăй каларăш — виçĕ пĕрчи тăватă еннелле...

Малтанах Стратон унта-кунта çӳрекелерĕ, паян — пĕр çĕрте, ыран — тепĕр çĕрте; çăкăр-тăварлăх çынсене тĕрлĕ прошенисемпе кассацисем çырса парса тупкаларĕ курăнать, ăна час-часах суд коридорĕнче курма пулать, хăй ялан табак шăршлать те темле таблеткăсем ĕçет, тетчĕç. Унтан, кĕтмен çĕртен, çак çын пирĕн яла пырса кĕчĕ — нумайранпа пĕр-пĕччен пурăнакан Ялампи патне. Лешĕ вăл, Ялампи тени, ялан халăхран уйрăм пирĕн: колхозра ячĕшĕн кăна ĕçлекелет, пуринчен ытларах — пасарсем тăрăх йăкăр-йăкăр, ăна илет те куна сутать, тĕпсакайĕнче хуть те хăçан та ик-виç четвĕрт ларать унăн, ĕлĕкрех юмăç та пăхатчĕ пулас. Суд та турĕç ăна пĕрре, анчах темле çăлăнкаласа тухрĕ. Стратонпа çав Ялампи тaçта паллашнă та калаçса татăлнă курăнать çав...

Ну, пĕрле пурăнма пуçларĕç çаксем. Çынсемпе хутшăнсах каймастчĕç, те пур вĕсем ялта, те çук... Анчах Стратонĕ, кăшт пурăнсан, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ял хушшине тухса çӳрекен пулчĕ. Пухусене пырать, правление, ял Советне, клуба кайса ларать. Нимех те калаçмасть хăй, итлет кăна.

Аванах пурăнатпăр ĕнтĕ, ĕçлетпĕр. Колхозĕ начар мар пирĕн, хуçалăх енĕпе те, культура тĕлĕшпе те çынсенчен юлмастпăр, намăс курмастпăр. Хам эпĕ завклубчĕ ун чух. Кружоксем ĕçлеççĕ унта пирĕн, спектакльсем, вечерсем пулаççĕ. Каç-каç çамрăксем нихçан та татăлмаççĕ клубран: каччисем те, хĕрĕсем те. Ваттисем те тăтăшах çӳреççĕ: çĕнĕ хаçатсем вулама, докладсем итлеме, кино курма... Тĕрĕссипе каласан, пирĕн клуб районра пĕрремĕш вырăнта тăратчĕ. Хурламан пире.

Анчах пĕррехинче сасартăк районран комисси пырса тухрĕ ман пата — виçĕ çын.

— Жалоба пур,— терĕç,— тĕрĕслеме килтĕмĕр.

— Мĕнле жалоба-ши тата?

— Эсир клубра мĕншĕн иртĕнсе пурăнатăр?

— Ним те туман-çке!

— Суятăн,— теççĕ мана.— Ĕçлес вырăнне ашкăнатăр кăна! Кашни каç ахăрсаман сирĕн кунта, спектакльсенче ӳсĕр вылятăр, сцена хыçĕнче хĕрсене кӳрентеретĕр, библиотекăна юхăнтарса янă, çапах хăвăрăн ĕçĕр çинчен суя отчетсем çыратăр...

Тӗлӗнсе хытсах кайрӑм: ёмӗрне пулман япаласемшӗн айӑпласшӑн мана.

Икӗ кун тӗрӗслерӗ ҫав комисси. Ҫамрӑксене чӗнсе пуху ирттерчӗҫ, ял Совет ларӑвӗ турӗҫ, тӗпчерӗҫ, ҫырчӗҫ. Ну, паллах, жалоба пӗтӗмпех суя пулни палӑрчӗ. Пӗтӗмпех йӗркеллӗ тесе ҫырма ҫеҫ тиврӗ вӗсен...

Анчах ку пуҫламӑшӗ ҫеҫ пулчӗ-ха. Ҫакӑн хыҫҫӑн пирӗн яла комисси хыҫҫӑн комисси пыма пуҫларӗ,— шалт хӑшкӑлса ҫитрӗмӗр! Фермӑна пырса тӗрӗслерӗҫ,— унта пирӗн выльӑхсем нумай вилсе пӗтнӗ имӗш, анчах — тӗрӗссипе — ҫулталӑк хушшинче пӗр путек кӑна ӑнсӑртран лачакана лексе вилнӗ; шкула тӗрӗслерӗҫ— унта директор итлемен ачасене хӑй патне чӗнсе кӗртсе хӑлхаран пӑрать иккен,— ку та нихҫан та пулман... Кӗҫ тата колхоз председательне ҫавӑрса илчӗҫ — вӑл хӑнана кайсан, ҫул ҫинче мулкачӑ хӑваласа ӑратлӑ йӑйӑра пӑшӑхтарса вӗлернӗ пулать. Йӑйӑрӗ — чип-чиперех, кӗҫенсе кӑна тӑрать!

Ҫине-ҫине, темӗн те пӗр! Такам мурӗ ҫырать те ҫырать — хаҫат редакцийӗсене, районти учрежденисене, Шупашкара... Кашнинчех тӗрӗслеме килеҫҫӗ, ҫынсене пухаҫҫӗ, чӑрмантараҫҫӗ те — ахалех каяҫҫӗ. Икӗ ҫул хушшинче сахалтан те пӗр ҫирӗм комисси пулчӗ! Мӗн чухлӗ ҫул укҫи, суточнӑй, хваттершӗн тӳлерӗҫ пуль вӑл комиссисене, мӗн чухлӗ хаклӑ вӑхӑт сая кайрӗ пуль — вӗсен те, пирӗн те! Ӑна шутласа кӑларма ятарласа бухгалтер тытас пулать.

Чылайччен пӗлеймесӗр пурӑнтӑмӑр эпир ҫав жалобӑсене кам ҫырса янине. Питӗ тарӑхса ҫитрӗмӗр. Унтан ӑнсӑртран пӗлмелле пулчӗ. Пӗррехинче лавккара сутӑ тӑвакан Ваҫук-комсомолец, ӗҫ пӗтсен, урайӗнче хӗррисем сӳсленсе пӗтнӗ чылай хулӑн тетрадь выртнине асӑрханӑ та ӑна алла илсе уҫса пӑхнӑ. Чи малти страници ҫине пысӑк саспаллисемпе: «Секрет! Пӑшӑлпӑшӑл!» тесе ҫырнӑ иккен, унтан «С. Шумов» тесе алӑ пуснӑ.

Хайхи Ваҫук вулама тытӑнса кайнӑ. Киле кайма манса, ҫур ҫӗрччен, пӗр чарӑнмасӑр вуланӑ вӑл... Ытла та каҫса каймалла интереслӗ пулнӑ-ҫке тетрачӗ, аларан та пӑрахма май килмен ӑна. Ялти пӗтӗм сӑмах-юмах, пулни те, пулманни те, пӗтӗм элек, пӗтӗм лапра тулнӑ унта.

Тепӗр кунне эпир вӑл тетраде правление пухӑнсах вуларӑмӑр... События пулчӗ-ҫке вӑл пирӗншӗн, элекҫӗ

кам иккенне тинех пĕлтĕмĕр! Кулмалли те, тарăхса сурмалли те питĕ нумай тупăнчĕ... Темтепĕр çырса тултарнă шуйттан Стратонĕ!

Акă сăмахран:

«Çырмара икĕ курак вилли выртать. Ял Совечĕ зараза сарăлнипе кĕрешмест, санитаришĕн пачах та тăрăшмасть тесе Сывлăх министрне çырса ярас. Штраф пулать!»

«Председатель ĕнер каçхине Сухви (бригадир) патĕнчен тухрĕ. Ахаль мар ку. Асăрхас. Е халех пĕлтерес: ĕçлес вырăнне пирĕн предколхоз маткасем хыççăн...»

«Райисполком уполномоченнăйĕ М. ял Совет секретарĕ патĕнче икĕ каç выртса кайрĕ. Паллах, вĕсен ĕç-кĕсĕр пулман. Систерес».

«Нумай пулмасть колхоза килнĕ агроном Веселова вечерсенче хытă ташлать-ха. Пĕлтерес: йăх-ях çын, авторитечĕ çук, тес...»

«Ачасене шкул пахчинче ĕçлеттереççĕ. Кĕркунне çимĕçĕ директор валли пулать ĕнтĕ. Эксплуатаци! Министр патне...»

Тата ытти те, тата ытти те — тем те пур, пĕтĕмпех çавăн майлă!

Тетрадьне вăл, лавккана тем илме пырсан, ăнсăртран кăларса ўкернĕ пулмалла ĕнтĕ...

Эпир çийĕнчех нимĕн те шарламарăмăр: малалла мĕн тăвать-ха ку, сăнас терĕмĕр, пурĕпĕр пирĕн алла лекетех! Анчах ялта ун пек хыпар пит час сарăлать-çке... Пĕри — теприне, тепри — тата теприне «питĕ вăрттăн» пĕлтерет те, кайрĕ вара!

Кĕскен каласан, унăн тетрадьне эпир тупни çинчен пĕлсен, Стратон Шумов хăйне урнă йытă çыртнă пекех чупса пычĕ правление.

— Как имел право?!. Суда паратăп! Манăн унта государственнăй секретсем пур! — тесе çухăрма тытăнчĕ çак.

Анчах эпир ăна: «Тўрĕ те таса çынсем çинчен элекленĕшĕн хăвна суда паратпăр акă, уголовнăй кодексра сан валли кирлĕ статья тупаççех!» — тесен, тўрех чĕлхине çыртрĕ. Çемçелсе, йăвашланса кайрĕ, унтан, çĕрелле пăхса, чĕтрекен сасăпа:

— Хĕрхенĕр ват çынна, тек ун пек нихçан та

тумастăп, алла кăранташ та тытмастăп, тупа туса калатăп...— тесе нăйкăшма тытăнчĕ.

Тӳсме çук йĕрĕнтĕмĕр эпир унран...

Çавăн хыççăн ăна пурте «Пăшăл-пăшăл» тесе чĕнме тытăнчĕç. Пĕр-пĕр чарусăр ача ашкăнсан та, ашшĕ-амăшĕсем ăна тӳрех: асту, Пăшăл-пăшăл кĕнекине лекетĕн акă, тесе хăратаççĕ.

Анчах Пăшăл-пăшăлĕ тек жалобăсем çырмасть пулас, комиссисем урăх пымарĕç. Тепĕр тесен — çыртарах, ара, ăна халь пурĕпĕр никам та ĕненмест...

— Сирĕн таврашра та çавăн пек «пăшăл-пăшăлсем» çук-и, юлташсем? Йĕри-тавралла лайăххрах çаврăнса пăхăр-ха!

1954



# Çуллахи калав

— Вăхăтне шута илсе çырас пулать, хаклă тусăм,— терĕ манăн кулăшла калав алçырăвне уçкаласа ларакан редактор.— Кашни çимĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур, теççĕ. Халь мĕнле уйăх-ха пирĕн?

— Июль, редактор юлташ,— терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс, июль. Утă уйăхĕ. Çумăр çăвать. Хĕвел хĕртет. Шăрăх. Анчах санăн калавунта ĕçсем хăçан пулса иртеççĕ? Хĕлле! Те декабрь, те февраль унта... Ăнкаратăн-и? Эсĕ çынсене çу варринче çавăн пек сивĕ калав вулаттарасшăн-и? Пире иксĕмĕре спаççипă калĕç тетĕн-и уншăн? Кĕтсех тăр! Пĕлетĕп эпĕ хамăрăн вулакансене...

Редактор хăйĕн кукша пуç тӳпине аллинчи авторучка вĕçĕпе хыçкаласа илчĕ.

— Апла... апла мĕн тумалла-ха, эппин, манăн?— çамка çине тапса тухнă тара çанăпа шăлса типĕтрĕм

эпĕ.— Ĕçсене хĕллерен çуллана куçарас-и? Хĕвел хĕртсе пăхнă вăхăт çинчен çырас-и?

— Çук, апла ан ту,— пуçне пăркаласа илчĕ редактор.— Калавна юсама тытăнсан, эс ăна йăлт пăсса пăрахма пултаратăн. Кайран манах ылханăн тата... Выртттăр вăл юр çăвиччен. Атăл шăнса лариччен. Ăнкаратăн-и? Сезон çиттĕр! Ун чухне, тен, яма та май пулĕ. Халĕ эс ак мĕн ту, ытарайми тусăм...

— Мĕн, редактор юлташ? Ăс парăр, эппин...

— Çуллахи калав çыр.

— Мĕнле вăл — çуллахи калав?

— Ну, унти ĕçсем çулла пулса иртчĕр. Ку — пĕрре, анчах пĕтĕмпех мар-ха. Эс кăтартса паракан событисем çуллахи вăхăтшăн, сезоншăн, эппин, типичнăй пулччăр! Ăнкаратăн-и?

— Çук-ха, редактор юлташ...

— Ну... аптрамалла-çке сирĕнпе, писатель тенисемпе! Вĕрентен-вĕрентен сире, çапах ăс кĕрсе çитмест! Итле акă: калăпăр, хĕлле ачасем йĕлтĕрпе, конькипе ярăнаççĕ... Вăл типичнă. Ăна кашни кунах курма пулать.

— Çулла шыва кĕреççĕ, çырлана çӳреççĕ, гербарисем пухаççĕ...— терĕм эпĕ.

— Во! Тĕрĕс! Ку та типичнă.

— Вара... вара манăн ачасем шыва кĕни, кăвакалсем пек кутăн-пуçăн чăмни çинчен çырас-и? Эсир мана кулăшла калав çырса килме хушрăр-çке! Ачасем шывра шăмпăлтатнинчен мĕн кулмалли пур унта?

— Э-эх, тусăм, эс каллех ăнкараймарăн иккенха! — Редактор, тарăхма пуçланă пек, халĕ хăйĕн кукшине ал лаппипех каллĕ-маллĕ сăтăркаласа илчĕ.—Эп ун çинчен тĕслĕхшĕн çеç каларăм. Сана «типичнăй» сăмаха ăнлантарма. Эс урăххине туп! Сахал-и çĕр çинче çуллахи тема? Акă, сăмахран каласан...— Вăл пĕр хушă куçĕсене хупсах шухăша кайса ларчĕ.— Сăмахран каласан, çулла пушар нумай пулать. Эп пурăнса курнă çын, пĕлетĕп. Çулталăкри пушарсенчен сахалтан та сакăрвун процентчĕ çуллахи вăхăтра тухать.

— Ман... ман вара пушар çинчен çырас-и?—тĕлĕнсе куçсене чарсах пăрахрăм эпĕ.— Пушар çинчен мĕнле кулăшла калав пулма пултартăр?! Пушар — хурлăх, инкек, типшар, пушар пулсан халăхăн, пирĕн çынсен пурлăхĕ, килĕ-çурчĕ пĕтет, тепĕр чух çынсем çийĕнчи кĕпе-йĕмпе çеç тăрса юлаççĕ. Мĕн чухлĕ хуйхă,

куççулĕ çав пушарсене пула... Кулмалла мар, макăрмалла унта, анчах эсир... эсир, редактор юлташ, епле калас... мăшкăллатăр-и манран?

— Ăнкараймастăн, эппин? — Вăл кўпшек пўрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарса илчĕ.— Пĕлетĕн-и эсĕ, тусăм, тепĕр чух çын куççулĕ витĕрех, макăрнă вăхăтрах кулать!

— Пулать те пуль ун пекки, анчах килĕ çунса кайнă çынран кулаймастăн ĕнтĕ! — кăшкăрсах ятăм ăна хирĕç.

— Эс çапах та кулма тăрăш,— терĕ редактор,— унсăрăн нихçан та чăн-чăн сатирик пулса çитейместĕн. Ху та кул, ыттисене те култар. Ахăлтатса кулччăр вулакансем!

— Ăнланаймастăп.

— Хăçан та пулин ăнланăн-ха.— Вăл сехечĕ çине пăхса илчĕ.— Ну, тусăм, манăн тек сана ăс парса ларма вăхăтăм çук, пĕр ларăва каймалла,— терĕ çавăнтах.— Хамăн сăмаха улăштармастăп; пире çуллахи калав кирлĕ! Пушар çинчен çыратăн-и унта, урăххи çинчен-и, вăл сан ĕç, анчах та çуллахи пултăр. Тата, паллах, типичнăй событисем çинчен. Кулăшларах тума тăрăш. Ăнкаратăн-и? Çулла — хаваслă вăхăт, çынсем сатирăпа юмора ытларах юратаççĕ...

...Киле таврăннă чух та, киле çитсен те, редактор ăс пани çинчен çеç шухăшларăм. Апла та, капла та çавăрса сўтсе яврăм пуçра.

— Çуллахи калав... типичнăй... кулăшларах...

Калама çăмăл вăл! Анчах эсĕ ун пеккине ху çырса пăх-ха, кукша пуç! Калав — уйрăмах кулăшла калав — çырасси вăл шăрăхра пĕр курка сив сăра ĕçесси мар-çке!

Виçĕ кун асаплантăм: мĕн мурĕ çинчен çырас ку «çуллахи калава», мĕнле майлаштарас ăна? Тема та, сюжет та çук манăн. Шухăшланă май, редактор сăмахĕсене аса илетĕп: «Çулла пушар нумай тухать...» Тема парать мар-и мана ватсупнă! Хăй çав вăхăтрах тата «кулăшларах тума тăрăш» тет-ха. Мĕнле кулмалла пушартан?! Йўтет пуль ку редактор, тупата!

Анчах та... çыртăм вĕт! Çыртăм! Пушар çинченех!..

Тен, ытла хам тĕллĕнех çыраймастăм пулĕ те, мана ялтан килнĕ хамăрăн ватă Хвекла аппа пулăшрĕ.

Хаваслӑ çын вӑл пирĕн, тем те пĕлет тата, тем те курнӑ, тем те илтнĕ. Каласа кӑтартма тытӑнать те ялти мыскарасем çинчен — вар хытса лариччен кулатӑн тепĕр чух!

Тĕрĕссипе, манӑн ӑна хамӑн соавтор, хампа пĕрле çыракан çын тесе хисеплессĕм килет. Сахалтан та пĕр вунӑ кулӑшла калав çырнӑ эпĕ вӑл панӑ сюжетсемпе!

Хальхинче Хвекла аппа шӑпах эпĕ творчество асапĕсене тӳснĕ вӑхӑтра килсе çитрĕ. Эп асапланнине тӳрех сисрĕ тата!

— Эсĕ мĕн çамкуна хуткупӑс пĕрми пек картлантарса ларатӑн? — тесе ыйтрĕ вӑл, мана пĕрре куçран пӑхсанах.— Укçа пĕтрĕ-и? Вар-хырӑм ыратать-и? Е мухмӑр кастарать?

— Çук-ха, ун пек-кун пек нимĕн те пулман,— сӳрĕкреххĕн ответ патӑм ӑна.— Чиперех пурӑнатӑп...

— Ан тыттар! Эпĕ çын патречĕ çине пĕрре пӑхсассӑнах йӑлт чухлатӑп! Улталаймӑн! Кала тавай, мĕн пулчĕ? Тен, эп сана пулӑшма пӳлтарӑп?— çулсах илчĕ вӑл мана.

Ирĕксĕрех тĕрĕссине каласа пама тиврĕ.

— Пĕр япала çинчен çырма хушрĕç те, никак та çыраймастӑп-ха...

— Эккей, тупнӑ хуйхӑрмалли! — ал сулчĕ те вӑл, пуканне сиктерсе мана хирĕçех ларчĕ.— Мĕн йышшине çырмалла санӑн — макӑртмаллине-и, ахӑртмаллине-и? Эп сана ӑна та, кӑна та наччас тупса паратӑп, ман тем тĕрлĕ мыскара та пур!

— Култармаллине,— терĕм эпĕ.

— Апла пулсан, çыр филиттон! — Вӑл ман сĕтеле çат! çапса илчĕ.— Питĕ селĕм филиттон пулать! Ахӑрсах вилмелле...

Чун кĕрсех кайрĕ. Çăлать мана Хвекла аппа!

— Мĕн çинчен çырмалла, кала часрах! — терĕм ӑна.— Хӑçан пулнӑ мыскари? Халь-и, çулла-и?

— Пĕр-ик эрне каялла. Сасартӑк, кӑнтӑр кунĕнче, пушар сиксе тухрĕ мар-и...

— Пушар?!

— Пушар çав! Пĕр кил вӑшт кӑна çунса кайрĕ, ним те çăлса хӑвараймарĕç. Ĕне çулласа кайнӑ пек! Питĕ кулӑшла...

Эп çав самантрах редакторпа калаçнине аса илтĕм. Мана çуллахи тема тупма пулӑшас тесе, вӑл пушарсене те асӑнчĕ вĕт-ха? Халь акӑ Хвекла аппа та пушар

çинчен темле мыскара каласшăн! Чăнах пушар калавĕ пулать-и вара манăн?

— Ну, кала тавай! Мĕнле... кулăшла пушар пулчĕ? — хистеме тытăнтăм аппана.— Ан суй тулькииш. Тепĕр чух тыттарма та юрататăн эсĕ, пĕлетĕп сан характерна...

— Ним те суймастăп, причак тытма пултаратăп!— терĕ аппа. Унтан сывлăш çавăрса илчĕ те калама тытăнчĕ: — Пушарĕ кулăшла япала мар та-ха вăл, ăна хăвах чухламалла, çунса кайнă кил-çуртне те, пурлăхне те шел,— терĕ вăл,— çапах та хальхинче ял кулли пулса тухрĕ-çке! Чисти ял кулли, камит...

— Мĕншĕн, мĕн пирки камит? Сюжетне кала!

— Сан сушетусене пĕлместĕп эпĕ,— ал сулчĕ аппа,— анчах ĕçĕ-пуçĕ çапла пулчĕ... Лайăхрах тăнла эсĕ, кайран, филиттонне çырнă чух, пăтратса ан пĕтер тата...

— Эпĕ, пенсие тухнă май, пĕлтĕртенпе кантурта ларса пурăнатăп-çке, пĕлетĕн пуль? Ну, мĕнле калас... ытла пĕрмаях лармастăп ĕнтĕ, унта-кунта чуптараççĕ мана, çынсене чĕнме яраççĕ, шыв ăсса килетĕп, ир-каç урай шăлатăп... Çавăнпа та кантурта мĕн пулнине те, ялти хыпарсене те йăлт пĕлетĕп. Хăлхи илтет, куçĕ курать-ха манăн... Тата кантура çынсем пухăнсан та, ăна-кăна сӳтсе явнă чух та хуса ямаççĕ мана, тепĕр чух, ĕç çук пулсан, тĕрлĕ саççетанисенче малтан пуçласа вĕçне çитиччене итлесе ларатăп. Хăш чух сăмах та хушкалатăп. Ку çеç те мар, тепĕр чухне, пуçлăхсем пĕр-пĕр ĕç пирки тавлашса хирĕçсех кайсан, ĕçе час татса параймасан, манран та ыйтаççĕ: «Кун пирки эс мĕнле шутлатăн, Хвекла аппа?» Эп каласа паратăп та вара хам шухăша, наччас ĕç татăлать. Ĕненместĕн-и?

— Пулĕ, пулĕ. Ват çын — тăват çын, теççĕ. Анчах эсĕ пушарĕ çинчен кала-ха. Мана пушарĕ кирлĕ!

— Пушарĕ патне те çитĕп, ан васкат, ан чăрмантар эс мана, ан пӳл,— пӳрнипе юнаса илчĕ вăл.— Пушарĕ тухиччен малтан правлени ларăвĕ пулчĕ. Сăмаха çавăнтан тытăнас пулать, атту-тăк кулмалла пулмасть. Правление пыма çыннисене хамах чĕнсе çӳрерĕм...

— Мĕн пирки пухрĕç правлени?

— Чим-ха... Мĕнле каларĕç-ха çав? Э-э, астурăм: ялта пушартан сыхланассине лайăхлатас ĕçе çӳллĕ сыпăка хăпартса унăн шайне ӳстерессипе çинчен сӳтсе явасси, терĕç. Пушар дружинин начальникне отчет ту-

таратпăр, терĕç... Пушар пуçлăхĕ пирĕн — Микик Микки, пĕлетĕн пуль-ха эс ăна, шалттай-палттайрах, вĕçкĕнрех çын, ăратлă вăкăр тĕслĕрехскер. Пĕр хушă, арăмĕпе виçĕ ачине пăрахса, таçта аякра авланса пурăнчĕ, анчах çур çултан нимĕн те ĕçлеменшĕн, аншарли юхтарса парасса çеç кĕтсе выртнăшăн леш хĕрарăм хӳтерсе кăларса янă ăна. Кайран таçта хурала кайса кĕнĕ — унта та нумай тытăнса тăрайман, тапса кăларса янă, ун хыççăн парикмахера вĕреннĕ, тет, те вăл, чут çеç суда лекмен,— ӳсĕр пуçпа пĕр çынна хырма тытăнса, кăшт кăна унăн çур янахне касса илмен... Юлашкинчен каллех киле таврăнчĕ те, ниçта ĕçлес килменнипе, пушарнике пырса кĕчĕ. Канлĕ вырăн ĕнтĕ, каламалли те çук! Шашкăлла выля та ыйхă турт. Пыра чӳхеме те, каçхине касака кайма та вăхăт пур. Укçине пурĕпĕр тӳлеççĕ. Ма пурăнас мар? Пĕрер çултан çакна пушар сӳнтерес ĕçе вĕренмелли курса ячĕç. Ик уйăхлăха, колхоз шучĕпе. Çавăнтан таврăнчĕ те, ăна пуçлăх туса хучĕç. Начальник! Сăмсине каçăртса лартрĕ хайхискер — апайтурах! Пырса та ан çулăх! Тем те пĕлет мар-и? Анчах хăй кунĕпе ял тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрет. Правление кĕрсе тухать, лавкка умне пырса ларать — кам та пулин çĕр грамм ярса памасть-и? Тепĕр чух урамрах çемçе курăк çине тăсăлса выртать те турта-ать вара хуппа!

Ялйыш кулатчĕ:

— Пирĕн ялта икĕ тунеядцă: пĕри — колхоз вăкăрĕ Упамас, тепри вăл — Микик Микки...

Пĕррехинче, пĕлтĕр-ха вăл, районтан пычĕç те правленире питĕ хытă шавларĕç:

— Пушартан сыхланас ĕçе эсир вуçех маннă! Ним йĕрки те çук сирĕн! Ăнсăртран вут тухсан, мĕнле сӳнтерес тетĕр? Пĕр сехет хушшинче пĕтĕм ял çунса кайма пултарать! — тесе ятлаççĕ.

Микик Миккине вара пуринчен те хытăрах силлерĕç:

— Кахал!

— Суда памалла сана çакăн пек ĕçленĕшĕн! Ăнлантăн-и?

Микки тăпра тĕслĕ пулса кайрĕ. Хытă хăрарĕ курăнать хăйне çакнашкал канлĕ ĕçрен кăларса ывăтасран.

— Ăнланатăп. Малашне эсир хушнине йăлт тăватăп...— мăкăртатса çеç тăчĕ вăл.— Каçарăр, тӳрленетĕп...

Ĕçрен кăлармарĕç ăна, анчах хытă асăрхаттарса хăварчĕç:

— Ырантанах пĕтĕм ĕçе йĕркене кĕртме тытăнмасан, ан ўпкеле вара! Килсе тĕрĕслетпĕр те — сирпĕтетпĕр, асту!

Чăнах та, пĕр хушă Микик Микки ĕçленĕ пек турĕ. Пушар сарайне те, тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрсене те тирпейлерĕ, талăкĕпех унта пулатчĕ, икĕ лаша кўлнипех тăраççĕ — насус, шыв пичкисем хатĕр, кашни кил умне шыв катки ларттарчĕ. Ирĕклĕ дружина членĕсене вĕренткеленĕ пек те турĕ. Çав вăхăтрах колхоз пушар сўнтермелли çĕнĕ хатĕрсем те туянчĕ. Мухтамах тытăнчĕç Микик Миккине. Маттур, теççĕ. Çапах та, пурăнсан-пурăнсан, правленирисем унăн отчетне итлеме шут тунă-мĕн. Ĕç çине тухиччен тĕрĕслес, тенĕ пулмалла.

Микик Миккин çав отчетне эпĕ те итлерĕм. Шутсăр яка каларĕ, чĕлхи-çăварĕ çаврăнать эсрелĕн. Районтан пыракансем те ытла пурте ун пек пакăлтатма пултараймаççĕ. Питĕ аякран пуçларĕ тата сăмахне. Халĕ халăх пурлăхне хĕрлĕ автанран сыхласси уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать, вăл чи пысăк задачăсенчен чи пысăкки... Пирĕн дружина, хамăрăн ял Совечĕпе колхоз правленийĕ пушарпа кĕрешессине вăйлатасси çинчен виçĕмçул йышăннă постановленипе хавхаланса, хăйĕн хисеплĕ те чыслă ĕçне калама та çук пысăк çĕкленўпе туса пырать... Ним мухтанмасăрах калама пулать: эп ертсе пынипе, пирĕн колхозра отчетлă тапхăр вăхăтĕнче пĕр пушар та тухмарĕ. Çапса хуçрăмăр эпир хĕрлĕ автан çунаттисене, вĕçеймерĕ вăл пирĕн çуртсем çийĕнче, малашне те вĕçеймĕ! Ĕненĕр, шанăр ман сăмахсене, вĕсене эпĕ пĕтĕм чĕререн калатăп! Пулмасть хĕрлĕ автан вĕçесси, пулмасть пирĕн ялта пушар — ни-ков-да! — Юлашки сăмахĕсене каланă чух Микки икĕ чышкине те çўлелле çĕклесе силлерĕ.

— Анчах çапах та леш автанĕ вĕçсе килчĕ-тĕк? Ун чух мĕнле? — ыйтрĕ пĕри.

— Çийĕнчех çапса антаратпăр! Пăшт! кăна пулать вăл,— терĕ ăна хирĕç пирĕн пушар пуçлăхĕ.— Пĕлетĕр вĕт, халь пирĕн техника та вăйлă — икĕ мотопомпа, вĕсем шыва пĕр километртан кая мар сирпĕтеççĕ, насус пыршисене эпир икĕ километр таран тăсса кайма пултаратпăр, унсăр пуçне пирĕн ахаль насус-

сем те штык пек тăраççĕ! Ман дружинăра паян куна вăтăр çын ытла, пĕринчен тепри паттăртарах, дружина мар — гварди темелле!

— Илтрĕмĕр-ха, иртнĕ эрнере сан «гвардеецсем» Лешкаса туй курма кайсан чĕп-чĕр юн пуличченех çапăçнă, анчах кайран хăйсем аран тарса ўкнĕ терĕç...— йĕкĕлтесе илчĕ тахăшĕ.

— Тарни ниме те пĕлтермест,— пĕр тытăнса тăмасăр татса хучĕ Микки,— очко енĕпе илсен, вĕсем çапах та мала тухнă. Пирĕннисене ик çынна çеç сусăртнă, лешсенне — çиччĕ! Шутласа пăхăр, миçе процент ытларах? Ун пек ăмăрткайăксем хуть те мĕнле пушара та пĕрре штурмласанах сўнтерсе лартаççĕ!

Чылайăшĕ лахă-лахă кулса илчĕç. Унтан шавлама, Миккине сăхма тытăнчĕç:

— Мĕншĕн сан дежурнăйсем час-часах ўсĕр лараççĕ?

— Мĕнле правапа сан хуняма карчăкку, пушар лашисене кўлсе, унта-кунта ярăнса çўрет?

— Мĕншĕн насус пыршисене хăшпĕр тăванусене пахча шăварма паратăн? Миçе пушар витрине хăвăн килне илсе кайрăн?

— Килте вутта та пушар пурттипе çуратăн!

Самаях çырткаласа илчĕç çапла, чылаях тарлаттарчĕç Миккие, анчах çапах та, хăшпĕр çынсем çине тăнипе, «дружина иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕ, начальникне тав тăвас» тесе йышăнчĕç.

— Тавтапуç, хисеплĕ юлташсем, эсир капла мана малашне тата хастарлăрах ĕçлеме хавхалантаратăр!— терĕ те Микки, сылтăм аллине кăкăрĕ патне тытса, кăвапа таранах пĕшкĕнсе пуç тайрĕ.

...Хвекла аппа, калама чарăнса, сывлăш çавăрса илчĕ.

— Кулмалли нимех те çук-ха кунта,— терĕм эпĕ, кăштах кăмăлсăрланса.— Отчет тунă, решени йышăннă... мĕнех вара?

— Тăхта эсĕ,— ал сулчĕ аппа,— тĕшши патне çитмен-ха эпĕ, сана кирли малалла пулать!

— Итлетĕп, эппин...

— Хайхи саççетани пĕтрĕ, чылайăшĕ тухса кайрĕç, анчах Микки ĕçне мухтаканĕсем юлчĕç, мăкăрмăкăр калаçа пуçларĕç. Хăма стена витĕр йăлтах илтрĕм эпĕ:

— Тухать санран, Микки!

— Кун пек лайăх отчета çумасан — çылăх!
— Васкас пулать, лавкка хупиччен...— теççĕ.
— Пĕрерĕн-пĕрерĕн пушар сарайне пырăр, унта Энтип пиччене хатĕрлеме хушнă эпĕ,— терĕ Микки тусĕсене хирĕç.— Анчах асăрханарах çÿрĕр, пупличнă ан пултăр!
Ну, малалла мĕн пулнине пĕлместĕп эпĕ, курман. Микки тусĕсем пĕрин хыççăн тепри çырма леш еннелле шăваннине çеç курса юлтăм. Мĕншĕн кайни паллă ĕнтĕ. Янă унта вĕсем çут тĕнче куçа курăнми пуличчен! Пĕр-икĕ сехетрен куна пĕтĕм ял пĕлчĕ: пушар сарайĕ енчен ÿсĕрсем пырĕсене юриех çурса пăрахма тăрăшнă пек юрлани илтĕнчĕ. Тул çутăличченех çывăрма памарĕç, каяннăйсем!
Тепĕр ирхине вара ĕмĕрне манмалла марри пулчĕ...
Эпĕ утарта хурал тăракан старике леçсе парас тесе тин çеç икерчĕ пĕçерме тытăннăччĕ, сасартăк пирĕн тĕлпе тахăшĕ ухмаха ернĕ пек çухăрса иртсе кайрĕ:
— Пуша-ар! Пуша-ар!..
Ун хыççăнах тата иккĕн-виççĕн чупса иртрĕç:
— Пуша-ар!..
Çатмараççине алăран пăрахма та ĕлкĕреймесĕр, урама сиксе тухрăм. Хăлхана кантур умне çакнă рельсăна чăнлаттарни кĕрсе кайрĕ. Пушарне кураймарăмха. Хам умпа чупса иртекенсенчен аран ыйтса юлтăм:
— Ăçта пушарĕ? Кам çунать? Мĕн çунать?
— Микик Микки, пушар начальникĕ! — тесе хăварчĕ пĕри.
Тăвалла пăхрăм та ватă йăмрасем хыçĕнчен хуп-хура тĕтĕм явăнса хăпарнине куртăм вара. Тур çырлах! Каç кăна пирĕн ял çинче хĕрлĕ автан нихçан та вĕçмĕ тесе мухтанчĕ Микки! Халь çав автан хăйĕн патнех пынă — ялкăшать кăна унăн килĕ!
Часрах пÿрте кĕрсе кăмакари кăвар çине пĕр витре шыв чашлаттартăм та пушар патне чупрăм. Питĕ хăрушă пулса кайрĕ. Миккин лаççипе кĕлечĕ çунса пĕтнĕпе пĕрех, халь пÿртрен картишнелле тухакан крыльца çунма пуçланă — пÿрте пырса та кĕрейместĕн. Халăх чылай пухăннă, анчах сÿнтерекенсем никамах та çук. Пурте спектакль курма пынă пек пăхса тăраççĕ. Ик-виç арçын çеç унталла-кунталла чупкалаççĕ, ним йĕркесĕр кăшкăраççĕ:
— Мĕн пăхса тăратăр?! Мĕншĕн сÿнтерместĕр? Япаласене ма кăлармастăр?

Э-эй, çуйăху-кăшкăрашу тапранса кайрĕ унта!

— Кил хуçи, Микки хăй ăçта?

— Пушарниксем мĕншĕн килмеççĕ? Ăçта пушарниксем? Насуссем, мотопомпăсем ма илсе килмен ку таранччен?

— Пушарниксем пĕри те çук!

— Каçхине çĕрĕпех туй турĕç çке? Халь мĕнле шăтăка кайса кĕнĕ?

— Чупăр-ха пушар сарайне, тен, халь те унта çывăраççĕ?

— Ы-ы, эсреметсем, харам пырсем!

Çав вăхăтра ялан пушар дружинин пӳртĕнче пурăнакан хайхи «гвардеец», уксах Энтип сиккелесе пычĕ. Çамкине, çăпата пек сăмсине таçта ӳксе шăйăрса пĕтернĕ — каçхи ĕçкĕре пуль ĕнтĕ.

— Мĕн тăратăр? Ма сӳнтерместĕр? — çухăрса ячĕ вăл.

— Ывăçпа сапса сӳнтермелле-им пирĕн? — терĕç ăна хирĕç.

— Витресемпе!

— Кун пек пушара витрепе сапса нумай сӳнтерĕн!

Ăна хупăрласа илчĕç, вăрçма тапратрĕç.

— Мотопомпăсене ма илсе килместĕр?

— Çук-ха вĕсем,— терĕ Энтип.

— Ăçта кайса кĕнĕ?

— Пĕри çĕмĕрĕлнĕ, ĕçлемест...

— Тепри тата?

— Ăна Микик Микки çуркуннех хăйĕн пахчине шăварма илсе кайнă та пăсса пăрахнă...

— Ахаль насуссем тата? Вĕсене илсе килесчĕ хуть!

— Лашисем çук...

— Ăçта чикрĕр лашисене?

— Пĕринпе паян ир-ирех начальник арăмĕ пасара çырла сутма тухса кайрĕ. Тепри, кĕсри, ĕнер хăмласа пăрахрĕ...

— Тытса хĕнес пулать сире пурсăра та! Çакас пулать!

— Хăй, хăй, сирĕн начальник, Микик Микки ăçта?

— Пĕлместĕп. Ăна хĕвел тухнă чух килне тăваттăн çĕклесе кайрĕç. Унтанпа курман. Тен, çывăрать-и ăçта та пулин? Ĕçсен, унăн ыйхи питĕ йывăр, хăлхи тĕлĕнче пăшал персен те сисмест...

Пушар вайлансах пычĕ, халь ĕнтĕ Микки çуртне çурри таранах вут-çулăм хыпса илчĕ. Çынсем витресемпе шыв ăсса пырса чăшт-чашт сапкаларĕç, анчах мĕн усси?

— Килеççĕ! Машинсемпе килеççĕ! — çухăрса ячĕ тахăшĕ.

Чăнах та, анат енчен кӳршĕ колхозăн пушар машини çĕр çĕмĕрсе çитсе тăчĕ, пушарниксем часрах сиксе анса насус пыршине пĕве еннелле тăсма тытăнчĕç. Тепĕр пилĕк минутран районрисем те ик машинпа персе çитрĕç. Вĕсен начальникĕ тӳрех хаяррăн кăшкăрса ыйтма тытăнчĕ пирĕн çынсенчен:

— Хăвăрăн пушарниксем ăçта? Дружина начальникĕ ма çук? Мĕн шутпа çак таранччен те сӳнтерме тытăнман вĕсем?!

— Нихăшĕ те курăнмасть, начальникĕ те çухалнă,— теççĕ кусем.

— Епле çухалнă?! Хур чĕппи мар-иç вăл, хурчăка тытса кайман пуль ăна?

— Пĕлместпĕр çав...

— Халех тупса арестлес пулать ăна! Шырăр, тупăр!

Анчах Микик Миккине шырамалла пулмарĕ, вăл хăех тупăнчĕ. Районри начальник ятлаçнă вăхăтра такам хăрушла тискеррĕн кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ пире:

— Пуша-ар! Пуша-ар! Çăлă-ăр!..

Пăхатпăр — пӳрт тăрринче, крыша çинче, эппин, Микки тăра парать. Çаппа-çарамас, труççик вĕççĕнех, çӳçĕ-пуçĕ кăмака мĕлки пек, сылтăм аллинче çур литр кĕленчи. Мĕнле лекнĕ вăл унта — мур пĕлет! Мачча çинче çывăрнă пулмалла, унта сулхăн, шăна та çук, кансĕрлекен те, анчах халь, пĕçертме пуçласан, вăранса кайса пӳрт тăррине сиксе тухнă — аяла анма май килмен, унта вут-çулăм ахăрнă.

— Пуша-ар! Çăлă-ăр! — çине-çине кăшкăрчĕ вăл.

Аялта тăракансем ахăлтатса кулса ячĕç...

— Пăх-ха ăна, çур литрне пăрахса хăварман çапах та!

— Ара, мухмăр уçма кирлĕ-çке!

Çулăм çӳлтен çӳле хăпара пуçларĕ, кĕçех Микки патне çитмелле.

— Çăлă-ăр! Пулăшă-ăр! — ниçта кайса кĕрейми кăшкăрса тăпăртатрĕ вăл.

— Сик тавай! Сик, ҫӳлелле каймастӑн, ҫӗрех ӳкетӗн, ан хӑра! — мӑшкӑлласа кӑшкӑрчӗ тахӑшӗ.

— Хӑрап ҫа-ав! Пусма! Пусма парӑр! — ҫухӑрчӗ Микки.

Ӑна, чӑнах та, вӑрӑм пусма лартса пачӗҫ. Вӑл питӗ вӑраххӑн, аллинчи ҫур литрне ӳкересрен асӑрханса анма тытӑнчӗ. Анчах усси пулмарӗ, ҫур пусмана ҫитсен, чӳречерен палкаса тухакан ҫулӑм унӑн труссине тивсе илчӗ те, вӑл, шари! кӑшкӑрса, эрехӗ-мӗнӗпех ҫӗре лаплатрӗ. Пӗтӗм халӑх ахӑрса ячӗ...

Хвекла аппа, калама чарӑнса, мана куҫран пӑхрӗ.

— Ну, мӗнле пек? Филиттон пулать-и?

— Пулать,— терӗм эпӗ.— Ҫапах та, пушар начальникӗн килӗнчи пушарӗ мӗнрен тухнӑ?

— Миккин суккӑртарах хуняма карчӑкӗ лаҫра сӑмакун юхтарнӑ...

...Ҫапла вара Хвекла аппа каллех ман соавтор пулса тӑчӗ.

1970



# Юлашки ревизи

Малтанах каласа хуратăп: кунта эпĕ хамран нимĕн те шухăшласа кăларман, суять тесе ан шутлăр. Çакна мана пĕтĕмпех хамăн кӳршĕ Ерми Хĕветĕрĕ хăй больницăран тухсан, ун патĕнче чей ĕçсе ларнă вăхăтра каласа пачĕ.

Ытти чух е ман патра, е ун патĕнче сĕтел хушшинче ларма тӳр килсен, эпир чей ĕçнипех çырлахакан марччĕ. Арăмсем хирĕç тăрсан та, тупаттăмăр хамăр валли юна вĕрилентерекен шĕвек. Чĕрĕкне те пулин «лапчăтаттăмăр». Хальхинче вара пирĕн чей кăна пулчĕ. Чăн та, сĕнтĕм эпĕ Хĕветĕре: «Больницăран чипер сывалса тухнă ятпа хĕрлине те пулин сыпса пăхар мар-и»,— терĕм, анчах вăл, пуçне пăркаласа, темрен хăранă пек, ик аллипе пĕр харăс сула-сула илчĕ.

— Çук-çук-çук, хĕрли те, шурри те, сарри те, ним те кирлĕ мар! Шабаш! Яваласа тĕвĕлесех лартрăм — ĕçместĕп тек. Пĕр тумлам та. Нихçан та! Çак самантран пуçласа, ман кил таврашĕнче эрех-сăра тĕсĕ те

пулмасть. Хам виличчен те! Эп вилсен те ан пултăр, каласах хăваратăп вилес умĕн — пумилкке таврашĕ те ан туччăр, пĕр тумлам эрех те ан илччĕр пьянчуксем валли!

— Чим-ха, тăхта-ха,— пӳлтĕм хĕрсех пыракан Хĕветĕре.— Пачах, пуçĕпех пăрахас терĕн-и капла? Мĕншĕн вара ун пекех? Эс ытла вата çынах та мар, язва та çук санăн...

— Мĕншĕнне хăвах чухламалла! — терĕ Хĕветĕр.— Çав вĕреçĕлен шĕвекне пула ачасене чутах тăлăха хăвараттăм... Мĕнле пулнине пĕлетĕн-и эсĕ? Ялтан хăйматлăх килнĕччĕ ун чух. Ĕçрĕмĕр çакăнпа. Пĕр кĕленче пушансан, теприне тытăнтăмăр. Вăл та пĕтме пуçларĕ. Çитмест ку иксĕмĕре, картне лармасть капла пирĕн! Сехет çине пăхса илтĕм — 6 сехет те 45 минут. Вунпилĕк минутран, çиччĕре, лавккара эрех пама пăрахаççĕ. Типшар-иç ку!.. Хăпăл-хапăл тумлантăм та, кĕсъене сетка чиксе, тухса вăркăнтăм. Пĕр-пĕр кросра чупнă пекех ярăнтартăм анаталла. Çитрĕм вĕт лавкка хупăниччен, илтĕм тата икĕ «Экстра». Тинех чун кĕчĕ мана. Аптрамастпăр халь! Çитет пире хăйматлăхпа иксĕмĕре. Каç валли те, ир валли те. Лавккаран тухиччен хуллен юрласа ятăм: «Хĕрли лайăх-и, çутти лайăх-и, маншăн пулсан — хĕрли лайăх, çутти тата лайăхрах...»

Ну, халь ĕнтĕ киле васкас пулать. Сулахаялла-сылтăмалла пăхса илтĕм — хăрушлăх çук пек туйăнчĕ, ытла çывăхрах машинсем курăнмарĕç. Тӳрех утрăм урам урлă. Питĕ шуçлак иккен, паçăр эп ăна асăрхаман та. Ӳкес мар тесе, кăштăртик-кăштăртик, йĕлтĕрпе шунă пек пыратăп. Ик кĕленче чикнĕ сеткăна пуçпа тан тытса утатăп. Ăнсăртран ӳксен те, кĕленчесене çăлса хăвармалла манăн... Çапла майпа урам варрине çитрĕм, инçе те юлмарĕ тепĕр енчи тротуар çине тухасси. Çав вăхăтра... сисмен те эпĕ... сылтăмра машина нарт! нарт! туни илтĕнчĕ. Пăхрăм — питĕ хăвăрт ыткăнса килет хура «Волга». Тротуар çине часрах тухма ĕмĕтленсе чупа патăм! Анчах ик утăм тусанах урасем ик еннелле ярт! шуса кайрĕç те — тăсăлтăм ӳкрĕм. Хырăм çине начлатрăм. Чăнкăр-р... турĕç ман кĕленчесем. Çав самантрах сулахай ура çĕçĕпе чикнĕ пек ыратса илчĕ... Пĕтрĕм! Тăма хăтланатăп — тăраймастăп, шуçса каятăп. Тытăнтăм упаленме: урам варринче выртсан, тепĕр машина та каçса кайма пул-

тарать-çке ман урлă. Пĕр машина çеç мар, вуннă та каçса кайĕ! Куçпуç хуралса килчĕ...

— Вĕлерчĕç! Çынна таптарĕç! — хĕрарăмсем шариех кăшкăрни илтĕнчĕ çывăхрах.— Милици! Ăçта милици?!

Унччен те пулмарĕ — иккĕн-виççĕн чупса пычĕç ман пата, хулсенчен тытса тăратрĕç. Анчах эп тăраймастăп, сулахай ура çине пусаймастăп. Ай-вай ыратать! Кӳрентернĕ ача пекех ӳлесе макăрса ятăм.

— Ура-а... ура хуçăлнă... Ура-а...

— Уншăнах ан макăр, асатте! Пуçу сывă пулсан, урасăр та пурăнма пулать! Лартса параççĕ сана пĕрпĕр автомат! — шӳтлесе илчĕ пĕр намăссăрĕ. Вăйăм пулсан, çавăнтах пуçне çапса çурăттăмччĕ çав!

Халăх пухăнма пуçларĕ. Манах айăпласçĕ, манах вăрçаççĕ:

— Мĕншĕн ӳсĕр пуçпа урамра çапкаланса çӳретĕн?

— Мĕншĕн каçма юраман тĕлтен каçатăн?

— Çавă чух! Сан пек сыснасемшĕн кайран шоферсене айăпласçĕ...

— Атьăр, милицие ăсататпăр ăна!

Ик енчен тытса тăракансем пăрăнчĕç те манран, эп ӳкрĕм. Кăшкăрма тытăнтăм: ура-а... ура хуçăлнă-ă... пулăшă-ăр, киле илсе çитерĕр, тархасшăн, Иванов урамĕ, 37... Ах, ура-а...

Шăп çав самантра милиционер та çитсе тăчĕ.

— Мĕн пулнă? Мĕншĕн «урра» кăшкăрса выртать ку гражданин? — хаяррăн ыйтрĕ çак, çынсене аяккалла сирсе.

— «Урра» кăшкăрмасть-ха вăл, ури хуçăлнă, тет...— ăнлантарчĕ ăна тахăшĕ.

Милиционер тек калаçса тăмарĕ, пĕррех шăхăртрĕ те, туран анакан таксие чарчĕ. Мана çĕклесе кĕртсе лартрĕç. Милиционер хăй шоферпа юнашар ларчĕ. Эп ĕнтĕ мана киле леçеççĕ пуль тенĕччĕ, анчах вĕсем мана хамран ыйтмасăрах «скорый помоща» илсе кайрĕç. Инçетре халь вăл, таçта Чантăр патĕнчех. Ну, лере унта нумай калаçса тăмаççĕ. Тем пирки нашатырь шăршлаттарчĕç, лармалли вырăнтан укол яшлаттарчĕç, урана тыткаласа пăхкаларĕç, пăркаларĕç те гипспа хупласа çыхрĕç. Унтан палатăна кайса пăрахрĕç...

Шутла-ха эсĕ, мĕн пулса тухрĕ! Пĕр енчен — ял кулли ĕнтĕ, тепĕр енчен — тарăхса çурăлса каймалла! Чип-чипер утакан-чупакан çын, халь килте çемçе пу-

кан ҫинче ларса телевизорпа цирксем-камитсем курмаллискер, больницăра выртатăп. Ура хуҫрăм! Тӳсме ҫук ыратать вăл, кăшт хускатмалли те ҫук... Мĕншĕн пулчĕ-ха ку? Эрехшĕн! Тăранма пĕлмен карланкăшăн! Эккей, пĕр литр типĕтнипе ҫитмен, татах тухса чупмалла пулнă ухмахăн! Телевизор курас выраннө хамах цирк та, камит те турăм...

— Ҫитет! — терĕм хама хам.— Ҫакăнтан юлса пултăр! Больницăран тухсан, мана тукмакпа пуҫран ҫапсан та, пĕр тумлам эрех ăша яртараймастăн. Ӗҫчĕр, хыпчăр кама кирлĕ, мана кирлĕ мар. Тепре ĕҫĕн те — ху сисмесĕрех юман ещĕке кĕрсе выртăн. Анчах манăн пурăнас килет. Пирĕн асанне ҫĕр те пилĕк ҫул пурăннă ҫут тĕнчере. Тен, мана унтан та ытларах пурăнма пӳрнĕ? Пурăнас, пурнăҫа ҫынна ухмаха ертекен шăр шăллă шĕвекпе улăштарас мар!

...Нумай калаҫнипе Хĕветĕр пырĕ типрĕ пулмалла, вăл хăйне валли тата тепĕр стакан чей тултарчĕ.

— Ҫавăн пек тупа турăн, эппин? — ыйтрăм эпĕ.

— Тупа турăм ҫав! — терĕ Хĕветĕр.— Ӗмĕрлĕх! Хама хам хурҫă пек ҫирĕп сăмах патăм. Вăл сăмаха эпĕ виличчен те пăсассăм ҫук.

— Маттур, Хветюк, мухтатăп! Эс капла пирĕншĕн пуриншĕн те, хаҫатсенче ҫырнă пек каласан, паха тĕслĕх пулса тăратăн...

— Арăм та мухтать-ха,— терĕ Хĕветĕр тулли кăмăлпа,— ҫамрăк чухнехи пекех юратма тытăнчĕ, кашни праҫникрех мĕн те пулин илсе парăп сана, тет, ĕнер ман валли ылтăн тĕслĕ галстук илнĕ, каҫса кайсах култăм — ĕмĕрне те галстук ҫыхса ҫӳремен те-ха эпĕ...

— Больницинче чылай выртмалла пулчĕ-и сан?

— Чутах ик уйăх ҫитетчĕ. Шăмă тени час сыпăнмасть, мур!

— Сан пек аманнисем татах та пурччĕ пуль?

— Э-эй, туллиех вĕсем! — Хĕветĕр ал сулса кулсах ячĕ.— Тĕрлĕренех! Пĕри урине хуҫнă, тепри хулне амантнă, тепри пуҫне шăтарнă... Пурте ӳсĕрпе! Палатăра эпир улттăн выртрăмăр, вĕсенчен пĕри те уралла пырса лекмен унта. Пĕр-ик кунтанах пурин ҫинчен те пĕлтĕм. Хăйсемех кула-кула каласа кăтартаҫҫĕ. Кулмалли, чăнах та, нумай ĕнтĕ. Иккĕшĕ, ман пекех, автотранспортран шар курнă. Пĕри, ĕҫсе тултарнипе паттăрланса кайнăскер, ҫул варрине тухса тăрса, машинсене чарма тытăннă. Ҫуран утас килмен унăн ресто-

ранран тавраннă чух. Машинĕсем нумай пулнă, анчах нихăшĕ те чарăнман. Ку этемми çаплах хăлаçланнă, енчен енне чупкаланă. Ну, пĕр машинĕ вара çунаттипе лайăх кăна çапса хăварнă та, этем канавалла вăркăннă. Алли — шатăрт! Шоферĕн ирĕксĕрех чарăнса çак паттăра больницăна тиесе кайма тивнĕ... Тепри хăйĕн мотоциклĕпе пумилккерен тавраннă. Пĕччен мар, арăмĕпе пулнă вăл, арăмĕ хыçалта ларса пынă. Пумилккесенче тепĕр чух туйринчен те вăйлăрах ĕçеççĕ вĕт. Ну, çак çын та натялă персе лартнă. Ялтан шоссе çине тухсан, янă вăл хăйĕн мотоциклне ун моторĕнче мĕн чухлĕ вăй пур таран. 120—140 километртан кая мар ыткăнтарнă. Анаталла аннă чух та чакарман хăвăртлăхне. Пырса çапăннă вара çул хĕрринчи пĕр чул юпана. Хăй, арçынĕ ĕнтĕ, хыттăн тапса янă футбол пек çӳлелле çĕкленсе сывлăшрах сальто-мортале туса илнĕ те пĕр çич-сакăр метр аяккарах кайса выртнă, арăмĕ канав урлă вĕçсе каçса тепĕр енчи йывăç тĕмĕсем çине лаплатнă. Çавăн пиркиех вăл пĕртте сусăрланман, анчах упăшкин пĕр ури ик çĕртен хуçăлнă, хулпуççийĕ мăкăлтаннă. Мотоциклĕ, паллах, металлолом пулса выртнă...

— Урăхларах аманнисем те пурччĕ,— терĕ малалла Хĕветĕр.— Юмахсем çырма юратакан тепĕр писатель те шухăшласа кăлараяс çук!.. Пĕри, самаях маттурскер, таçта шăнса пăсăлнă-мĕн. Ӳслĕкпе, кăкăрĕ хытса ларнипе аптранă. Тахăшĕ çакна хĕрхенсе ăс панă иккен: «Çур литр илсе мунчана кай, çынсем çапăнакан сентре çине хăпарса лар та ĕçме пултарнă таран ĕç, унтан тӳссе лар çитмĕл çичĕ тар тухиччен, çапăн ик-виç хут — тепĕр кунне вунсаккăрти каччă пекех пулатăн! Анчах асту, эрехĕ ăшă пултăр, сивви юрамасть!» Шутласан, питĕ лайăх канаш панă çак çын. Вырăсла каласан, приятное с полезным пополам. Ну, ку этемми, чăнах та, çав инструкцие пăхăнса сывалас, тенĕ. Эрех илнĕ, мунчана кайнă, çынсем çапăннă çĕре хăпарса ларнă. Эрехне ăшăтас тесе таз çине вĕри шыв янă, анчах... кĕленчине çав шывра пĕр виç секунд тытсанах ун тĕпĕ чанк! туса катăлса ӳкнĕ те, пĕтĕм эрех йăнкăр-р... юхса тухнă. «Апайтурах, пĕтрĕ пуç!» — кăшкăрса янă сывалма ĕмĕтленнĕ çын. «Мĕн пулчĕ, ма çухăратăн?» — ыйтнă унпа юнашар ларса çапăнакансем. «Эрех таз çине юхса тухрĕ, шывпа хутăшса кайрĕ. Эп ăна хама сыватма илсе килнĕччĕ!

Калăр-ха, ыр çынсем, мĕн тăвас халь манăн? Тепĕр хут тумланса эрех патне чупаймастăп-çке эпĕ!» — макăрса ярас патнех çитнĕ ку.

Анчах ăслă çынсем мунчара та тĕл пулаççĕ. Эрехĕ юхса тухнăшăн чут çеç ухмаха ермен çынна пĕри, пичке пек çавракка хырăмлăскер, тӳрех лăплантарнă: «Ним хуйхăрмалли те çук, тăванăм! Сан эрехӳ таçта тăкăнса сая кайман, пĕтĕмпех хăвăн умăнта, тазра вăл. Тыт та—пехле! Пит лайăх пулать!»—«Шывпа хутăшса кайнă-çке, шывĕ çур таз ытла, мĕнле ĕçсе ярас ăна?» — тенĕ ку. «Нимех те мар, тусăм, кана-кана ĕçсен, пĕр сехет хушшинче ним мар ĕçсе ятарăн. Пуçла халех, атту эрехĕ сĕвĕрĕлсе кайĕ тата!»

Пуçланă вара ку... Таза ик «хăлхинчен» ярса тытнă та лăнкăрт-лăнкăрт, чăпăрт-чăпăрт тутарнă... Ĕçет-ĕçет те канать пăртак, унтан каллех тытăнать. Хашкать, хушшăн-хушшăн чыхăнать, хырăмĕ футбол евĕрлĕ пулса пырать, çапах та ĕçет. Çапăнакансем милĕкĕсене пăрахса сăнаççĕ, хавхалантараççĕ: тăрăш, тăрăш, нумай юлмарĕ! Пĕр тумламне те сая ан яр! Укçа тӳленĕ вĕт! Хырăму çурăлсах каймĕ! Çурăлсан та темех мар!..

Ĕçсе янă вĕт çак паттăр тазри эрехлĕ шыва! Ĕçнĕ май, паллах, ӳсĕрĕлсе пынă — çур литр пулнă-çке тазра! Юлашки тумламсене ĕмсе çăтса ярсан, çаппа-çарамас çынсем умĕнче мухтанас шутпа, вăл пушаннă таза пуçĕ çине тăхăннă. Пурте шапăр-шапăр ал çупса янă. Çын ура çине тăнă, пĕр-ик утăм тунă та сасартăк сулăнса кайнă, унăн пуçĕ çинчи тазĕ ӳксе картлашкасем тăрăх кĕмсĕртетнĕ, ун хыççăн çынни хăй те аялалла чăмнă... Парашютсăр çавăн пек сиксен мĕн пуласси паллă ĕнтĕ: этемĕн йĕтес шăмми, сулахай алли хуçăлнă, сылтăм урин пакăлчакĕ мăкăлтаннă. Ăна мунчаран тӳрех больницăна тиесе кайнă...

— Вăйлă сюжет ку! — кулса ятăм эпĕ.— Юри шухăшласа та кăлараяс çук кун пеккине!

— Унтан вăйлăраххисем те пурччĕ пирĕн палатăра! — терĕ Хĕветĕр.— Акă, пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартам... Сулахайри стена çумĕнче Маржов хушаматлă çын выртатчĕ. Вăл ыттисем пек хуçăлса-сусăрăлса пĕтмен, пĕр урине шăнтса янăччĕ çеç. Çав «свежемороженăй» урана районри тухтăрсем татасшăн пулнă, тет. Анчах ку таттарман, çапăçсах кайнă тухтăрсемпе, вара ăна Шупашкара илсе килнĕ. Мĕнле пулнă-ха

унӑн? Ӑҫта шӑнтнӑ урине? Тата мӗншӗн пӗр ури кӑна шӑннӑ? Чылайччен пӗлеймерӗмӗр ҫавна. Каламасть те каламасть. Пӗррехинче вара, ялтан арӑмӗ пырсан, пӗчӗкҫеҫ кӗленчепе леш кӑмӑла хӑпартмаллине парса хӑварчӗ пулмалла та, каҫхине, тухтӑрсем тухса кайсан, хӑех сӑмах пуҫласа каласа пачӗ.

...Райпора бухгалтер-ревизор пулнӑ иккен вӑл. Райōнти пур лавккаҫсем те шуйттанран хӑранӑ пек хӑранӑ унран. «Маржов килет» тенине илтсенех чӗтреме тытӑннӑ. Вӑл, чӑнах та, пырсан вара ӑна тем тӗрлӗ те юрама тӑрӑшнӑ. Ӗҫтернӗ-ҫитернӗ, парнесем панӑ. Хӑналанма та, парнесем илме те питӗ юратнӑ вӑл. Параканран ма илес мар? Уйрӑмах ҫав парнесене унӑн арӑмӗ юратнӑ. Лайӑххрах япала кирлӗ пулсанах упӑшкине: «Кайса кил-ха ӑҫта та пулин ревизи тума»,— тенӗ. Ревизисене ытла час-час тумаҫҫӗ, ҫавӑнпа та Маржов ялпосене кайса ҫӳреме питӗ чее меслет шутласа тупнӑ: хӑйех пӗр-пӗр ялпо пирки кукӑр-макӑр саспаллисемпе ал пусман жалоба ҫырса пӑрахать почта ещӗкне, райпо председателӗ ӑна тепӗр куннех командировкӑна ярать: кайса тӗрӗсле, айӑплисене туп, никама та хӗрхенсе ан тӑр! Ҫитет Маржов ялпона, сирӗн пирки жалоба пычӗ, ҫырни тӗрӗсех пулсан — питӗ хытӑ ответ тыттарма тивет сире, тен, суда пама та тивӗ, тесе хӑратать. Ну, лешсем вара тытӑнаҫҫӗ куна ыр тума... Пӗр виҫ-тӑватӑ кун хӑналанать ревизор, унтан акт пекки ҫырать: жалобӑра кӑтартса панисем тӗрӗс мар, кунта пӗтӗмпех йӗркеллӗ... Юлашкинчен вара арӑмӗ каласа янӑ япаласене чӗркесе пама хушать, укҫине тепре килсен тӳлӗп тесе хӑварать...

Темиҫе ҫул ыр курса пурӑннӑ Маржов ҫавӑн пек. Районри пур лавккасене те темиҫешер хут пырса йӑлӑхтарса ҫитернӗ. Чунтан курайман ӑна нумайӑшӗ, анчах тӳррӗн калама хӑранӑ — ун пек ҫын кайран темрен тем туса хурӗ, ӗҫсӗр тӑратса хӑварӗ!

— Хӑҫан та пулин шалчи тулӗ-ха вӑл эсреметӗн!— тенӗ пӗрисем.

— Хамӑрӑнах тыткалас пулать ӑна пӗрре! — тенӗ теприсем.

— Такам-ха тыткалаканӗ...— иккӗленнӗ виҫҫӗмӗшсем.

Тупӑннӑ ҫапах та ҫавӑн пек хӑюллӑ ҫын! Хӑраса тӑман Маржовран. Йӳҫкассинчи ялпо заведующийӗ Анук аппа пулнӑ ҫав ҫын. Пӗррехинче Маржов ун пат-

не яланхи пекех суя жалобăна «тĕрĕслеме» пынă. «Тĕрĕсле, ара, тĕрĕсле, хаклă ревизор юлташ,— тенĕ Маржова Анук.— Иртнĕ уйăхра çеç тĕрĕслерĕн те-ха, арăму валли илсе кайнă шальшăн халь те укçа тӳлеменха, анчах вăл темех мар... Çапах та, ĕçе тытăниччен апат çиес пулать пуль, вăй хушас пулать ĕçлеме...» Илсе кайнă та вара Маржова хăйĕн килне нихçанхинчен те хытăрах хăналанă. Эрехне те, Маржовне те ним хĕрхенмесĕр ĕçтернĕ. Маржов йăванса кайсан, колхозран ула кĕсре ыйтса илсе, çара çуна кӳлсе пынă, ревизора пĕрене пек йăтса тухса тăсса хунă, ӳксе юласран вĕренпе яваласа çыхнă та тӳрех райцентра илсе кайнă. Райпо тĕлне çитсе чарăнсан, Анук, райпо председательне чĕнсе тухса, çара çуна çинче вилнĕ пек выртакан Маржов çине кăтартнă:

— Йышăнăр хăвăрăн ревизора! Енчен те эсир ăна пирĕн пата тепре ярсан — кунта илсе килместпĕр, тӳрех пĕр-пĕр шырлана кайса пăрахатпăр, пĕлсех тăрăр çавна!

...Çул çинче Маржовăн пĕр çăматти хывăнса ӳкнĕ иккен, çавăнпа ун ури пăрланса ларнă. Вăл кун Маржов ĕçнĕ эрех кăна мар, çанталăк та хĕрĕх градуса яхăн сивĕ пулнă çав.

Çавăн пек вĕçленнĕ Маржовăн юлашки ревизийĕ.

1976




# Хӑрушӑ тавӑру

— Ак япала! Ӗмӗр тӑршшӗпе литературӑри вӑрӑсене, леш «Плаки атти» тенисене тытса пурӑнтӑн та, халь вара ху та вӑрлама тытӑнтӑн пулать? Ай-ай-ай... Лекрӗн, эппин, ватсупнӑ! Николай Васильевич Гоголе ҫаратнӑ вӗт эсӗ, намӑссӑр! Аслӑ писатель эс ҫут тӗнчене ҫуралса тухиччен сакӑрвунӑ ҫул малтанах ҫырнӑ ун пек калав!..

Ҫапла ниҫта кайса кӗрейми хӗпӗртесе, урисемпе чечетка ташланӑ пек тапӑртатса кӑшкӑрма пултараҫҫӗ манӑн хӑшпӗр туссем ҫак калав ятне вуласанах.

Анчах мана ку пӗртте хӑратмасть. Кӑшкӑрччӑрах, ара, кам чарать вӗсене? Ман чун таса — Гоголӗн «Хӑрушӑ тавӑру» калавне тивмен эпӗ. Эп каласа парас тенӗ ӗҫсем пӗртте Гоголь ҫырса кӑтартнӑ ӗҫсем пек мар, ман геройсем те пачах урӑхла. Унӑн калавӗнче— асамҫӑсем, шуйттансем, рыцарьсем, тем тума та пултаракан хӑватлӑ турӑ... Эп вара ахаль ҫынсем ҫинчен каласа кӑтартасшӑн. Хамӑр хулара пурӑнакан (паян

кун та сывах-ха вёсем) икĕ бухгалтер — Энтрейпе Унтрей çинчен.

Мĕн тăвас тетĕн, ман геройсен иккĕшĕн те паспортри ячĕсем пĕрешкел пулнă — Андрей. Хушамачĕсем те пĕр пек — Иванов. (Сăмах майăн каласан, пĕр Шупашкарта кăна миçе пин-ши вăл Ивановсем? Пĕтĕм республикипе илес пулсан, вара тепĕр математика наукисен кандидачĕ те шутласа кăлараймасть пулĕ!..)

Ячĕсемпе хушамачĕсем пĕр пек пулин те, çынсем вĕсене пĕр-пĕринпе пăтраштармаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен вырăсла ячĕсене кăштах чăвашлатса пĕрне Энтрей, теприне Унтрей тенĕ. Ку çеç те мар, вĕсенчен пĕри, Энтрей, лутра (1 метр та 37 сантиметр), виç витре кĕрекен кăрчама пички пек мăн хырăмлă çын; тепри, Унтрей, мĕн çуралнăранпах сухари кăна çисе пурăннă çын пек ырхан, пĕвĕпе вара — чăн-чăн шалча: икĕ метр та икĕ сантиметр çурă. Гоголĕн (ак хайхи, каллех Гоголь!..) Иван Ивановичĕпе Иван Никифоровичне астăвататăр пуль-çке? Энтрейпе Унтрей шăп та шай çавсем пек...

...Вĕсем, çак Энтрейпе Унтрей, çирĕм çул ытла пĕр çуртра пурăннă. Хальхи пек ваннăйлă, ăшă уборнăйлă-шывлă-газлă çуртра мар, кивĕ йывăç çуртра. Чăн та, çурчĕ хула варринчехчĕ ĕнтĕ, Советсен çуртĕнчен инçех те марччĕ, икĕ хутлăччĕ. Сакăр хваттерччĕ унта — аялта тăваттă, çӳлте те çавăн чухлех. Кусем иккĕмĕш хутраччĕ. Алăкĕсем тĕлме-тĕл, пĕр площадкăна тухаççĕ. Чи çывăх кӳршĕсем пулнă ĕнтĕ вĕсем!

Тĕрĕссипе калас пулать: питĕ килĕштерсе пурăннă çак икĕ килйыш, пĕр пĕринпе яланах хутшăннă, час-часах пĕрле ĕçсе çинĕ. Ун валли сăлтавсем нумай пулаççĕ вĕт: пĕрин ача çуралать — ят хумалла, теприн хуняма карчăкĕ вилет — ăна асăнмалла, пĕри ывăлне авлантарать — туй тумалла, тепри тата хăйĕн карчăкĕпе ЗАГСра çырăннăранпа çирĕм пилĕк çул çитнине аса илсе «кĕмĕл туй» тăвать... Пурнăçра мĕн пулса иртнине тата мĕн пулассине чипер йĕркеллĕ астуса пыракан çын сĕтел хушшине эрех-сăрапа лармалли сăлтав яланах тупать вăл! Хăй астумасан, тусĕ ун хутне кĕрсе аса илтерет. Çак ырă кӳршĕсем те ку тĕлĕшпе пĕр-пĕрне яланах пулăшса пынă. Ирхине урамри колонка патне шыв ăсма тухсан, час-часах çакăн пек калаçусем пулса иртнĕ вĕсен:

— Энтрей, сан хуняму вилнĕренпе çулталăк çитет мар-и?

— Э-э, чăнах-çке! Ун çинчен эпĕ мансах кайнă. Тавтапуç астутарнăшăн. Анчах эсĕ хăвăн Алтатти тепĕр уйăхран аллă тултарнине асра тытатăн-и çав, Унтрей?

— Тытмасăр! Пĕркун Хусана командировкăна кайсан «армянски» илсе килтĕм-ха виç штук.

— Пилĕк çăлтăрлине пуль?

— Çук, тăваттăлли çеç тупăнчĕ. Пирĕншĕн пулсан, вăл та аптрамасть, лешĕн пекех вăйлă...

— Э, мĕн каласси пур! Пирĕн Шупашкарти садвинтрест кăларакан леш «подлоягăднăй» мар ĕнтĕ! Алтатти хăй сахăртан тăвакан аншарли те мар! Шăрши кăна мĕне тăрать!

— Пит аван апла. Пыр ярăнсах кайрĕ.

— Хамăн та ярăнать те... ним тума та çук, вăхăчĕ çитиччен тӳсмех тивет.

Энтрейпе Унтрей, эхлеткелесе, тулли витресене çĕклеççĕ те, хăйсемшĕн чи ырă самантсем çитесси инçе юлманни çинчен мăкăртатса, килелле утаççĕ...

Вĕсем çав тери килĕштерсе, «пĕр çăвартан» пурăннине те, арăмĕсем çулсеренех ача (хăш чух пĕрер те мар, йĕкĕреш!) çуратнă май кумаллă пулнине те пурте пĕлетчĕç ĕнтĕ. Кайран кун çинчен свидетельсем судра та каласа пачĕç. Анчах суд пирки сăмах каярахпа пулĕ-ха, васкар мар.

Сасартăк, никам кĕтмен-шутламан çĕртен, пирĕн пĕчĕк урамра (вăл урам çук ĕнтĕ халь, унти пур хăлтăрхалтăр çуртсене пĕр каçрах бульдозерсемпе ишсе, çур çултан тăхăр хутлă кермен туса лартрĕç) пурне те шак! тĕлĕнтерсе пăрахнă хыпар сарăлчĕ:

— Энтрейпе Унтрей Ивановсем пĕр-пĕринпе хăрушла хирĕçсе кайнă! Урамра картлă кĕвентесемпех çапăçнă!..

Никамăн та ĕненес килмен ку сăмаха.

— Пулма пултараймасть!

— Ара, кăваписем çыпăçсах ларнăччĕ-çке, сив шывпа мар, вĕри шывпа сапсан та уйăрас çукчĕ вĕсене!..

— Çук-çук, суя пуль ку!

Анчах сăмахĕ тĕрĕсех-мĕн. Энтрейпе Унтрей, чăнах, çапăçнă иккен. Кĕвентесемпех тӳпеленĕ пĕрне-пĕри. Унтан та кунтан кăвакартса пĕтернĕ. Кăвакарнă çеç мар — лутра Энтрейĕн пуçĕ шăтнă, тăсланкă Унтрейĕн

сылтăм ури сусăрланнă (çӳлтерехрен çапайман ĕнтĕ лутра Энтрей, пĕвĕ çитмен...).

Мĕн пулнă кусене? Мĕн пирки пулса иртнĕ кун пек тĕнче курман вăрçă-тытăçу? Мĕн çитмен-ши икĕ туса?

Кун çинчен эпир часах пĕлтĕмĕр.

Пĕтĕм ĕç-пуçне лутра Энтрей пуçласа янă.

Асăрханă-тăр эсир, пĕчĕк пӳллĕ, лутра çынсем, леш чике-старик пеккисем, яланах шутсăр шăрчăк, калама çук хаяр пулаççĕ. Питĕ кĕвĕç тата. Арăмĕсене пулчĕ-пулмарĕ урăх арçынсем çумне хушса хураççĕ. Тӳссе кăна тăр вара хĕрарăм, çапса пăрахма та пултарать çăвăр автан пысăкăш упăшки! Пĕрре тапранса кайсан, нимпе те чараймастăн ăна: тигр!

Йĕркипе каласан, çапла пулнă. Лутра Энтрей хĕлле пĕр хушă чирлекелесе пурăннă. Ик эрне ытла ахлатса выртнă. Çав хушăра пур ĕçсене те арăмĕ тунă — пасара та çӳренĕ (сывă чухне Энтрей ăна пасара яман, эс унта укçа нумай пĕтеретĕн, спекулянтсем мĕн чухлĕ ыйтаççĕ — çавăн чухлĕ паратăн, кĕлешсе тăмастăн, ма тесессĕн укçине ху ĕçлесе илместĕн те ун хакне пĕлместĕн, тенĕ), шыв ăсма та кайнă, вуттине те çурса йăтса кĕнĕ. Сахал-и кил таврашĕнче ĕç!

Упăшки пекех мăнтăрскер, Энтрей арăмĕ вăйĕпе мухтанма пултарайман. Кăшт йывăртарах ĕç лексессĕнех пăравус пек хашканă. Çакна кура, упăшки чирленĕ вăхăтра (чи ырă кăмăлпа ĕнтĕ!) ăна вăрăм Унтрей пулăшкаланă. Пĕррехинче пасартан пĕр пăт таран паранкă çĕклесе килнĕ, ик-виçĕ хутчен те тулли витресене пусма тăрăх иккĕмĕш хута йăтса хăпартма пулăшнă та коридорах кĕртсе лартнă. Энтрейсен çурса янтăланă тип вутă пĕтсен, тем пысăкăш каскапа пĕр сехет хушши, лачкам шыва ӳкиччен кĕрешнĕ те икĕ мăн çĕклем кĕртсе панă.

Куншăн вара Энтрей арăмĕ ăна тем пекех тав тунă.

— Сăпаççипах, сăпаççипах сана, Унтрей Иванччă! Хам эпĕ вилсе выртсан та çураймастăп вăл карягăна... Чĕр вутăпах асапланмалла пулатчĕ паян! Ах, мĕнпе ыр тăвам-ши сана куншăн?!

Çавăнтах аллисене хире-хирĕç çат! çапса илнĕ.

— Э-э, ара, манăн тахçанах пытарса лартнă пĕр чĕрĕк пурччĕ-çке! Парам-ха сана пĕр лампадкă, çакнашкал ĕçлесе ывăннă хыççăн пит лайăх пулаканччĕ вăл!

Ним шутласа тăмасăрах, таçтан кăмака айĕнчен, кив куршак-чӳлмексем хыçĕнчен хайхи кĕленчене туртса кăларнă та Унтрее çур стакан ярса панă.

— Хаплаттар, Унтрей Иванччă. Çакна ĕçсен, ывăнни тӳрех иртсе каять санăн.

— Тен, манпа пĕрле Энтрей те ĕçсе парĕ кăштах? Ун умĕнче пĕччен хыпса ларма аванах мар мана,— тенĕ Унтрей, кравать çинче çав тери мĕскĕннĕн выртакан кӳрши еннелле пăхса.

— О-о, çук-çук, Энтрее юрамасть, юрамасть, чирлĕ вăл, тухтăрсем те хушман ăна, ĕçсен вилсе кайĕ тата, мур! — ик аллипе харăс сула-сула илнĕ Энтрей арăмĕ.

— Çĕр грамм ĕçнипе эп паянччен пĕрре те вилменччĕ те-ха...— хашш! сывласа янă Энтрейĕ.

— Чăнах, ара, тен, ярса парăн пăртак? — кӳршĕ арăмне ӳкĕте кĕртме тăрăшнă Унтрей.

— Каланă сире, юрамасть тесе! — урипе тап! тапса илнĕ Энтрей арăмĕ.— Çак çур стакан эрехшĕнех тăлăх арăм пулса юлăп тата. Луччă эп ăна хам ĕçсе яратăп, мана ним те пулмасть, эпĕ Энтрей пекех çĕрĕк мар-ха, тӳсетĕп!

Хайхискер, çавăнтах эрех юлашкине тепĕр стакана лор-лор-лор тултарнă та, Унтрейпе шаклатса, хоп! çавăрса хунă.

— Ы-ых...— йынăшса янă вырăн çинче Энтрей, хăйĕн пӳсĕр шыççи ыратса кайнă пек.

— Эс мĕн? Мĕн пулчĕ? — хыпăнса пăхнă ун çине арăмĕ.

— Кĕсре хӳри! — тенĕ ăна хирĕç Энтрей, пичĕпе стена еннелле çаврăнса выртнă.

Çакăн хыççăн Унтрей хăйне чун уçăлмалăх эрех ĕçтерсе янăшăн тав туса тухса кайнă. Энтрей арăмĕ вут хутма тытăннă. Кăмака çăварне ик-виç пуленкке чикме çеç ĕлкĕрнĕ вăл — сасартăк упăшки, хыçалтан шăппăн пырса, ăна мăнтăр чышкипе хăлха чиккинчен янк! тутарса янă. Тӳрех вут-çулăм сирпĕннĕ хĕрарăм куçĕнчен, хăлхи чан пекех янраса кайнă.

— Ай-уй! Мĕншĕн ку, Энтрей?! — çухăрса ярса, аяккалла сиксе илнĕ хĕрарăм.— Хăвна пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхса усранăшăн-и?!

— Çавăншăн! Ак сана тата тепре! — Энтрей татах сулса янă, анчах лектереймен, арăмĕ пăрăнма ĕлкĕрнипе чышки чăланти шкап кĕтессине çитсе çапăннă.

— Мĕн хăтланатăн эс? Тăруках ухмаха ерсе кай-

рӑн-и капла? Ним айӑпсӑр-мӗнсӗр...— тенӗ арӑмӗ.

— Эс мар-и вӑл айӑпсӑрри! — куҫӗсене ҫутӑлтарса кӑшкӑрнӑ Энтрей.—Тепӗр упӑшка пулсан, сана ҫакӑнтах пӑвса пӑрахать!

— Мӗншӗн? Мӗнле ҫылӑхшӑн?!

— Мӗншӗн тесен — чупкӑн эсӗ! Чупкӑн! Ват пуҫупах ют арҫынсемпе якӑлтататӑн!

— Кампа, айтурух!

— Ак ҫак уртмахпа, Унтрейпе! Эсӗ мӗн, эпӗ ним те курмастӑп, сисместӗп, терӗн-и? Йӑлт куратӑп, веҫ сисетӗп!

— Намӑса пӗл, Энтрей...

— Намӑсне ӑна санӑн пӗлес пулать! Эп чирлесе ӳкнӗренпе иксӗр уйрӑлма та пӗлместӗр-иҫ? Пасара — пӗрле, шыв патне — пӗрле, вутӑ патне — каллех пӗрле... Урампа та ыталансах утатӑр пулӗ-ха!

— Эй, ухма-ах! Хамӑра йывӑр вӑхӑтра пулӑшнӑшӑн ҫынна тав тӑвас вырӑнне халь ҫапла лӗпӗртететӗн-и эс? — пӗҫҫине шарт! ҫапса илнӗ арӑмӗ.— Кун ҫинчен Унтрей хӑй пӗлсен, мӗн калӗ? Ӗмӗрне килсе кӗмӗ, урамра курсан та сывлӑх сунса пуҫ таймӗ!

— Ан кӗтӗр ҫав, ан кӗтӗр! Ун тӗсӗ те ан пултӑр кунта! Тек эп ӑна хам та кӗртместӗп, алӑк урлӑ та каҫармастӑп! Вӗрентӗп ют арӑмсемпе эрехсем пехлесе ларма! Хӑрӑк шалча, ҫӗрӗк уртмах, шуйттан!

— Мӗн питӗ хытӑ шавлатӑр вара? — илтӗннӗ ҫав вӑхӑтра Унтрей сасси алӑк патӗнчен. Сӑмавар пекех вӗресе кайнӑ Энтрейпе арӑмӗ вӑл епле кӗрсе тӑнине те сисмен.

— Пшол во-он! — мӗкӗрсе янӑ та Энтрей ӑна курсанах, вӑшт кӑна пӗшкӗнсе пуленкке ярса тытнӑ.— Ан курӑннӑ пултӑр манӑн куҫ умне!..

— Мӗн пулчӗ капла, Эн...

Унтрей хӑй сӑмахне каласа пӗтереймен, ун пуҫӗ ҫуммипе мӑн пуленкке вӑркӑнса иртсе алӑка пырса ҫапӑннӑ.

— Урнӑ вӑл, урнӑ, ухмаха ернӗ, тухса тар часрах! — ҫухӑрса янӑ Энтрей арӑмӗ.

Унтрей хӑйне вӗри шывпа сапнӑ пекех коридоралла сиксе тухнӑ. Энтрей ҫав самантрах тепӗр пуленкке илсе арӑмне ҫапма тӑнӑ, анчах лешӗ, шухӑскер, пӗшкӗнме ӗлкӗрнӗ те, упӑшкине ура явса ҫӗре персе антарнӑ, хӑй вара хваттертен тухса тарнӑ.

— Мӗн пулнӑ ӑна, мӗншӗн тӑруках урса кайрӗ?

Халь кăна чипер çын пекехчĕ-çке? — ыйтнă Унтрей.

— Хăйне пĕр черкке эрех паманшăн! — макăрса янă хĕрарăм.

Алăк хыçĕнче Энтрей тискер кайăкла мĕкĕрни, тем кĕмсĕртетни, чăнкăртатни илтĕннĕ.

— Çĕмĕрет... Пĕр япала та хăвармасть ĕнтĕ! Мĕн тумалла-ши, Унтрей Иванччă? Мĕнле чармалла?

— Милици чĕнес пулать! — тенĕ Унтрей.

— Чуп-ха, эппин, часрах, шăнкăравла, тархасшăн...

...Милицисем пынă чухне Энтрей пуçне йĕпе алшăллипе яваласа, чĕрине тытса, вилес пек ахлатса выртнă.

— Йăнăшнă эсир, гражданка,— тенĕ милици сержанчĕ Энтрей арăмне,— сирĕн милицие мар, «скорый помоща» чĕнмелле пулнă!

...Çакăн хыççăн, паллах, Энтрейпе Унтрей Ивановсем хушшинчи туслăх вăйлă çумăр айĕнчи кăвайт пекех сÿнсе ларнă. Туслăх вырăнне халь курайманлăх кăна юлнă. Пĕр-пĕрне вĕсем çисе ярасла курайман темелле. Унтрейĕ, çемçе кăмăллăскер, питех те мар-ха, тепĕр чух вăл мирлешесси çинчен те шухăшлакаланă. («Пĕр çуртра, юнашар пурăнакан çынпа епле-ха ĕмĕрĕмĕр хутшăнмасăр пулать? Ну, хирĕçкеленĕ — иртсе кайнă!..») Анчах Энтрей вара... ы-ыхх! Унтрее курсанах кăвакарса кайнă, кам та пулин ун çинчен аса илсенех ăна йĕксĕ ернĕ. Вăл халь кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек Унтрее мĕнле лайăхрах, чуна пырса тивмеллерех таврăс пирки шухăшласа пурăннă. Уйрăмах, леш исторFile кун, хăй шăв-шав пуçласан, Унтрей милици чĕнтернĕшĕн каçарма пултарайман...

— Вăл хăрăк шалча мана хуптарса пĕтĕм хула умĕнче намăс кăтартасшăн пулнă, эсремет! — сайра та шултра шăлĕсене шатăртаттарнă Энтрей.— Мана хуптарса, сан патна ирĕклĕн çÿреме ĕмĕтленнĕ! — чышкипе юнанă арăмне.— Кăтартăп сире милици! Хăйне тĕрмере çĕртмелле тăватăп! Курăн! Савăнăр вара иксĕр те!

Чăнах та, Унтрей патне участокри милиционер час-часах кĕре-кĕре тухма пуçланă: жалобăсем тĕрĕслеме. Унтрей хăй патĕнче прописксăр-мĕнсĕр квартирантсем усрать имĕш, анчах ун патĕнче сайра хутра ялти тăванĕсем çĕр выртkаласа кайнă çеç. Унтрейăн арăмĕ пĕрмай сахăртан сăмакун туса сутать иккен.

Кун пекки те ёмӗрне пулман... Унтан Унтрее месткома ӗнчӗҫ: Унтрей хӑйӗн хуняма карчӑкне, ват хӗрарӑма, ним хӗрхенмесӗр хӗне-хӗне хваттертен кӑларса ывӑтнӑ имӗш. Ӗҫӗ пӗртте ун пек мар-мӗн: хуняма карчӑкӗ, аллӑран тахҫанах иртнӗ пулин те, ҫӳҫне кӑтралатса, тутине пӗветсе ҫӳрекенскер, ниҫта та ӗҫлеменскер, спекулянтсемпе ҫыхланса кайнӑ, тӗрлӗ капӑр плащсем, нейлон кофтӑсем вӑрттӑн сутса ҫӳренӗ, хӑш чухне, киле ӳсӗр таврӑнса, асар та писер скандалсем тунӑ. Тӳсеймен Унтрей, хытӑ вӑрҫнӑ ӑна, малашне те кун пек хӑтланатӑн пулсан — кирлӗ ҫӗре систеретӗп, тенӗ те, хунями вара ӑна темтепӗр каласа, ылханса, питӗнчен сурсах тухса кайнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн тепӗр уйӑхранах темле компанипе пӗрле тӗрмене кӗрсе ларнӑ...

Ҫак элеклӗ жалобӑсене кам ҫырнине Унтрей пит лайӑх чухланӑ, анчах халлӗхе ним те тӑвайман: жалобисем пурте анонимнӑй пулнӑ.

— Шӑпи тулӗ-ҫке хӑҫан та пулин! — ал сулнӑ ҫеҫ вара Унтрей.

Энтрей лӑпланман. Вӑл ҫаплах-ха Унтрее тарӑхтармалли, ун чӗрине тивертмелли меслетсем шыранӑ...

Пӗррехинче вӑл, шыв ӑсма тухаканскер, Унтрейӗн кӗҫӗн ывӑл ачи картишӗнчен ҫӗклемпе вутӑ йӑтса кӗнине курнӑ.

— Чим-ха, чим! — ачана пусма ҫинче чарса тӑратнӑ вӑл.— Эс мӗншӗн пирӗн вутта вӑрлатӑн?

— Ҫук, сирӗнне тивмен, хамӑрӑн ку,— тенӗ ача.

— Епле хӑвӑрӑн пулать? Ак ҫак ҫиелти юман пуленккисем пирӗн вӗт! Сирӗн ӗмӗрне те юман вутӑ пулман!

— Пур ҫав, ӗненместӗн пулсан—кайса пӑх, ара,— парӑнман Унтрей ачи.

— А-а, эс тата хирӗҫ ҫаптарса тӑратӑн-и, тӑмана ачи?! Эп сана, йыт ҫурине... вӗрентӗп ҫын вуттине вӑрлама!..

Энтрей ача хӑлхине ҫатӑр-р... пӑрса лартнӑ. Ним хӗрхенмесӗр, татсах илес пек.

Ача ҫухӑрса янӑ, аллинчи вутта пӑрахса аран вӗҫерӗнкеленӗ те урамалла тапса сикнӗ. Энтрей — ун хыҫҫӑн.

— Атте-е! Энтрей пичче вӗлере-ет!..— Ун ашшӗ, Унтрей, шӑпах колонкӑран шыв ӑсма тухнӑ-мӗн.

— Мӗншӗн? Мӗн турӑн? — тесе ыйтма ҫеҫ ӗлкӗрнӗ вӑл, ҫав хушӑра Энтрей хашкаса чупса пынӑ та, кача-

ка пек ҫӳлелле сиксе, Унтрее пӗррех хулпуҫҫи урлӑ картлӑ кӗвентепе ярӑнтарнӑ.

— Вӑрӑсем! Ҫын вуттине хутса пурӑнатӑр!

— Чипер калаҫ, Энтрей! Ӗмӗрне пулман ун пекки!

— Чипер парам эп сана, йыт вилли!

Энтрей татах сикнӗ те тепре ҫапнӑ. Ну, паллах ӗнтӗ, Унтрей те тӳссе тӑрайман вара — аллинчи кӗвентипе хирӗҫ панӑ. Юрать-ха, шыв патне пыракан хӗрарӑмсем часрах чупса ҫитсе чарма ӗлкӗрнӗ вӗсене!

Суд пулчӗ. Халӑх пухӑнчӗ вӑл суда... театра ҫӗнӗ премьера курма пынӑ пек! Эп хам та кайса итлерӗм. Кулӑш! Энтрее (чӑн малтан вӑл ҫапнине хӗрарӑмсем курнӑ та-ха) ҫирӗм пилӗк тенкӗ штраф пачӗҫ. Судра хӑйне йӗркеллӗ тытма, чӗлхине чарма пӗлменшӗн тата вунӑ тенкӗ хушрӗҫ. Унтрей кӗпине ҫурнӑшӑн тепӗр пилӗк тенкӗ шыраса илмелле турӗҫ. Халӑх ал ҫупрӗ...

...Вӗри шыва чиксе кӑларнӑ чӑх пекех тухса кайрӗ Энтрей судран. Пӗр енчен — ӗмӗрлӗх намӑс, тепӗр енчен — хӗрӗх тенкӗ. Урамра йӑванса выртмасть ун пек укҫа!

Ҫакӑн хыҫҫӑн Энтрейӗн лӑпланмалла пулнӑ пек ӗнтӗ. Анчах ун йышши ҫын мар ҫав вӑл. Принциплӑ ҫын темелле. Хӑй шутласа хунинчен ним тусан та каялла чакман, аяккалла пӑрӑнман ҫын. Хурҫӑ характерлӑ! Юратмалла пулсан — юратмалла, тавӑрмаллатӑк — тавӑрмалла, никаких та веле-селе пулмалла мар!

Эрне иртнӗ-и ҫак суд хыҫҫӑн, кӑшт ытларах-и, ӑна тӗп-тӗрӗсех калама пултараймастӑп, анчах пӗр ирхине Унтрей хӑйӗн алӑкӗ умӗнчи почта ещӗкӗнчен ҫӗнӗ хаҫатсем кӑларса илет те... тӗлӗнсе хытсах каять: хаҫатсемпе пӗрле ещӗкрен унӑн хуняма карчӑкӗн портречӗ туха парать. Самаях пысӑк ӳкерчӗк — 12×18. Лайӑх хут ҫине пичетленӗ.

Чӗтремех ерет Унтрей ҫак ӳкерчӗке алла илсен. Ун ҫине кӑп-кӑтра ҫӳҫлӗ, каҫӑр сӑмсаллӑ, шӗвӗр янахлӑ хуняма ӳсӗр куҫӗсемпе ҫисе ярас пек, шӑтарас пек пӑхать... Чӑн шуйттан ӗнтӗ! Сисмесӗрех Унтрей ӳкерчӗке тепӗр майлӑ ҫавӑрса унта мӗн ҫырнине вулать: «Вилме маннӑ кӗрӗве чунтан ылханса парнелетӗп...»

Мӗне пӗлтерет ку?! Кам килсе чикнӗ ку эсрел япалине?! Хуняма карчӑкӗ хӑй тӗрмере-ҫке, спекуляцишӗн ларать! Нивушлӗ тухма ӗлкӗрнӗ вӑл арҫури ами?

Никама та шарламасть кун ҫинчен Унтрей, ӳкерчӗ-

ке çавăнтах чăр-чар çурать те картишĕнчи çӳп-çап ещĕкне пăрахать. Хăй вара кунĕпех шутласа çӳрет ун çинчен, асран та каймасть хуняма сăнĕ, куç умĕнчех тăрать вăл...

Иртет пĕр талăк. Ирхине сакăр сехетре Унтрей каллех почта ещĕкĕ патне пырать те... хаçатсемпе пĕрле каллех хуняма карчăкĕн сăнӳкерчĕкне туртса кăларать. Ак тамаша!

«Сатана! Эп сана пурпĕрех ыр пурнăçпа пурăнма памастăп!» — тесе çырнă тепĕр енне.

Пĕтрĕ пуç! Ĕнерхинчен те вăйлăрах пăлханса ӳкет Унтрей. Ӳкерчĕке каллех çурса çӳп-çап шăтăкне пăрахнă хыççăн хваттерне кĕрет те арăмĕнчен хуллен кăна ыйтать:

— Алтатти, çав сан аннӳ халь те тĕрмерех-и? Тухман-и-ха?

— Ăçтан халех тухтăр! Тата тепĕр çулталăк пурха унăн запасра,— тет арăмĕ.— Мĕнрен тăрук аса килчĕ вăл сана?

— Так, ахалех...

Виççĕмĕш кунĕнче каллех тухать ещĕкрен хуняма сăнĕ: «Юратсах пухатăн пуль-ха ман портретсене, савнă кĕрӳçĕм? Пух тавай, пух, лайăххрах упраса усра!»

Тăваттăмĕшĕнче те çавăн пекех.

Пиллĕкмĕшĕнче те.

«Халь эс мана тĕлĕкре те куратăн ĕнтĕ, çапла-и? Тăхта, кĕçех тӳсме тивет-ха санăн мĕн тӳсмеллине! Сербиянка ташлатăн акă!..»

Ик эрне хушши, пĕр кун сиктермесĕр, хуняма карчăкĕн сăнӳкерчĕкĕсене илсе тăнă хыççăн, Унтрей шалт аптраса çитет. Çывăрайми те, апат çими те пулать. Палăрмаллах начарланать, питçăмартисем путса лараççĕ. Арăмĕ, Алтатти, çакна сисет те пăшăрхансах ыйтать унран:

— Мĕн пулчĕ сана, Унтрей? Эс чирлетĕн пулмалла, тухтăрсем патне кайса пăхмастăн-ши, тусăм?

Унтрей чăтса тăраймасть вара, тарăхса кăшкăрса ярать:

— Пирĕн киле хĕртсурт ерчĕ! Кашни кун килет! Çав пĕтерет мана, каянни! Кĕçех вĕлерет пуль ĕнтĕ!

— Мĕнле хĕртсурт тата? — хăрасах каять тĕшмĕшрех арăмĕ.

— Ак çакă! — Юлашки кунсенче килсе пăрахнă ӳкерчĕксене Унтрей çурман, пухса пынă иккен.— Ку-

ратăн-и, миçе хут килнĕ вăл пирĕн пата? Пурте мар-ха кунта, чылайăшне çурса тăкрăм эпĕ...

Арăмĕ шак хытать, куçĕсем чут çеç сиксе тухмаççĕ.

Мĕнле ӳкерчĕк ку? Хăçан тунăскер? Кун пеккине пĕрре те курман-çке! Тата кам килсе чикет ăна пирĕн ещĕке? Нивушлĕ почтăпах килет?!

Иккĕшĕ те ним калама пĕлмеççĕ...

Çав кунах, каçхи почтăна илсе пырсан, Унтрей хĕрпочтальона хупăрласа илет:

— Мĕншĕн кашни кун илсе килетĕн эсĕ çак тухатмăш сăнне? Ăçтан тупатăн ку ӳкерчĕке? Кам парса ярать?

— Куçпа та курман, çылăха ан кĕртĕр мана пустуй,— тет хĕр.

Тахçанччен шутласа лараççĕ Унтрейпе арăмĕ.

— Кам хăтланать, кам мăшкăллать? Тен, чăнах, хĕртсурт килсе пăрахать пуль, э?

— Ун пек те пулма пултарать,— тенĕ Унтрей арăмне.— Сан аннӳ вăл — тухатмăш хăраххи вĕт, темле нечистăй çилăпа та çыхланма пултарать пуль!

— Сыхлас пулать. Тытас пулать! — тет Алтатти.

— Тахăш вăхăтра килет-çке вăл, ăçтан пĕлетĕн? Кăнтăрла ĕçе каймалла... Тен, урăх килмĕ? Çĕр штуках çаптарман пулĕ-çке картăчкине?

Чăнах та, виçĕ кун хушши ещĕкре хунямăш сăнĕ пулман. Лăпланмах пуçланă Унтрейпе арăмĕ.

— Килме пăрахрĕ пулмалла пирĕн хĕртсурт... турра шĕкĕр!

Анчах тăваттăмĕш ирхине каллех сиксе тухать ещĕкрен Унтрейĕн ытарайми хуняма карчăкĕ.

«Мана кĕтсе ывăнтăн пуль, шуйттан кĕрӳшĕ! Ак эпĕ, килтĕм, пăхса савăн ман çине — ха-ха-ха!..» — тесе çырнă хыçала.

Унтан вара кашни кун, кашни кун... Ӳкерчĕкĕн тепĕр енне хăрушран хăрушă сăмахсем çырнă. Хăш чух поматтĕрнисем те пулнă, теççĕ.

Хăшкăлса çитнĕ Унтрей.

— Инфаркт пулать капла манăн, чĕре çурăлать! Е инсульт пулать, пуç мимине юн кайнипе вилетĕп!— тенĕ вăл арăмне.

Тытăннă вара çак хĕртсурта сыхлама.

Пĕр каç, ик каç, виççĕ... Никама та курман. Хуняма карчăкăн сăнĕ çав-çавах пырса выртнă ещĕке.

— Краву-ул! — тесе кăшкăрасси çеç юлнă Унтрейĕн.

Хăй чĕрипе сиснĕ вăл: никам та мар, çав кӳршĕ Энтрей, мăнтăр сысна, шухăшласа кăларнă ун валли çак асапа! Мĕн тери хăрушла меслет тупнă шуйттан этемми Унтрее тавăрма! Анчах тытман вăрă — вăрă мар-çке-ха!

Çичĕ каç çывăрман Унтрей, çичĕ каç маччана хăпармалли хĕсĕк пусма çинче чĕрĕп пек хутланса ларнă. Хытăрах сывлама та хăранă хăй. Саккăрмĕш каçĕнче вара, тул çутăласпа, курнă: Энтрей хăйĕн хваттерĕнчен ху-уллен, чĕрне вĕççĕн утса тухса почта ещĕкĕ патне пынă, пĕчĕк пукан лартнă та çӳлелле кармашма тытăннă... Çав самантрах Унтрей ун çине тигр пек сиксе ларнă.

— Аха-а! Тинех лекрĕн-и, хĕртсурт! — ахăрса янă вăл.

Энтрей чĕлхесĕр пулнă. Паян кун та этем шутлă калаçаймасть, теççĕ. Çав кирлĕ тата ăна! Ан аптрат çынна!

1969



# Этем тусӗ

— Эс мӗн, Василь Васильч, йытӑ-кушак таврашне тӳсме пултараймастӑп, ун пек чӗрчунсене хам виличчен те киле кӗртместӗп тесе, тупа тӑваттӑн мар-и? Хӑвӑн сӑмахна тытмарӑн пулать? — терӗм эпӗ хамӑн тахҫанхи юлташа, ӑна хулари пӗр паркра курсан.

Вӑл унта пӑру пысӑкӑш кашкӑр тӗслӗ йытта, леш овчарка тенине, сӑнчӑр вӗҫҫӗн ҫавӑтса уҫӑлтарса ҫӳретчӗ.

— Ахалех тупа тунӑ эп ун чухне, йӑнӑш пулнӑ вӑл,— терӗ Василь Васильч, ман ҫума сак ҫине ларса.

— Кӑмӑлу улшӑнчӗ, эппин?

— Ҫапла, тусӑм, улшӑнчӗ. Ӗлӗкрех эпӗ йытӑсене чӑнах та кураймастӑмччӗ, йытӑ ҫавӑтса ҫӳрекенсене те шутсӑр тиркеттӗм, анчах халь ӗнтӗ...

— Йытӑсене юратакан пултӑн-и?

— Тӗрӗс. Юратакан пултӑм.

— Тӗлӗнмелле.

— Ытлашши тӗлӗнмеллиех те ҫук, тусӑм...

— Ҫапах та, епле майпа пулса тухрӗ-ха ку санӑн? Мӗн пирки юратрӑн ку кашкӑр раттине? Мӗнле сӑлтав пулчӗ? — ҫине тӑрсах ыйтма тытӑнтӑм Василь Васильчран.— Джек Лондон, Тургенев, Куприн тата ыттисен кӗнекисене вуланипе мар-и? Вӗсем йытӑсем ҫинчен пит хитре ҫырнӑ... Е «Ко мне, Мухтар!» ятлӑ кинокартинӑна курнӑ хыҫҫӑн-и?

— Литературӑпа искусство айӑплӑ мар кунта,— терӗ Василь Васильч, сак ҫине хӑйӗнпе юнашар ларнӑ килти кашкӑрне ачашлакаласа.— Пачах урӑххи.

— Мӗн тата?

— Пурнӑҫ. Кулленхи пурнӑҫри фактсем.

— Мӗн, вӑл санӑн хӑрушӑ преступника тытрӗ-и, пушар вӑхӑтӗнче вут-ҫулӑм ӑшӗнчен такамӑн ачине сӑпкаран ҫӗклесе тухрӗ-и? Тахҫан авал вуланӑччӗ эпӗ ҫавӑн пек историсем ҫинчен...

— Ытла ун пеккиех пулман, ҫапах та майӗ пур,— кулса илчӗ ман тус.— Темиҫе хут та вырӑссем «собака — друг человека!» тенине тӳрре кӑларчӗ вӑл. Ҫапла-и, Пулька?

Хуҫи мӗн ҫинчен ыйтнине ӑнланнӑ пекех, йытӑ ӑна хирӗҫ икӗ хутчен «хав!» турӗ.

— Куртӑн-и? Тӗрӗс, тет...

— Чӑнах та ӑслӑ пулмалла ку санӑн! — мухтамасӑр тӳсеймерӗм эпӗ.

— Ӑсӗ пур-ха унӑн, пур,— йытта каллех ӗнсинчен шӑлкаласа илчӗ Василь Васильч,—хӑй ӑсне тепӗр ҫынна кивҫен пама та пултарать!

— Ӑҫтан туянтӑн вара кун пек ырлӑха?

— Туянасси-мӗнӗ... Пӗлтӗр хӗлле ывӑл ача, шкулта вӗренекенни, пиншакӑн шалти кӗсйине чиксе илсе пычӗ. Чышкӑ пысӑкӑш кӑначчӗ, куҫӗсем те уҫӑлса ҫитейменччӗ. Ывӑлӑн пӗр юлташӗ ахалех панӑ — лешсен овчарки харӑсах тӑхӑр ҫура ҫурланӑ, тет те... Эп хайхи, йытӑсене кураймансккер, вӑрҫса тӑкрӑм ачана, кайса пар каялла, атту-тӑк халех ҫырмана кӑларса вӑратӑп, терӗм. Арӑм та кӑшкӑрма тапратрӗ: «Сире хӑвӑра пӑхса та тӑн тухать манӑн, халь тата йытӑ хыҫҫӑн тасаттарса пурӑнтарасшӑн-и эсир мана?!» Ывӑлӗ ӗнтӗ йыт ҫурине каялла кайса пама та хатӗрччӗ, анчах ҫав вӑхӑтра ман кӗҫӗн хӗрачи, улттӑри шӗпӗнӗ, ҫав кӑшт ҫеҫ хускалакан кӑвак муклашкана ҫупӑрласа илчӗ те хӑйне ҫараллах вӗлтрен ҫине лартнӑ

пек çухăрма тапратрĕ: «Пама-асп!!! Памасп ку йыт çурине, эп ăна хам пăхса ӳстереп, чăпăл та кĕртеп!..»

Мĕн тăвас тетĕн айван ачана? Ăнран тухса каймаллах кăшкăрать. Эп ал султăм та аяккалла пăрăнса утрăм, арăм та шăпăртах пулчĕ. Пурăнса кайрĕ вара çав овчарка çури. Ачасем унран уйрăлма та пĕлмерĕç — Пулька та Пулька, теççĕ кăна, тем те çитереççĕ, тем те хыптараççĕ. Темиçе хут та асăрхарăм: пĕчĕк хĕрачи амăшĕнчен мороженăй валли укçа ыйтса илет те мороженăйне илсе килсен ăна хăй çимест, ăçта та пулин пытанса ларса йыт çурине çулаттарать. «Эс ма ун пек хăтланатăн, ухмах ача?» — терĕм те пĕррехинче, вăл мана хирĕç: «Сирĕн ĕç çук кунта, эп Пулькăна хам тӳпене çитеретĕп, сирĕнне мар! Ман Пулькăран часрах пы-ысăк йытă тăвас килет!» — тесе хучĕ кăна...

Ӳсессе питĕ вăйлă ӳсрĕ вара вăл, кунсерен мар — сехетсерен пысăкланса пычĕ темелле. Пĕр виç уйăхранах сурăх путекки пысăкăш пулчĕ, çур çултан — пăруран та кая мар. Сасси духовой оркестрти мăн труба сасси пек пулса кайрĕ. Иртен-çӳренсене пĕрре «хав!» тесенех, лешсем аяккалла тапса сикеççĕ...

— Çапах та, мĕн усси пулнă-ха сире ăна усранинчен? — ыйтрăм Василь Васильчран.—Ну, калăпăр, тепĕр йытăсем магазинсене, складсене сыхлаççĕ — ку патшалăхшăн усăллă, милицири йытăсем йĕр-йĕрлесе вăрă-хурахсене тытаççĕ, пограничниксен йыттисем — тĕрлĕ диверсант-шпионсене çулса илеççĕ... Сан йытту мĕн тăвать? Харам пыр кăна вĕт вăл, çĕр процентлă тунеядцă! Эсĕ ху мĕнле шутлатăн?

— Эпĕ, тусăм, кăшт урăхларах шутлатăп,— терĕ Василь Васильч.— Харам пыр та мар вăл, тунеядцă та мар.

— Ну, кала, эппин, мĕн усси унтан, мĕн пархатарĕ?

— Пархатарĕ-и? Пур пархатарĕ.

— Сăмахран?

— Сăмахран, ӳсĕрсене тӳсме пултараймасть. Алкоголизмпа пит вăйлă кĕрешет...

— Мĕнле майпа?

— Туллать пьянчуксене, аллисенчен кĕленчисене туртса илсе çĕмĕрет. Ĕçме памасть.

— Эс, тăванăм, суясса суй та, виçине пĕл пăртак...

— Пĕртте суймастăп!

— Ăçта, мĕнле тăвать вара ку хисеплĕ ĕçе?

Василь Васильч ман ҫине пӑхса илчӗ.

— Хамӑр ҫуртрах... Итле акӑ эсӗ: эпир пурӑнакан ҫуртра икӗ магазин. Иккӗмӗшӗнче те эрех навалом. Пур кӗленчисене те уҫса юхтарас-тӑк, тем пысӑкӑш кӳлӗ тума пулать. Иртен пуҫласа каҫчен тӗрмешет унта ӳсӗр халӑх. Пуринчен ытларах «на троих» тӑваҫҫӗ. Чаракан ҫук та ара. Илсе тухаҫҫӗ те... ну, ытла ӳсӗрех марри-сем урамрах ӗҫме кӑшт именеҫҫӗ пулас. Ҫынсем кураҫ-ҫӗ-ҫке. Арӑмӗсене е месткома пӗлтерме пултараҫҫӗ. Вара ҫаксем пирӗн ҫурт подъезчӗсене кӗре-кӗре хы-паҫҫӗ. Ҫавӑнтах ҫӳплеҫҫӗ, вараласҫӗ, йӗпетсе хӑваракан сыснасем те пур вӗсем хушшинче. Хӗререх парсан, палкама, шавлама тапратаҫҫӗ, сӑмахсене суйласа тӑ-маҫҫӗ, чӗлхе вӗҫне мӗн пынӑ — ҫавна персе яраҫҫӗ. Хӗрарӑмсем хӑлхисене хупласа иртеҫҫӗ вӗсен тӗлӗпе, ма тесессӗн, вӗсем мӗнлерех калаҫнине илтсен, намӑс пулнипе слон та хӗрелсе каймалла. Ах, тур, йӑлӑхтар-са ҫитерчӗҫ! Пӗррехинче, ҫумӑр шӑпӑртатса ҫунӑ чух, пирӗн подъезда ҫавӑн пеккисем ҫиччӗн-саккӑрӑн кӗ-пӗрленсе кӗнӗччӗ. Хӑтӑл-хатӑл калаҫнине илтсе, юриех тухса иккӗмӗш хутран аялалла пӑхрӑм. Пурте йӑйӑр пек тӗреклӗскерсем. Ахаль каланине итлес ҫук вӗсем, хытӑрах каласан — вӗсенчен хӑшӗ те пулин мана пӗрре ҫапсах отбивной катлет туса хума пулта-рать. Ҫыхланиччен — ҫыхланманни... Куратӑп — бата-рея ҫине тӑватӑ кӗленче (икӗ литр!) кӑларса лартнӑ. Пӗрисем селедка ҫурхавне сӗвеҫҫӗ, теприсемваскасах сухан шуратаҫҫӗ — хатӗрленеҫҫӗ ӗнтӗ. Ҫӳп-ҫапне ҫавӑн-тах пӑрахса таптаҫҫӗ... Мӗн тӑвас кусене, мӗнле хӳтер-се ярас? Нумай шутласа тӑмасӑрах, йытта чӗнсе кӑ-лартӑм та аялалла тӗллесе команда патӑм:

— Пулька, фас! Фас, Пулька!

Вӑскӑртрӑм, урӑхла каласан. Эх, ыткӑнчӗ ман йы-тӑ! Хӑр-хамм! хӑрр-хамм! Эп ҫӳлтен вӑрттӑн пӑхса тӑратӑп... Самантрах аялти площадкӑна ҫитрӗ те ман кашкӑр, чӑн малтан ҫынсем ҫине мар, батарея ҫинче ларакан кӗленчесем ҫине сикрӗ. Чӑнкӑр-чанкӑр! чӑн-кӑр-чанкӑр! турӗҫ перцовкӑсем.

— А-а, шуйттан йытти!

— Пӗтерчӗ!

— Камӑн ҫӗҫӗ пур, чиксе вӗлерес ӑна! — кӑшкӑр-чӗҫ пьянчуксем.

Анчах асту, ман Пулька хӑйне чикессе кӗтсе тӑрать пуль! Пӗрин кӗпине ҫурса антарчӗ вӑл, теприн

шăлаварне латăртаттарчĕ, унтан тахăшне хăлхинчен ярса илчĕ... Пăрçа пек саланчĕç çур литр паттăрĕсем! Урамах хăваласа кăларса ячĕ вĕсене Пулька. Каялла пăха-пăха тараççĕ лешсем. Пĕр-иккĕшĕ шуçса ӳксе тăсăлса выртрĕç—каларăм-çке-ха, çумăр çăватчĕ ун чух. Кулăш! Ытлашши ан пултăр тесе, хам та урама ыткăнса тухса йытта каялла чĕнсе илтĕм, çыртса-çурса пĕтерĕ тата, ответ тытма тивĕ!

Пулька хăйсене хăвалама пăрахсан, хайхи пьянчуксем чарăнса тăчĕç те тепĕр хут шавлама тапратрĕç:

— Камăн йытти пулчĕ ку, хуçине тупас! Илсе патăр пире халех икĕ литр перцовка! Ахаль килĕшмесен, акт çырса суда парас!..

Пĕлместĕп, ĕç темпе пĕтетчĕ, анчах шăп çав вăхăтра магазинран икĕ милиционер тухрĕç те шавлакансем çине питĕ хытă тинкерсе пăхрĕç. Лешсем çакна асăрхарĕç пулас та, самантранах шăпланса, анаталла уттарчĕç, мĕскĕнсем.

Çакăн пекки тата пĕр-икĕ хутчен пулчĕ. Унтан вара «на троих» тума юратакансем пирĕн çурт подъезчĕсене мар, картишне те кĕме пăрахрĕç. Сисет те ку (эрех шăршине çухрăмранах туять пулас, хăямат!) çийĕнчех хӳтерсе кăларса ярать, хăш чух, çула май, кăшт-кашт «чуптукаласа» та илет...

— Ну, тепринче вара нихçан манмалла мар интереслĕ истори пулчĕ,— терĕ Василь Васильч малалла, йыттине татах ачашласа.— Манăн пĕр палланă чудак пур, паспортри хушамачĕ — Кукшаев, анчах хăйне пĕрмай Янтрай тетерет. Темскер, кăшт-кашт çырма хăтланать пулмалла та, ĕçĕ тухсах каймасть, курăнать. Вăл литературăпа çыхăннине çакăнтан çеç пĕлетĕп: пĕлтĕр çулла çапла ман пата ӳсĕртерех пырса кĕчĕ те (эп ăна урă çӳренине сайра куратăп) çав тери хавассăн пĕлтерчĕ: паян эп çуралнă кун, хĕрĕх тултартăм! Çавăн пирки кăштах сыпрăм-ха. Хăш чух поэтсене те юрать, çапла-и?

— Эс поэт-и вара? — куллине пытарса ыйтрĕ ман арăм.

— Тин пĕлетĕн-и ăна? — куçĕсене чарсах пăрахрĕ Кукшаев.— Пурнăçран юлнă-çке эсĕ! Ман сăвăсем шкулта вĕреннĕ чухнех стена хаçатĕнче тухнă! Пĕр сăввине халь те астăватăп...— Вăл пуçне хур аçи пек каçăртрĕ те кăшкăрма тапратрĕ: — Хаваслă вăхăт чуна

хыпалать, манăн кăмăла уя хăвалать!.. Лайăх каланă вĕт? Лайăх-и?

— Вăйлă,— терĕ арăм.— Эппин, хĕрĕхе çитрĕн?

— Çитрĕм, васка.

— Нумай пурăнатăн, Лермонтов çирĕм çиччĕрех вилнĕ,— ассăн сывласа иленçи турĕ арăм, ӳсĕрсене Пулька пекех юратманскер.

— Çапла çав... Çирĕм çиччĕрех вилнĕ вăл, мăнтарăн! — Кукшаев-Янтрай сасартăк макăрса ячĕ.—Пушкин та хĕрĕхе çитеймен... Пирĕн Константин Иванов та çамрăклах çĕре кĕнĕ... Çав тери хĕрхенетĕп вĕсене! Писательсен Союзне те кĕреймен, Литфонд членĕ те пулайман, шереметсем...— Куççулĕпех макăрать çын, чарса та чарăнмасть!

Ĕнентĕм вара: çын Пушкинпа Лермонтовшăн çĕр çул ытла иртсен макăрать пулсан, литераторах вăл! Пĕр-пĕр бухгалтер е сапожник ун пек хăтланмасть ĕнтĕ!

Çак Янтрай пире самаях йăлăхтарчĕ. Пирĕн айри магазинра кашни ир тенĕ пекех хăйне мĕн кирлине илет те йăкăшт пирĕн пата кĕрсе ларать. Черкке пар вара ăна, çыртмалли пар (вăл ăна «путармалли» тет), кăшт ĕçет те тытăнать лĕпĕртетме — тĕнчери пур редакторсем те çынсем мар иккен, çынçиенсем,— унăн, Янтрайăн, талантне хаклама пĕлмеççĕ, ун пирки вăл, пĕрре-пĕрре урăлса çитсен, аслисем патне каять акă, тăн кĕртеççĕ вара лешсем редакторсене... Арăмĕ те вĕреçĕлен унăн, хут вараласа ларатăн тесе иртен пуçласа каçчен вăрçать ăна, кăшламаллипех кăшлать, анчах хăй ача та тумасть, эсрел, çавăнпа та юттисем çине пăхкалать пулмалла...

Ялан пĕр юрă унăн! Çĕр хут та илтнĕ эпир ăна. Анчах хамăр пĕлетпĕр: Янтрай нумайранпа ниçта та ĕçлемест, арăмĕ шучĕпе пурăнать. Арăмĕ унăн пĕр сăра киоскĕнче ĕçлет, пит тупăшлă вырăнта...

Пулаççĕ-çке çавăн пек аçа хуртсем!

Ман арăм миçе хут тĕртсе кăларса ячĕ пуль çав Янтрая, анчах вăл çаплах пыра-пыра кĕрет. Унтан çак паттăр таçта ӳксе урине хуçнă, терĕç. Пĕр çул хушши пырса чăрмантармарĕ пулас. Шăп çав вăхăтра ман ывăл йыт çури илсе пырса çитĕнтерчĕ.

Пĕрре вара çапла пулса иртрĕ. Хальхи пекех астăватăп, тунтикун — йывăр кун — пулчĕ-ха вăл. Ирхине арăм ĕçе тухса кайрĕ, ывăлăм — шкула, пĕчĕк хĕр-

ачи — садика, эп килте пӗчченех юлтӑм, манӑн вӑл эрнере иккӗмӗш сменӑра ӗҫлемеллеччӗ.

Чей ӗҫкелерӗм те, туртас килчӗ. Анчах пирус пӗтнӗ иккен. Алӑка питӗрмесӗрех магазина чупса тухрӑм. Йӑпӑрт кӑна вӗт — илнӗ те кӗнӗ. Эп шутланӑ пек пулмарӗ, ытла час кӗрейменрӗм — ӑнсӑртран черетре нумайранпа курман паллана ҫынна тӗл пултӑм. Эпир унпа фронтра пӗрле ҫапӑҫнӑ. Сӑмах хыҫҫӑн — сӑмах: мӗнле пурӑнатӑн, апла-капла. Хваттере кӗрсе ларма чӗнтӗм — килӗшмерӗ, ун пек вӑраха кайма пултарать, терӗ вӑл. Урамрах калаҫса тӑтӑмӑр вара, ҫур сехет те ытла пулӗ. Унтан киле кӗтӗм те... шак! хытрӑм. Коридорта, стена ҫумӗнче, хайхи Янтрай-Кукшаев тӑра парать. Епле тӑрать-ха тата! Аллисене «хенде-хох» тунӑ — пӗлӗтелле ҫӗкленӗ, шӑлаварӗ кӑвапаран нумай аяларах анса ларнӑ, пӗр енчи кӗпе арки йӗмӗ ҫийӗн усӑннӑ... Ана хирӗҫ, ун умӗнчех, ман Пулька ларать. Ӗнси ҫинчи тӗкне шӑрт пек тӑратнӑ, хӳрине кукӑртнӑ, чӗнмен хӑна ҫине куҫ илмесӗр пӑхать. Хӑй хуллен кӑна, пӗр майлӑн, «хӑр-р... хӑр-р...» тӑвать. Коридор урайӗ йӗп-йӗпе, такам халь ҫеҫ шыв сапнӑ пек. Ҫавӑнтах кӗленче ванчӑкӗсем выртаҫҫӗ.

Эп ҫук чух кунта мӗн пулса иртнине тӳрех ӑнланса илтӗм пулин те, хам шутсӑр тӗлӗннине юри кӑтартма ыйтрӑм Янтрайран:

— Айтурах, Ярмулай, мӗн пулчӗ капла?

— Сан йыттту...— макӑрса ячӗ ӳсӗртерех Янтрай.

— Мӗн тӑвать?

— Кӑларса ямасть! Алӑсене те устармасть... Кӗртессе чиперех кӗртрӗ хӑй, анчах, килте никам та ҫук пирки эпӗ каялла тухма тӑрсан, пӗррех сиксе ларчӗ. Чӑн малтан алӑри эрехе малти урипе ҫапса антарчӗ — куран, пӗтӗм ырлӑх урайӗнче кӳлленсе выртать, унтан алӑсенчен ҫыртма тапратрӗ те, ирӗксӗрех ҫӗклесе тӑмалла пулчӗ...

— Нумайранпа тӑратӑн-и вара кун пек?

— Пӗлмесп... тӑнран тухса кайрӑм... Тен, пӗр сехет те иртрӗ-и!

— Ну, халь аллусене ус ӗнтӗ.

— Ҫыртать!

— Ман умра тивмест.

— Тархасшӑн, ан ҫырттар!

Эпир ҫавӑн пек мирлӗн калаҫнине кура, Пулька Янтрай ҫине юлашки хут пӑхса, «хӑр-р...» турӗ те

(«асту, эп сана, тепре килсен, тата хытăрах тыткалатăп!» тенĕ пекех пулчĕ ку) коридор вĕçне кайса выртрĕ. Çавăн хыççăн вара Кукшаев-Янтрай пирĕн пата пĕрре те ура ярса пусмарĕ...

— Аван тунă, маттур йытă,— терĕм эпĕ.— Мидал пама та юрать ăна куншăн!

— Мидалĕ тарам-ха вăл,— ал сулчĕ Василь Васильч,— эс малалла итле вăт!

— Татах темскер турĕ-и?

— Тĕлĕнтерчĕ! Шалт тĕлĕнтерчĕ! Тепри ĕненес те çук, анчах та эп сана, хамăн çывăх юлташа, ним суймасăр-хушмасăр каласа паратăп... Бытовой обслуживани енĕпе пулчĕ ку истори. Çак сăмаха чăвашла калама питĕ йывăр—халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен... тата темтепĕр, çавăнпа та вырăслах каларăм-ха. Тем тĕрлĕ мастерскойсем те пур вĕсен, ăна пĕлетĕн-ха ĕнтĕ. Вывескисем те, реклами те чаплă. Ара, вĕсене хăйсемех тăваççĕ те, ăçтан начар пулччăр? Çав рекламăсене ĕненсен, вĕсем халăха темĕнле ырлăх та кӳреççĕ...

— Çапла, çапла. Çынсене илĕртме пĕлеççĕ, анчах, ĕçĕ патне çитсен, нервăсене тăпăлтараççĕ вара!—терĕм эпĕ.— Куркаланă вăл «тивĕçтерекенсен» ырлăхне.

— Çавна каласшăн-ха хам та. Пĕр çич-сакăр уйăх каялла эп вĕсем патне пушмак юсама кайса патăм. Пит лайăх пушмак, Югослави таварĕ. Вăтăр ултă тенкĕ те çирĕм пус парса илнĕччĕ. Çийĕ тата пилĕк çул тăхăнсан та пĕтес çук, анчах тĕпĕ кăштах шăтнăччĕ те, кĕллисем пăртак чалăшнăччĕ. Манăн ури усал, урлă ура — атă-пушмака наччас чалăштарса ярать. Ну... йышăнчĕç саксем, квитанци пачĕç, тепĕр уйăхран пулать, терĕç. Вăхăчĕ çитсен кайрăм хайхи. Çук-ха, хатĕр мар, ик эрнерен кил, терĕç. Юрать... Кайрăм ик эрнерен. Каллех юсаман ман пушмака. Тата ик эрне кĕтме хушрĕç. Ĕç нумай имĕш вĕсен, ĕлкĕреймеççĕ. Ку срок тухсан, хам чирленĕ пирки, арăм кайрĕ. Каллех пулман иккен ман пушмак! Вĕсен патуш çук, тепĕр уйăхсăр та пулмасть, тесе янă. Ак хайхи! Пĕлетĕн-и, тусăм, вуникĕ хут кайрăмăр мастерскойне çав пушмакшăн!..

— Вуниккĕмĕшĕнче парса ячĕç-и вара?

— Çук! Арăм куççулĕпех таврăнчĕ: çунса кайтăр сан пушмаку-качку, урăх пĕр утăм та тумастăп уншăн, тет. «Тивĕçтерекеннисене» каламанни хăвармарĕ, тем тĕрлĕ ылханса пĕтерчĕ, ĕмĕрне шутламан ман

Марье ун пекех ăста ылханма пултарасса! Бытовой обслуживани мар ку, бытовой издевательство, çунса кайччăрах вĕсен мастерскойĕсем, тет... Тепĕр кунне хам кайрăм. Вунвиççĕмĕш визит пулчĕ ĕнтĕ ку. Çичсакăр тĕслĕ сăрланнă майрана мунчала пек пулса кайнă квитанцие тыттартăм. Çавăркаласа пăхкаларĕ çак майра ман квитанцие, тем шутпа мана куçран питĕ хытă пăхрĕ, унтан тепĕр пӳлĕме кĕрсе чылайччен тытăнса тăнă хыççăн каялла тухрĕ те пушмак парас вырăнне, хайхи квитанцие ман ума ывăтса, кăшкăрчĕ пăрахрĕ: «Эсĕ мĕн, гражданин, мăшкăллас тетĕн-и пирĕнтен?! Хăвăн пушмакна эс тахçанах илсе кайнă вĕт!..»

Куçпуç чарăлсах кайрĕ манăн.

— Епле илсе кайнă? Кам илсе кайнă?

— Акă, икĕ уйăх каялла: алă пуссах илнĕ, пăх çакăнта!

Вăл мана квитанци корешокĕпе чутах сăмсаран тĕкетчĕ, аран аяккалла пăрăнса ĕлкĕртĕм.

— Ман алă мар ку, эп ун пек пусмастăп! — кăшкăртăм майрана.

— Кам пуснă вара? Пушкин килсе ал пуснă-и саншăн? — тата хытăрах çухăрса ячĕ вăл.—Намăс, гражданин! Куç умĕнчех улталама хăтланса çӳретĕн! Ак, халех милицие шăнкăравлатăп та, кăтартĕç сана иккĕмĕш мăшăр пушмак! Эккей, тупăннă иллюзионист!

Майра çухăрнине илтсе, тепĕр пӳлĕмрен виççĕн-тăваттăн сиксе тухрĕç. Пĕри, пиçнĕ слива тĕслĕ тачка сăмсаллăскер, çывăхарах пычĕ те, çăмламас пуçне пăркаласа, пит-куçне пĕркелентерсе намăслантарма тытăнчĕ мана:

— Эх, этем, этем! Ăçта сан совĕç? Пĕр мăшăр пушмакран икĕ мăшăр тăвас терĕн, эппин? Кунта ухмахсем лараççĕ терĕн пуль те — не выйдет, милейший!

— Ним те темен эпĕ! Илсе кайман хамăн пушмака, акă, квитанциййĕ те алăрах, куратăн-и? — кăшкăртăм ăна хирĕç.

— Пушмакне эсĕ квитанцисĕр те илсе кайма пултарнă, ăна çухатрăм тесе суйнă та... Сан пеккисем питĕ чее вĕсем! Куркаланă!

— Эсир мĕн, мана жулик тесшĕн-и?

— Çавăн пекрех пулса тухать, папаша!

— Эсир хăвăр жуликсем кунта!

— Ах, эсĕ пире кӳрентерме пăхатăн-и-ха тата? —

мана кăкăртан ярса тытмах тăчĕ слива пек сăмсалли. Хăйĕнчен эрех шăрши перет.— Маруська, тавай хут, халех акт çыратпăр, лектеретпĕр ку нахала вунпилĕк талăклăх! Кăтартăпăр çут тĕнче!..

Аран хăтăлкаласа тухрăм вĕт! Тухрăм та — тӳрех министр патне. Чиперех калаçрĕ вăл манпа, тĕрĕслеме пулчĕ, квитанцие илсе юлчĕ. Эрнерен хут пычĕ: сирĕн пушмак çухалнă, çавăнпа та уншăн укçа тӳлетпĕр... Анчах мĕн чухлĕ пачĕç тетĕн укçине? Виçĕ тенкĕ те утмăл икĕ пус! Пушмак хакĕн вунă пайĕнчен пĕр пайне!

— Шăп çур литрлăх! — кулса илтĕм эпĕ.

— Çавă çеç! Тарăхнине ирттерсе яма пĕрре ларса ĕçтĕр ку усал заказчик, терĕç пуль. Мăшкăлларĕç, кĕскен каласан! Тьфу!

Василь Васильч калама чарăнса аяккалла сурса илчĕ.

— Анчах чим-ха, тăванăм, ку приключенилле историнче йытă пулмарĕ-çке санăн? Эс малтан: бытовой обслуживани енĕпе тĕлĕнтерсе пăрахрĕ вăл, терĕн мар-и? — ыйтрăм çакăнтан кăшт тăрсан.

— Вăл каярахпа пулчĕ,— терĕ Василь Васильч.— Эпир арăмпа иксĕмĕр çав «тивĕçтерекеннисем» патне урăх ĕмĕрне те ура ярса пусмастпăр тесе тупа тусаттăмăр ĕнтĕ. Анчах тӳр килчĕ вĕт, мур илесшĕ, мĕн тăвас тетĕн! Ман ак çак Пулька хăйĕн намордникне, чăвашла каласан — сăмсалăхне, нăхтине, таткаласа пĕтерчĕ. Унсăр йытта хула урамне илсе тухма та май çук. Лавккасене кайса пăхкаларăм — тупăнмарĕ. Киввинех юсас пулать. Хам юсаймастăп — ни пăшатанĕ çук манăн, ни чĕнĕ, ни çиппи. Шăла çыртсах «тивĕçтерекеннисем» патне утрăм вара. Паллах, йышăнчĕç. Эрнерен пулать, терĕç. Анчах... мĕн тетĕн эсĕ? Каллех малтанхи истори пуçланчĕ. Тепĕр эрнерен кил, пилĕк кунтан, виç кунтан... Çиччĕ кайса та усси пулмарĕ! Юлашкинчен тарăхса çитрĕм те, Пулькăна мăйĕнчен кăкарса, сăмсалăхсăр-мĕнсĕрех хайхи мастерскоя çавăтса кайрăм... Çитрĕмĕр. Мастерской алăкĕнчен кĕнĕкĕмен, ман йытă ун-кун пăхкаларĕ, унтан, пĕчĕк тĕкĕр çине пăхса тутисене пĕветсе ларакан леш пĕркунхи капăр майра тĕлне пырса, малти урисене карлăк çине хучĕ те: «Хав!» — терĕ.— «Хав, хав!»

— А-аа! — çухăрса ярса сиксе тăчĕ майра. Аллинчи тĕкĕр ӳксе чăнкăрт! турĕ.

— Хав, хав! — сас пачĕ каллех Пулька.
— А-а-а!
Хыҫалти пӳлĕмрен икĕ арҫын чупса тухрĕҫ.
— Мĕн пулчĕ, Муся?
— Кашкăр! Ҫисе ярать!
Арҫынсем ман паталла ыткăнса ятлаҫма тапратрĕҫ.
— Мĕн хăтланатăн эсĕ, гражданин?! Мĕншĕн йыттуна пӳлĕме илсе кĕтĕн? Ҫитменнине — намордниксăр тата!
— А вăл шăпах хăйĕн намордникне шыраса килчĕ сирĕн пата! — терĕм вĕсене хирĕҫ хăюллăн.
— Хав, хав! — Эпĕ каланине ҫирĕплетрĕ Пулька.
— Илтрĕр-и? Намордник пама ыйтать!
— Хав, хав!
— Мĕнле намордник?
— Сирĕн патра выртать, уйăх ҫурă иртрĕ!
— Хав, хав! Хăр-р...
— Хулиган! Халех илсе тух йыттуна, атту-тăк иксĕре те момент милицие ăсататпăр!
Арҫынсенчен пĕри, чăнах та, хыҫалти сĕтел ҫинчи телефон патнелле чупрĕ. Анчах ҫав самантра ман Пулька пĕррех карлăк урлă сиксе каҫрĕ те телефонлă сĕтел ҫине хăпарса ларчĕ.
— Хăр-р... хав, хав!
— Чар йыттуна, теҫҫĕ сана! Илсе тухса кай!..
— Ниҫта та каймастăп,— терĕм эпĕ ҫирĕппĕн,— ак ҫак квитанци тăрăх ман йытă сăмсалăхне халех тупса юсаса парăр, вара тин каятăп! Унччен вырăнтан та хускалмастăп! Хăвăрах ăнланма тивĕҫ, пирĕнтен хăтăлмалли урăх май ҫук сирĕн, телефон патне пыраймастăр, урама тухасси ҫинчен ан та шухăшлăр—йытă тӳрех ĕнсе ҫине хăпарса ларать, унтан мĕн пулассине хăвăрах чухламалла...
— Бандитизм ку! — кăшкăрчĕ пĕри.— Насили, пусмăр!
— Юрĕ, юрĕ! Ытлашши калаҫса вăхăта сая ан ярăр, тытăр та юсăр часрах йытă сăмсалăхне! — приказ панă пекех каларăм эпĕ.
— Итлерĕҫ-и вара, юсаса пачĕҫ-и? — Василь Васильча пӳлсех ыйтрăм эпĕ.
— Мĕн тăвас пулатчĕ-ха вĕсен тата? — кулса ячĕ ман тус.— Ҫур сехетрен наморднике вĕр-ҫĕнĕ пекех туса пачĕҫ! Анчах ĕҫ кунпа пĕтмерĕ-ха, ҫавăнтах тепĕр кулăш пулса иртрĕ...

— Халь мĕн тата?

— Эп хайхи наморднике Пулькăна тăхăнтартма тăрсаттăм çеç, мастерскойне урамран леш слива пек сăмсалли, пĕркун мана пушмак пирки намăслантараканни, пырса кĕчĕ. Пĕрре пăхсах сисрĕм: мухмăр уçнă ку, лайăхах уçнă, куçĕсем кантăк пекех пулса кайнă.

— Мĕнле собашник кунта? Кам хăйнă йытăпа килсе кĕме эпир ĕçленĕ çĕре? — мĕкĕрсе ячĕ вăл.— Эп ăна... парăр-ха мана пĕр-пĕр пысăкрах калăп!

Çапла каларĕ çеç слива-сăмса, ман йытă алран карт! туртăнса вĕçерĕнчĕ те çакна уринчен кап! çыртрĕ.

— О-о-о! — мĕкĕрсе-йынăшса илчĕ лешĕ, урине йытă çăварĕнчен туртса кăларма тапкаланса.

Эп йытта чарма ыткăнтăм, анчах вăл варт! каялла çаврăнса ман ума пушмак пырса пăрахрĕ. Пĕлетĕн-и, мĕнле пушмак? Ман пушмак, çак мастерскоя юсама парсан çухални! Эп ăна тӳрех палласа илтĕм. Çитменнине, эп унăн шал енне, шур сăран çине, хамăн ятпа хушаматăн малтанхи саспаллисене çырнăччĕ.

— Ак япала! Тупăнчĕ, эппин! — тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.

— Тупăнчĕ çав! Пулька палласа хывса илчĕ ăна! Ну... кайран мĕн-мĕн пулни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Хăвах чухламалла ăна...

Василь Васильч йыттине ачашласа илчĕ.

— Нимĕнле харам пыр та мар пирĕн Пулька, усси пурах унăн! Ахаль каламан çав йытă — этем тусĕ, тесе...

1969



# Самосвал

Калама та çук ĕнтĕ — техника тени этем ывăльхĕрĕшĕн питĕ лайăх, шутсăр усăллă япала. Акă, сăмахран, автотранспортах илер. Мĕнешкел ырлăх вăл çыншăн! Ĕлĕкрех эпир хамăр патран Шупашкара икĕ талăк ытла каяттăмăрччĕ — лăпăс-лăпăс, лăстăр-лăстăр... Халĕ пур — автобус çине кĕрсе ларатăн та пĕр икĕ сехет хушши пружинлă сак çинче çемçен кăна сиккелесе пынă хыççăн Хĕрлĕ площаде тухса та тăратăн. Автобус çине ĕлкĕреймесен — тепĕр чух грузовикпа кайма та начарах мар. Такси тĕл пулсан—пушшех те ырлăх вара.

Анчах... ырлăхĕ ырлăх та, ытла пур чухне те мар çав. Тепĕр чух темтепĕр курса пĕтетĕн. Хам çинченех каласа парам-ха сире. Халь мар, пĕр çирĕм çул ĕлĕкрех пулчĕ ку истори. Çапах та эп ăна пĕртте кивелмен, тесе шутлатăп. Ун пекки ку чухне те час-часах пулкалать-çке!

Пĕррехинче, кĕтмен-туман çĕртен, хамăр колхоз

почтальонӗ, каҫăр сăмсаллă Петюк, мана телеграм илсе пырса пачӗ. Тӗлӗнсех кайрăм: камран пулма пултарать ку? Часрах уҫрăм та — вулатăп:

— «Ҫатракасси... Степан Степанович Степанова... Аслă ывăла авлантаратăп... Вунвиҫҫӗмӗшӗнче туй... Сана питӗ кӗтетӗп... Тусу Панкрат».

Панкрат! Хамăн фронтри тус, пӗрле нумай хурашур курнă, пӗррехинче мана вилӗмрен те хăтарнă шанчăклă юлташ туя чӗнет иккен мана.

«Каятăп!» — терӗм те хам ăшра, телеграма тата тепӗр хут вуласа тухрăм.

— Вунвиҫҫӗмӗшӗнче туй...— Ҫавăнтах тухса кайма хатӗрленнӗ почтальонран: — Паян мӗнле число-ха ҫав? — тесе ыйтрăм.

— Вунвиҫҫӗмӗш,—терӗ вăл, пӗр тытăнса тăмасăрах.

— Ҫук пуль! — ӗненес килмерӗ манăн.— Мӗнле-ха апла? Чим-ха, телеграмне хăш числора панă? Саккăрмӗшӗнче! Эппин, вăл 100 километра 5 кун килнӗ? Кунне 20-шер километр... Ку хушăра ҫуран икӗ хут кайса килме пулать-иҫ унта!

Петюк ҫине ҫилленсех кăшкăрса пăрахрăм:

— Ăҫта выртнă вăл ку таранччен? Эп сире, мурсене, куншăн...

— Эп айăплă мар, Ҫтаппан пичче, районри почтăра выртнă вăл,— терӗ Петюк лăпкăн кăна,— унта часчасах манса каяҫҫӗ... Мана мар, унтисене вăрҫ эсӗ...

Мӗн тăвас-ши ӗнтӗ? Каяс пулсан — ҫитейӗп-ши, ҫук-ши? Хамăн ӗнтӗ, тӗрӗссипех калатăп, ҫав тери каяссăм килет... Вăрҫăран пӗрле таврăннăранпа та курман эпир пӗрне-пӗри, сайра хутра ҫырусем ҫӳреткеленӗ ҫеҫ. Юлашки ҫырăвӗнче вăл: кăҫал ывăла авлантаратăп, сана туя чӗнетӗпех, пымасан — юлташ мар вара эсӗ, курсан та калаҫмастăп, тесе ҫырнăччӗ. Ăна хирӗҫ эпӗ: систер кăна, кайăк пекех вӗҫсе ҫитетӗп тесе ответ патăм. Ҫук, каясах пулать!

Кӗҫех ман арăм фермăран апат ҫиме таврăнчӗ, вăталăх ывăл та шкултан килчӗ. Эпӗ вӗсене телеграмне вуласа патăм та:

— Мӗнле шутлатăр эсир? — тесе ыйтрăм.

— Мӗн шутласа тăмалли пур, паллах, каймалла ун пек сын патне,— терӗ арăм.

— Ӗлкӗрӗп-ши? Инҫе вӗт-ха, Шупашкар урлă каймалла... Унтан тата Канаш ҫулӗ тăрăх тепӗр вунсакăр километр.

— Машинăсем çӳреççĕ-иç! Çулĕ те такăр халь...

Ман ача йăпăр-япăр сумкинчен хутпа кăранташ туртса кăларчĕ.

— Самантрах шутласа кăларатпăр,— терĕ вăл.— Халĕ кăнтăрла иртни 1 сехет. Тепĕр сехетрен эсĕ хатĕрленсе тухса кайма пултаратăн. Шоссе çине тухма — çур сехет... Ну, тепĕр çур сехет кĕтсе тăмалла пултăр унта. Тăваттăра машин çине ларатăн, улттăра Шупашкарта пулатăн. Унта Канашалла каякан машинсем пурах ĕнтĕ, пĕр ларсан 20 минутранах кирлĕ çĕре çитетĕн. Кĕскен каласан, атте, эсĕ 7 сехетре тусу патне çитсе сăра курки тытатăн!

Савăнтарсах ячĕ ку мана...

— Каятăп, эппин!

— Хам та кай тетĕп-иç ара, мĕн шухăшласа тăмалли пур,— каллех килĕшсе каларĕ арăм.

Эпĕ ăна çĕнĕ костюма арчаран кăларса хатĕрлеме хушрăм та, хам сельмага васкарăм. Аслă-тăнлă çынсем туя парнесĕр каймаççĕ вĕт, мана та пушă алăпа пырса кĕме аван мар пулать, терĕм.

Магазина кĕтĕм те, парнелĕх юрăхлă япала шырама тытăнтăм. Нимех те курăнмарĕ çӳлĕксем çинче: çăматсем, ватниксем выртаççĕ, пăта ещĕкĕ пур, тутăхса кайнă витресем... Çук, кусем ман валли мар... 10—15 тенкĕ тăракан «ходики» илсе кайма та аван мар, тен, вĕсен иккĕшин те аллисем çинче вĕр-çĕнĕ «победăсем» е «звездасем» шаккаççĕ.

Сасартăк, мачча çумĕнчи çӳлĕк çинче, тусанпа витĕннĕ ăпăр-тапăрсем хыçĕнче, темле илемлĕ япала курăнса кайрĕ.

— Мĕн çав санăн? — ыйтрăм продавецран.

— Посуда. Сервиз, теççĕ-и çав... Чей ĕçмелли хатĕр-хĕтĕр, вуникĕ çын валли. Чейникĕ те пур унта, сĕт ямалли те, тем те... Пилĕк çул выртать ĕнтĕ вăл хлам, никам та илмест. Те списать тумалла пулать кăçал...

— Кӳр-ха ăна кунта!..

Продавец ман çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ те ыйтнă япалана ман ума антарса лартрĕ. Нимĕнле хлам та мар, питĕ лайăх, хитре, чăн-чăн хрустальрен тунă сервиз иккен. Пӳрне хулăнăш тусанпа хупланни кăна сăнсăрлатса лартнă ăна.

— Мĕн хак?

— 333. (Ун чухне кив укçа пулнă-ха).

— Тавай, халех шăлса тасат та — чĕркесе пар!

— Эсӗ мӗн... Ҫав териех пуйса кайрӑн-им? — каллех тӗлӗнсе пӑхрӗ продавец ман ҫине.

— Калаҫса ан тӑр эсӗ, ман васкамалла!

...Килте ҫак хаклӑ япалана тирпейлӗн чӗркесе чӑматана чикрӗм, лайӑх кӑна тумлантӑм та васкасах мӑн ҫул еннелле утрӑм. Тепӗр ҫур сехетрен шоссе ҫине тухса та тӑтӑм. Нумай та кӗтмелле пулмарӗ манӑн — Етӗрне енчен пӗр грузовик ыткӑнтарса килни курӑнчӗ. Анчӗ ман пурнӑҫ! Шоферӗ ларттӑр кӑна!.. Вара каҫчен Шупашкара ҫитетӗп те — малалла!

Машин хам пата пӗр ҫӗр метр ҫитиччен алла ҫӗклесе «сасӑлама» тытӑнтӑм. Тавай, лартса кай, тетӗп ӗнтӗ. Ыйтни, чӑнах та, харама каймарӗ: грузовик чарӑнчӗ.

— Ӑҫта ҫити? — кӑшкӑрчӗ шофер, пуҫне самантлӑха кабинӑран кӑларса.

— Шупашкара...

— 30 тенкӗ!

— Ку тӗлтен 20 анчах илекенччӗ-ҫке? — терӗм эпӗ ӑна хирӗҫ.

— Ну, как хош. Пирӗн санпа тавлашма вӑхӑт ҫук. Пирӗн — васкавлӑ рейс! — Шофер алӑкне шарт! хупса лартрӗ те газ хушрӗ. Каять пӑрахса!

— Юрӗ, эппин, юрӗ! — хӑрасах кайрӑм эпӗ.— Ме, тыт!

Машин хуҫи укҫана ман ҫине пӑхмасӑрах кӗсйине пӗтӗрсе чикрӗ. Эпӗ йӑпӑр-япӑр кузова хӑпарса темле михӗсем ҫине лартӑм. Машин ҫавӑнтах тапранса кайрӗ. Лайӑх кайрӗ, тес пулать, хӑлхасенче ҫил шӑхӑрса кӑна шырать. Анчах темшӗн вӑл мана ытла питех те тӳрӗ пыман пек туйӑнчӗ... Пӗрре пӗр еннелле, тепре тепӗр еннелле пӑркаланать. Халь ҫеҫ савӑннӑскер, шикленме пуҫларӑм: ҫак «васкавлӑ рейса» тухас умӗн ку шофер хӑйне ытлашширех «заправить» туман-ши? Аллисем баранкӑна ытла ҫирӗпех тытмаҫҫӗ пулас...

Чӑнах-мӗн! Асламас сӑрчӗ ҫине хӑпарсан, пӗр-икӗ километр те кайрӗ, те каяймарӗ ҫак—малти кустӑрмисем аплалла, каплалла пӑрӑнкаларӗҫ те, машин ҫул хӗрринчи канава кӑпӑшт! кӗрсе ларчӗ. Чун юлмарӗ вӗт! Ара, туя лекес вырӑнне чиперех асаттесемпе юнашар кайса выртатӑп-ҫке!

Шофер машинӑна каялла чакарса кӑларма пикенчӗ, мотора йынӑштарчӗ кӑна: у-у-у! у-у-у! — анчах кайри кустӑрмисем пӗр вырӑнтах ҫаврӑнаҫҫӗ, малти-

сем канаври юр ăшне шалтан шала путаççĕ... Пăчланчĕ пирĕн «васкавлă рейс!» Пăхса лартăм-лартăм та, кунта тем чухлĕ кĕтсен те усси пулас çуккине кура, чăматанĕ-мĕнĕпех çĕре сиксе антăм.

— Машинсем татах пулаççĕ пуль-ха, ларкаласа кайăп...— лăплантартăм хама хам. Шофер та кабинăран тухрĕ, ун хыççăн лайăх кăна пальто тăхăннă, мечĕк пек çавракаа çын шуса анчĕ. Пăхатăп — иккĕшĕ те «пиçсе çитнĕ». Пуринчен ытла — çавраки, ура çинче те тăраймасть, ансанах канава кĕрсе выртрĕ.

— Юлташ,— терĕм эпĕ шофера йăвашшăн,—манăн урăх машинпа кайма тивет. Укçана тавăрса парăр эсир...

— Мĕнле укçана? Хăçан панă эс мана укçа? — тăруках кăшкăрса пăрахрĕ çак ман çине.

— Епле-ха апла... Çирĕм минут каялла хам алăпах 30 тенкĕ тыттартăм-çке!

— Кай çăва патне! — канавран рак пек чакса тухнă май кăшкăрчĕ çавраки.

— Чимĕр-ха, шӳт ан тăвăр-ха эсир...

— Мĕн шӳчĕ сана? — каллех çухăрса ячĕ мечĕк пекки.— Парăпăр сана шӳт! Куран — машин кĕрсе ларчĕ! Укçа-а...

— Çынтан ун пек мăшкăллама саккун çук, юлташсем. Эсир мана кирлĕ çĕре илсе çитерейменĕр пулсан— манран илнĕ укçана каялла тавăрса парас пулать, мана вăл урăх шофера тӳлеме кирлĕ,— çирĕппреххĕн каласа хутăм эпĕ, пĕтĕм чун-чĕрепе тарăхма пуçласа. Анчах та, çапла каланипе машин хуçисене ӳкĕте кĕртес вырăнне, уртарса ятăм кăна эпĕ.

— Мĕнле саккун? — мана кăкăртан тытмах пикенчĕ çавраки.— Эп хам саккун кунта! Кампа калаçнине пĕлетĕн-и эс, тăм çамка? Старши контролер тăрать сан умăнта, пĕр-пĕр йĕпе сăмса мар! Хочу — лартатăп, хочу—уй варринче персе хăваратăп! Понял? Кала акă тепĕр сăмах — халех катлет тăватпăр сантан!

Эпĕ ӳсĕрсемпе тек калаçас темерĕм, вĕсенчен пăрăнса машин номерĕ çине пăхрăм, анчах вăл вуçех те палăрмасть иккен. Ахăртнех юри çавăн пек тунă пулĕ...

Хĕл кунĕ — кĕске, часах тĕттĕмленме те пуçларĕ. Кăшт тăрсан, эпир халь çеç килнĕ енчен автомобиль фарисем çутăлни курăнчĕ.

— Тен, каятăп-и-ха çакăнпа...— ассăн сывласа илтĕм эпĕ, хама лăплантарма тăрăшса.

Ку — çăмăл машин пулчĕ. Такси мар, темле учреждени машинĕ пулмалла. Пирĕнпе танлашсан, вăл хăех чарăнса тăчĕ те, шоферĕ алăкне уçса ыйтрĕ:

— Лекрĕр-им?

— Ансăртран пулчĕ, кайри кустăрмисене ывăтса пăрахрĕ,— терĕ машина кутăн чăмтараканни, ун патнелле тайкаланса пырса.— Çын пулăшмасăр никак та тухаяс çук. Курмарăн-и, хыçалтан грузовиксем килмеççĕ-и унта?

— Курăнмарĕ, тусăм... Пĕлме çук, тен, санăн ирчченех «загорать» тумалла пулать кунта. Нимех те мар-çке, запас çур литр пулсан аптрамастăн,— кулса илчĕ «легковик».

Эпĕ, ун патне пырса, хама лартса кайма ыйтрăм. Тĕлĕнмелле! Халь çеç кулкаласа калаçнă çын сасартăк... чул пек пулса тăчĕ! Ман еннелле пăхма та кăмăл тумарĕ вăл, стартерне пăрнă май:

— 20 тенкĕ,— терĕ кăна.

Нимĕн те шарламарăм, часрах укçа кăларса тыттартăм та машин ăшне кĕрсе лартăм. Шоферпа юнашар тата тепĕр çын пур иккен. Кăшт кайсан, эпĕ леш грузовик хуçисем хамран мĕнле мăшкăллани çинчен каласа пама тытăнтăм, анчах вĕсем ман сăмахсене илтмен пекех пулчĕç,— шăпăрт, нимĕн те чĕнмерĕç. Ку вара: «Сан пек ухмахсене çапла кирлĕ те ĕнтĕ!» —тенĕ пекех пулса тухрĕ.

«Победа» питĕ лайăх пычĕ. Нискассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, Юнкă патнелле çывхара пуçларăмăр. Эпĕ ĕнтĕ пăртак лăплантăм, Панкрат тусăм хама мĕнле кĕтсе илесси, хамăн хаклă парнене çамрăк мăшăра епле мăнкăмăллăн тыттарасси çинчен шухăшлама тытăнтăм... Шоферпа унăн юлташĕ хăйсем хушшинче тем çинчен мăкăр-мăкăр калаçса пычĕç. Эпĕ пăт-пат, уйрăм сăмахсене çеç илтрĕм.

— Килте çук пулсан? — тет пĕри.

— Кам, Нинук-и? — тет тепри.

— Вăл та, Маруçĕ те.

— Э-э, ăçта кайччăр вĕсем? Яланах килте!

— Лавкка пур-и-ха унта?

— Тупаççĕ!

Çак калаçу мĕне пĕлтернине эпĕ кайран тин тавçăрса илтĕм. Юнкă тĕлне çитсен, шофер «Победăна» чар-

чĕ те, унăн юлташĕ яла чупса кĕрсе кайрĕ. Чылай вă-хăт пулчĕ унта... Эпĕ каллех пăшăрханма пуçларăм...

— Ма тăратпăр вара эпир? — тесе ыйтрăм хуллен (хытă калаçма хăратăп ĕнтĕ халь).

— Бензин пĕтет, паллană шофертан кивçен илес тетпĕр.

Эпĕ, ухмах пуçăмпа, ĕнентĕм çавна... Пĕр çур сехет иртрĕ пулмалла. Чĕрем каллех кăрт-кăрт-кăрт тапма пуçларĕ. Мĕн пулать-ха капла? Бензин пулмасан — çĕр выртаççĕ-ши вара кусем? Анчах манăн мĕн тăвас? Каллех тепĕр машина кĕтмелле-и?...

Юлашкинчен, яла кайни таврăнчĕ.

— Ну, мĕнле унта? — ыйтрĕ шофер.

— Çавăр лашуна,— терĕ лешĕ.

Шофер вара пуçне ман еннелле пăрчĕ те:

— Ан, гражданин. Бензин çук, эпир çак ялта çĕр выртатпăр,— терĕ сиввĕн.

Манăн пĕтĕм çанçурăм пĕçерсе кайрĕ. Тӳрех хайхи Нинукпа Маруç ячĕсем аса килчĕç.

— Улталатăр эсир, бензин пур сирĕн! Юри кай-мастăр! — терĕм хыттăн.

— Кунта санăн ĕç çук вара! — татса хучĕ шофер.

— Тĕттĕм пулчĕ ĕнтĕ, манăн халь ăçта каяс-ха?

— Пĕлместĕп.

— Уй варринче мар вĕт, ял çумĕнче, пĕр-пĕр хусах арăм пĕр каçлăха хваттере яма та пултарать,— тăкăс-кă сасăпа кулса илчĕ тепри, ман çине темле мăшкăл-ламалла пăхса. Ку вара мана тӳсме çук тарăхтарса ячĕ.

— Намăссăр çынсем эсир! Епле хăятăр мана çавăн пек калама? Эпĕ — арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă çын! Эсир хăвăр çавăншăн юлатăр пулас кунта!

— Ку та сан ĕç мар. Тух машинăран, атту халех хамăр сĕтĕрсе кăларатпăр. Укçуна илме пултаратăн, ме! — Шофер мана 5 тенкĕ ывăтса пачĕ.

— Ма кун чухлĕ анчах? — татах хĕрсе кайрăм эпĕ.— Мĕншĕн жуликланатăр? Эп сире 20 патăм!

— Кунта çити ахалех илсе килмеллеччĕ-и сана? Тух теççĕ машинăран!

Йытта хăвалană пекех хăваласа тытăнчĕç мана! Темтепĕр калаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн эсĕ хулигансемпе? Ятлаçса та усси çук. Чăматана йăтрăм та çул çине тухса тăтăм. Лешсем вара вăшт кăна ялалла пăрăнса кĕрсе куçран çухалчĕç.

Çав вăхăтра манăн мĕн тери çилĕ килнине каласа пама та пĕлместĕп. Тарăхнипе сывлăш та пӳлĕнсе ларчĕ, ал-ура siksе чĕтрет çав... Хăçанччен тăмалла пулать-ши манăн кунта? Пĕр сехет, иккĕ, виççĕ е ирчченех? Шăнса та хытăн унччен...

Çул варринчех чăматан çине лартăм та пирус чĕртсе ятăм. Миçе сехет-ши халь? Улттă, çиччĕ? Хальтерех машин пулсан — туя çитме те пултараттăм та... Ах, ку шоферсене! Ну, хам вĕсен пуçлăхĕ пулсан — тыткалăттăм! Ытла та иртĕнсе кайнă, мурсем! Контролерĕсем те вĕсемпе пĕрлех ашкăнаççĕ-мĕн...

Вăхăт тем чухлĕ иртрĕ — ăна пĕлместĕп, çапах та — ман телее — çул çинче каллех машин курăнчĕ. Питĕ хăвăрт çывхарса килет.

— Ну, мĕн пулать, мĕн килет, тепре ларса пăхам!

Эпĕ ал тăратсанах, ку машин та тăпах чарăнчĕ те, кабинăран шофер пуçĕ курăнчĕ.

— Шупашкара...— теме ĕлкĕртĕм çеç, вăл мана пӳлчĕ:

— Çур литр! Укçине — алла!

Хайхискер, эпĕ паян шоферсене укçа тӳлеме хăнăхса çитнĕ те ним чĕнмесĕрех кăларса патăм. Укçи — харама, çитес çĕре çитесчĕ кăна епле те пулин!

— Лар часрах! — команда пачĕ вара шофер.

Хăпарса лартăм. Самосвал иккен, кузовĕ — тимĕр, пăртан та сивĕ. Пĕр ывăç улăм пуласчĕ хуть! Анчах ун çинчен шухăшлани те усăсăр халь... Тепĕр тесен — аптрасах каймăп-ха, çиткелĕп, тетĕп.

Машин вĕçет кăна. Çĕр çĕмĕрсе, музыкăпа пыратпăр,— тимĕр кузов хăлхана хупласа лартмалла кĕмсĕртетет, кайри кустăрмана явалаçа илнĕ сăнчăр вĕçĕ мăлатукпа сунтал çине çапнă пек чанклаттарса пырать: чанк! чанк! чанк! чанк! — минутра çĕр хут!

Калайкассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, вăрман витĕр тухрăмăр: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! чанк! чанк! Аякран пăхсан, уйăх çутинче пирĕн машин ĕрĕхсе кайнă арçури пекех туйăнмалла çав: икĕ куçĕ вутпа çунаççĕ, хыçалтан шурă тусан йăсăрланса пырать.

Малта çутăсем курăнса кайрĕç. Хыркасси! Шупашкара кунтан пурĕ те 15 километр кăна. Панкрат патне çитетĕпех паян! Ним те шел мар, Шупашкарта такси тытатăп та...

Хыркасси тĕлĕнче, çул хĕрринче, пĕччен пĕр çурт

ларать, ăна пурте пĕлеççĕ. Лайăх çурт тес пулать, ма тесессĕн шăннă хыççăн унта апат çиме те, чей ĕçме те, е мĕнпе те пулин урăххипе те ăшăнма пулать. Сайра машин чарăнса тăмасть ун умĕнче. Çак çурт патне çитсен, пирĕн самосвалăн кустăрмисем те çаврăнма пăрахрĕç, мотор сасси те путланчĕ. Шоферпа тепĕр çын тӳрех тухса чупрĕç.

— Ку юрать-ха, хамăн та ăшăнас пăртак,— терĕм. Хăвăрах чухламалла ĕнтĕ, хĕллехи каç уçă машин çинче ларса пырсан, шăлсем самаях шаккакан пулаççĕ.

Кĕтĕм, чей илтĕм, чей ăшне аллă грамм ятăм. Пит аван пулчĕ, çанçурăм ăшăнсах кайрĕ. Ĕнтĕ кайма та юрать. Анчах шоферсем васкамаççĕ темшĕн. Куртăм: пĕрер стакан сыпрĕç вĕсем, кăштах çырткаларĕç те пулас. Халь пируссем мăкăрлантараççĕ, темĕн калаçаççĕ. Эпĕ те пĕр пирус туртса ятăм. Стена çинчи шăнасем вараласа пĕтернĕ «ходики» йĕпписем саккăрмĕш сехет çине куçнă. Вăхăт чылай!

Шоферсем васкаманнине кура, эпĕ вĕсем ларакан сĕтел патне пырса мĕн май килнĕ таран йăвашшăн:

— Мĕнле, юлташсем, хусканатпăр-и? — терĕм.

— Каятпăр, каятпăр,— терĕ пĕри.— Пельмень пĕçереççĕ-ха пире валли, хатĕррисем пĕтнĕ те, çĕнĕрен тăваççĕ.

— Ара, вăл час пулмасть-çке?

— Аптрамастпăр, пире нумай кĕттермеççĕ!

Ним тума та çук, хамăн малтанхи вырăна кайса лартăм. Пăхатăп — буфетчица ман «хуçасем» умне татах сыпмалли пырса лартрĕ. Хăй те ларчĕ вĕсемпе пĕрле. Чун татах вĕчĕхме пуçларĕ: кусем паян кайма шутламаççĕ пулас! Калле-малле уткалатăп, чĕлĕм туртатăп...

Вăхăт шăвать, тăххăрмĕш сехет çине куçрĕ. Хăçан пиçет-ха кусен пельменĕ? Аха, тинех пырса пачĕç... Çиме тытăнчĕç. Буфетчица татах икĕ стакан илсе пычĕ... Шавлăн калаçма пуçларĕç. Ну, ĕç тухмасть манăн кусемпе!

— Итлĕр-ха, юлташсем, каясчĕ... Эпĕ питĕ шутсăр васкатăп, манăн вăхăтра çитмелле...

Шофер юлташĕ ман çине вăкăр пек пăхрĕ. Куçĕсем хĕп-хĕрлĕ.

— Акă мĕн, гражданин... Пирĕнпе пĕрлех пырас тетĕн пулсан — ан чăрмантар пире ĕçме-çиме, аппетита ан пăс! Эпир хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр!

— Эпĕ те хамăнне пĕлетĕп,— тетĕп ăна хирĕç.— Калатăп-çке, манăн питĕ шутсăр васкамалла!

— Апла пулсан — тух та ут! Саншăн эпир тарçăсем мар кунта. Эс илсе каймастăн вĕт пире, эпир сана хĕрхенсе илсе каятпăр.

— А эп сире укçа тӳленĕ уншăн...

— Вăл ниме те пĕлтермест.

— Епле пĕлтермест? Вăрланă укçа мар-иç манăн, ĕçлесе илнĕ укçа!

— Эпир вăрлатпăр, тесшĕн-и эс? — хăйĕн юлташĕ пекех хаяррăн пăхрĕ ман çине шофер.

— Ун пек каламастăп эпĕ, анчах хама Шупашкара часрах илсе çитерме ыйтатăп!

Шофер çилленсех кайрĕ:

— Ак ĕнтĕ эпĕ çисе тăранмасăрах тухса вĕçтеретĕп пуль саншăн! Епле çивĕч эсĕ, ха! Каяссу килет пулсан — кĕтĕн! Все!

Каллех хам вырăна кайса лартăм. Вĕсем, малтанхи пекех, васкамарĕç. Вунă минут, çирĕм, хĕрĕх... Сехет йĕпписем тăххăртан та иртсе кайрĕç. Пĕтрĕ пуç!

Тата тепĕр çур сехетрен тин тăранса çитрĕç хайхискерсем. Тăн тухатчĕ кĕте-кĕте!

— Ну, халь кайма та юрать,— терĕ шофер юлташĕ çыхланма пуçланă чĕлхепе, буфетчицăна алă парса.— Тепре куриччен, Марфуша!

Машин патне çитеспе шофер мана:

— Ну, васкакан çын, çирĕпрех ларса пыр, атту темрен тем пулĕ,— терĕ.— Самолет пек илсе каятăп!

Эпĕ ăна хирĕç ним каламасăрах кузов çине хăпарса лартăм. Машин тапранса кайрĕ. Каллех, паçăрхи пекех: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! Пĕр минутранах Хыркасси курăнми пулчĕ, вăрмана кĕрсе каймăр. Ну, пыратпăр çав, ну вĕçетпĕр! Унтан сасартăк... Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те ăнланса юлаймарăм. Çил хăвăртлăхĕпе ыткăнса пынă самосвал тăп! чарăнса тăчĕ те, çав самантрах мана хыçран такам тĕксе çĕкленĕ пек туйăнчĕ... Чăнах та, таçта çӳлелле хăпарса кайрăм, унтан вăшт кăна аялалла шуса антăм та хытă çул çине нач! турăм. Кĕç ман пуç çине темле йывăр япала ӳкрĕ. Ку — хамăн чăматан пулнă иккен. Эп тăна кĕрсе сиксе тăриччен машин вырăнтан хускалса та кайнă, унăн хыçалти хĕрлĕ çутине çеç курса юлтăм...

Мĕн тăвассу пур? Чăматана çĕклерĕм те у-утрăм

вара... Çĕрĕпе утрăм. Шупашкара çур çĕр иртсен виç сехетрен тин çитрĕм. Пĕр вăй юлмарĕ, хырăм выçса татăлса ӳкет... Автостанцие пытăм — пуш-пушах, пĕр машин тĕсĕ те çук. Çиччĕре тин пулаççĕ, терĕ дежурнăй. Ла-артăм вара сĕнксе! Хама та вăрçатăп (мĕн мурĕ тума тухрăм килтен, тетĕп), хама асаплантарса пĕтернĕ шоферсене те ылханатăп. Анчах мĕн усси пултăр унран?

Тарăхни-мĕнĕпе ирхине Канашалла каякан автобуса та кĕтсе тăмарăм, чи малтан пырса тăнă таксие тытрăм та Панкратсен ялне вĕçтертĕм...

Панкрат эпĕ пынăшăн мĕн тери хĕпĕртенине, мана епле йышăнни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Çав тери лайăх йышăнчĕç: часрах кĕрекене кĕртсе лартрĕç, хăналама тытăнчĕç... Кăшт ăшăнсан, нервăсем пăртаках лăплансан вара хамăн парне çинчен аса илтĕм.

— Кӳр-ха, Панкрат тусăм, ман чăматана, манăн унта çамрăксем валли темскер пурччĕ,— терĕм.

Чăматана вăл сĕтел çинех пырса хучĕ. Эпĕ ăна пурин умĕнчех васкамасăр, меллĕн уçрăм та... чĕре çавăнтах çурăлса каятчĕ манăн. Хаклă та хитре сервиз вырăнне чăматанра ванчăк купи çеç выртать иккен! Леш шуйттан самосвалĕ çинчен вăркăнса ансан çĕмĕрĕлнĕ ĕнтĕ вăл... А эпĕ ăна вунпилĕк километр алă вĕççĕн çĕклесе килтĕм тата!

Панкрат та, унăн арăмĕ те, ывăлĕпе кинĕ те, вĕсен хăнисем те ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхса тăчĕç. Ара, кам-ха парне вырăнне чăматан тулли кантăк ванчăкĕ илсе пырать?!.

Пĕр-икĕ минут хушши эпĕ тăрук чĕлхесĕр пулса ларнă çын пек тăтăм. Унтан аран-аран:

— Каçарăр, эп айăплă мар... Автотранспорт айăплă... Самосвал...— терĕм те çул çинчи тертсем çинчен пĕтĕмпех каласа патăм. Пурте чунтанах хĕрхенчĕç мана.

...Çапла çав, техника тени этем ывăль-хĕрĕшĕн питĕ аван япала вăл, анчах лайăх та шанчăклă алла лексен кăна çав!

1954



# Аптрашкин аптрани

Иртнĕ çуркунне, пĕтĕм çутçанталăк качча каякан хĕр пек капăр тум тăхăннă вăхăтра, пирĕн районри халăх судĕнче çав тери тĕлĕнмелле, пĕтĕм вар-хырăм хытса лариччен кулмалли «процесс» пулса иртрĕ. Икĕ кун тăсăлчĕ вăл; суд залне халăх савăл çапнă пек тулчĕ, шала кĕрейменнисем, чӳречесем патне чыхăнса, пĕр кантăк хăварми çĕмĕрсе пĕтерчĕç.

Кун пек камитле историсем сайра пулаççĕ, çавăнпа та манăн сире ун çинчен каласа парасах пуль. Итлеме кăмăлăр пур-и? Пур. Апла пулсан, хăлхăрсене тăратăр та итлĕр, эппин, йĕркипе.

Акă мĕнле япала...

Хĕрĕх çулхи вăйпитти арçын сакăрвунă çулхи карчăкпа сутлашрĕ. Çав карчăк унăн урине хуçса янă иккен. Рычакпа та çапман вăл ăна, ятарласа такăнтарса та ӳкермен, кĕпер çинчен те чикелентерсе яман, пĕртен-пĕрре çăвар уçса виç сăмах каланă та — этемĕн сылтăм ури шатăрт! хуçăлса кайнă. Çавăншăн айăпла-

са, арçын çак карчăкран мĕн виличченех алимент илсе тăмалла приговор йышăнма ыйтнă.

— Эпĕ халь ĕмĕрлĕх инвалид ĕнтĕ, полноценнăй çын мар,— тенĕччĕ унăн заявленинче,— ку таранччен мана урасем тăрантаратчĕç, эп вĕсемпе усă курса таçта та çитеттĕм, тем те кураттăм, тем те ӳкереттĕм, анчах халь эпĕ уксах-чăлах пулса тăтăм, чупма мар—утасса та, туя çине тайăлса, аран утатăп, çавăнпа та малашне мана хама та, ман çемьене те çав эсремет карчăкĕ тăрантартăр, енчен те вăл ман урана хуçса ячĕ пулсассăн....

Питĕ хурлăхлă та витĕмлĕ çырнăччĕ çав!

Анчах ĕçĕ çинчен каласа париччен малтан манăн сире çак заявление çыраканнипе, юристсен чĕлхипе каласан — истецпа, карчăкран алимент шыраканнипе, паллаштарас пулать пуль. Ытла та хăйне майлă, интереслĕ те оригиналлă çын вăл...

Унăн анкетăри сведенийĕсем çакăн пек: хушамачĕ — Аптрашкин, ячĕ — Аполлон; арлă-арăмлă, профсоюзра тăмасть (член укçи тӳлеменшĕн тухса ӳкнĕ); национальность енĕпе вара тăруках уйăрса илме çук. Ăна вăл хăй те пĕлсех çитерейместь иккен — судра та каларĕ: хамăн атте кам пулни çинчен аннерен эпĕ çĕр хут та ыйтнă, такки каламарĕ вĕт, шельмă, тĕрĕссине пĕлтермесĕрех леш тĕнчене ăсанчĕ, тăпри çăмăл пултăрах, терĕ.

Çавăнпа та Аполлон Аптрашкина хăшĕсем чăваш, хăшĕсем тутар теççĕ, палласах кайманнисенчен турккă текенĕсем те, японец тесе шутлакансем те пур. Вăл камне сăнран пĕлме питĕ йывăр — сăнĕ-пичĕ пĕрмай улшăнать унăн: ирхине — апла, каçхине—капла, укçа илнĕ кун — пĕр тĕслĕ, укçа çук чух — тепĕр майлă, пыр та ăнлан эс ăна!

Профессийĕ — фотограф. Чылайранпа çак ĕçпе пурăнать ĕнтĕ. Анчах та ательере-мĕнре штатра тăраканскер мар, хăй тĕллĕн çапса çӳрекенскер вăл. Укçа çапаканскер. Ун пеккисене халăх хушшинче «пушкарь» теççĕ, анчах Аптрашкин хăйне хăй «ирĕклĕ художник», «творчествăлла единица» тесе хисеплет.

— Манăн ятăм — Аполлон, анчах Аполлон кам пулнине пĕлетĕр-и эсир? — тет вăл, кăштах хĕрсессĕн.— Пĕлместĕр çав пĕри те, мĕншĕн тесен эсир искусствăран çĕр çухрăм аякра тăратăр! Аполлон тени, ман тезка, вăл авалхи Грецире хĕвелпе çутă турри,

искусствăсене хӳтĕлекен турă пулнă! Мана тĕне кĕртекен пачăшкă эп искусство çынни пуласса сиснĕ пекех панă çак ята. Во!

— Ăçтан пĕлетĕн-ха эсĕ кун çинчен, кам аларĕ сана? — тесе ыйтсан, Аптрашкин ним тытăнса тăмасăрах ответ парать:

— Виçĕмçул татмалли календарьте вуларăм! Календарьте суймаççĕ унта, ахаль кĕнекесенчи пек мар!

Вуласса вăл, чăн та, çав татмалли календарьсĕр пуçне урăх нимĕн те вуламасть иккен. Вулама та шутламасть.

Хулара Аптрашкин питĕ паллă çын. Ăна пурте — урамра пушмак тасатса ларакансенчен пуçласа милици начальникĕ таранах пĕлеççĕ. Пурне те вăл хăйĕн тусĕсем тесе шутлать, тĕл пулмалла пулсан, аякранах аллине тăсса пырать:

— А-а, Васька, здоровă, здоровă! Лайăх пурăнатăн-и? Эп те аптрамастăп-ха. Часах «Москвич» илетĕп ĕнтĕ, йăлăхрăм çуран çӳресе. Çитмелли вырăнĕсем нумай, анчах урисем манăн иккĕ кăна. Тата асфальт çинче пушмак питĕ çĕтĕлет... Итле-ха, тăванăм, эп паян васкани-мĕнĕпе укçа чиксе тухма маннă, санăн çумра ытлашши пĕр тенкĕ çук-и? Ну, аллă пус пулсан та çитет, эппин. Уншăн эпĕ пĕрре-пĕрре, иртсе çӳренĕ чух, санăн ачусене ӳкерсе тухатăп... Ну, сыв пул-ха, эппин, ман васкас пулать!

Хăйне панă аллă пуса тĕплĕн шутласа кĕсйине шаларах чикет те, хулпуççи урлă çакнă аппаратне тӳрлетсе илсе, аяккалла пăрăнса каять вара...

Çитмелли вырăнсем унăн чăнах та нумай.

Таçта та пулать вăл — Атăл леш енче хăйăр çинче хĕртĕнсе выртакансене те ӳкерет (паллах, пуринчен ытла хĕрарăмсене), паркра мороженăй ĕмсе ларакансене те чаклаттарать, хĕрпе каччă арлă-арăмлă пулса ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнассине саккунпа çирĕплетнĕ çĕрте — ЗАГСра та пулать, масар çине, çын пытарнă çĕре те çитсе темиçе ӳкерчĕк тăвать кун каçа. Ним те тиркесе тăмасть — «объект» кăна пултăр уншăн. Халь çеç пĕр-пĕринпе ăмăртса чупакан комсомолкăсене финиш патĕнче «шултра планпа» ӳкерсе илет те чиркĕве чупать — унта паянхи кĕлле çĕнĕ пуп иртterет иккен, ăна ӳкересси çинчен вăл ĕнерех чиркӳ старостипе калаçса татăлнă...

Çавăнпа та ĕнтĕ ăна паллакансем ун çинчен:

— Аптрашкин аптрамасть-ха вăл, ай-ай пултарать! — теççĕ.

Укçине малтан ыйтмасть Аптрашкин, ўкерет те — санăн адресна çырса илет кăна, анчах пĕр ик-виç кунтан ўкерчĕкĕсене туса киле пырсан вара — унран хăпаймастăн, укçу çук пулсан та, çири кĕпўне хывса пама та хатĕр пулатăн. Йытăпа вăскăртсан та кăларса яраймастăн эс ăна укçасăр!

— Эп çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ, материал илсе расхут тунă, укçа çуккипе паян ачасем валли сĕт те илеймерĕм, эсир пур — мăшкăллатăр манран, мĕскĕнрен... Çылăх сире куншăн! Нихçан каçас çук çылăх!

Укçа тупса памасан, вăл алăк патĕнчи сак е пукан çине ларать те талăкĕпех ним хускалмасăр, ĕçмесĕр-çимесĕр ларма пултарать.

— Эп васкамастăп, эп кĕтетĕп... Укçасăр мана арăм çав-çавах киле кĕртмест,— тет вăл ним çилленмен пекех.

Ну, хуçи вара (Аптрашкина темиçе кун каялла сăн ўкерттерни ĕнтĕ), çак «ирĕклĕ художник» пусмăрĕнчен епле те пулин ирĕке тухас тесе, кўршĕсенчен те пулин укça тупса парса ярать. Тухса кайтăр часрах, куçпуç ан куртăр çак çыпçанкăна!

Анчах пуринчен те ытларах Аполлон Аптрашкин туйсенче, юбилейсенче, менелниксенче, ача ят хунă çĕрте пулма юратать. Кун пирки унăн хăйне майлă «философи» пур.

— Телейлĕ çын яланах ыр кăмăллă пулать, укçатенкĕ те, ним те хĕрхенсе тăмасть,— тет вăл.— Туйра, юбилейра е ача ят хунă çĕрте хуть те çĕр йышши ўкерчĕк тусан та сая каймасть, вĕсене пурпĕрех илеççĕ, мĕншĕн тесен вăл — событи вĕт-ха! Çын хăй пурнăçĕнче çирĕм, вăтăр е аллă çул пĕрререн пĕрре тултарать. Ачана та икĕ хут ят хумаççĕ. Саккун тăрăх авланасса та пĕрре кăна авланмалла. Çавăнпа та кун пек çĕрте яланах «точнăй прицел» пулать манăн: пĕр ывçă ўкерчĕк — пĕр ывçă укçа. Баш на баш тухать, темелле. Куна эпĕ хамăн нумай çулсем хушши пухăнса пынă опыта шута илсе калатăп! — мухтанса илет вăл юлашкинчен, мулкачăнни пек малалла тухса тăракан шăлĕсене йĕрсе.

Ун пек çĕре хăçан çитмеллине те лайăх пĕлет вăл. Ытла малтанах, хăнасем пухăннă вăхăтрах, кĕрсе каймасть, вĕсем сĕтел хушшине вырнаçса телейлĕ çамрăк

мăшăршăн, юбиляршăн е тин çеç ятлă-хушаматлă пулса тăнă çара пакка гражданинпа ăна çут тĕнчене туса кăларма пĕлнĕ ашшĕ-амăшĕшĕн икшер-виçшер черкке ĕçсе пăлханса кайнă хурсем пек какăлтатма тытăнсан тин пырса кĕрет. Никам та сисмест вăл пынине, никам та илтмест — çенĕкрен йăкăш кĕрсе тăрать те хăнасем шавланă çĕрелле мар, кухня еннелле çул тытать. Кухньăра кун пек чух яланах ик-виç карчăк кăштăрташсçĕ вĕт-ха — ăна-кăна ăшалаççĕ, сăра-эрех кĕленчисене уçаççĕ, пушшисем вырăнне туллисене йăтса каяççĕ.

— Мана чĕннĕччĕ те, каярах юлма тӳр килчĕ-ха, ерçеймерĕм,— тыттарать Аптрашкин айван карчăксене, çимелли-ĕçмеллисем çине вăрра вĕреннĕ ват кушак аçи услам çу çине пăхнă пек пăхса.—Kaçарччăрах ĕнтĕ... Эп хамăн ĕçе тума çавах ĕлкĕретĕп-ха...

— Юрать, ара, юрать, халь килни те лайăх!—теççĕ те карчăксем, ăна çавăнтах хăналама тытăнаççĕ.— Çакна ĕçсе пар-ха, тăванăм. Çакна çыртса пăх-ха... Ак тата ман кукăле тутанса кур...

— Эп выççи выçă мар та-ха, ани çинче чух кăштах тутанса пăхас, эппин, ват çынсен кăмăлне хуçас мар,— тет те кăна хирĕç Аптрашкин, черкке хыççăн черкке ӳпĕнтерет, умлăн хыçлăн çич-сакăр касăк кукăль хыпса ярать. Вăл паян ятарласах нимĕн те çименни пит те паллă пулать, анчах карчăксем шарламаççĕ — çакăн пек савăнăçлă кун çынна вăл ытлашши нумай чăмланăшăн епле тиркĕн-ха?

Унтан, кухньăра çакнашкал «заправка» тусан (вăл хăй çапла калать), Аптрашкин хăнасем ларакан пӳлĕм алăкĕнчен шăппăн кĕрсе пукан çине хăпарса тăрать те ӳкернĕ чух çутăлтаракан лампине ялт! ялт! тутарать. Паллах, кашни çутăлмассерен ӳкерчĕк пулать унăн...

Ăна çав самантрах асăрхаççĕ, пынăшăн тав тăваççĕ, малалла иртме чĕнеççĕ, пĕри черкке тыттарать, тепри сăра тултарса парать, виççĕмĕшĕ автан тукмакки сĕнет...

Кайрĕ вара пурнăç Аптрашкинăн! Чи хисеплĕ хăнасем хушшине кĕрсе ларсан ĕçет вăл, çиет, пуринпе те пĕр тан пулса, аллисемпе хăлаçлансах калаçма тытăнать. Тем те курнă иккен вăл, таçта та пулнă, тем те пĕлет. Çынсем хуть те мĕн çинчен сăмах пуçлаччăр — Аптрашкин пур чухне те хутшăнать, хăйĕн хĕсĕк çам-

каллă пуçне мĕн пырса кĕнĕ — çавна лăпăртатать, тавлашма та пăхать.

Хăнасем килĕсене саланнă вăхăтра Аптрашкин е ăçта та пулин кăмака хыçĕнче, е кухньăра сак айĕнче, çулла пулсан, çенĕкри урайĕнче çĕтĕк мотоцикл пек лакăртатса çывăрнине курма пулать. Пĕррехинче, чăн та, кил хуçи арăмĕн çемçе вырăнĕ çине те кĕрсе выртнă, тет, вăл, анчах çакна упăшки ăнсăртран асăрханă хыççăн унăн хапха умĕнчи кĕсел пек пылчăк çине куçса выртма тӳр килнĕ, тет. Çавăнтан вара вăл ют çын мамăк тӳшекĕсене ытла юратсах каймасть, теççĕ...

Тен, Аптрашкин çинчен çакăн пек тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панăшăн хăшĕсем мана тиркеме те пăхĕç, анчах ним тума та çук, юлташсем. Автор шучĕпе, Аптрашкин мĕнле çын иккенне пĕлни вăл сакăрвунă çулхи карчăка суда мĕншĕн сĕтĕрнине лайăхрах ăнланса хак пама пулăшать. Çавăнпа та ытлашши васкар мар-ха, эппин, сăмах-юмах хăй çеммипе пулса пытăр.

Çапла, иртнĕ çуркунне те пирĕн Аполлон Аптрашкин, «ирĕклĕ художник», тĕрĕсрех каласан — хулари кашни йытă паллакан «пушкарь», «фотограф-халтурщик», пĕр çĕрте ача ят хунă ятпа хăнасем пухăнассине пĕлнĕ те каç пулсассăнах çавăнта йăпшăнса пырса кĕнĕ.

— Кунта калым вăйлă пулать-ха,—тенĕ вăл, хăйĕн виçĕ аппаратне те авăрласа.— Ачин ашшĕ — хулари паллă инженер-конструктор, амăшĕ — тава тивĕçлĕ артистка. Укçасăр çынсем мар. Вĕсен хăнисем те çĕтĕк кĕсъеллĕ çынсемех пулмаççĕ ĕнтĕ, сăнĕсене пленка çине меллĕрех лектерсен, ӳкерчĕкне кашни илме тивĕç... Укçа ç-çапатăп кунта паян, йоккăр-маккăр!

Çапла шухăшланă май шереметĕн сĕлеки те юхса аннă...

Аптрашкин йăнăшман. Инженерпа артистка нумай çулсем хушши тунсăхласа кĕтсе пурăннă ывăлшăн (унччен вĕсен умлăн-хыçлăн пилĕк хĕр пулнă) ним те хĕрхенмен. Икĕ пысăк пӳлĕме лартса тухнă сĕтелсем çинче ĕçмелли-çимеллисенчен кайăк сĕчĕпе слон ашĕ çеç пулман, ыттисем пурте пулнă. Хăнисем тăхăрвуннăн пухăннă. Паллă çынсен тус-юлташсем, ыр сунакансем нумай çав! Вĕсем тин çеç çуралнă гражданин валли илсе пынă парнесене кăларса пама тытăнсан, тĕнчере чылай куркаланă Аптрашкин та куçпуçне чарса пăрахнă. Мĕн кăна илсе пыман пуль çемçе минтер

çинче ним пĕлмесĕр-туймасăр çывăракан Витя валли! Мĕн кăна шухăшласа кăларман пулĕ, ахаль те телейлĕ ашшĕпе амăшне тата ытларах савăнтарса хавхалантарас тесе, тур çырлахтăрах!..

Сюжетран пăртакках пăрăнатăп пулсан та, манăн кунта кăшт кăна чарăнса тăма тиветех.

Çав хăнасем илсе пынă парнесем хушшинче ĕмкĕчсем (соскăсем, эппин) — 52, «упаленмелли» текен костюмсем — 17, пĕчĕк çитарсем—7, утиялсемпе çемçе простыньсем—12, чăпăл кĕртмелли валашкасем—6, пĕчĕк ача ларса какка тумалли пукансем — 9, кустăрмаллă лашасем — 18, велосипедсем — 11, конькисемпе йĕлтĕрсем — 17 мăшăр, тутапа каламалли купăссем — 19, хуткупăс — 7, балалайка — 3, шăхличсем — 33, параппан — 5, шăкăрчаксем — 81 тата темĕн те пĕр пулнă, пурне каласа та пĕтерес çук...

— Ара, кусем ача-пăча универмагĕнче ним те хăварман пуль? — тĕлĕнсе шак хытнă Аптрашкин. Вăйлă-ă! Кашни ача пуçне кун чухлĕ парне парасса пĕлес пулсан, эпĕ хам арăма çулсерен йĕкĕреш çураттармалла! Парнисене сутсах çулталăк пурăнма пулать-иç?

Ак ĕнтĕ, хăнасем хăйсене тивĕçлĕ вырăнсене йышăнса ларнă. Аптрашкин та, паллах, вырăнсăр юлман, вăл хаклăрах хăнасем ларнă мăн пӳлĕмри пĕр сĕтел пуçне, темле икĕ карчăк хушшине хĕсĕннĕ. Сĕтелĕн тепĕр пуçĕнче, ача ашшĕпе амăшĕ ларнă çĕрте, темле шакла пуçлă, сăмси çине аякран велосипед пек курăнакан куçлăх утлантарнă çын аллине черкке тытса тăнă та ыттисене те черккесем çĕклеме хушнă. Халĕ вара шăп Аптрашкинăн ĕçе тытăнмалли самант çитнĕ...

— Стоп! Айн момент! Тăхтăр-ха, тӳрех ĕçсе яма ан васкăр! — тесе кăшкăрнă та вăл никам кĕтмен çĕртен, тĕпĕр-тепĕр пукан çине сиксе тăрса ӳкерме тытăннă. Ялт! — чак! Ялт! — чак! Малтан ача ашшĕпе амăшне, унтан хăнасене — пĕр енчисене, тепĕр енчисене...

— Çитĕ, Аптрашкин, çитĕ халлĕхе!

— Çынсене малтанхи черккесене ĕçме пар ĕнтĕ!..

— Кайран ӳкерме хăвар...— кăмăлсăртарах сасăсем илтĕннĕ унтан та кунтан.

— Тархасшăн, халь слоботнă! — тенĕ ку вĕсене хирĕç, пĕр вунă ӳкерчĕк тунă хыççăн.

Хăнасем ĕçнĕ те çиме тытăннă. Аптрашкин та ха-

ла́хран юлман: хӑй умӗнчи тарелка ҫинчи шаритленӗ кӑвакала касса чӑрманмасӑрах, пӗтӗмӗшпех, ик аллипе ярса тытнӑ та — тапратнӑ пӗтӗрме! Ҫинӗ-ҫинӗ те — хӑех ярса ӗҫнӗ, унтан каллех тӗшӗрнӗ.

Юнашар ларакан карчӑксем ун ҫине калама ҫук тӗлӗнсе пӑхнӑ. Мӗнле ҫын вара ку, пӗр эрне выҫӑ ҫӳренӗ пек хыпаканскер? Тӑраннине те пӗлмест пуль?

Ларсан-ларсан, пӗр карчӑкӗ, шап-шур ҫӳҫлӗ, тӗреклӗ, сарлака хулпуҫҫиллӗ, арҫын сӑнлӑрахскер, Аптрашкина тӗртсе илмесӗр тӳсеймен.

— Пӑхатӑп та, ывӑлӑм, санӑн аппетит тени ытла начарах мар пулас,— тенӗ вӑл.

— Аппетит енчен аптрамастпӑр,—чӑмлама чарӑнмасӑрах кулса илнӗ Аптрашкин.

— Шӑлусем те ҫирӗп курӑнать-ха...

— Вӗсем те аптрамаҫҫӗ. На спор кайсан, кантӑк та чӑмлама пултаратӑп.

— Маттур, маттур... Ӗҫме те пултаратӑн пулас?

— Ун пирки те аптрамастӑп. Лайӑх саккускӑпа пӗр литр ним мар вырнаҫать.

— Хырӑму шӑтасран хӑрамастӑн-и?

— Ҫук. Пыршӑсем манӑн чӗнрен тунӑ пекех ҫирӗп. Вопше эпӗ ҫӗр ҫинче нимрен те хӑрамастӑп!

— Турӑран та, шуйттанран та, аҫа ҫапасран та хӑрамастӑн, эппин? — ыйтнӑ тепӗр карчӑкӗ, чикан майри майлӑрахскер.

— Нимрен те! — тенӗ Аптрашкин паттӑррӑн, кӑвакал шӑммисене шӑлса пӗр ҫӗрелле купаланӑ май.— Хуть те ман ума вуникӗ пуҫлӑ вӗреҫӗлен пырса тухтӑр — ҫавах хӑрамастӑп. Мӗншӗн тесен эпӗ туррине те, шуйттанне те, киреметне те, арҫурине те ӗненместӗп. Ҫук вӗсем пӗри те! Вӗсене пурне те ухмахсем шухӑшласа кӑларнӑ...

— Аҫтан пӗлетӗн-ха эс вӗсем ҫуккине? Тен, пур?

— Ҫ-ҫук! Ун ҫинчен эпӗ татмалли календарьте темиҫе хут та вуланӑ... Чӑн та, умлӑ-хыҫлӑ ик-виҫӗ кун хӑнара пулнӑ хыҫҫӑн шуйттансем куҫа курӑнкалаҫҫӗ, анчах вӗсене хӑвӑн умӑнтан хӑваласа яма пӗр чӗрӗк анчах ӗҫмелле. Куна эпӗ хамӑн опыта шута илсе калатӑп сире!

Ик карчӑкпа Аптрашкин хушшинчи тавлашу ҫакӑнпа татӑлнӑ, мӗншӗн тесен Аптрашкина тепӗр пӳлӗме ӳкерчӗксем тума чӗннӗ. Вуншар ҫынсене вуншар тӗслӗн ӳкернӗ вӑл унта — ушкӑнпа та, уйрӑммӑн та.

— Аптрашкин, кунта кил!
— Пире те ӳкер, Аптралкин!..
— Аполлошка, пире, Натюшпа иксӗмӗре...
— Пире виҫҫӗне!

Хӑнасем ташлама пуҫласан та ӳкерме чарӑнман вӑл. Урисем ҫирӗпрех чухне пукансем ҫине, диван ҫине, пӗр-икӗ хутчен сӗтел ҫине те хӑпарса кайса чаклаттарнӑ, унтан, урисем тытайми пулсан, выртса ӳкерме тапратнӑ. Юлашкинчен вара ҫавӑн пек ӳкерсе выртнӑ ҫӗртех ҫывӑрса кайнӑ...

Киле тухса кайнӑ чух леш карчӑксем, паҫӑр Аптрашкинран тӑрӑхласа ларнисем, ун тӗлӗнче чарӑнса тӑрсах калаҫса илнӗ:

— Ак хайхи, леш нимрен хӑраман паттӑр пиҫсе ҫитнӗ, ыр курса выртать...— тенӗ чикан майри пекки.

— Пӗрре-пӗрре вӑл еплерех паттӑр пулнине тӗрӗслесе пӑхас пулать-ха,— тенӗ шур ҫӳҫли.— Питӗ лайӑх камит тума пулать...

— Мӗнле камит?

— Ун ҫинчен эп сана кайран калӑп...

* * *

Ӗмӗрне пулман япала — ҫак инженерпа артистка ача ячӗ хунӑ ҫӗрте хӑналаннӑ хыҫҫӑн Аптрашкин виҫӗ талӑк вар-хырӑмпа асапланса пурӑннӑ. Шалт аптранӑ вӗт, килтен те тухайман, пӗр ӳкерчӗк те тӑвайман, пӗр пус калым та илеймен. Арӑмӗ, Ехруҫҫи, ӑна тем те ӗҫтерсе пӑхнӑ — тӑварланӑ-пӑрӑҫланӑ эрех те, йӳҫӗтнӗ хӑяр шывӗ те, армути шывӗ те; ҫиме те сухари кӑна ҫитернӗ, анчах упӑшкин вар-хырӑмӗ ҫав-ҫавах тӳрленмен. Йалт кӑвакарса, утайми пулса ҫитнӗ мӑнтарӑн...

— Сана унта пӗр-пӗр ҫиме юраман усал апат ҫитерчӗҫ пуль, Аполлошка, юри мӑшкӑлларӗҫ санран? — хыпӑнса ыйтнӑ арӑмӗ.— Пӗлетӗп вӗт, кӑшт ӗҫсен, эсӗ хӑвӑн умна шуйттан пуҫӗ хурса парсан та ҫисе яма пултаратӑн! Тен, хуҫисем сисиччен таҫта кухньӑна кайса чӗрӗрех аш ҫисе тултартӑн?

— Ан лӑпӑртат кирлӗ мара,— тенӗ Аптрашкин, ҫара хырӑмӗ ҫине хунӑ вӗри грелкӑна унталла-кунталла шутаркаласа.— Нимӗнле чӗрӗ аш та ҫимен эпӗ. Шаритленӗ кӑвакал ҫеҫ ҫинӗ. Питӗ тутлӑччӗ, ҫӑвӗ юхса тӑратчӗ...

— Нумай ҫирӗн-и вара эс ӑна?

— Çиес килнĕ таран çирĕм çав.
— Кăвакалĕ пысăкчĕ-и?
— Ытла пысăках та мар. Пулсан пулĕ пĕр икĕ кило çура...
— Вара çавна пĕтĕмпех хыпса ятăн пулать?
— Кам валли хăварас-ха тата ман ăна? Паллах, çисе ятăм.
— Эй, тĕнче-е! — пĕççисене шарт! çапса илнĕ арăмĕ.— Ун чухлĕ хыпсан, кам чирлемĕ! Слон хырăмĕ мар вĕт-ха санăн, пĕр пĕчĕк чăваш хырăмĕ кăна! Ăçта кĕнĕ ун чухлĕ аш?! Тьху!.. Пĕрре-пĕрре çавăн пек виçесĕр çисе тултарсах вилсе каятăн пуль те-ха...
— Нипоччом та вилместĕп, санран ытларах пурăнатăп, эс вилсен, тепре авланатăп-ха,— арăмне хирĕç витлесе илнĕ Аптрашкин. Лешĕ вара, тьху, тьху, чĕлхӳ çине ӳпне çăпан тухтăрах! тесе, алăка шатлаттарса хупса хăварнă...
Тăваттăмĕш кунĕнче тин кăштах хаманланнă çак «ирĕклĕ художник». Ирхине тăрса çăра вĕри чей ĕçнĕ те, аппарачĕсене урлă-пирлĕ çакса тултарса, хулана «объектсем» шырама кайма хатĕрленнĕ. (Хăй вăл хула Советĕнчи пуçлăхсем сисиччен ӳссе ларнă хăлтăр-халтăр урамра пурăннă.)
— Асту, каллех пĕр-пĕр çуллă хур-кăвакал е кăркка тĕлне пырса ан тăрăн! Вилетĕн тепре ун пек çисен! — çилĕпе асăрхаттарнă арăмĕ.
— Çук, çук, Ехруççи, халь эпĕ ăслă ĕнтĕ! Малашне пĕр килоран ытла çиместĕп... Норма!..— куçне хĕссе илнĕ Аптрашкин.
Шăп çав вăхăтра алăк уçăлнă та, пӳрте чикан майри пекрех хура карчăк кĕрсе тăнă.
— Ырă кун пултăр сире,— тенĕ те вăл, кĕтеселле пăхса сăхсăханçи тунă.— Йăнăшмарăм пуль тетĕп те-ха... Мана Аптраман фотограф, сăн ӳкерекен кирлĕччĕ...
— Эпĕ вăл,—тенĕ Аптрашкин, пуçне мăнкăмăллăн çĕклесе.
— Э, чăнах та эсĕ-çке! Урăхла тумланнă та, тăрук палласа илеймерĕм. Каçарăр та ĕнтĕ ват çынна, куçсем хĕр чухнехи пек мар, арçынсене витĕрех кураймаççĕ... Иртнĕ шăматкун эпир хăнара та пĕрлех пулсаттăмăр, астăватăн-и? Юнашарах лартăмăр. Эс ун чух кăвакал ашне питĕ юратса çирĕн...
Кăвакал çинчен асăнсан, Аптрашкинăн хырăмĕнче

темскер йăш-яш тиркелесе илнĕ, анчах ăна вăл палăртман, пĕчченех тӳссе ирттерсе янă.

— Астăватăп, ара, епле астăвас мар ăна, пит лайăх хăналантăмăр! Санпа пĕрле тата тепĕр карчăк пурччĕ, шап-шур çӳçлĕскер...

— Э-эх, ывăлăм, пурччĕ çав, пурччĕ! — тенĕ те хура карчăк, куçĕсене тутри вĕçĕпе шăла-шăла илнĕ.

— Мĕн пулчĕ тата? Çав териех васкаса вилсе каймарĕ пулĕ те? Чип-чиперехчĕ-çке ун чух?

— Вилсе кайрĕ çав, мăнтарăн! Ара, ватăлса çитнĕ çынна нумай кирлĕ-им? Шăматкун, ав, эс калашле, чип-чиперччĕ, ытларикун пĕр наччасра пуçтарăнса выртрĕ... Шутсăр хĕрхенмелле! Çынни ытла та ытармалла марччĕ, ылтăн çынччĕ!

— Вăт, ку чăнах та тĕлĕнмелле хыпар вара! — пуçне сулкаланă та Аптрашкин, тӳрех çак карчăк хăй патне мĕншĕн килнине тавçăрса илнĕ: — Эсир халь асăнмалăх унăн сăнне ӳкерсе юласшăн пулĕ-ха?

— Çапла çав ара, çапла, çавăн пирки килтĕм,— куçĕсене татах шăлкаланă карчăк.— Ательене каяс темерĕм, унтисем япăх ӳкереççĕ те час туса памаççĕ, эс хăвăртрах та туса парăн, терĕм. Чăрмавĕшĕн тӳлĕпĕр эпир, манитне хĕрхенсех тăмăпăр. Ĕçĕ пултăр... Килĕшетĕн-и пыма?

Аптрашкин арăмĕ çине хулпуççи урлă пăхса илнĕ: кур, епле паллă çын эпĕ, мана ательерисенчен те мала хураççĕ, таçта çити шыраса килнĕ!

— Темиçе çĕре те чĕннĕччĕ те мана паян,— хăйĕн хакне хăпартма суйнă Аптрашкин,— ним тума та çук, малтан сирĕн патах кайăпăр, эппин. Хăнара та юнашар ларнă çынна хисеп тăвас юлашки хут...

— Ах, тавтапуçах сана, ырă çыннăм! Атя-ха, эппин, часрах, çынсем пырса туличчен ӳкерсе илер. Мускавран ывăлĕ вĕçсе килессе кĕтетпĕр те, никама те кĕртместпĕр-ха ун патне, пĕччененех выртать, ӳкерме кансĕрлекен çук...

Кĕçех вĕсем урама тухса утнă. Аппаратсем çакса тултарнă Аптрашкин хулăн тĕплĕ мăн пушмакĕсемпе лаплаттарса малта пынă, карчăк ун хыççăн йăкăртатнă. Аптрашкинăн кăмăлĕ тулнă: вилнĕ çынсенчен те усси пур иккен, пăх-ха, ир-ирех калым килет!..

Çырма урлă каçса тикĕс çул çине тухсан, калаçма юратакан карчăк каллех сăмах пуçласа янă:

— Итле-ха, ывăлăм, эсĕ пырасса пыратăн та-ха,

анчах вилнӗ ҫынсене ӳкерме хӑрамастӑн-и? — ыйтнӑ вӑл.

— А мӗн хӑрамалли пур вӗсенчен? — тӗлӗнсе каялла ҫаврӑнса пӑхнӑ Аптрашкин.

— Ара, пачӑшкӑсем каланӑ тӑрӑх, вилнисен чунӗ ҫынна ҫӗре чикиччен ун таврашӗнчех вӗҫсе ҫӳрет иккен те... Сасартӑк, эс ӳкернӗ вӑхӑтра, ҫав чун ҫын ӑшне каялла кӗрсе ӑна чӗртсе тӑратрӗ-тӗк?

— Ерунда. Ҫыннӑн нимӗнле чун та ҫук. Так, этемӗн чӗри тапма чарӑнать те, вӑл каска пек пулса выртать вара. Ни шухӑшламасть вӑл, ни хырӑмӗ выҫмасть унӑн.

— Ма-ха, эппин, хӑш-хӑш вилнӗ ҫынсем хӑйсене масар ҫине илсе ҫитерсен те чӗрӗлеҫҫӗ? Ун пеккисем ҫинчен илтнӗ-и эсӗ?

— Илтнӗ ҫеҫ мар, татмалли календарьте вуласа та курнӑ. Летаргически ыйхӑ, теҫҫӗ ӑна. Ун пекки ҫӗр пин виле хушшинче пӗрре пулать... Акку карчӑкӗ сирӗн чӑнласах вилнӗ пуль вӗт?

— Ку ҫапла-ха, ку ӗмӗрлӗхех вилнӗ, тин тӑрас ҫук, ал-урисем ӗнерех шӑнса хытрӗҫ...

Вӗсем малаллах утнӑ. Хула урамӗсемпе пынӑ чух Аптрашкина палланӑ ҫынсем нумай тӗл пулса ырлӑхсывлӑх суннӑ.

— Ӑҫталла ҫул тытрӑн, Аполлон Корнилч? — тесе ыйтсан, Аптрашкин ик пӳрнине шлепке хӗррипе тан ҫӗкленӗ те, ним шухӑшласа тӑмасӑрах хуравланӑ:

—Васкавлӑ заказ пур-ха. Пӗр карчӑка леш тӗнчере паспӑрт илме патрет туса памалла...

— Калым?

— Так точнӑ. А мӗн кирлӗ тата пире?

Унтан, «линкка-линкка» кӗввине шӑхӑркаласа, малалла утнӑ.

...Юлашкинчен ҫав пӗчӗк хура карчӑкпа Аптрашкин, пир-авӑр комбиначӗ енчи тарӑн ҫырма урлӑ каҫса, пӗр пысӑках мар пӳрт умне пырса тӑнӑ. Аптрашкина урама тӑратса хӑварса, карчӑк кил хушшине пӗчченех кӗрсе кайнӑ.

— Тӗлӗнмелле-ҫке ку? — шухӑшланӑ Аптрашкин, унӑн-кунӑн пӑхкаласа.— Ҫын вилнӗ, теҫҫӗ, анчах ним палли те ҫук. Хапха умне хӗрес мар, тупӑк хупӑлчине те пулин кӑларса тӑратман хуть! Ҫынсем те курӑнмаҫҫӗ... Неушлӗ эп вилсен те ҫакӑн пекех никам та пымӗ? Питӗ кӳренмелле пулать вара ку!..

Пӗр виҫӗ минутран хайхи карчӑк калинккене уҫса кӑчӑк туртнӑ:

— Атя, кӗр! Пӗчченех выртать, сана ӗҫлеме кансӗрлекен никам та пулмасть...

Аптрашкин карчӑк хыҫҫӑн ҫенӗкрен кухньӑна кӗнӗ, унтан малти пӳлӗмелле иртнӗ.

Чӑнах иккен. Хыҫсӑр пукансем ҫине вӑрӑм тупӑк лартнӑ. Тупӑкра ҫын выртни ҫиелтен витсе хунӑ шурӑ простынь витӗрех палӑрать. Лампадка, ҫурта тавраш ҫук, пуҫ вӗҫне ҫеҫ куршакпа ӳсекен килти темиҫе чечек лартнӑ.

— А ма вара никам та ҫук? — тата ытларах тӗлӗнсе ыйтнӑ Аптрашкин, аппарат чӗнӗсене мӑйӗнчен вӗҫертсе.— Тӑванӗсем пур-и унӑн?

— Ара, каларӑм-ҫке, ывӑлӗ килессе кӗтетпӗр, ҫавӑнпа никама та чӗнмен, систермен...— пӑшӑлтатса илнӗ карчӑк.

— Миҫе ӳкерчӗк тӑвас? — ҫавӑн пекех шӑппӑн ыйтнӑ «ирӗклӗ художник».

— Пӗр пилӗк-ултӑ тӗслӗ ӳкеретӗн пулӗ ӗнтӗ. Унпа пӗрле хамӑн та ҫапӑнас пӗр-икӗ хут. Эпир иксӗмӗр питӗ туслӑ пулнӑ вӗт, театрта вӑтӑр ҫул пӗрле ӗҫленӗ...

— Эсир мӗн, артисткӑсем пулнӑ-и? Эппин, ман пекех искусство ҫыннисем? — хавасланнӑ Аптрашкин.

— Ара, ҫапла пулса тухать ҫав! Эпир артистсем вылянине курма хӑшӗсем билетсӑр кӗрсе каясран алӑкра тӗрӗслесе тӑнӑ. Пӗррехинче сана та тытнӑ пек астӑватӑп. Кӗме чартӑм та, эс мана чутах ҫак аппаратпа пуҫран ҫапаттӑн. Юрать, ҫывӑхра милици пулчӗ...

— Пулнӑ та пуль, пулма та пултарнӑ,— хирӗҫлесе тӑман Аптрашкин, пӗр аппаратне виҫӗ ура ҫине вырнаҫтарса.— Тавай ӗнтӗ, питне уҫ...

Хура карчӑк тупӑкри ҫынна хупланӑ простынь хӗррине сирнӗ. Чӑнах та, хайхи палланӑ шур ҫӳҫлӗ карчӑк выртать иккен. Нимӗн те улшӑнман хӑй, тин ҫеҫ ҫывӑрса кайнӑ пек. Темшӗн тата янахӗ ҫумне помидор хуппи ҫыпӑҫтарнӑ, халь кӑна апат ҫинӗ, тейӗн. Аптрашкин ӑна илсе пӑрахма хушнӑ:

— Атту ӑна пытаричченех нӑрӑсем кӑшлама тытӑннӑ пек курӑнма пултарать...

— Юрать, халех! — тенӗ хура карчӑк.

Тытӑннӑ вара ӳкерме. Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ... Унтан та, кунтан та... Ҫав вӑхӑтрах хӑйӗн юратнӑ юррин сӑ-

махĕсене улăштарса хуллен кăна юрлама тытăннă: «Вилсе выртсан, тупăк тума юман хăма кирлĕ...»

Темшĕн-çке, хура карчăк çакăншăн çилленмен тата, ăна илтмĕш пулнă. Хăй вара тупăк умне тăрса темиçе те ӳкерĕннĕ.

— Ну, çитет пуль? — ыйтнă Аптрашкин ултă-çичĕ хут чаклаттарса илнĕ хыççăн.

— Çитĕ, эппин,— килĕшнĕ хура карчăк.

— Ыран пурте хатĕр пулаççĕ. Укçине хатĕрлесе хур, темиçе хут çӳреме манăн вăхăт çук,— аппаратне пуçтарнă май приказ панă пекех каласа хунă Аптрашкин.

— Ара, вăл паллах ĕнтĕ, паллах. Ĕçлĕ çыншăн вăхăт укçаран та хаклă, теççĕ,— ун майлă шăлнă карчăк.— Халь ĕнтĕ, ырă çыннăм, ĕçне тунă хыççăн тата вилнĕ çынна асăнса, тен, пĕрер черкке ĕçсе пама кăмăл тăвăн? Хатĕрлесе лартни пур манăн пăртак, çырла шывĕпе хутăш...

— Ун пеккине хирĕç пулма эпĕ çав териех ухмах мар, конешнă,— тенĕ те ăна хирĕç Аптрашкин, унăн пырĕ ярăнни карчăка та илтĕннĕ.

— Халех илсе кĕретĕп, вăл манăн нӳхрепре, сивĕ çĕрте... Эс тăхта-ха, эппин, пăртакках!

Пӳлĕмре пĕччен юлсан, Аптрашкин стена çинче шăкăрах çакăнса тăракан ӳкерчĕксене пăхкалама тытăннă, çав хушăрах хăй сăмси витĕр паçăрхи юрра юрланă:

— «...тупăк тума юман хăма кирлĕ, халь те юман, тата юман...»

Унтан сасартăк...

— Аптрашкин юлташ, ара, эсĕ ӳкерчĕкĕсене миçешер тумаллине ыйтмарăн-çке? — тени илтĕннĕ ун çурăмĕ хыçĕнче.

Аптрашкин хăйне сисмен çĕртен ĕнсе урлă чĕн пушăпа туртса çапнă пек картах сикнĕ те, унăн кĕпи айне çĕлен кĕрсе кайнăн туйăннă. Хăвăрт кăна каялла çаврăнса пăхсан вара унăн урисем лĕнчĕрех авăнса аннă, чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларнă, куçĕсем сиксе тухма тапратнă...

Тупăкра выртакан хайхи карчăк чип-чиперех тăрса ларнă иккен! Çӳçĕ те шап-шурă унăн, кĕпи те, чĕркуççи таран сирсе пăрахнă простынĕ те шап-шурах! Шăлсăр çăварĕ пĕрмай уçăлса хупăннă, вăл татах тем калаçнă пулмалла, анчах Аптрашкин халĕ нимĕн те

илтмен ĕнтĕ. Ăна хăй умĕнче çав паллан̆ карчăк мар, чăн-чăн вилĕм, хай леш художниксем аллине çава тыттарса ӳкерсе кăтартакан вилĕм, ларнă пек туйăннă. Ак, халех, халех вăл тупăкран тухать те пăр пек сивĕ, тимĕр пек хытă аллисемпе Аптрашкина пăвма тытăнать.

Кăшт çеç тăна кĕнĕ пек пулсан, Аптрашкин чăн малтан сăхсăхма тытăннă: пат-пат-пат! тутарнă аллисемпе хĕреслĕ-пирлĕ. «Сирĕл, шуйттан! Çухал ман куç умĕнчен!»

Унтан çухăрса янăн:

— А-а-а! Çăлă-ăр! Çăлă-ăр!..

Хăлхана çурса ямалла, урама та илтĕнмелле кăшкăрнă вăл, вара пӳлĕмрен питĕ вăйлăн персе янă чул пек тухса вăркăннă. Çенĕкелле тухмалли алăка вăл çамкипе така пек çапса уçнă, картлашка çинче пӳрҫелле кĕрекен хура карчăка ӳкерсе ун урлă сиксе каçнă та, калинккерен вăркăнса тухсанах, картлă кĕвентепе тулли витресем çĕклесе пыракан хĕрарăма çапăнса, ăна çĕре персе антарнă, хăй çине-çине, пĕр чарăнмасăр: «А-а-а! Çăлă-ăр!» — тесе кăшкăрнă, унтан урампа çил-тăвăл пек вĕçтерсе пынă чух каскаран такăнса ӳкнĕ те урăх тăрайман вара.

Вăл пусма тапратнă сысна пек çухăрса выртнине курсан, ун патне çынсем пухăнма тытăннă. Çынсем пырса тулсан та чарăнман Аптрашкин, çаплах: «Çăлă-ăр, мана вилĕм хăвалать»,— тесе çухăрнă, тет. Палланăрах çынсем Аптрашкин ӳсĕрпе аташать пуль, тенĕ, теприсене вăл ухмаха ерсе кайнă пек туйăннă.

...Чылай выртнă вăл больницăра. Унтан, туя çине тайăнса утса тухсан, чăн малтан киле мар, палланă юристсем патне кайнă. Çавсем вĕрентнĕ тăрăх вара вăл шап-шур çӳçлĕ сакăрвун çулхи карчăка суда панă.

Ну, каласа памалла та мар хаваслă суд пулчĕ вăл! Тĕрĕсрех каласан — суд мар, тĕнпе тĕшмĕшлĕх пирки ирттернĕ наукăлла диспут пулчĕ. Леш карчăк, нумай вĕренменскер пулин те, шалт аптратрĕ вĕт Аптрашкина! Эс, çамрăк çын, совет саманинче çуралса ӳснĕ, совет шкулĕнче вĕреннĕ, мĕнле-ха çавăн пекех айван, çук турра ĕненетĕн? Эс епле каçса кайсах сăхсăхнине пĕтĕмпех курса лартăм вĕт эпĕ! Унтан мана темле усал, сатана вырăнне хурса хăвалама тытăнтăн — ку ĕнтĕ эс халĕ те тĕшмĕш лачакинчен тухайманнине пĕлтерет... Намăс сана, çĕр хут намăс!..

Аптрашкин хăйĕн хутне кĕме ваккат та тытнă-мĕн,

анчах та карчăк пĕр-пĕчченех çиеле тухрĕ. Судья унран:

— Çапах та, мĕншĕн эсĕ çавăн пек тупăка кĕрсе выртса ӳкерĕнтĕн-ха, мĕне кирлĕ пулчĕ ку сана? — тесе ыйтсан, карчăк кула-кулах ответ пачĕ:

— Манăн хам вилсен эпĕ тупăкра мĕнлерех выртассине курас килчĕ, çавăнпа ӳкерĕнме шут тытрăм, — терĕ. Кăшт тăрсан, çапла каларĕ тата:

— Театрта ĕçленĕ чух эпĕ кăштах сцена çинче те вылякаланă. Халь те пĕчĕк спектакль лартса илес килчĕ... Мĕнех вара уншăн?

...Шур çӳçлĕ карчăка суд нимĕн те тумарĕ. Аптрашкин çавăнтан вара «ирĕклĕ художник» пулма пăрахнă, «Хĕрлĕ фотограф» ательене кайса ĕçлеме кĕнĕ, терĕç.

1961




# Чемпион

Нумай пулмасть эпĕ тахăш хаçатра хăшпĕр спорт командисем тĕрлĕ ăмăртусене çителĕксĕр хатĕрленни çинчен вуларăм та, пĕлтĕр пулнă пĕр истори аса килсе кайрĕ.

Пирĕн ялта Сахар мучи пур. Питĕ лайăх старик, ĕçчен, кăмăллă çын. Утарта хурт-хăмăр пăхса пурăнать. Утмăлтан иртнĕ пулсан та, кĕреçе сухалĕ кĕмĕл тĕслĕ пулин те — аптрамасть-ха, тĕреклĕ, пĕр шăлĕ те ӳкмен. Шӳт тукаласа, хусах арăмсене куç хĕскелесе те илет.

Çамрăкрах чухне вăл икĕ аллипе икшер пăт тараса пуканĕсене çĕклесе çăмăллăнах пуç çинче вылятатчĕ, анкартинчен кил хушшинчи кĕлете çич-сакăр пăт таякан миххе ним мар йăтса çитеретчĕ. Чупас тĕлĕшпе ăна хăваласа çитекен çын та пулман. Мĕн пĕчĕкренпех кĕтӳçĕ пулнă та вăл — шăна-пăван вăхăтĕнче ĕрĕхсе кайнă ĕнесем хыççăн хăваласа шутсăр шухăланса çитнĕ. Спортсменсем пек каласан, тренировка вăйлă пулнă

унӑн пурнӑҫӗнче, ҫавӑнпа та, пӗр тапранса кайсан, арҫури пекех чупатчӗ. Анчах ялти ҫын, нихҫан та ятарласа спортпа хӑтланман вӑл, ниепле те спортсмен теме ҫук ӑна. Ни ӑмӑртусенче, ни кроссенче пулман вӑл, ҫапах та — мӗн тӑвассу пур! — ҫав Сахар мучие кӗтмен-туман ҫӗртенех пӗр спорт ӑмӑртӑвне хутшӑнма тӳр килнӗ. Чип-чипер пурӑннӑ ҫӗртех, шутламасӑр-ӗмӗтленмесӗр, пирӗн колхозри хисеплӗ старик чемпион ятне илнӗ. Тӗлӗнетӗр-и эсир? Тӗлӗнетӗр пуль ҫав, эпир хамӑр та калама ҫук тӗлӗнтӗмӗр унран...

Ӗҫӗ акӑ мӗнле пулнӑ.

Иртнӗ ҫулла Сахар мучие Шупашкара, колхозсенчи хурт-хӑмӑр ӑстисен канашлӑвне, кайма хушнӑ. Ну, паллах, ку хирӗҫсе тӑман, кайнӑ. Ма каяс мар-ха? Ҫынсем мӗнлерех ӗҫлени ҫинчен пӗлес, май пулсан — хамӑн та каласа парас, тенӗ вӑл... Карчӑкне аш кукли пӗҫерттерсе кушиле чикнӗ те станци еннелле тухса уттарнӑ.

Хӑй ӗмӗрӗнче сахал мар ҫул ҫӳресе курнӑ ҫын, вӑл хулана чиперех ҫитнӗ, министерствӑна пырса хӑй камне, ӑҫтан килнине ҫыртарнӑ, унтан вара халӑхпа пӗрле хула варринчи темиҫе хутлӑ ҫуртӑн пысӑк залне кайса ларнӑ. Пӗр доклад итленӗ, иккӗ итленӗ. Унтан Сахар мучи пекех колхозсенчен пынӑ хурт-хӑмӑр ӑстисем хӑйсем тухса калама пуҫланӑ. Кам мӗнле ӗҫлет, мӗнле паха опытсем тунӑ...

— Манӑн хамӑн та тухса калас мар-ши? — шухӑшланӑ старик.— Епле пулсан та, юлашки ҫулсенче утара 250 вӗллене ҫитертӗмӗр вӗт-ха, тупӑшне сахал мар илетпӗр!

Ҫавӑнтах пӗчӗк хут татки ҫине хӑй ятне ҫырать те — президиума парать. Тепӗр ҫур сехетрен председатель унӑн хушаматне асӑнса та илет хайхискер.

— Халь Овсов агронома сӑмах паратӑп, ҫитесси— Одноухов юлташ пулать, «Ҫиҫӗм» колхозран...

Одноухов — Сахарсен хушамачӗ вӑл, ялта вӗсене «Хӑрах хӑлха таврашӗ» теҫҫӗ. Тахҫан ӗлӗкех вӗсен аслашшӗнне, ӗҫкӗре ҫапӑҫма кӗрсе кайсан, хӑйӗн пуҫаниех пӗр хӑлхине ҫыртса татса илнӗ имӗш, ҫавӑнтанпа ҫав ят тухса кайнӑ та вӗсен. Сахарӑн ят тухсан, салтака кайнӑ чух вулӑсри писарь «Хӑрах хӑлха» тенине вырӑсла куҫарса ҫырнӑ та, вара ҫакӑ чӑн-чӑн хушамат пулса тӑнӑ.

Хӑйӗн хушаматне илтсенех, Сахар мучи, йӑпӑр-

япăр блокнот кăларса, мĕн çинчен каламаллине план туса хунă. «Ну, калатăп ĕнтĕ пĕрре, хамăрăн утарти ÿсĕмсемпе тĕлĕнтеретĕп»,— тенĕ хăй ăшĕнче.

Анчах та çавăн чухнех тухса калама тÿр килмен ăна. Хайхи Овсов агроном каласа пĕтерсенех перерыв пулнă та, пурте апат çиме кайнă.

— Перерыв хыççăн чăн малтан Одноухов юлташ тухса калаçать,— асăрхаттарнă председатель. Сахар кăштах кăмăлсăрланнă, анчах мĕн тăвас тетĕн? Юрĕ-çке, эппин, ун чухне те калăп, кая мар-ха, канашлу пĕтмен вĕт, текелесе лăплантарнă вăл хăйне.

Апатне вăл хырăмĕ панк пуличченех çисе лартнă— тăвата тĕслĕ апат илнĕ. Çиелтен тата пĕр мăн курка чашкăракан хĕрлĕ квас ĕçнĕ те, ăшĕ кансах кайнă унăн.

Каçхи лару тепĕр ик сехетрен тин пуçланассине астуса, Сахар мучи васкаман, столовăйран тухсан, Атăл хĕрринелле утнă. Çанталăкĕ питĕ лайăх пулнă, лăпкă, хĕвелĕ çав тери хĕртнĕ... Атăл хĕррине çитсе тăрсан, Сахар мучи йăлăм еннелле пăхать те — унта халăх пит нумайййине курать. Канмалли кун пулнă-çке. Пĕрисем хĕвел çинче хĕртĕнсе выртаççĕ, теприсем шывра чăмпăлтатаççĕ.

Çавсем çине пăхса тăнă май, хайхи унăн та шыва кĕресси килсе каять...

— Çынсем кĕреççĕ, мана юрамасть-и-мĕн? — тет вăл.— Кĕрсе как следăвăт ишес-ха пĕрре, çанçурăма кантарас! Вăхăт пур-ха...

Анчах çав самантрах хула çыннисем шыва ытла пĕтĕмпех çарамасланса мар, кĕске йĕмсемпе кĕнине аса илет. Арçынсемпе хĕрарăмсем пĕрле-çке-ха, аван мар...

— Аялти йĕмпе кĕмелле пулать-ши? — шухăшлать Сахар.— Ача чухнехи пек, йĕмпĕççине тавăрса хăпартса лартас та... Çук, ун пек тусан та килĕшÿллех мар... Хулара-çке, ялта мар. Кунта культура...

Унтан сасартăк хăйне хăй вăрçса илет:

— Э-эй тата, ват тăмсай! Мĕн шухăшласа тăратăп çак эпĕ! Тем, укçасăр çын пек! Тимĕр-пăрçа, хыт кукар пулман-ха ку таранччен! Çав кĕске йĕме лавккара илсе ямалла кăна-иç! Кайран мăнуксене те кирлĕ пулать вăл...

Каланă — тунă. Сахар мучи урамри киоскра труççик илет, унтан вăрăм пусма тăрăх чупса анать те,

пăром çине ларса, Атăл леш енне каçать, майлăрах вырăн тупса салтăнать, унтан шыв хĕрринерех пырса кăшт сивĕнет, вара шалалла кĕрсе каять.

Унччен те пулмасть, Сахар мучи хăй хыçĕнче музыка кĕрлесе кайнине илтет. Çаврăнса пăхать те — перевоз пристанĕ енчен темĕн чухлĕ халăх музыка каланă май утса килнине асăрхать.

Ну, мĕнех ĕнтĕ уншăн? Паллах, Сахар мучие ку нихăш енчен те интереслентерме пултарайман. Канмалли кун пулнă май пĕр-пĕр завод е учреждени коллективĕ уçăлса çӳреме каçнă пулĕ... Ăна мĕн ĕç? Сахар ал сулать те шывра кăвакал пекех хăтланма тытăнать: шыв çиййĕпе те ишет, тĕпнелле те чăмать, месерле те çаврăнса выртать...

Ах, мĕн тери ырлăх çак Атăлта шыва кĕни!..

Сахалтан та пĕр çур сехет киленнĕ вăл. Шывра нумай пулнипе пӳрни вĕçĕсем те пĕркеленме пуçланă. Унтан: часах лару та пуçланать пулĕ, как-никак манăн пуринчен малтан тухса каламалла текелесе, йĕпе сухалне сăтăркаласа, çыран еннелле утнă. Хăйĕн кăмăлĕ çав вăхăтра калама та çук лайăх пулнă. Ну... нимĕн те кирлĕ мар ĕнтĕ!

— Вперед! — тесе кăшкăрнă тахăшĕ сасартăк сулахай енче.

Темиçе самантранах Сахар мучи тĕлĕпе сахалтан та пĕр аллă çын пулĕ — шатах çарамас, труççик вĕççĕнех чупса иртсе кайнă. Ним çине пăхмасăр ыткăнса пынă вĕсем. Мĕн мурĕ, кама хăвалаççĕ кусем? — тесе шухăшланă та Сахар, часрах çырана тухнă. Васкас, часрах тумланас та каяс кунтан, тенĕ ĕнтĕ. Анчах та... мĕн тетĕр эсир? Унăн пĕтĕм тумтирĕ, кĕпи-йĕмĕ пач çухалнă. Ăна тирпейлесе çиелтен пусарса хунă чулĕ те çук! Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ ку? Чĕри сăрр... туса кайнă çакăн. Пĕтрĕ пуç! Такам шуйттанĕ çаклатса кайнă вĕт унăн кĕпи-йĕмне, леш библири Адам пекех, амăшĕ çуратса янă тумпа кăна тăратса хăварнă! Унталла пăхнă вăл, кунталла... Çук! Йĕри-тавра — таптаса!

— Çавсем тунă! — çиçĕм пек шухăш вĕçсе илнĕ Сахар пуçĕнче.— Çав çара паккан чупакансем вăрланă ман кĕпе-йĕме! Урăх никам та пулман кунта! Хăвалас часрах, çитсе туртса илес...

Нумай шухăшласа тăма вăхăт пулман унăн. Çийĕнчех хăваламасан, лешсем инçе кайма пултарнă,

шыра вара вĕсене! Сахар пĕррех тапса сикнĕ вĕсем хыççăн...

— Пурпĕр çитетĕп! Пурпĕр çăлатăп хамăн япаласене!..

Эх, чупнă вара, эх, ыткăннă! Сарлака сухалĕ ик еннелле сарăлса вĕлкĕшсе пынă кăна! Пĕр çĕр метр пек кайсан, ăна шыв хĕрринчи çынсем асăрханă та тем пулнă пекех кăшкăрма тапратнă:

— Э-эй, мучи, кая юлнă!..

— Асту, сухална çухататăн!

— Чуп хытăрах!

— Нажимай, дедушка!..

— Улю-лю-лю!

Анчах та Сахар мучи вĕсем «нажимай» темесĕрех пур вăйран чупнă. Унăн епле пулсан та малтан чупса иртекенсене хуса çитсе кĕпе-йĕмне тупмалла пулнă-çке, унсăрăн вăл каçхи ларăва мар, хулана та пырса кĕме пултарайман. Çавăнпа та унăн ура тупанĕсем çĕре те перĕнмен, ура кĕлисем кăна купарчана тивсе пынă...

Тата тепĕр çĕр метр чупсан, вăл темле хавшак этеме хăваласа çитнĕ. Унăн аллинче нимĕн те çуккине курса, чарăнса тăмасăрах малалла чупнă. Çын, хашкама ернĕскер, Сахартан татăлса юлнă. Куна кура, таврари çынсем (халь ĕнтĕ вĕсем чупакансен икĕ енĕпе те стена пекех тăнă...) старике хавхалантарма тытăннă:

— Маттур, мучи!

— Яра пар, яра пар!..

— Кăтарт çамрăксене...

— Не сдава-ай, дедушка!..

Çынсем кăшкăрнă, ку чупнă. Хăшĕсем куласшăн та пулнă пуль ĕнтĕ унран, анчах ку хăнк та туман уншăн, пурпĕр малалла çатлаттарнă, никам çине те пăхман...

Акă ĕнтĕ вăл пĕринчен, тепринчен иртнĕ, виççĕмĕшĕнчен, тăваттăмĕшĕнчен... вуннăмĕшĕнчен... Анчах унăн кĕпи-йĕмĕ никам аллинче те курăнман, çавăнпа татах чупма тивнĕ. Халăхĕ халь пĕр ун çине кăна пăхнă пек пулнă, тек кăшкăрашнă:

— Охо-хо, сухал!..

— Вĕçтер, вĕçте-ер! Хытăра-ах!

— Чемпион пулатăн!

Юлашкине ăнланман вăл, темле мурла сăмах пулнă уншăн «чемпион» тени, халиччен те илтмен ку

сăмаха. Тата кирлĕ те пулман вăл ăна, старик хăйĕн кĕпи-йĕмĕ хыççăн чупнă. Çаплах чупнă. Малтан мала, малтан мала. Труççиклĕ çынсем пĕрин хыççăн тепри кая юлса пынă. Вăйĕ ăçтан кăна тухнă пуль! Юлашкинчен Сахар курми те, илтми те пулса çитнĕ, çын мар — хускатса янă мотор, тейĕн. Анчах чупсан-чупсан, вăл пат чарăнса тăрать. Унран малта никам та çук иккен, пурте кайра... Пуринчен те иртсе кайнине хăй те асăрхаса юлайман вăл. Малта çула урлă карнă кĕрен хăю çеç куранна.

Сахар чарăнса тăнине курсан, çынсем тата хытăрах шавлама тапратнă:

— Мучи-и! Ма чарăнтăн? Чупсам, чуп часрах!..

— Вăхăта çухататăн, старик! Чуп малалла, чу-уп!

— Часрах, часра-ах!.. Финиш патне-е!

Сахар мучи пурĕпĕр вырăнтах тăнă. Лешсем кăшкăрнă, ку тăнă. Ăнланман вăл нимĕн те: ăçта чупмалла, мĕншĕн чупмалла? Пăхать — хайхи кая юлнисем ăна каллех хăваласа çитеççĕ. Çав вăхăтра халăх хушшинчен темле каччă сиксе тухать те, Сахар мучи патне ыткăнса пырса, ăна аллинчен карт! туртать.

— Чуп хăвăртрах, ав çав кĕрен хăю патне çитиччен чуп! — кăшкăрать вăл. Хăй те чупать, Сахара та чуптарать. Темиçе самантранах вĕсем кĕрен хăюва татса иртсе каяççĕ.

Халăх ăнран кайнă пек шавласа ярать. Музыка кĕрлет. Сахар мучи патне пĕр харăсах улттăн-çиччĕн чупса пырса унăн аллисене чăмăртаççĕ...

— Ну, маттур, мучи, çав тери молодеццă!

— Хăш командăран эсĕ? «Спартакран-и» е «Динаморан»?

— Тренировка нумай турăн-и?

— Кам санăн тренер?

Анчах Сахар мучи халь нимĕн те ăнланмасть. Мĕншĕн мухтаççĕ-ха ăна? Мĕншĕн маттур теççĕ? Мĕнле «Спартак»? Мĕнле «Динамо»? Нимĕнле ответ пама та пĕлмест вăл. Унтан куçĕсене мăчлаттарса тăрать-тăрать те сасартăк:

— Тавайăр ман тумтире! — тесе кăшкăрса пăрахать.— Неччу кунта шăл йĕрсе тăма!

— Мĕнле тумтире?!.— тĕлĕнеççĕ лешсем.

— Çĕр çинче мĕнле тумтир пулать çыннăн? Кĕпе, йĕм, атă, карттус, пиншак! Ăçта чикрĕр эсир вĕсене! Хăшĕ вăрларĕ?

Физкультурниксем пĕр-пĕрин ҫине кăн-кан пăхса илеҫҫĕ.

— Эс... эс кам пулатăн вара?

— Епле кам? Колхозник эпĕ! «Ҫиҫĕм» колхозран, Одноухов Захар, пчеловодсен канашлуне килнĕскер!

— Хăш командăшăн чупрăн эсĕ?

— Никамшăн та чупман, хамăн кĕпе-йĕмшĕн чупрăм! Шыва кĕтĕм те, хам ҫăвăнса тухиччен такам мăйракалли мана ҫаппа-ҫарамас тăратса хăварнă. Эсир вăрласа тарнă пуль, тесе шутларăм. Ҫавăнпа вĕҫрĕм те сирĕн хыҫҫăн, никакой та спартак-динамăшăн мар, ăнлантăр-и? Пĕтĕм ĕҫĕ те ҫавă ҫеҫ!

Сахар сывлăш ҫавăрса илнĕ те йăвашраххăн ӳкĕтленĕ:

— Итлĕр-ха, граждансем... Ман тумтире эсирех вăрларăр пулсан, тархасшăн, тавăрса парăр... Хăҫан та пулин пыл-сăра ĕҫтерĕп сире уншăн!.. Манăн кĕҫех заседани пуҫланать, манăн унта сăмах каламалла. Заседание йĕмсĕр кĕме пултараймастăп вĕт эпĕ, ăнланăр-ха ҫавна! Ҫылăх сире ват ҫынран кулма!..

Сахар сăмахĕсем физкультурниксене кӳрентернĕ пулмалла. Пĕр самант вĕсем пĕр-пĕрин ҫине ним чĕнмесĕр пăхса тăнă. Унтан пĕри, велосипед пек куҫлăх тăхăннăскер, ассăн сывласа янă та старике хулпуҫҫинчен лăпкаса илнĕ.

— Ну, нимех те мар, мучи...

— Епле нимех те мар? — кăшкăрса янă Сахар.— Йĕм ҫук, атă ҫук, пиншак ҫук пулсан — мĕн тумалла? Ҫитменнине, пиншакĕнче укҫаччĕ!

— Чим-ха эсĕ... Ăнлан, мучи. Паян пирĕн хулари физкультурниксен кросĕ — чупу ăмăртăвĕ пулчĕ... Эсĕ ҫав ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнтăн... кросс чемпионĕ пулса тăтăн...

— А мĕн вăл «чемпионĕ» тени? — хăрарах ыйтнă Сахар.— Пит усал сăмах-и?

— Ну, мĕнле калас сана... Ну, чемпион вăл пуринчен те маттурри, пуринчен те ҫивĕчрехи!

Ҫавăнтах вăл Сахара ҫап-ҫутă значок тыттарнă.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ ман унпа? — ыйтнă старик.

— Ҫакса ҫӳре,— тенĕ куҫлăхли.— Пурте пĕлччĕр эсĕ чемпион пулнине!

— Вара вăл манăн вăрласа кайнă кĕпе-йĕм вырăнне пултăр-и? — тарăхса кăшкăрнă Сахар.— Хăш тĕле тирес манăн ăна?!

Лешĕ сăмаха урăх еннелле пăрса яма тăрăшнă:

— Кунсăр пуҫне, акă мĕн тата...— Вăл каллех старике хулпуҫҫинчен лăпкаса илнĕ.— Малашне пирĕн ăмăртусене татах хутшăнас пулать санăн, мĕншĕн тесен сана члена илетпĕр...

Тытăннă вара Сахар мучие ӳкĕтлеме, ун кăмăлне ҫавăрма... Анчах ҫав мăн куҫлăхлă ҫыннăн пĕр сăмахĕ те Сахар хăлхине кĕмен, вăл ҫаплах-ха хăйĕн кĕпийĕмĕ ҫинчен шухăшласа ытларан ытларах пăшăрханнă: мĕн тăвас пулать-ши халь? Труҫҫикпе милицие те пырса кĕме ҫук, хăвнах хупса лартĕҫ, ухмаха ернисен ҫуртĕнчен тухса тарнă, тейĕҫ... Пĕтес пулать-иҫ!

...Телей куҫа курăнса килмест, тенĕ пек, ҫав вăхăтра вĕсем патне тепĕр ҫамрăк каччă пырса тăнă та, аллинчи япалисем ҫине кăтартса, Сахар мучирен:

— Ҫаксем санăн мар-и? — тесе ыйтнă.

— Манăн ҫав, камăн пултăр тата?! — кăшкăрса янă Сахар. Чун кĕрсех кайнă ăна! — Ăҫтан тупрăн? Кам мурĕ вăрланă пулнă? Кăтарт-ха мана вăл ҫынна, айăк пĕрчисене шутлам унăнне!

— Никам та вăрламан,— тенĕ каччă питĕ лăпкăн,— кросс пуҫланас умĕн сан япалусене пуҫтарса купальнăна хунă ҫеҫ...

Тек вара Сахар мучи нимĕн те калаҫса тăман, часрах тумланнă та хуланалла васканă.

...Колхоза таврăнсан, вăл пире ҫак мыскара ҫинчен каласа пачĕ те, варсене тытсах култăмăр ҫав! Пурте ăна «чемпион» тесе чĕнме пуҫларĕҫ. Анчах старик куншăн пĕртте кăмăлсăр пулмарĕ, сарлака сухалне якаткаласа кулкаларĕ ҫеҫ. Кăҫал, хамăр патра «Урожай» спорт обществин организацине туса хурсан, комсомолецсем Сахар мучие председателе суйларĕҫ. Чиперех ĕҫлет халь. Хăш чух чупкаласа та кăтартать. Карчăкĕ те вăрҫмасть уншăн. Маттур мар-и иккĕшĕ те!

1939




# Ватăлма майĕ çук...

Тăрмитун мучие кичем. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем! Хуть те, хăй каларăш, халăх халапĕнчи леш аптранă кăвакал пек, Атăл хĕррине чупса пыр та — кутăн чăм...

Пĕр уйăх каялла Тăрмитун мучи пенсие тухрĕ. «Тивĕçлĕ канăва» ăна чаплăн та чыслăн ăсатрĕç. Малтан клубра пуху пулчĕ, унта совхоз директорĕн заместителĕ Тытамаков юлташ хаваслă-савăнăçлă сăмах каларĕ. Тăрмитун мучи совхозра çирĕм çул ытла счетовод-кассир пулса ĕçленĕ хушăра пĕр пус та растрата тăвайманшăн ырларĕ, унтан ăна парнесем пачĕç, черккесем çĕклерĕç, нумай-нумай çулсем пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕç. Кăштах хĕрсен вара хăнасем такам пăлхатнă хур аçисем пекех какăлтатма тытăнчĕç:

— Нихçан та манмăпăр санпа пĕрле ĕçленĕ кунсене!

— Эпир те ватăличченех сан пек тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнăпăр!..

— Тăрмитун мучие — ура-а!..

Старике кăптăр-каптăр хупăрласа илчěç те темиçе хутчен мачча патнелле мечěк пек ывăтрěç.

— Çěр çул пурăн, ан ватăл! Ура-а!

...Тепěр кунне, пуçě кăштах ыратнă пулин те, вăл яланхи пекех ултă сехетре тăрса ěçе кайма хатěрленме тытăнчě.

Совхоз кантурě чылай аякра, пěр тăватă километрта пулнă, çавăнпа та Тăрмитун мучи, вăхăтра çитес тесе, килтен хуть те хăçан та иртерех тухнă. Анчах вăл электроплитка çинче чей вěретсе чăкăтпа пашалу çинě хыççăн кěрěкне тăхăнма тăрсанах, çемçе тӳшек çинче выртакан карчăкě, Альтяк инке, ун çине темле тěлěнерех пăхрě те:

— Тул çутăлнă-çутăлманах капла ăçта тухса каятăн эсě, чунăм? — тесе ыйтрě.

Тăрмитун мучи ăна малтан икě чӳрече хушшинче çакăнса тăракан куккуклă сехет çине тěллесе кăтартрě:

— Пăх-ха, вăхăчě мěн чухлě... Çиччě çитет-иç!

— Пулин,— терě Альтяк инке, тутлăн анасласа илсе.

— Мěнле «пулин» тата вăл? Манăн саккăра çитмелле пуль? Ěçе ěмěрне те кая юлса курманскер, паян мěн сăлтавпа юлмалла манăн?

— Ан шӳтле,— ал сулчě ун карчăкě, тата тутлăрах анасласа.— Вырт та тепěр ыйхă çывăрса ил. Питě лайăх пулать...

— Эс ухмаха ермерěн пуль те? — тěлěннě-тарăхнă сасăпа ыйтрě Тăрмитун. Анчах карчăкě малтанхи пекех лăпкăн çавăрса хучě:

— Эп ермен-ха, ерессěм те çук, анчах санăн кăштах сисěнет вăл. Каçхине ытлашширех хутăн çав. Киле мěнле çитнине астăватăн-и хуть?

— Епле астумастăп пулать? Тытамаков юлташ пире машинăпах ăсатса ячě. Иксěмěр ыталансах юрласа килтěмěр.

— Киле килсен, мěн хăтлантăн?

— Нимěн те хăтланман...

— Асту, хăтланмарăн пуль. Çӳлěк çинчен сар чăматана туртса антартăн та, курорта каятăп тесе, кутник сакки айне кěрсе выртрăн. Унтан сěтěрсе кăларсан, темле ухмахла такмаксем юрлама тытăнтăн.

— Мěнле такмаксем тата?

— «Карчăк, карчăк, карта урлă, пĕçҫи-каçҫи...» — тата темĕн те пĕр. Лапра çăвар!

— Хытах кӳрентертĕм-и вара? — сасартăк хăранă пек пулчĕ старик.

— Итлемерĕм эп сана. Вырăн çине пусса антарса минтерпе хупларăм та çывăратса ятăм.

Тăрмитун мучи, куçĕсене мăч-мăч тутарса, шухăша кайнă пек пулчĕ.

— Вăт, эсрел эрехĕ... Çынна, чăнах та, сĕм-ухмах тăвать çав вăл. Тек нихçан та çăвара сыпмастăп!—Унтан сехет çине пăхрĕ те: — Ну, эп кайрăм, Альтяк! — тесе, алăк хăлăпĕнчен тытрĕ.

— Ăçта каятăн тата? — вăртах тăрса ларчĕ карчăкĕ.— Мухмăру ытлах кастарать пулсан, килтех пур, Çĕнĕ çул каçхине пытарса лартсаттăм пĕр чĕрĕк!

Карчăкĕ çапла калани Тăрмитун мучие йĕппе тирсе илнĕ пекех пулчĕ. Тӳрех вĕресе кайса кăшкăрса тăкрĕ вăл:

— Мĕнле мухмăр?! Мĕнле чĕрĕк?! Эпĕ ĕçе эрех ĕçсе кайнине хăçан куртăн эсĕ... шуйттан кĕвенти, тепĕр тесессĕн! Мăшкăллама шут тытрăн-и манран? Е санăн хăвăн ĕнерхи иртсе кайман-и? Тыт та кӳп, эппин, хăвăн чĕрĕкне! Манăн ĕçе каймалла!..

Тăрмитун мучи, тухса каяс тесе, алăка пĕррех çăматă пуçĕпе тапрĕ. Анчах çав вăхăтра Альтяк инке шăши тытма хатĕрленнĕ кушак пекех урайне сиксе анчĕ те:

— Ан лăпăртат, ниçта та каймалла мар санăн! — тесе кăшкăрчĕ.

— Епле каймалла мар?! — çав тери хаяррăн пăхрĕ ун çине упăшки.

— Ара, эсĕ ĕнер пенсие тухрăн вĕт! Ĕçки те çавăн пирки пулчĕ! Неушлĕ çавна та манса кайрăн, ват сăс?!.

Тăрмитун мучи çакăн хыççăн хăйĕн карчăкĕ çине тăй-й... пăхрĕ те, çăварне лак! карса пăрахса, кутник çине шап! ларчĕ. Аллинчи мăн туйи те шăкăртах урайне ӳкрĕ унăн.

— Чăнах та-çке...— хурлăхлăн сывласа ячĕ вăл юлашкинчен.

— Чăнах çав! Слущи мар ĕнтĕ эс халь, килте ларас пулать малашне! — çĕнтерӳллĕ сасăпа каласа хучĕ карчăкĕ.

— Килте ларас пулать...— мăкăртатса илчĕ вара

Тăрмитун.— Служащи мар... Тиража тухрăм, эппин. Шапаш...

Чылайччен ларчĕ вăл урайнелле пăхса. Ниепле те ăнланаймарĕ: мĕнле-ха капла? Хĕрĕх çул ытла кашни кун ĕçе çӳренĕ... Ир тăнă, апат çинĕ, тумланнă та сакăр-тăхăр сехет тĕлне вырăна çитме тухса утнă. Революци хыççăнах комбед секретарĕ пулнăранпа таçта та ĕçленĕ вăл. Чăн та ĕнтĕ, ытлашши пысăк çынах пулман, анчах хăйне шанса панă ĕçе таса кăмăлпа туса пынă. Çук, хăй ятне яман вăл! Тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна премисем те панă, приказсенче тав тунă. Анчах халĕ вара... Тĕлĕнмелле! Ир пулчĕ, часах саккăр çитет, çапах та унăн килте лармалла. Паян та ĕçе каймалла мар. Ыран та. Виçмине те... Кирек хăçан та! Мĕнле пурăнмалла-ха кун пек? Ĕçсĕр аптраса ухмахах тухса каймалла пуль? Çулла пулсан, пахчара чакаланма пулатчĕ хуть, анчах халĕ, хĕлле мĕн тăвас? Пĕрех хут ма çуллаччен тăхтамарăм пуль ку пенсие тухма!..

— Йăнăшрăм,— тенĕ старик.

Чăнах та, ним тума аптрарĕ Тăрмитун мучи. Малтанхи кунсенче, хăй ĕнтĕ пенсионер пулни çинчен манса кайса, кашни ирех улттăра тăрса ĕçе тухса кайма хатĕрленчĕ, карчăкĕ кăшкăра-кăшкăра асăрхаттарнă хыççăн çеç: «Тьфу, каттăршни!» — тесе, пуçне тăхăннă тилĕ тир çĕлĕкне хыва-хыва ывăтрĕ, чылайран тин хăй «тиража тухнине», хăйĕн ирсерен ниçта та хускалса тухмалла маррине майĕпен хăнăхма пуçларĕ.

Тĕнчери тӳрĕ чунлă пур счетовод-кассирсем пекех, Тăрмитун мучи питĕ тирпейлĕ, йĕркеллĕ пурăнакан çын пулнă, унăн нихçан та нимĕн те сая кайман, кашни япала хăй вырăнĕнче выртнă. Сăмахран, вăл кашни Çĕнĕ çул умĕн ялпо лавккинче илсе куккуклă сехет айне çакакан «татмалли календарь» листисене нихçан та татман, вĕсене çӳлелле çавăрса хунă çеç, декабрĕн 31-мĕшĕнче вара ăна хаçатпа чĕркесе шкапа вырнаçтарнă та ун вырăнне çĕннине çакса янă. Çав календарьсем унăн пĕр вунă çулшăн пухăннă...

Карчăкĕ пĕррехинче ăна: «Мĕн мурĕ тума пухса усратăн çав кивĕ ăпăр-тапăра, пустуех вырăн йышăнса выртаççĕ вĕт!» — тесен, Тăрмитун мучи лăпкăн çеç ответ панă:

— Выртĕçин! Вĕсем санран çăкăр ыйтмаççĕ, анчах кирлĕ кунта кирлĕ пулма пултараççĕ,— тенĕ.

Чăнах та, кирлĕ пулчĕç хайхискерсем! Пенсие тухнă хыççăн ĕççĕр аптраса, тунсăхласа, кичемленсе çитсен, Тăрмитун мучи пĕррехинче шкапа уçса пăхрĕ те хаклă супăнь муклашкисем пек чĕркесе хунă çак календарьсене курах кайрĕ. Ара, кусене вулама пулать-иç!.. Ан тив, вĕсене хăйсен вăхăтĕнче пĕр саспаллине те сиктермесĕр вуласа тухнă пултăр. Çĕнĕрен вулани кансĕрлет-им? Календарьте унта çав тери ăслă япаласем пур вĕт! Уйăх-çăлтăрсем мĕнле тытăнса тăнинчен пуçласа чăмăрла паранка епле майпа тутлăрах пĕçерессине таранах çыраççĕ.

Хайхискер, пĕрре вулама пуçларĕ те ик эрне ытла вуларĕ — вунă çулшăн! Ир тăрса пит çусан, тӳрех календарь тытать те — ларать вара сак çумне пăталаса лартнă пек! Кун мĕнле иртсе кайнине те сисмест, хырăмĕ выçнине те туймасть, тейĕн. Анчах календарьсене вуласа пĕтерсен, ăна каллех кичем пулса кайрĕ. Çав тери, ниçта кайса кĕмелле мар кичем. Хуть те, хăй каларăш, аптранă кăвакал пек кутăн кайса чăм...

— Ĕççĕр аптранипе ĕçме ан тытăнтăрах ку! — пĕрре кăна мар шикленсе илчĕ Альтяк инке. Пенсионерсем хушшинче ун пеккисем те тĕл пулнине илтнĕ вăл.

Анчах пăшăрханма кирлĕ мар-мĕн. Тăрмитун мучи пенси укçине ĕçсе ярса пурăнма та, чипер сывлăхне сиенлеме те шутламан. Хăйне пенсие ăсатнă каçхине персе супнă хыççăн тек вăл пĕр тумлам та ĕçмерĕ. Çав ирсĕр ĕçпе çыхланас вырăнне вăл юнашар ялти библиотекăран кĕнекесем çĕклеме тытăнчĕ.

Чăн малтан «Нарспи» йăтса пычĕ.

— Çак кĕнекене эпĕ хĕрĕх çул ĕлĕкрех вуланăччĕ, халĕ тепре вулас-ха,— терĕ вăл карчăкне.— Итле, сана та кăштах çутта кăларам!

— И-и, манăн çутта тухас вăхăт иртнĕ ĕнтĕ,— терĕ ăна хирĕç Альтяк инке, анчах хăй, чăлха çыхнă май, старикки вуланине каçса кайсах итлесе ларчĕ. Нарспие ирĕксĕрлесех качча пама тытăннă тĕле çитсен, ĕçлеме пăрахса, макăрса та илчĕ...

— Шуйттан саманиех пулнă çав ĕлĕк! — куçлăхне хывса куçĕсене шăлчĕ вăл.— Хĕрарăмшăн пурнăç мар, чăн-чăн тамăк пулнă! Сăпаççипех Совет влаçне, хăтарчĕ вăл пире...

Çакăн хыççăн пĕр-икĕ эрне хушши вĕсем кашни каçах çавăн пек кĕнекесем вуласа пурăнчĕç. Унтан — темшĕн-çке! — Тăрмитун сасартăк вулама пăрахрĕ.

Пĕр шăматкун, Етĕрнене пасара кайсассăн, ал лаппи хулăнăш хут тĕрки илсе пычĕ те çав каçах хыпаланса çырма ларчĕ.

Çырать те çырать! Тем çырать! Ик каç, виç каç... Çырнă май хăй текех пăшăлтатать. Çын илтмелле мар пăшăлтатать тата — тутисем çеç хускалаççĕ. Альтяк инке, юлашкинчен, тӳсеймерĕ, ыйтрĕ:

— Мĕн пĕрмай пăшăлтатса ларатăн çак эс? Чĕлхе сурма вĕренместĕн пуль те? Мĕн мурĕ çыратăн кун пекех тăрăшса?

— Сан çинчен çӳлти патшалăха жалоба çыратăп-ха,— терĕ Тăрмитун мучи, куçне хĕссе илсе.— Хăвăн пĕр лав çылăх, анчах чиркĕве çӳреместĕн. Вĕри çатма хатĕрлеччĕр унта сан валли.

— Тьфу, чĕлхӳ çине ӳпне çăпан тухтăрах! — çилленчĕ Альтяк.

Унтан Тăрмитун мучи таçта çырусем яма тытăнчĕ. Кашни эрнере виçшер хут. Ванюк-почтальон хаçат илсе пырсассăнах, ăна хулăн конвертсем тыттара-тыттара ярать. Каллех ыйтмасăр тӳсеймерĕ Альтяк инке:

— Кам шуйттанĕ патне яратăн эс кун чухлĕ çыру?

— Хĕрсем патне,— терĕ Тăрмитун мучи.— Йăлăхрăм санпа пурăнса, çамрăкраххине тупас тетĕп...

— У, ватсупнă, тăмана! Такама пит кирлĕ пуль эсĕ! — татах çилленсе кайрĕ карчăкĕ.

Анчах вулаканăн та пĕлес килет ĕнтĕ: мĕн çырнăха Тăрмитун хĕллехи вăрăм каçсенче, мĕнле çырусем янă вăл кашни эрнере виçшер хут?

Ан тĕлĕнĕр: Тăрмитун мучи сăвăсем çырнă. Çаплах ара, çаплах! Сăвăсем çырнă та Шупашкарти пур редакцисене те ярса пама тытăннă. Çын-мĕн ан систĕр тесе, сăввисем айне хăйĕн чăн-чăн хушаматне çырман, суя ят — «псевдоним» — лартса янă: «Д. Майский». Тепĕр тесен, сăвăсем айне унăн чăн хушаматне çырма аванах та пулман. Унăн хушамачĕ — Большеносов, чăвашла каласан — Мăн Сăмса пулнă. Поэзипе ку хушамат питех çыхăнман çав, ăна эсир хăвăрах чухлама тивĕç...

Вăхăт нумаях та иртмен — хайхи патне редакцисенчен ответсем киле пуçланă:

«Сăввусем начартарах. Рифма та, ритм та çукрах. Пичетлейместпĕр. Хăвăр шкулти стена хаçатне çырса вĕренсе пыр».

«Сан сăввусем пиçмен-ха. Сăвă техникине пĕлместĕн. Каплипе журнала кăлараймастпăр».

Тата ытти те...

Анчах Тăрмитун мучи куншăн пуçне усман. Кӳренмен те тата, мĕншĕн тесен такамран илтсе пĕлнĕ—редакцисенче ĕçлекенсене çине-çине купи-купипе сăвă ярса парса тăнне кăларас пулать, вара пурпĕрех пичетлеççĕ. Пĕрре пичетленсен, çул уçăлать, чару пулмасть вара...

Пилĕкçĕр листаллă хут стопи пĕтсен, Тăрмитун тата икĕ стопа илсе килнĕ. Почтальон пырсан, пĕрер конверт мар, икшер парса яма тытăннă. Хăй ĕнтĕ, çĕрĕ-çĕрĕпе сăвă çырса ларнипе, начарлансах кайнă. Альтяк инке унăн сывлăхĕшĕн пăшăрханма пуçланă, текех ан çыр тесе ӳкĕте кĕртме пуçланă, анчах Тăрмитун мучи хăйне хăй: «Вперед!»—тенĕ те, çырма пăрахма мар — хĕрнĕçемĕн хĕрсе пынă, вăрăмран вăрăм сăвăсем ярса панă. Чăн-чăн поэтсем ку чухне, пĕр çырма ларсан, вунпилĕк-çирĕм пин йĕркерен кая çырмаççĕ, тенине те илтнĕ вăл.

Юлашкинчен вара...

Юлашкинчен, тăрăшни сая кайман. Пĕр хаçатра «Çамрăксен страници» кăларнă та унта Тăрмитун мучин икĕ сăввине пичетленĕ — кашни сакăршар йĕрке. Вĕсен айне «Д. Майский, çав-çав ялти шкул ачи»,— тесе çырса хунă...

Ку вара чăн-чăн çĕнтерӳ пулнă. Пысăк çĕнтерӳ! Ан тив, Тăрмитун мучие шкул ачи тенĕ пултăр. Мĕнех вара уншăн? Сăввисем пурпĕрех унăн пулнă-çке-ха! Тепĕр тесен, ун пек каланăшăн мĕн кӳренмелли пур? Сăвă çырас енпе вăл чăнах та шкул ачи кăна пулнăиç! Çырма пуçлакан поэт. Тин çеç палăрма пуçланă çăлтăр. Çамрăк талант!

Хăй те вăл халь шкул ачи пекех хĕпĕртесе кайнă. Хаçатра хăйĕн ятне курсан, çавăнтах ташлама, качака путекки пек тăрст! тăрст! сиккелеме хатĕр пулнă.

Вара тата ытларах çырма тытăннă. Тепĕр çур çултан каллех икĕ сăвă тухнă. Ку çеç те мар: пурăна киле Тăрмитун мучин пĕр сăвви «Çурхи çеçкесем» ятлă кĕнекене кĕнĕ, умсăмахра та унăн ятне асăннă: пысăк шанчăк паракан, ӳссех пыракан хăйне майлă талант тенĕ...

Кĕркунне çитеспе Тăрмитун мучи — Д. Майский пурнăçĕнче тата пысăкрах событи пулнă: Ванюк-поч-

тальон ăна хитре бланк çине пичетленĕ çыру пырса тыттарнă:

«Хисеплĕ Д. Майский юлташ! Эпир сана çамрăк писательсемпе поэтсен республикăри канашлăвне чĕнетпĕр...»

Ак япала! Канашлăва чĕнеççĕ!..

Чăн та, малтанах çак çыру ăна кăштах хăратрĕ. Темиçе кун шухăшласа çӳрерĕ вăл: мĕн тăвас? Каяс-ши кунта, каяс мар-ши? Темрен тем пулса тухмĕ-ши? Кайăн та, писательсен пуçлăхĕсем эпĕ шкул ачи маррине, кĕреçе сухаллă мучи пулнине курĕç те — калаçасшăн та пулмĕç, ватă тесе, канашлăва та кĕртмĕç, малашне пичетлеме те пăрахĕç? Халь тин çырма пăрахма пултараймастăп ĕнтĕ эпĕ, çырас килтерекен чир ытла та шала кайрĕ...

— Э, мĕн пулать мĕн килет! — аллипе сулчĕ те вăл юлашкинчен, Альтяк инкене ик хуплу пĕçерттерсе, мунча хутса кĕнĕ хыççăн сухалне ик еннелле тураса уçса, автобус çулĕ çине тухса «сасăлама» тытăнчĕ...

Йышăнчĕç ăна! Канашлăва кĕртрĕç кăна мар, президиума суйласа чăн варрине кĕртсе лартрĕç. Сухалне яката-яката кăна ларчĕ вăл, мĕншĕн тесен докладчик хăйĕн докладĕнче унăн ятне те ырăпа асăнчĕ. Тепĕр кунне, ытти çамрăксемпе пĕрле, унăн сăнĕ хаçатра та тухрĕ.

Çапла вара, кĕтмен çĕртенех Тăрмитун мучи иккĕмĕш хут çамрăк çын пулса тăчĕ. Халь ĕнтĕ мĕн виличченех çамрăк пулать — шанчăк паракан çамрăк поэт. Майĕ пулнă пулсан, тен, вăл комсомола та кĕнĕ пулĕччĕ. Ватăлма майĕ çук халь унăн!

Анчах нумаях та пулмасть писательсен союзĕнчи пĕр хаяр çын, Консультант ятлăскер, ун патне çакăн пек çыру янă, теççĕ:

«Хаклă мучи Д. Майский! Сирĕн колхозра сад пур-и? Пур пулсан, çавăнта ĕçлеме тытăн-ха эсĕ. Йывăçсем ытларах ларт, улма-çырла ӳстер, уншăн сана хăвăр ялти пур стариксен мăнукĕсем те пĕтĕм чунтан тав тăвĕç. Кайран сан çинчен ырă кăмăлпа асăнса сăвăсем те çырĕç...»

Çав Консультант тенĕ çын питĕ тĕрĕс калана пек туйăнмасть-и сире?

1965




# Хăшне юратас?

*(Пĕр студент çырăвĕ)*

Тусăмçăм, Колька, чунтан-вартан юратнă шатраллă шуйттан!..

Кăварлă салам сана! Çĕр хут, пин хут салам!

Эпĕ-ха ку, Вася Влашкин. Ну, Влашка Ваççи, эппин...

Чăрмантарнăшăн каçар эс мана, ăçтиçука. Питĕ лайăх пĕлетĕп, сирĕн халь унта, Алтайра, çурăм хыçса илме те вăхăт çук. Эсир кăвак çутăпах хире тухатăр та сĕм-тĕттĕм пулса лармасăр та ĕçрен таврăнмастăр, пĕтĕм вăйăра хурса унта пуян тырпула пуçтаратăр. Эсир, чăваш студенчĕсем, хамăр халăх ятне чапа кăларса ĕçлени çинчен темиçе хут та савăнсах вуларăм ĕнтĕ, уйрăмах малта пыракансен ячĕсем хушшинче санăн ятна курсан вара, тупата туршăн, тăпăртатса ташласа илтĕм! «Ман тус Колька питĕ вăйлă ĕçлет»,— тесе пĕлтертĕм хамăрăн студенткăсене. Вĕсем

те чунтанах савăнчĕç саншăн, çĕклеме кĕрейми салам калама хушрĕç.

Шел, питĕ шел,— сирĕнпе пĕрле пыраймарăм. Эпĕ те — хам суккăртарах пулсан та — юлташсенчен юлмастăмччĕ ĕнтĕ. Эпир хресчен ачи-пăчи вĕт, тырра-пулла мĕнле тыткаламаллине лайăх пĕлетпĕр! Мĕн тăвас тетĕн, чирлерĕм-çке-ха вăл вăхăтра, йĕп-йĕпе тарланăскер сивĕрех шыва кĕтĕм те — кăвапа йĕри-тавра пĕр харăсах тăхăр çăпан тухса ларчĕ. Астăватăн пуль, хăвна уçса кăтартсан, эсĕ çавăнтах кравать çине йăванса кайса, ик аллупа варна тытса, урусемпе тапăлтатсах кулма тапратрăн...

— Уникум! Çĕр çулта пĕрре пулакан япала! Сан хырăм тирне касса илсе халех краеведени музейне памалла! — тесе ахăртăн.

Анчах эпĕ ун чухне выртса макăрма та хатĕрччĕ...

Ну, халĕ ку хурлăх тахçанах иртсе кайрĕ ĕнтĕ, халь ман хырăм мăлированнăй турилкке пекех яп-яка та тап-таса. Тен, çуралнă чух та ун пек пулман-и вăл...

Сывалса çитсенех, хăшпĕрисем пек ĕçсĕр сулланса çӳрес мар тесе, эпĕ хаçат редакцине кайса вырнаçрăм. Литература факультетĕнче вĕреннĕрен тата хам та хăш чух кăшт çыркаланăран, мана унта пĕр сăмахсăрах илчĕç,— çулла отпуска каякансем, пулла çӳреме юратакансем вырăнне ĕçлеме ĕнтĕ.

— Санăн хула тăрăх çĕн хыпарсем, тĕрлĕ информаци пухса çӳреме тивет,— терĕ секретарь.—Тепĕр чух çĕнĕ спектакльсемпе концертсем çинчен те çырмалла пулать... Çулла час-часах ытти тăванлă республикăсенчен тĕрлĕ ансамбльсем килеççĕ, вулакансене вĕсем пирки те каласа кăтартмалла...

Пĕчĕк ача хитре теттесемшĕн хĕпĕртенĕ пекех савăнса кайрăм çакнашкал «инструктажа» итлесе пĕтернĕ хыççăн! Эпĕ театршăн мĕнле çуннине пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ. Ялта вĕреннĕ чух манăн хамăн та чаплă артист е паллă юрăçă пулас ĕмĕт пурччĕ. Шупашкара килсен хама тĕрĕслеттерсе те пăхрăм эпĕ, анчах кӳренмелле пулчĕ: санăн хăлху çине упа пусса кайнă, «слух çук», терĕç. Çапах та куншăн эпĕ театра юратма пăрахмарăм. Астăван пуль, çĕнĕ спектакль пуласси çинчен пĕлсен, эпĕ ыран çиес çăкăр укçипех билет илеттĕм...

Халь вара ку тĕлĕшрен эпĕ кĕтмен çĕртенех рая кĕрсе ӳкрĕм, темелле, пурнăç кайрĕ манăн! Паян —

спектакль, ыран — концерт, виçмине цирк е пĕр-пĕр фокусник «куç пăвнине» кур. Пур çĕре те ахалех кĕрсе каятăн — манăн кĕсъере укçаран та вăйлăрах пĕчĕк çеç хăмăр кĕнеке пур: «спецкорреспондент!..»

Анчах та, тусăм Колька, темле ырă япалан та тŷнтер енĕ пур иккен çав! Çавăн пек «туйран туя» çŷресех асап-хурлăх тупрăм хам валли. Пĕр уйăх çурă ытла чĕрем вутпа хыпса çунчĕ, ларма-тăма та пĕлмерĕм, çĕрле выртсан, ыйхă килмерĕ, çиме ларсан, апат анмарĕ, çăра чей ĕçнипе кăна тытăнкаласа пурăнтăм...

Эсĕ, ку тĕлĕшпе манран опытлăрах çын, манпа мĕн пулнине чухласа илтĕн те пулĕ ĕнтĕ, вуланă май шăл йĕрме те тытăнтăн пуль-ха:

— Эпир кунта çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлетпĕр, çĕршыв валли миллионшар пăт тырă хатĕрлетпĕр, анчах пирĕн Влашка Ваççи, путсĕрскер, çав вăхăтрах темле çăвăр така пек кăтрашка пуçлă, пĕветсе лартнă туталлă та кĕске аркăллă майрушкă пирки антăхса вилсе кайма тытăннă... Ха-ха!

Ан кул, Колька, шăлна ан йĕр, мĕншĕн тесен: 1) ун пекки пĕлтĕр санăн хăвăн та пулса иртрĕ, виççĕмĕш курсри Маша Арзюкова пирки ухмаха ерсе кайса çине-çине двойкăсем илме тытăннине эпир пит лайăх астăватпăр; 2) эп сасартăк юратса пăрахнă хĕр — ашшĕ-амăшĕн ĕнси çине хăпарса ларса «а ну, пошол!» тесе хăвалакан ăратăран мар, вăл — стройкăра малта пыракан работница, штукатур.

Паллашасса эпĕ унпа ак çапла паллашрăм. Пĕррехинче театрта çамрăк строительсен каçĕ пулчĕ, мана çавăн çинчен репортаж туса пама хушрĕç. Анчах, хамăрăн мĕшĕлти фотографа пула, эпир кăштах кая юлса çитрĕмĕр. Çак хĕр президиумра комсомол обкомĕн секретарĕпе юнашар ларатчĕ. Куçăмсем витĕрех мар пулин те, эпĕ, иккĕмĕш ретрех ларнă май, вăл ытармалла мар хитрине лайăх куртăм. Чăп-чăмăр питлĕ, хуп-хура куçлă, тутисем çŷхе, шăлĕсем шап-шурă та тип-тикĕс... Чăн-чăн чăваш илемĕ ĕнтĕ!

— Çав хĕр — кам вăл? — ун çине тĕллесе ыйтрăм юнашар ларакан каччăран.

— Палламастăп, ăна президиума суйланă чух вăл тахăш СМУри штукатур тенине çеç илтсе юлтăм,— терĕ çак мана хирĕç.

— Хитре хĕрача...

— Аптрамасть...

— Чăваш-ши?

— Эрмен мар ĕнтĕ, куран — сăмси каçăр,— хуллен кулса илчĕ каччă.

Темшĕн-çке, пĕлместĕп, манăн çав хĕрпе тӳрех паллашас килсе кайрĕ. Пулать вĕт-ха çавăн пекки: çынна эсĕ пĕрререн-пĕрре куратăн, анчах санăн чуну çав самантрах ун патнелле туртăнма тытăнать. Магнит тимĕре хăйĕн патнелле туртнă пек...

Унтан çав тери кĕтмен япала пулса тухрĕ: пуху хыççăн концерт пуçланас умĕн çав хĕрача сасартăк манпа юнашар пушă вырăна пычĕ ларчĕ! Паллах, вăл ман çинелле çаврăнса та пăхмарĕ, тӳрех пирĕн умри ретре ларакан хĕрсемпе калаçма тытăнчĕ. Анчах эпĕ вара ăна питĕ хытă сăнаса лартăм...

Чăнах та ытармалла мар, кăмăллă хĕр иккен, хăямат. Пĕвĕпе пысăк мар, анчах çав тери тăп-тăп кĕлеткеллĕ, пичĕ-куçĕ — юмахри пикесен пек, сасси те çепĕç, кулли вара — чисти шăнкăрав! Вăл юлташĕсемпе калаçнă хушăра унăн ятне пĕлсе юлма та ĕлкĕртĕм — Анюк ятлă иккен. Анна... Чăваш хушшинче пит нумай тĕл пулакан ят ĕнтĕ ку, анчах та мана темшĕн пĕр çак хĕрача çеç Анна ятлă пулма пултарнă пек туйăнчĕ. Нина, Роза, Светлана тата ытти çавăн пек ятсем ун çумне ниепле те çыпăçас çук. Анна çеç пулма пултарать вăл!..

— Каçарăр,— терĕм çакна хуллен, вăл юлташĕсемпе калаçма чарăннă самантра,— президиумра эсир лартăр вĕт-ха?

Вăл ман çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ.

— Эпĕ... Мĕн вара?

— Нимех те мар... Эпĕ хаçатра ĕçлекен çын та, манăн сирĕн çинчен пĕлес пулать... Çырмалла...— мăкăртатма тытăнтăм эпĕ.— Сирĕн хушаматăр мĕнле-ха çав?

— Павлова Анна,— терĕ хĕр, çаврака куçĕсене мăчлаттарса.

— Хăш трестра ĕçлетĕр? Мĕнле ĕçре?

— СМУра. Штукатурсем эпир. Коммунизмла ĕç бригади пирĕн.

— Эсир бригадир пуль ĕнтĕ?

— Çук-ха, унтах çитеймен. Стройкăна килни те пĕр çулталăк кăна та-ха...

— Унччен ăçта пулнă?

— Унччен-и? Ялта вĕреннĕ. Пĕлтĕр вунă класс пĕ-

терсе тухрамăр та, райкомол пире стройкăна кайăр, терĕ...

— Питĕ аван ку! Стройкăсенче халь çав тери çын нумай кирлĕ...

Халь шутлатăп та, çавăн чухне эпĕ питĕ ухмаххăн курăннă ĕнтĕ, хĕр çине те ăнран тухса кайнă така куçĕсемпе пăхса ларнă пулмалла, ахальтен мар вăл, эп пăхнине тӳсеймесĕр, пуçне тепĕр еннелле пăрчĕ.

Антракт вăхăтĕнче эпĕ çапах та Аннапа пĕрле пултăм, ăна та, унăн икĕ юлташне те ирĕксĕрлесе тенĕ пекех лимонад ĕçтертĕм (вăтанаççĕ вĕт чăваш хĕрĕсем — буфет патне ним тусан та пырасшăн мар!..). Çав хушăра тата ытларах пĕлтĕм: вĕсен бригадинче йăлтах хĕрсем иккен, пурте çичĕ е вунă класс пĕтернĕскерсем, бригадирĕ кăна качча кайнăскер, хула Совечĕн депутачĕ, тет. Пурте пĕрле, общежитире, пурăнаççĕ, театра, концертсене те ялан пĕрле çӳреççĕ...

— Апла пулсан, авланма сирĕн пата пырас пулать-иç? — шӳтленĕ пек турăм та эпĕ, Анна юлташĕсенчен пĕри, сап-сар çӳçне арçын ачалла кастарнă, пĕрмай йăл-йăл-йăл кулса тăракан пысăк куçлăскер, ман çине пуçне чалăштарарах пăхрĕ те:

— Хăрамастăр пулсан, пырса пăхăр, анчах кайран ӳкĕнмелле ан пултăр! — терĕ. Хăй çавăнтах чăх-чăх-чăх кулса ячĕ.

— Çав териех хаяр-и вара эсир? Çыртмастăр пуль вĕт?

— Çыртасса çыртмастпăр та — хамăра кӳрентерме те памастпăр. Сирĕнпе, арçынсемпе, веле-селе пулма юрамасть вĕт. Ултавçăсем эсир пурте. Çавăнпа та, кам та пулин пирĕн бригада членне куç хывсан, ун патне чечек çыххисемпе духисем илсе пыма пуçласан, эпир, пурĕ пĕрле пухăнса, канаш тăватпăр: тивĕçлĕ çын-и вăл е хывăх вĕçтерекенскер кăна? Общежитие кĕртме юрать-и ăна, çук-и? Пĕркунне пĕрине ай-ай лайăх тăн кĕртрĕмĕр — ĕмĕр манмĕ, ӳлĕмрен ачи-пăчине те каласа парĕ!..

— Мĕншĕн вара ун пекех?

— Ӳсĕр пырса кĕчĕ пирĕн пата! Çитменнине тата, «хĕр çураçма килтĕм» тесе, ик çур литр кăларса лартрĕ. Тӳрех пăсăрлантарса кăларса ятăмăр ачана. Иккĕмĕш хутран чупса аннă чух пусма вĕçĕнче такăнса ӳксе кĕленчисене те шăнкăрттин! çĕмĕрсе пăрахрĕ. Коридор сарлакăшĕпе эрех юхрĕ çав...

— Ытлах-çке апла эсир...— кулам пекки турăм эпĕ.

— Çапла çав эпир! — пуçне ухса илчĕ сар çӳçлĕ хĕр.— Пирĕн пата çӳреме пĕлес пулать.

— Тавтапуç, эппин, асăрхаттарнăшăн!..

— Сывлăха пултăр!

Кайран, зала таврăнсан, Анюкпа каллех юнашар лартăмăр та, эп унтан:

— Мĕнле хĕрача, кам вăл сирĕн, çав сар çӳçли? — тесе ыйтрăм.

— Пирĕн бригадăри комсорг,— терĕ Анюк.— Леш ӳсĕр каччи шăпах ун патне пынăччĕ...

— Ай-вай, çирĕп кăмăллă хĕрача пулмалла!

— Пирĕн никам та çемçешке мар,— терĕ ман хĕр.— Ĕçре те, пурнăçра та хурçă пекех пулма тăрăшатпăр.

Çапла калаçнăçемĕн вăл мана ытларах та ытларах килĕшсе пычĕ. Чунăм ун патнеллех туртăнчĕ. Хуть те мĕн кала та эс мана, тусăм Колька, çав «пĕрре курсах юратса пăрахасси» — «любовь с первого взгляда» — пурах вăл, пур! Çав каçхине манпа шăп çавăн пек пулса тăчĕ, вилесле юратса пăрахрăм эпĕ çак çамрăк хĕре!..

Анчах манăн ĕçсем ăнсах пымарĕç çав. Концерт хыççăн эпĕ Анюка епле пулсан та килне çитиех ăсатса ярасшăнччĕ, театртан ăна хулĕнчен тытсах тухрăм — кăлăхах пулчĕ! Хĕрсене хăйсен автобусĕ кĕтсе тăратьмĕн. Пурте шăкăр-шакăр кĕрсе ларчĕç те — эпĕ хамăн хĕрпе сывпуллашма та ĕлкĕреймерĕм — кĕрлеттерчĕç кăна!

Ирчченех çывăраймарăм вара ун çинчен шухăшласа... Хăçан тĕл пулас-ши унпа тепре? Мĕнле çывăхрах паллашса туслашас? Кинора, театрта иксĕмĕр пĕрле пулас, канмалли кун Атăл леш енне каяс... Анчах çапла ĕмĕтленсе выртнă вăхăтрах хам çав тери ухмах пулнине ăнланса илтĕм: ара, манăн Анюк адресĕ те çук вĕт-ха! Тахăш СМУра ĕçлет, тахăш стройкăра! Общежитийĕ ăçта вĕсен? Мĕн пĕлетĕп-ха эп ун çинчен? Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те пĕлместĕп!

Павлова Анна... Штукатур. Комсомолка. Коммунизмла ĕç бригадин членĕ. Пĕтĕмпе те çавă çеç паллă маншăн...

Эх, пăхăр çамка, тăм писмен! Чăн та Влашка Ваççи ĕнтĕ!..

Хама хам хĕнесе тăкас патнех çитрĕм çав каçхине...

Ир пулчĕ, ĕçе кайрăм. Анюксăр пуçне, пуçра урăх нимĕн те çук манăн. Çынсемпе те калаçмастăп, çăвара шыв сыпнă пек. Асăрхарĕç çакна — мĕн пулнă сана, Влашкин, чирлемерĕн пулĕ-çке? — тесе ыйтаççĕ. Тем, кăштах пуç ыратать-ха, тетĕп.

Каçалапа Атăл хĕррине тухрăм. Халăх калле-малле кумать кăна, темиçе пин çын та пулĕ. Паллах, пуричен ытла — каччăсемпе хĕрсем. Пурте хаваслă, калаçаççĕ, кулаççĕ. Пĕр эпĕ кăна кикен çинĕ пек çӳретĕп. Анчах çав вăхăтрах хамăн куçсем ăста сыщикăнни пекех унăн та кунăн пăхаççĕ — Анюка шыраççĕ. Ара, кам пĕлет, тен, вăл та хăйĕн юлташĕсемпе çакăнта уçăлса çӳрет? Пулма пултарать вĕт ун пекки! Тепĕр чух этемĕн телейĕ хăй кĕтмен çĕртенех сиксе тухать-çке!..

Çук, курăнмарĕ. Киноран тухакансене те йĕркипех пăхса тăтăм, ку та ахалех пулчĕ. Унтан Крупская паркне кайса çӳрерĕм — усси çав-çавах пулмарĕ. Питĕ шутсăр кӳренсе таврăнтăм. Анчах ним тума та çук— хам айăплă!

Çавах та шанчăка çухатмарăм-ха. Ĕç хыççăн кашни каç Атăл тăрăх сулланса çӳретĕп. Пĕррехинче, чăнах та, куртăм хайхискере, анчах... автобус чӳречи витĕр кăна. Эпĕ Атăл хĕрринелле утаттăм, автобус площаделле килетчĕ. Хĕре курсанах, манăн чĕре сӳ! туса илчĕ. Вăл та мана палларĕ пулас та, шап-шур тикĕс шăлĕсене кăтартса, кăмăллăн кулса, пуçĕпе сулса иртсе кайрĕ... Ах, пĕлесчĕ санăн эпĕ çав самантра епле пăлханса кайнине!..

Анюк ман тĕлпе çăмăл çунатлă кайăк пек вĕçсе иртсе кайрĕ çеç пулин те, чĕрене тепĕр хут хускатса, ман юратăва тата ытларах хĕрӳллентерсе хăварчĕ.

— Тупатăп! Епле пулсан та, тупатăп эп ăна, çĕр айĕнчен чакаласа кăларатăп! — терĕм вара хама хам, темле пит паттăр ĕç тума хатĕрленнĕ пекех шăла çыртса, чышкăсене чăмăртаса.— Çав хĕре шыраса тупас мар-тăк — çĕр çинче те пурăнас мар!..

Мĕншĕнне пĕлместĕп, анчах малтанхи вăхăтра эп ăна ăçта та пулин театртa, кинора е концертра тĕл пуласса шаннăччĕ. Çавăнпа та кашни каçах ăçта мĕн кăтартаççĕ — пур çĕре те çитеттĕм. Вунă кун пĕр лăш курмасăр чупрăм çавăн пек — Анюкăн тĕсĕ те курăн-

марě... Çук, капла май килмест, ăна ěçре, стройкăсенче шырас пулать, тесе шут турăм вара çавăн хыççăн.

Анчах, ним тěлли-паллисěр, адрессăр шыраса пăхха эс Шупашкарти стройкăсенче пěр-пěр çынна! Хăвах пěлетěн вěт-ха, мěн чухлě çěнě предприяти, пурăнмалли çурт, шкул, больница тата темтепěр тăваççě пирěн хулара! Хуть те ăçталла пăхсан та, башеннăй крансем пěлěтелле кармашса тăраççě, ăçта çитнě унта нумай хутлă корпуссем купаланаççě. Миçе пин çын ěçлет пуль çав стройкăсенче!..

Çапах та эп пуçа усмарăм. Тěрěссипе каласан, эпě вăл хушăра вăтам ěмěрсенчи рыцарь пек пулса тăтăм. Ара, лешсем хăйсем юратнă хěрарăмшăн тем тума та хатěр пулнă вěт-ха, пин-пин çухрăмлă походсене те çӳренě, шыва та, вут ăшне те кěрсе кайнă. Ан кул, ан ахăр, Колька! Чăн та, çапла!

— Манăн стройкăсенче ытларах пулас килет,— терěм редакци секретарьне, пěр ирхине ěçе пырсан,— балеринăсемпе упасем мěнле ташлани çинчен çырса йăлăхрăм...

— Ырлатăн ку шухăша,— терě вăл,— стройкăсенче халь шăпах чи хěрӳллě вăхăт... Кěрлеттер!

Пуçларăм вара... Чăн малтан «тарăн разведка» турăм: Шупашкарта миçе СМУ? Вěсем хăш-хăш объектсене тăваççě? Унтан çывăхарах пытăм: штукатурсен бригадисем миçе вěсен? Çак самантра хăш бригада ăçта ěçлет? Чăн юлашки пункт вара — хамшăн чи кирличчě: бригадăра Павлова Анна ятлă хěр пур-и?

Эх, Колька, куласса кулатăн та эсě (эп ăна пěлсех тăратăп!), анчах сана хăвна хушасчě çак пархатарсăр ěçе!.. Пěр уйăх чупрăм вěт ирне-каçне пěлмесěр, шалт хăшкăлтăм! Каçхине, общежитие таврăнсан, пěр пушмакне хыватăп, анчах теприне хывма та ěлкěрейместěп, çаплипех çывăрса каятăп. Эпě пěрмай хам валли савăнăç шырарăм, анчах ун вырăнне кашни кун тенě пекех кӳренмелли кăна тупăнса пычě!..

Итле акă. Çитетěп пěр-пěр стройкăна, аслине шыраса тупатăп — прораба-и унта, бригадира-и е кама та пулин урăххине-и. Паллашатпăр, калаçма тытăнатпăр.

— Сирěн кунта хальхи вăхăтра штукатурсем ěçлеççě-и?

— Ěçлеççě.

— Коммунизмла ěçлекен бригада-и? Хěрсем-и?

— Так точнă. Хĕрсем. Коммунизмла бригада.

— М-м... Павлова Анна ятлă хĕр пур-и вăл бригадăра?

— Павлова?.. Павлова пур, анчах та Анна мар, Маргарита.

— Мана Анна кирлĕччĕ...

— Санăн çывăх палланă хĕрӳ пуль ĕнтĕ вăл? — куçне хĕссе илет чеерех прораб, уссийĕсене пĕтĕркелесе.— Шел, анчах нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп... Каçарăр.

Тепĕр стройкăна çитетĕп — унта та Павлова штукатур пур, комсомолка, коммунизмла ĕç ударникĕ, анчах та каллех Анна мар — Серафима. Унтан Леонилăсем, Феофилăсем, Маринесемпе Кулинесем, Розăсемпе Музăсем нумай тупăнчĕç. Пурте Павловăсем, пурте ытармалла мар хĕрсем, нормăсене икçĕршер процент çапаççĕ, анчах пĕри те... ман валли мар! Мана Анна кирлĕ, пĕр Анна çеç! Анчах вăл — çук...

Çапах та юлашкинчен телей ман еннелле çаврăннă пек пулчĕ. Вунçиччĕмĕш стройкăна çитсен, çамрăк кăна техник-строитель, хĕвел çинче вутпуççи пек çунса тăракан хĕп-хĕрлĕ çӳçлĕ хĕр, мана савăнтарсах пăрахрĕ.

— Павлова Анна? Пур пирĕн ун пекки, пур! — терĕ вăл.— Тĕп-тĕрĕс ыйтатăр, штукатур. Комсомолка. Вунă класс пĕтернĕ... Çапла, çапла, коммунизмла бригадăра. А-ав çавăнта, çӳлте ĕçлеççĕ вĕсем. Атьăр, халех тупса паратăп!

Улттăмĕш этажа мĕнле хăпарнине те пĕлместĕп. Тĕлĕкри пек пытăм пулмалла. Чĕре пант-пант-пант! тунине çеç астăватăп. Ара, епле пăлханмастăн-ха? Çавăн чухлĕ шыранă хыççăн тинех тупрăм пулать те хамăн чун хыптармăшне!..

— Павлова-а! Аня-я! — кăшкăрчĕ вутпуççи, эпир кирлĕ çĕре çитсен.— Ăçта э-эс? Кил-ха кунта-а!

— А-а-а! — янраса кайрĕ этажри пуш пӳлĕмсем тăрăх. Вăрманти пек!

Эпир урам евĕр анлă коридор тăрăх утрăмăр. Ик енче те хапха сарлакăш алăксем. Шкул тăваççĕ иккен кунта. Техник кашни алăкранах пуçне чике-чике пăхрĕ.

— Аня-я! Павлова-а!..

Кĕç пĕр пӳлĕмрен кăвак комбинезон тăхăннă, извеçпе-мĕнпе вараланса пĕтнĕ сап-сар хĕр сиксе тухрĕ.

— Кам чӗнет мана? Эсир-и, Ирина Афанасьевна? — йӑлт-ялт пӑхкаласа илчӗ вӑл пирӗн ҫине шухӑ куҫӗсемпе.

— Акӑ, сана ҫак юлташ курасшӑн,— пуҫӗпе ман еннелле сулчӗ хӗр-техник.— Редакцирен...

— Каллех редакцирен-и? Ай-уй, пире виҫӗмкун ҫеҫ ӳкерсе кайрӗҫ-иҫ! Пирӗн ҫинчен кун сиктерсе ҫырсан, ыттисем валли вырӑн юлмӗ тата! — ахӑлтатсах кулса ячӗ сарӑ хӗр.

Эпӗ хама такам вӗри шывпа сапнӑ пек тӑтӑм. Шыраса-шыраса, тупрӑм пулать Павлова Аннана! Акӑ вӑл, ман умра... Ним те калаймӑн, хитре. Ытармалла мар. Ҫырла! Пӗр ҫӑвар шывпа сыпса ямалла. Каччӑсем вилсех каяҫҫӗ ӗнтӗ уншӑн. Анчах мана мӗн тума кирлӗ вӑл? Эхх!..

— Каҫарӑр, йӑнӑш пулнӑ,—терӗм кӑшт тӑрсан...— Эпӗ... урӑх Павловӑна шыратӑп. Мана... урӑххи ҫинчен ҫырма хушнӑ... Сыв пулӑр!

Ҫаврӑнтӑм та утрӑм.

Ну, мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ манӑн? Татах шыраса пӑхас-и е... сурас пӗрех хут?

Чӗре иккӗлле хушма пуҫларӗ. Пӗрре — сур, тет, тепре — ан сур, кун чухлӗ тертленнине сая ярас мар, ӗҫе вӗҫнех ҫитерес пулать, тет. Атя, терӗм вара, шыраса пӑхам тепӗр темиҫе кун!

Каллех тытӑнтӑм ҫӳреме... Чи инҫетри стройкӑсенче пултӑм. Вара мӗн тетӗн-ха эс? Ҫичӗ кун хушшинче ҫичӗ Анна Павлова тупрӑм. Пурте штукатурсем, пурте питӗ маттур хӗрсем, вуншар класс пӗтернӗ, хӑшӗсем каҫ-каҫ строительсен техникумӗнче вӗренеҫҫӗ. Ҫав тери юратмалласкерсем, ӗлӗкхи пек каласан, тыт та тӳрех венчете илсе кай! Ӑҫта, хӑш вӑхӑтра ҫуралса ӳсме ӗлкӗрнӗ-тӗр ун пек чаплӑ хӗрсем, тӗлӗнсе каймалла! Ӗҫӗсем пирки каламалли те ҫук—ӗҫ ҫунса кӑна тӑрать вӗсен аллинче! Ӗҫне кура, паллах, укҫине те пит лайӑх илеҫҫӗ, тепӗр инженертан та ирттереҫҫӗ. Пултаруллӑ халӑх, пӗр сӑмахпа каласан!

Ҫав Анна Павловӑсенчен чылайӑшӗ ҫинчен хаҫатра ҫыра-ҫыра кӑлартӑм эпӗ. Унсӑрӑн секретарь кун ҫути памасть-ҫке-ха мана, ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫӳретӗн пулсан, материал туса кил!

Анчах хам юратнине, чӑн-чӑн Анна Павловӑна ҫав-ҫавах тупаймарӑм-ха. Шанми те пулса ҫитрӗм унӑн йӗрӗ ҫине ӳкессе. Суйрӗ пуль вӑл мана, ниҫта та

ĕçлеменскер пулнă пуль вăл, тесе иккĕленме те пуç-ларăм...

Çук, аплах мар иккен. Чăн юлашкинчен вăл та тупăннă пек пулчĕ. «Тупăннă пек» тетĕп ĕнтĕ, мĕншĕн тесен эп ăна хăйне мар, унăн портретне çеç куртăм. Хуларан пĕр вунпилĕк километрти стройкáра, хисеп хăми çинче, çакăнса тăратчĕ унăн ытарайми сăнĕ, йăл-йăл кулать, куçĕсенчен вут-хĕм сирпĕнсе тăнăн туйăнать.

Паллах, ман чĕре те кăвар пекех пĕçерсе кайрĕ. Иртсе пыракан икĕ хĕре тытса чартăм та хăвăрт-хăвăрт тĕпчеме тытăнтăм:

— Çакă вăл — Павлова Анна вĕт? Çапла-и?

— Çавă,— терĕç хĕрсем.

— Штукатур? Коммунизмла ĕç бригадинчен?

— Тĕрĕс, ним чухлĕ те йăнăшмастăр...

— Халь ăçта-ши вăл? Ăна тупса курма пулать-ши? Манăн унпа темиçе сăмах калаçса илмелли пурччĕ...

Хĕрсем пĕрне-пĕри куçран чăр-р... пăхса чеереххĕн кула-кула илчĕç.

— Çук-ха вăл халь, ăна виçĕ кунлăх отпуск панă,— терĕ унтан пĕри.— Киле кайнă...

— Тем пулнă-им килĕнче? Хуйхă-суйхă-и?

— Çук, хуйхă мар, пысăк савăнăç унăн,— терĕ тепри.— Качча кайрĕ вăл пирĕн!

— Качча?! — Эп чĕлхене нăтăрт! çыртса лартрăм.

— Ийййа çав. Унăн чун савни салтакран таврăннă та... Туйне ялта, ашшĕ-амăшĕ патĕнче тăваççĕ, çавăн пирки отпуск ыйтса илчĕ. Çын авланнă е качча кайнă чух ăна отпуск памалли саккун пур...

Манăн сасартăк ура вăйĕ пĕтсе килчĕ. Лак! лартăм темле чул çине. Нума-ай лартăм вара ним хускалма-сăр. Хамăн пуç чан çапнă пек янраса тăчĕ.

Качча кайнă... Анюк качча кайнă... Тупрăм пулать хам мĕн шыранине! Маттур, Влашка Ваççи, кăвар чĕре, ку чухнехи рыцарь! Ух... ...махх! Тăм... пуç! Юратнă хĕре куçран вĕçертмеççĕ ăна!

Хама хам чăнт-чант! çупса ятăм çилĕ килнипе...

Çапла вĕçленчĕ манăн юрату, тусăм Колька. Пĕр эрне сĕрĕмри пек çӳрерĕм. Анчах кайран çапах та пуçăм майĕпе уçăлма пуçларĕ. Пĕри качча кайнă пулсан, ман валли урăх Анюксем çук-и-мĕн, терĕм. Анюксем те, Павловăсем те нумай. Пурте маттур, пурте хитре.

Ёҫре те питӗ хастарлӑ! Анчах вӗсенчен хӑшне юратас? Ҫакӑ халлӗхе паллӑ мар-ха маншӑн...

Ну, кун ҫинчен эпир санпа эс киле таврӑнсан калаҫӑпӑр.

1961

## ҪАКӐН ПЕК ТЕ ПУЛКАЛАТЬ, ТЕТ...

Малтан Иванов (Петров, Сидоров...), ытла чаплах мар пулин те, литератор пулнӑ, кӗнекесем те ҫыркаланӑ, теҫҫӗ, анчах кайран лит-оратор пулса тӑнӑ: хӑй нимӗн те ҫырман, ҫынсем ҫырнине тиркенӗ те мӗнле ҫырмаллине вӗрентнӗ, ҫавӑн пирки хӑна пысӑк писатель тесе шутланӑ.

* * *

Хӑшпӗр писательсем кӗнеке ҫырма лариччен малтан рецензент тупса хатӗрлеҫҫӗ, тет.

* * *

Авалхи пурнӑҫ ҫинчен ҫыра-ҫыра, М. писатель хӑй хӑш вӑхӑтра пурӑннине те маннӑ, тет.

* * *

— Алкоголизмпа кӗрешетӗп!—тенӗ те Микулккай писатель, ҫине тӑрсах «Черккей» ятлӑ повесть ҫырса пӑрахнӑ.

* * *

Комеди лартнӑ каҫ театрта питӗ лӑпкӑ пулнӑ: курма пынисем пӗрремӗш акт пӗтичченех ҫывӑрса кайнӑ.

* * *

Сцена ҫинче спектакль тӑршшипех эрех ӗҫнине кӑтартнӑ пирки куракансем те ӳсӗрӗлсе кайнӑ.

* * *

Ӑнсӑртран илтнӗ калаҫу:

— Каҫ-каҫ ыйхӑ килменнипе аптратӑп. Ҫывӑратакан порошоксем те пулӑшмаҫҫӗ. Тем тумалла?

— Ун пек пулсан, эсӗ каҫ выртсан «Паттӑрсем ыйӑхӑ парӑнмаҫҫӗ» ятлӑ романа вула. Питӗ пулӑшать — наччас ҫывӑрса каятӑн!

* * *

Хуть те ӑҫта та — хӑнана кайсан та, банкетсенче те — Н. писатель ҫын сывлӑхӗшӗн ӗҫнӗ. Ҫавна пула сывлӑхне пӗтерсе хунӑ та хӑйӗн юбилейӗнче те тӑп-тӑр урӑ ларнӑ.



# Çичĕ мăшăр çăпата

*(Режиссер каласа пани)*

Тĕрĕссипе, çак пĕтĕм истори пирĕн театрти реквизитор Мамайкин пирки пулса иртрĕ...

Реквизитор камне эсир пĕлейместĕр те пулĕ-ха, çавăнпа та малтанах ун çинчен ăнлантарса парам сире. Театрта питĕ паллă çын вăл. Пысăк пуçлăх тесен те йăнăш пулмасть, мĕншĕн тесен сцена çинчи пĕтĕм чаплă пурлăх унăн аллинче: фанертан тунă хаклă йышши сĕтел-пуканĕ те, марлĕрен майлаштарса тунă пысăк тĕкĕр-трюмосем те, хăмаран касса кăларнă кинжалсемпе пăшалсем те, шыв тултарнă шампанскипе коньяк кĕленчисем те, тата ытти те — пурте, пурте ун аллинче. Орденсемпе медальсем те тĕрлĕренех пур унăн, кирлех пулсан — Ылтăн Çăлтăрсем те тупăнаççĕ.

Кĕскен каласан, сцена çинче вылянă чух артиста мĕнле хатĕр-хĕтĕр кирлĕ — реквизиторăн çакна пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах тупса памалла. Унсăрăн май

килмест, унсăрăн пĕтĕм спектакль пăсăлса кайма пултарать. Ара, хăвăрах чухламалла: артист сцена çине хуткупăс вырăнне çĕтĕк параппан е чечек çыххи вырăнне мунча милĕкĕ йăтса тухма пултараймасть ĕнтĕ. Скандал вĕт ун пек пулсан, курма пынă халăх спектакль хыççăн мĕнпур кăмăлтан алă çупас вырăнне сцена çинелле çĕрĕк панулми персе саламлама пултарать!..

Анчах пытарма çук, пулкалать тепĕр чух...

Сăмахран, иртнĕ сезонра пирĕн Мамайкин пĕр спектакльре вунсаккăрмĕш ĕмĕрти чăваш хĕрĕсене нипоччом хальхи пăта пек çинçе те çӳллĕ, леш «шпильки» текен кĕлеллĕ туфлисемпе выляттарчĕ. Паллах, курма пынисем çак килĕшӳсĕр япалана тӳрех асăрхарĕç, кулма тапратрĕç... Антракт вăхăтĕнче ман пата колхозри икĕ комсомолец пычĕç те тӳсме çук тăрăхласа илчĕç:

— Режиссер юлташ! Вунсаккăрмĕш ĕмĕрте чăваш хĕрĕсем кун пек туфлисемпе çӳренĕ пулсан, ун чух радиолăсем те пулнă-тăр? Мĕн тума-ха, эппин, сцена çинче артистсене шăпăр каласа ташлаттаратăр? Ямаллаччĕ радиола — Шупашкарти ташă площадкинчи пек. От, вайлă пулатчĕ!..

— Кун пек çулпа кайсан, эсир Пугачев салтакĕсене танксем çине лартма та пултаратăр пуль?

Манăн пит-куç вут пек пĕçерсе кайрĕ, пĕр минут хушшинчех лачкам тара ӳкрĕм. Намăс! Тӳсме çук намăс вĕт!.. Пăх-ха эс, ялти сар туталлă йĕкĕтсем мана, театрта çирĕм çул ытла ĕçленĕ режиссера, сцена çинче историлле тĕрĕслĕхе пăснăшăн айăпласçĕ, манран куç умĕнчех кулаççĕ! Ак, пурнăç еплерех çаврăнса тухрĕ...

Анчах та хирĕç нимĕн калама та çук — йĕкĕтсен сăмахĕсем тĕп-тĕрĕсех.

— Эх, ку Мамайкина!..— Манăн чышкăсем хăйсемех чăмăртанчĕç, шăла шатăртаттарса илтĕм. Пĕлетĕпçке-ха, çак намăса пĕр унăн айăпĕпе кăна курмалла пулчĕ пирĕн, пĕтĕмпех çав туса хучĕ! Колхоза спектакль лартма тухса каяс умĕн вăл хăйĕн реквизит ещĕкне çăпатасем пăрахса яма маннă ĕнтĕ. Ахальтен мар ăна пирĕн артистсем юлашки вăхăтра Мамайкин вырăнне Манайкин теççĕ.

Тепĕр кунне ирех эпĕ кун çинчен директора каласа патăм та, вăл манран та хытăрах çилленсе кайрĕ.

— Ав епле ĕçлеме пуçларăмăр, эппин! Ав епле искусство кăтартатпăр колхозниксене! Ял кулли! Теп-

ринче, тен, авалхи чăваш хĕрĕсене сцена ҫине балеринăсем пек тумлантарса кăларăпăр? Каччисене хальхи стиляжкăсем пек тăхăнтартăпăр?.. Ăҫта вăл фокусник, чĕнсе килĕр-ха часрах, эпĕ ăна ҫак минутрах хăйĕн ирĕкĕпе ĕҫрен тухма заявлени ҫыртаратăп!..

Мамайкин директор умĕнче ни чĕрĕ, ни вилĕ тăчĕ.

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, мĕн туса хутăн ĕнер, ҫавна чухлатăн-и? — ҫилĕпе, шăл витĕр ыйтрĕ директор.

— Айăплă, Пимен Фомич,— пăшăлтатса илчĕ Мамайкин, директор мĕн пирки каланине тӳрех ăнланса.

— Кала-ха эсĕ, ĕнер ӳсĕр пулнă-и? Е гастроле тухса каяс умĕн арăмупа ҫапăҫрăн-и? Хĕрсем сырса тухмалли ҫăпатасене мĕн пуҫпа манса хăвартăн?

Мамайкин, хĕсĕк куҫĕсене мăч-мăч-мăч тутарса, ассăн сывласа ячĕ.

— Эп вĕсене манса хăварман, Пимен Фомич...

— Епле манса хăварман? Ăҫта пулнă-ха вĕсем? Мéншĕн, эппин, артисткăсем пурте пата пек кĕлеллĕ туфлисемпе вылянă? Ай, эсĕ тĕплĕ хума пĕлмесĕр, ҫăпатисене ҫул ҫинче акса хăварнă-и?

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич...

— Мĕн шуйттанле тата? Кала! Мĕн ман пуҫа минретсе тăратăн?! — пушшех ҫилленсе кайрĕ директор.

Мамайкин, пĕр хуша каллех куҫĕсене мăчлаттарса, тем аса илме тăрăшнă пек пулса тăчĕ те:

— Ҫăпатисене эпĕ астунă ҫĕртех, юри хăвартăм,— терĕ.

— Юри?! — кресло ҫинчен яштах сиксе тăчĕ директор.— Вара ҫăпатасем вырăнне леш туфлисене хурса ятăн-и? Апла эсĕ ятарласах сăтăр тăвас тенĕ?

— Ҫук, Пимен Фомич, нимĕнле сăтăр тăвас шут та пулман манăн! Пулман япалана пулнă тесе калама юрамасть ĕнтĕ...— Мамайкин халь кăшт хăюллăрах калаҫма пуҫларĕ.— Туфлисене эп саппаслăх илтĕм, ăнсăртран леш «Пĕр уйăхра вăтăр туй» текен лăпăрти комедие те лартма пултараҫҫĕ тесе. Ку халтура валли декорацисем кирлĕ мар вĕт-ха, пĕркун Янсакассинче ăна икĕ шăналăк хушшинчех пит лайăх кăтартрăмăр...

— Эс пирĕн репертуар политикине ан хутшăн,— тӳрех пӳлчĕ ăна директор,— сцена ҫинче вăтăр туй пулать-и, аллă-и, ҫĕр-и,— санăн ĕҫ ҫук унта. Эс мана ҫăпата пирки каласа пар!

— Чимĕр-ха, Пимен Фомич, эсир мана ахалех айăплама пăхатăр. Эпĕ театра сиен мар, усă тăвас тенĕ.

Эсир авӑ, чӑваш писателӗсене хальхи пурнӑҫ ҫинчен пьесӑсем ҫыртарайманнипе, каллех темле юмах тӑрӑх ҫырнӑ ҫӑпаталлӑ спектакль хатӗрлетӗр вӗт-ха, кӗҫех премьера пулмалла. Ҫавна асра тытса, эпӗ хайхи ҫаппа шут турӑм: ҫӗнӗ спектакль валли пурпӗрех пӗр вӑтӑр мӑшӑр ҫӑпата туянмалла, апла пулсан, ма-ха манӑн ҫав пушӑт изделине хуларан сӗтӗрсе каяс? Яла ҫитсен, пӗр наччасрах хама кирлӗ чухлӗ ҫӑпата илетӗп те артисткӑсене пурне те ҫӗнӗ ҫӑпата сыртаратӑп... Тӗрӗс шутланӑ-и эпӗ?

— Ну, тӗрӗс, тейӗпӗр. Анчах ялне ҫитсен вара кун ҫинчен манса кайрӑн-им? — каллех хаярланма пуҫларӗ директор.

— Ҫук, манман.

— Ма илмерӗн, эппин, артисткӑсене ма туфлипе кӑлартӑн?

— Тупаймарӑм!

— Мӗн тупаймарӑн?

— Ҫӑпата тупаймарӑм. Пӗр мӑшӑр та илеймерӗм. Ҫавӑнпа туфли тӑхӑнтармалла пулчӗ те. Юрать, артисткӑсене сцена ҫине ытла ҫара уран кӑларниех мар, терӗм...

Директор ҫакӑн хыҫҫӑн хӑйне ҫамкинчен сасартӑк тукмакпа ҫапнӑ пекех пулса ларчӗ.

— Эс мӗн... эс мана ухмах вырӑнне хуратӑн-и е манпа шӳт тума хӑтланатӑн? — кӑшкӑрса ячӗ вӑл унтан, кӑштах тӑна кӗрсен.

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич,— терӗ Мамайкин, вӑл кӑшкӑрнинчен ним хӑрамасӑр.— Тӗп-тӗрӗсне калатӑп...

— Манӑн вара эс каланине ӗненес пулать-и? Ҫав териех тӑм пуҫ мар-ха эпӗ, тусӑм! Чӑваш ялӗнче ҫӑпата ҫук пулать вара, ха! Ӑҫта кайса кӗнӗ-ха вӑл?

— Ӑҫта кайса кӗнине пӗлместӗп, анчах ҫуккине тӗп-тӗрӗс пӗлетӗп ӗнтӗ, хам шыраса куртӑм...

— Ан лӑпӑртат! Пирӗн чӑвашсем ӗмӗр-ӗмӗр ҫӑпата туса пурӑннӑ, чӑваш ҫӑпати пӗтӗм Раҫҫейӗпе чапа тухнӑ, Пӗрремӗш Петр патша Питӗр хулине тунӑ чух унта ӗҫлекенсем валли ятарласа чӑвашсене ҫӑпата тутарнӑ пулать те...— хӗрӳллӗ лектор пекех янрама тапратрӗ директор, анчах халь ӗнтӗ хӑюлланса ҫитнӗ Мамайкин ӑна пӳлсе лартрӗ.

— Тӗрӗс, Пимен Фомич, пӗтӗмпех тӗрӗс! Пӗр композитор, ҫӑпатана мухтаса, гимн ҫырнине те пӗлетӗп.

Апла та пулнă, капла та пулнă... Анчах эсир пĕр япалана манса каятăр — халь Петĕр патша вăхăчĕ те мар, Микулай патша самани те мар, Октябрьти революци пулнăранпа çур ĕмĕр ытла иртрĕ.

— Мĕн вара, çавăншăн çăпата пĕтсе ларнă-им пирĕн?

— Пĕтнĕ, Пимен Фомич!

— Суя! — парăнасшăн пулмарĕ директор.— Ак, халь тесен халь тухса каятăп та ыранччен çĕр мăшăр, пин мăшăр тупатăп! Вагон тиесе килетĕп!.. Мĕн, тиесе килейместĕп, тетĕн-им?

— Кайса пăх ара, кайса пăх...—терĕ Мамайкин.— Питĕ лайăх пулĕччĕ! Эсĕ акă пирĕн патра вунвиçĕ çул директорта ларатăн, анчах çав хушăра Кӳкеçе те çитсе курмарăн пулас-ха...

— Вăл ниме те пĕлтермест! Республика пурнăçне эпĕ хаçатсем тăрăх та пит лайăх пĕлсе тăратăп! — куçĕсене çутăлтарса илчĕ директор.

— Пулĕ, пулĕ, анчах эпĕ çăпата çинчен çырнине пĕрре те курман ку таранччен. Атă-пушмак мĕн чухлĕ туса кăларни çинчен чăнах та час-часах çыркалаççĕ...

— Ерунда! — аллипе сĕтел çине çат! тутарчĕ директор.— Лайăхрах шыранă пулсан, çичĕ мăшăр çăпата тупма пултарнах эсĕ.

— Ах, Пимен Фомич!..— Халь ĕнтĕ Мамайкин тарăхма пуçларĕ.— Епле çав териех ăнланман çын эсĕ?! Калатăп вĕт-ха: шырарăм! Клуб пуçлăхĕпе пĕрле çак колхоза кĕрекен виçĕ ялне те çитрĕмĕр, ĕмĕр-ĕмĕр çăпата туса сутса пурăннă шур сухаллă стариксене те веçех тĕрĕслесе тухрăмăр — ним усси те пулмарĕ! Хайсем те пурте атă тăхăннă...

Директор хайхи Мамайкин çине татах тĕлĕнерех тинкерсе пăхрĕ.

Пĕр хушă шăп пулчĕ.

— Мĕн вара... Çăпата тума чарман пулĕ-çке? Эп хам ун пек указ тухнине астусах каймастăп...

— Кам чартăр?—ал сулчĕ Мамайкин.—Çăпата — сăмакун мар вĕт вăл, никама та сиенех кӳмест.

— Ма тумаççĕ-ха, эппин, ăна?

— Кирлĕ мар, теççĕ! Атă-пушмакпа çӳреме лайăхрах, теççĕ. Чăрмавĕ те çук, илемли те илемлĕ, шанчăклăрах та тата: шыв-шурта урана йĕпетсе чирлесе ӳкместĕн.

Директор шухăша кайрĕ...

— Неушлӗ ҫавӑн пекех вара, Мамайкин юлташ? Чӑваш яленче ҫӑпата тупса илмелле мар пулать?.. Хурлӑх вӗт ку!

— Мӗншӗн хурлӑх пултӑр? — тӗлӗнчӗ Мамайкин.— Ман шутпа, куншӑн пӗртте хурланмалла мар, савӑнмалла ҫеҫ! Ҫынсем ҫӑпата сырма пӑрахса атӑпушмакпа кӑна ҫӳрени вӗсен пурнӑҫӗ лайӑхланнине пӗлтерет пуль?..

— Ӑна пӗлетӗп-ха, эс ан вӗрентсе тӑр, уншӑн каламастӑп эпӗ...— Директор, ассӑн сывласа ярса, ҫамки ҫинчи тарне шӑлса илчӗ.— Пирӗн кӑҫал тата виҫӗ историлле пьеса лартмалла вӗт-ха! Пӗр лав ҫӑпата кирлӗ пулать. Мӗн тӑвӑпӑр?

— Вӑл пьесӑсене лартмӑпӑр та — хуйхи те пулмасть! — тесе хучӗ Мамайкин.— Драматургӗсене приказ парӑпӑр: ҫитӗ сире ҫӑпаталлӑ пьесӑсем кун чухлӗ ҫырнипе, малашне пушмак тӑхӑнса ташламаллисене ҫырӑр, тусӑмӑрсем!

...Мамайкина эпир ним те тумарӑмӑр. Ӗҫрен кӑларма мар, ятлама та май килмерӗ ӑна.

1962



# Хӗр шыратпӑр

*(Санюк инке калавӗ)*

...Эпӗ те ӗнтӗ, пурин пекех, хӗр пулса курнӑ, вунсаккӑр-вунтӑххӑрта чух, ҫуркуннехи-ҫуллахи вӑхӑтсенче, хапха умӗнче е пӗр-пӗр ватӑ йӑмра айӗнчи пӗренесем ҫинче ҫур ҫӗрччене каччӑпа ыталанса, унӑн ӑшшине туйса, хамӑн чӗре пӑлханнипе кӑлт-кӑлт тапнине илтсе, сахал мар ларнӑ. Питӗ лайӑхчӗ ҫавӑн пек ларма, астӑватӑп. Каччи ыталать сана, ачашлать, чӗре ирӗлсе каймалла сӑмахсем калать. Хӑш чух тул та ҫутӑлма пуҫлать, анчах ҫаплах киле кӗрес килмест санӑн. Киле час таврӑнманшӑн анне йӗтӗрпе юна-юна вӑрҫни те, кӑтра ҫӳҫӗмрен туртни те пулкалатчӗ, атте пӗр-икӗ хутчен чӗн урхалӑхпа ачашласа илнине те астӑватӑп пӑртак.

Хамӑн тантӑшсемпе пӗрле Шупашкарти пысӑк ҫуртсем тунӑ ҫӗре ӗҫлеме килсен, хамӑн пулас старикпе паллашрӑм та, кашни каҫах хулран хул кӗлентӗр

пек çакланса Атăл хĕррипе те, урамсем тăрăх та тем териех çӳреттĕмĕр. Халь ĕнтĕ вăрçакан та, урхалăхпа тăн кĕртекен те çукчĕ те, çӳре-еттĕмĕр вара ураран ура иртми пуличчен! Паллах, утсан-утсан ларса та канаттăмăр, ларсан-ларсан чуптукаласа та илеттĕмĕр, унсăрах мар ĕнтĕ,— ман Терентти чуптума питĕ юрататчĕ, пăру пекех çуллатчĕ пĕр пуçласан.

...Анчах тиркемелли, кирлĕ-кирлĕ марри пирĕн хушăра нимĕн те пулман. Хама хам çирĕп тытаттăм, хут уйăрса саккуна кĕриччен — ни-ни-ни! теттĕм. Терентти ытлашширех иртĕнме пуçласан, ун аллисене наччас каялла пăрса лартса сăмсинчен шак! тутараттăм. Ларатчĕ вара тутине усса!

Çулталăк ытла çӳрерĕмĕр эпир. Унтан пĕрлешрĕмĕр. Умлăн-хыçлăн ывăлпа хĕр çуралчĕç пирĕн. Çамрăк пулнă та-ха, васканă ĕнтĕ. Чиперех ӳстертĕмĕр хамăрăн чĕппĕмĕрсене. Вăхăчĕ çитсен, пирĕн ывăлĕ çара кайрĕ те — таврăнмарĕ, салтак служби килĕшнĕ пулмалла ăна,—киле килмелли срок çитсен, çар шкулне вĕренме кĕнĕ. Лайăх-ха вăл, юрататăп эп çар çыннисене. Дисциплина унта вĕсен, йĕрке, иртĕнме памаççĕ. Сăмахăма кĕскетсе каласан — ывăл пирки хуйхă-суйхă пулмарĕ пирĕн. Пире ытлашши чăрмантармасăрах çын пулчĕ. Капитана çитрĕ халь Ванюк, танкистсен командирĕ хăй.

Анчах хĕрĕ вара... Хĕрĕ кăтарткаларĕ!

Эсир тем ан шутлăр, ӳн пек-кун пекки, усалли нимĕн те пулман. Ашшĕ-амăш ятне яман, вăл енчен чиперех. Вĕренессе те начарах вĕренмен. Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕнче те учительсем яланах ырлатчĕç ăна, хальхи пек каласан — «паха тĕслĕх» вырăнне илсе кăтартатчĕç. Питĕ нумай вулатчĕ, вăл вуланă чухлĕ эпĕ шыв та ĕçмен пуль, туршăн та.

Анчах, хĕр картне кĕрсен, сиссе те юлаймарăмăр, каччăсемпе питĕ çӳреме пуçларĕ. Вăл хăй айăплах та мар-ха, каччисем пит çыпăçатчĕç, эсреметсем! Килти телефона çавăрса çапса ун çине хăпарса сикес патнех çитрĕм,— пĕрмай чăнкăртатать! Ялан пĕр ыйту: «Анютăна чĕнĕр-ха! Сăмах пур!» Мĕн йытă хӳри сăмахĕ пултăр вĕсен? Пĕри кинона чĕнет, тепри — театра, концерта, танцине...

«Анюта килте çук, таçта кайрĕ»,—тесен ĕненмеççĕха, суятăн, хĕрне юри пытарса усратăн, анчах сан ĕç тухаймĕ, халь ĕлĕкхи мар, хĕрсене сăнчăрта усрама

никамăн та права çук, тесе лăпăртатма пикенеççĕ. Эп вĕсене хирĕç хытăрах каласан, хамах вăрçса тăкаççĕ. Арçури ятне те, киремет-тухатмăш ятне те чылай илткелерĕм. Шутсăр тарăхмалла! Хам çуратса, хам пăхса ӳстернĕ хĕршĕнех тем те илтес пулать, çĕр çăтманскер!

Вунă хут, çĕр хут та асăрхаттартăм Анютăна, ан çӳре ытлашши, йĕркеллĕ пул, çынсем тем калĕç, тетĕп. Итлеççĕ-им хальхи çамрăксем ашшĕ-амăшне? «Кинона каятăп-ха, сеанс пĕтсенех килетĕп»,— тесе тухса каять те пач çухалать. Кино саккăртах пĕтнине пĕлетĕп-ха, анчах ман хĕр тăххăрта та çук, вуннăра та... Тепĕр чух вунпĕр те çитет, унтан та иртсе каять, вăл çаплах таврăнмасть...

Чун юлмасть вара, ăш хыпсах тухать! Тем тĕрлĕ те шутласа пăхатăн. Ансăртран машин айне пулмарĕ-ши? — тетĕн. Машинисем халь урамра кăткă пекех йышлă, шоферĕсем арçурисем пек çӳреççĕ, ӳсĕррисем те пулаççĕ вĕсем хушшинче, таптаççĕ те пăрахаççĕ — вĕсене мĕн! Час-часах илтĕнет ун пекки... Тен, юлташĕсемпе пĕрле, каç пулнине пăхмасăрах, шыва кĕме кайнă та Атăла путнă? Ун пекки те пулкалать... Тен, шăпанасем тĕлне лекнĕ? Вĕсем те çук мар-ха хулара, лешсем ара, упăте тĕслисем, вăрăм çӳçлисем, сарлака йĕм пĕççиллисем, çĕрне-кунне пĕлмесĕр гитар тăнкăрттаттарса çӳрекен услапсем. Тем тума та пултараççĕ пуль вĕсем,— ĕçме укçа çуккипе иртен-çӳрене çаратма та, ĕççе ӳсĕрĕлсен, хĕрсене усал тума та...

Калатăп-çке, çавăн пек шутланипе чĕре çурăлас патнех çитетчĕ!

Лара-атăп вара чӳрече витĕр пăхса, хамăн хĕрĕн кĕлетки курăнасса кĕтсе. Хушшăн-хушшăн урама та чупса тухатăп, унталла-кунталла кайкаласа килетĕп. Таçта вăл! Хули те майсăр пысăк-çке халь, çĕр урам та пулĕ, вуншар парк, сквер, никама та шыраса тупаймастăн! Эпир çамрăк чух тăват-пилĕк урам кăначчĕ, вĕсем те пĕрре чупмалăх çукчĕ — вĕçĕ курăнсах тăрать.

Аптраттăм çапла!

Ăш хыпнă пирки ниçта кайса кĕрейменнипе старике пăсăрлантарма тытăнаттăм:

— Эс ма чармастăн хăвăн хĕрне? Чупкăна тухса кайрĕ вĕт! Ма пĕртте кулянмастăн ун пирки, ма пăшăрханмастăн? Халех кайса шыра! Халех тупса кил!..

Анчах вăл, мĕшĕлти, хăнк та тумасть. Эп кăвайт

çинче ларнă пек ларатăп, тарăхнипе, пăлханнипе манăн çӳçпуç вирелле тăрать, вăл пур — хыçкаланмасть те хуть! Сăмсипе журнал страници çине тăрăннă та аллипе сулать кăна ман еннелле:

— Кай-ха, ан кансĕрле, кроссворд тухмасть манăн! Эс кала мана луччă: чăвашсен ĕлĕкхи сăра ĕçмелли савăт мĕн ятлă пулнă? Пилĕк буква унта,— тет.

Эп сиксе тăрса ун аллинчи журнала туртса илетĕп те пĕррех хăйне пуç урлă яратăп.

— Этем мар эсĕ! Епле-ха хăвăн пĕртен-пĕр хĕрӳшĕн ним чухлĕ те хыпмастăн, пăшăрханмастăн?!

— Мĕн пăшăрханмалли пур вара уншăн? — тет Терентти мана хирĕç, ыратнă вырăнне сăтăркаласа.

— Çухалчĕ вĕт! Шырас пулать! Тен, милицие пĕлтермелле?

— Э, ниçта та çухалмасть,— каллех ал сулать вăл.— Килти выльăх ăçта кайтăр? Килех килет...

— Ашшĕ пулса, мĕншĕн ним те каламастăн эс ăна, ма çакăн пек тахçанччен çӳреме ирĕк паратăн?! Пăхха эсĕ сехет çине, вунпĕр иртрĕ! Урамра пĕр çын та юлмарĕ ĕнтĕ, санăн хĕрӳ çеç çуккă!

Терентти, пăшăрханас вырăнне, ерипен карăнса, тутлăн кăна анаслаcа илет те ман çине пăхса кулать:

— Эс хăвна пĕл, карчăк...

Ку вара маншăн хама вĕри шывпа сапнă пекех пулать.

— Мĕн пĕлмелле манăн?! — сиксе ӳкетĕп старик çине.— Эс мĕн, мана чупкăн тесшĕн-и? Ăçта çухалса çӳрерĕм эпĕ, хăçан? Сăнчăрланă йытă пек килте ларса пурăнатăп сире пула, кăçал киноя та пĕрре кайса кураймарăм!.. Мĕн тери лайăх картинсем пулчĕç — «А если это любовь?», «Еще раз про любовь» тата темтепĕр...

— Лăплан,— тет старик,— эп сана хальхи çинчен мар, çамрăк чухнехи çинчен калатăп! Халь тин кама кирлĕ эс, ват кункра, мансăр пуçне? Сан çине халь персональнăй пенсионер мар, ахаль йышши пенсионер та пăхмасть... Анчах çамрăк чухне еплерех çӳреттĕн эсĕ? Çур çĕрччен, тепĕр чух кăвак çутă киличчен, тул çутăличчен, хĕвел тухиччен! Çапла мар-и, э?

— Эп сансăр пуçне никампа та çӳремен! — кăшкăратăп ăна хирĕç.

— Çавах мар-им? — тет вăл.— Эп те каччах пулнă. Хăраман-çке эс ун чухне?

— Эс вăл — эсĕ, санран мĕн хăрамалли? Пăру пулнă вĕт эсĕ!

— Хăш чух вăкăр пулнине те астăватăп...

— Эп сана иртĕнме паман!

— Эп хам та иртĕнме тăрăшман. Юратнă пулмалла сана, эсреле, хĕрхеннĕ, çавăнпа качча иличчен кӳрентермен...

— Мĕн каласшăн вара эсĕ? Анютăшăн та хăрамалли çук, тесшĕн-и?

— Çапла каласшăн çав. Анюта та хăйĕнне хăй пĕлет пуль, пĕр-пĕр пуçкасанпа, тĕрмерен тарнă бандитпах çӳремест пуль. Вунтăххăрта лешĕ — юрату тени те — пулма пултарать. Эпир иксĕмĕр пирвайхи хут чуптунă чух эсĕ ху миçере пулнă-ха?

— Маннă!

— Эп хам ун чух миçере пулнине манман. Шăп çирĕм çул тултарнăччĕ. Эс манран пĕр çул кĕçĕн. Миçе пулать-ха вăл?

— Ан лăркаса лар, ват тунката! Ме журнална, шыра чăвашсен авалхи сăра ĕçмелли савăчĕн ятне!

— Атя, пĕрле шутлатпăр. Пĕр ăс лайăх, ик ăс — тата лайăхрах, теççĕ...

Ларатпăр, хайхискер, юнашар. Лăпланнă пек пулатпăр. Тытăнатпăр кроссворд тупписене шырама. Вăхăт нумай та иртмест — каллех тавлашса каятпăр. Авалхи сăра ĕçмелли савăта вăл а л т ă р, тет, эпĕ — к у р к а, тетĕп. Ик сăмахĕнче те пилĕкшер саспалли. Хăшĕ тĕрĕс? Вăл хăйĕнне перет, эп — хамăнне. Ниепле те килĕштерейместпĕр.

Унтан шăп пулатпăр. Мăшлатса ларатпăр.

Çав вăхăтра Анюта килсе кĕрет. Ашшĕ чĕнмест, анчах эпĕ тӳрех ятлаçма тытăнатăп.

— Ăçта çӳрерĕн çак таранччен? Кампа? Тек эп сана килтен те кăлармастăп! Чупкăн!

Анюта эп кăшкăрнинчен ним чухлĕ те хăрамасть.

— Хăвна пĕл, анне, çамрăк чухне ху мĕнле çӳренине аса ил,— тет те йăл-йăл кулать.

Эп çавăнтах ашшĕне тыллама пуçлатăп:

— Эсир иксĕр те пĕр каварлă иккен! Иксĕр те мана хирĕç! Манран кулса пурăнас тетĕр-и? Эп, сире, шуйттансене...

Терентти тутлăн карăнса анаслать:

— Кулас килмест-ха манăн, çывăрас килет...

* * *

Ну, пĕррехинче пулчĕ те вара!..

Пирĕн Анюта каллех киле час таврăнмарĕ. Терентти телевизорпа футболла вылянине пăхрĕ-пăхрĕ те (хăй ĕмĕрĕнче мечĕке пĕрре тапса ҫурман пулин те, футболшăн вилсех каять вăл, пирĕннисене ютран килнисем ҫĕнтерме тапратсан, ниҫта кайса кĕрейми ăшталанать!) ҫывăрма выртрĕ. Мана та хĕрĕме чӳречерен пăхса ларнă ҫĕртех ыйхă пуса пуҫларĕ. Кăшт канса илем-ха тесе, выртрăм та, хам та ҫывăрсах кайнă. Тем вăхăтран, такам пырса чышнă пек, варт! вăранса кайрăм...

Пăхатăп — пĕр сехет ҫитнĕ! Килсе выртнă-ши Анюта? Ҫак шухăшпа тепĕр пӳлĕмелле вăркăнтăм.

Ҫук Анюта! Вырăнĕ пуш-пушах! Кухньăна чупса кайрăм — кулятран таврăнсан апат ҫисе лармасть-и? Унта та ҫук! Апайтурах!.. Мĕн тумалла? Хĕрсĕр тăрса юлтăмăр-иҫ капла? Ҫухалнă вăл! Пĕтнĕ! Вилнĕ! Машин айне пулнă! Шыва путнă!

Тем те шутлăн, тăвансем!

Усал мотоцикл лăкăртатнă пек хăрлаттарса, аллирине сарса выртакан старике пĕррех туртса вăратрăм.

— Анюта таврăнман, тăр часрах! Темскер пулнах унпа! Ахаллĕн ҫак таранччен ҫӳрес ҫук вăл! Пăх-ха... иккĕмĕш сехет! Атя часрах шырама!..

Терентти куҫне мăч-мăч-мăч тутарса сехет ҫине пăхрĕ те сăвăлла каларĕ хучĕ:

Ах, юрату, юрату,
Ҫамрăк чуншăн ырату...

Унччен те сискелеттĕм-ха эпĕ, пенсие тухнăранпа вăл час-часах, пулчĕ-пулмарĕ, сăвăлла калаҫкаласа илетчĕ. Урампа чип-чипер пынă ҫĕртех персе ярать: «Хырăм выҫрĕ, мĕн тăвас, киле кĕрсе мĕн хыпас?» Мунчаран тухать те: «Ай-ай, ăшă пулчĕ-ҫке, сăра ĕҫес килет-ҫке, ырă карчăк пулмăн-ши, пĕр полтинĕк памăн-ши?» — тет. Хăрамах пуҫларăм, ватлăхра сăвă ҫырма тытăнмасть-ши ку? Пенсионерсене вăл чир часчасах ерет те аптратсах ҫитерет, нимĕнпе сыватма ҫук, тенине илткеленĕ эпĕ... Тур ҫырлахтăрах, тур хăтартăрах ун пек хурлăхран!

— Ухмаха супса ан лар, йĕмне тăхăн часрах, шырама каятпăр! — чышса илтĕм ҫакна.

Тухрăмăр урама. Шăп. Пĕр чун та çук. Ăçта каяс? Ăçтан шырама тытăнас çухалнă хĕрĕме?

— Атя, Атăл хĕрринчен пуçласа кунталла ухтарса килетпĕр,— терĕм старике, çаннинчен туртса.

— Атăл, Атăл, çĕршывăн илемĕ...— терĕ вăл мана хирĕç.

Эп ĕнтĕ каялла çаврăнса та пăхмарăм, анаталла ярăнтартăм кăна. Вăл ман хыççăн лăпăстатрĕ. Хăй пĕрмай тем мăкăртатать. Сăвă калать пулмалла, йӳтенĕскер.

Çитрĕмĕр Атăл хĕррине. Кунта та шăпах. Никам та çук. Пристаньрен хăпаракан та, унталла анакан та курăнмасть. Старике тăвалла, «Юрату хысакĕ» еннелле, сĕтĕретĕп. Вăл часах пăравус пек хашкакан пулчĕ, пăс кăлармасть кăна. Кăларать те пуль те, мана курăнмасть. Пĕр сак тĕлне çитрĕ те лак! ларчĕ.

— Эпир санпа ак çак вырăнтан Атăл çине пăхса ларма юрататтăмăр, астăватăн-и? — терĕ хăй, аран сывлăш çавăрса.

— Хăçан ларнă эпир санпа кунта, мĕн сӳпĕлтететĕн? — терĕм ăна хирĕç.— Эп Атăл хĕррине хăçан тухса курнине те астумастăп.

— Çамрăк чух ара, авланиччен...

— Тьфу, тупнă асăнмалли! Тăр тавай, ут! Пирĕн Анютăна шырамалла пуль?

Тепĕр пăртак хăпарсан, Терентти татах ларчĕ.

— Астăватăн-и, çакăнта ларнă чух пире пĕррехинче милиционер хăратса пăрахрĕ: «Обществăлла вырăнсенче чуптунăшăн — штраф»,— терĕ...

— Ăна та аса илетĕн пулать, ват сăпса!

— Астурăм çав! Эсĕ «пирĕн укçа çук-çке...» — тесе макăрса ятăн.

— Эпех макăрас çук-ха, эсĕ макăрнă пулинех! — ал султăм эпĕ.

Тата тăварах хăпартăмăр. «Юрату хысакне» çитрĕмĕр.

— Эпир санпа ыран ЗАГСа каяс тенĕ чух çакăнта тăнăччĕ, астăватăн-и? — каллех пуçларĕ Терентти.— Тул çутăлнăччĕ ĕнтĕ, а-ав çавăнтан хĕвел те тухма пуçланăччĕ. Шутсăр лайăхчĕ çав, ах!.. Эсĕ пуçна ман хулпуççи çине хутăн та... ак çапла... темле юрă юрларăн... Хи-итре юрă... Эп сана пуçăнтан ачашларăм... а-ак çапла...

Вăл, чăнах, ман пуçа хăй патнелле тайăнтарчĕ те

чип-чиперех ачашлама тытăнчĕ. Аллинчен çат! тутартăм.

— Ухмаха ертĕн-и эсĕ, кукша пуç? Эпир кунта çĕр хута мĕншĕн килнине те манса кайрăн-и? Анютăна шырамалла-иç?

—Анюти тармĕ-ха вăл, килех таврăнĕ...— хаш! сывласа ячĕ ман Терентти.— Анчах çамрăклăх тарчĕ ĕнтĕ, тек нихçан та таврăнмасть вăл... Эх, карчăк, карчăк! Лайăх-çке çамрăк чух! Эс те лайăхчĕ, хальхи пек хаяр марччĕ...— Вăл каллех мана ыталама пикенчĕ, эп ăна тĕртсе ятăм та лач! сурса анаталла утрăм. Паллах, вăл та манран юлмарĕ. Йĕппи хыççăн çиппи, тенĕ пек.

Хĕрлĕ площаде çитсен, эп тӳрех сулахайри парка кĕрсе ухтарма тытăнтăм. Пырса пăхман пĕр сак та хăвармарăм. Усси пулмарĕ. Пĕр чĕрĕ чун та çук иккен.

— Атя-ха тепĕр паркне, фонтанлине! — терĕм Тереттие.— Хальхи çамрăксем фонтансем патĕнче тĕл пулма юратакан!

— Ĕлĕк валаксем умĕнче тĕл пулнă,— терĕ те вăл мана хирĕç, каллех сăвăлла калаçма тытăнчĕ:

Çӳллĕ валак патĕнче
Ватă йăмра ешерет,
Куллен ирех çавăнта
Сетнер Нарспие кĕтет...

— Пăрах лăркама! — кăшкăртăм тарăхса.—Тупнă сăвă каламалли вăхăт! Хĕрӳ пирки шухăшла эсĕ, услап!

Вăл пурĕпĕр мăкăртатрĕ:

Йăлтăр-йăлтăр куçĕсем
Сар хĕр çине пăхаççĕ,
Сар мăйăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ...

— Асту, сухалăнтан тытса лăскатăп пĕрре! — хăратса илтĕм хайхине. Тин чарăнчĕ.

Пирĕн хĕр, паллах, кунта та тупăнмарĕ. Пĕтĕм паркĕпех çаврăнтăмăр, пĕр-пĕрин çумне пăталанă пекех ларакан темиçе мăшăра куртăмăр, анчах Анюта мар, урăххисем пулчĕç.

— Атя киле, çитет пуль хамăрăн çамрăк чухнехи маршрута кун чухлĕ тĕрĕсленипе! — терĕ старик.— Темле, чун хурланма пуçларĕ!

— Мĕншĕн? Анюта тупăнманшăн-и?

— Ç-çук... Çав маршрутпа тек çӳреме пултараймантăн. Ватăлтăмăр, карчăк, кивелтĕмĕр. Э-эхх!..

— Сана, мур, яш шухăш кĕрсе кайрĕ-им? Халь те чупассу килет мар-и? Пенсионерсен пулкалать, тет, ун пекки... Чуптарăп эп сана, ват тăмана! Авă, кур, саншăн халь хĕрӳ чупать. Кашни каç, кашни каç йăрккать. Эс чармастăн...

— Чуптăр-иç ара, çӳретĕр-иç, çамрăклăх пĕрре кăна килет...

— Ак хайхи!.. Эс ун майлă-ха, эппин? Чарма шутламастăн? Ахальтен мар çынсем: Анюта пĕтĕмпех сана хывнă, теççĕ!

— Мана мар, сана хывнă вăл, карчăк. Эс çавăн пек çĕрĕ-çĕрĕпе чупнă вĕт-ха...

— Хăçан, хăçан чупнă? Кампа чупнă? — вĕресе кайрăм эпĕ.

— Манпа чупнă,— терĕ Терентти.— Çамрăк чух. Вунтăххăрта. Мĕн, тунас тетĕн-и? — вăл лĕх-лĕх-лĕх кулса илчĕ.— Шутсăр çивĕччĕ çав эсĕ, ывăнтарсах çитереттĕнччĕ мана...

— Мĕн туса? Мĕнпе ывăнтарнă эп сана? Кӳлсе чупман пуль?

— Бульвар тăрăх, урамсем тăрăх çĕрĕ-çĕрĕпе çӳреттерсе...

— Çӳремелле марччĕ, лармаллаччĕ килте! Ма çӳрерĕн?

— Сана юратнипе, ара...

— Апла пулсан, ан та янра!

Çавăн пек хирĕçкелесе, тавлашса, хамăр тĕлелле çитрĕмĕр. Эпир пурăнакан мăн çурт умĕнче лайăх сквер пур. Йывăçсем çав тери парка ӳсеççĕ. Чечексем нумай. Пит илемлĕ. Шăршине те ытармалла мар. Хашкама ернĕ Терентти, киле кĕрес вырăнне, тротуар çинчен пăрăнса, лăпсăркка йывăç хӳттинчи сак çине ларчĕ.

— Ырлăх! — терĕ Терентти.— Сывлăшĕ кăна мĕне тăрать... Пăх-ха тата, уйăхĕ епле хитре! Пирĕн çинех пăхать... Астăватăн-и, çамрăк чухне çавăн пек уйăхлă каççенче еплерех ларattăмăр? Ак çапла...— Вăл пĕр аллипе мана ыталарĕ. Чармарăм ухмаха, мĕн хăтланать-ха ку, терĕм. Хамăн тӳсме çук кулассăм килет.— Э-эх, карчă-ăк! — ассăн сывласа ячĕ вăл, кăшт ларсан.— Юрататтăмăрччĕ-çке пĕрне-пĕри! Эп — сана, эс

мана... Ҫапла вёт? Питё лайăхчё эсё... Чуптăваттăм сана... ак ҫапла...— Вăл ман пуҫа хăй еннелле тайăлтарчё те питҫăмартинчен чап! чап! туса илчё.

Ҫав самантрах пирён хыҫра темле хёрарăм чăхчăх-чăх кулни илтёнчё, унччен те пулмарё — арҫын хулăн сасăпа вырăсла юрласа ячё:

Любви все возрасты покорны...

Эп хама ҫёлен сăхнă пек сиксе тăрса кăшкăрса ятăм:

— Кам шуйттанё унта? Мёнле хурах? Асту эп сана!

Терентти туйине ҫёклерё. Анчах... мён тетёр?

Йывăҫсем хыҫёнчен пирён Анюта тухса тăчё. Ун ҫурăмё хыҫёнче каччă курăнса кайрё.

— Ăҫта ҫухалса ҫўретёр эсир ҫёр хута? — терё Анюта, йăл кулса.— Кёт, кёт, сире...

— Сана шырарăмăр, сана, усал чёппи! Эс ху вăт ăҫта ҫухалса ҫўретён, чупкăн? — хăмсарсах илтём ăна.

— Мён шырамалли пур мана? Эпир ҫакăнтах ларнă, ниҫта та кайман, шутламан та кайма,— терё Анюта лăпкăн кăна.— Эсир васкасах таҫта тухса чупнине куртăм та таврăниччен кётес терём...

— Куртăн пулсан, ма сас памарăн? Ма чуптартăн пустуй?

— Уҫăлса ҫўреме кансёрлес мар терём...

— Халь те кансёрлерёмёр ав, каҫарăр,— сăмах хушрё каччи.

— Лекет-ха сана куншăн! — каллех хăмсартăм Анютăна.— Пит лайăх лекет, курăн акă!

— Сире чуптуса ларма чăрмантарнăшăн-и?—кулса ячё вăл.

Ним калама та аптрарăм ăна хирёҫ.

Ман Терентти вара сак ҫинчен тăчё те, халь ҫеҫ илтнё юрра мăрлатса, уттара пачё: «Любви все возрасты покорны, ее порывы благотворны...» Ăна мён? Ҫынни ҫавнашкал. Пўрт ҫунма пуҫласан та, галстукне тупса ҫакмасăр тухмасть пуль. Нервисене тилхеперен тунă пулмалла унăнне!

Киле кёрсен, эпё Анютăна ҫапах та нумай ҫўренёшён хăтăрма тытăнтăм, анчах Терентти ман ума пырса шёвёр пўрнипе юнарё:

— Ан шавла, карчăк. Ан кĕрле, тусан ан кăлар пустуй. Хăвна пĕл. Аса ил те çамрăк чухнехине — шăпăрт пул...

Хăй çавăнтах мана çамкаран чуптуса илчĕ.

Анюта кулкаласа тăчĕ.

1971

## ЫР ÇЫНСЕМ ÇАПЛА КАЛАÇÇĔ...

Аттуна тăхăн та çăпатуна кăларса ан пăрах, тенĕ авал, эсĕ те икĕ сăвă пичетленĕ хыççăнах хăвна поэт тесе колхозра (заводра) ĕçлеме ан пăрах!

* * *

Поэт хушамачĕ янравлă пулнăшăнах унăн сăввисем янравлă пулаймаççĕ çав!

* * *

Çынна тара тытса кĕпе-йĕм çĕлеттерме çеç мар, роман çыртарма та пулать, теççĕ.

* * *

Уçламасан услам çу пулмасть, çĕрĕн-кунĕн ĕçлемесен кĕнеке пулмасть.

* * *

Йăпăлти пăру ик ĕне ĕмет, йăпăлти автор пĕр япаланах ик-виç çĕрте пичетлет.

* * *

Чĕлхе-çăвар япшар пулсан, хаяр редактор та çул парать.

* * *

Мухтанасса сахалтарах мухтан, çырассине ытларах та лайăхрах çыр. Çичĕ хут çыр та пĕрре пичетле.

* * *

Писательсен билетне алла илнипех классик пултăм тесе ан аташ!

* * *

Пĕкĕрен турта тăваймăн, талантсăр çынтан сăвăç тăваймăн.

* * *

Пичетленĕ япăх сăвва каялла çулласа илме çук.

* * *

Ахаль лариччен, хăвна ятласа çырнă рецензие тепĕр хут вула.



# Ялан чап-чап уйăхĕ пулмасть

*Пĕр пайлă, икĕ картинăллă камит*

**КАМИТ КĂТАРТАКАНСЕМ:**

Я к л а ш к и н, Кузьма Ильич — утмăлалла сулăннă кукша пуçлă, пуклак этем.

Л и с у к (Лизета) — çирĕмрен тин çеç иртнĕскер, хытă сăрланнипе хитре пекех курăнать. Кĕске аркăллă платьепе, урай хăми хулăнăш тĕплĕ туфлипе çӳрет. Мăйĕнчи шăрçи, хăлха çаккисем куçа йăмăхтармалла йăлтăртатаççĕ. Яклашкин арăмĕ тесе шутланать.

Ы р х а н о в, Василь Васильч — шалча пек вăрăм, сухари пек типсе ларнă çын, çапах та хастар хăй.

П р а с к и — унăн арăмĕ. Чăмăркка. Юрланă пек калаçать.

М а р у к  и н к е — больницăри санитарка.

Б а р а б а н о в — боксер пек тĕреклĕ арçын.

## Пĕрремĕш картина

Больницăри чирлĕ çынсем выртакан пӳлĕм (палата). Чӳрече умĕнче тумбочка, унăн икĕ енче — койкăсем. Пĕрин çинче Я к л а ш к и н выртать, теприн çинче, урисене çĕрелле усса, Ы р х а н о в ларать. Вĕсем иккĕшĕ те больницăри халатсемпе. Ырханова хирĕç — хыççăр пукан çинче — хулпуççинчен шурă халат уртса янă П р а с к и ларать. Вăл халь кăна упăшки патне килнĕ те самаях пысăк карçинккăран çимеллисем кăлара-кăлара хурать.

П р а с к и. Ак сана сĕт, Василь Васильччă, ак сана чăкăт, ак кукăль — кунта тухса килес умĕн çеç кăмакаран кăлартăм, ан сивĕнтĕр тесе, юри хулăн тутăрпа чĕркесе хутăм, мĕншĕн тесен сан кăмăлна пĕлетĕп, вĕри кукăльшĕн вилсех каятăн... Çи тавай, халех çиме тытăн, хам куçпа курса тăрам!

Ы р х а н о в *(ассăн сывласа ярса).* Тутă-ха эп халь, чунăм Праски, пире тин çеç çитерчĕç, виçĕ тĕслĕ апат çирĕм, хырăм панк пулчĕ.

П р а с к и *(ал сулса).* Э-э, мĕн тутти пултăр çав больницăри апатра! Виç кашăк шĕвĕ яшка, пĕр ывçă пек маннăй пăтă, пĕр çур стакан компот шывĕ е йӳççе кайнă кĕсел пачĕç пуль-ха. Пĕлетпĕр! Выртса курнă! Ак тата вунă çăмарта илсе килтĕм сан валли...

Ы р х а н о в. Больницинче хăçан выртнă ара эс? Астумастăп-çке ун пеккине?

П р а с к и *(тĕлĕннĕ пек).* Епле астумастăн пулать? Ара, Унтрие больницăра çуратрăм-иç? Ултă кун выртрăм...

Ы р х а н о в. Каларăн та çав! Унтрие çуратнăранпа çирĕм сакăр çул иртрĕ, чунăм!

П р а с к и. Çавах мар-им? Хуть те хĕрĕх саккăр иртнĕ пултăр. Пурĕпĕр астăватăп — чут выçса вилеттĕм!

Ы р х а н о в. Ун чух пурнăçĕ урăхла пулнă, пирĕн халăх хальхи пек мар, чухăнтарах пурăннă. Çавна шута ил эсĕ!

П р а с к и. Ан лăпăртатса лар! Больница вăл çав-çавах больница. Хуть ĕнер, хуть паян. Çи, теççĕ сана!

Ы р х а н о в *(тархаслана пек).* Калатăп-çке, пире анчахрах çитерчĕç, анмасть халь нимĕн те.

П р а с к и. Антарсан — анать! Ĕне хырăмне арпа пăсмасть, йытă хырăмне çу пăсмасть, тенĕ ваттисем. Манăн санран епле пулсан та çын тăвас пулать, пĕлетĕн-и çавна? Кӳршĕсенчен намăс, ялан кулаççĕ — эс

стариккуна нимĕн те çитерместĕн пулмалла, çавăн пирки вăл санăн çурхи мулкач пек ырхан çӳрет, теççĕ.

Ырханов *(юри тĕлĕннĕ пек пулса)*. Çаплах калаççĕ-и?

Праски. Калаççĕ çав! Пĕрмай калаççĕ. Чăнах та, ун пек калакансене парăнсах каймастăп эпĕ, хирĕç тавăрма пĕлетĕп.

Ырханов. Мĕн калатăн вара вĕсене?

Праски. Ун хушамачĕ Ырханов, çавăнпа ырхан вăл, тетĕп...

Ырханов. Лешсем ун хыççăн мĕн калаççĕ?

Праски. Мĕн калаччăр? Кулаççĕ!

Ырханов. Санран-и?

Праски. Манран мар, сан аннӳнтен! Вăл этем шутлă çуратма пĕлмен сана, тимĕр пăта пек туса янă.

Ырханов. Тимĕр пăта — çирĕп япала...

Праски. Юрĕ, юрĕ, эп кунта санпа тавлашма килмен! Çи тавай! Акă, тăпăрчă икерчи пур тата. Вăл та ăшă-ха...

Ырханов. Эс паян ухмаха ернĕ пуль, Праски! Мĕн тума илсе килтĕн кун чухлĕ апат-çимĕç? Эс манăн миçе хырăм тесе шутлатăн? Пĕрре кăна пуль?

Праски *(ал сулса)*. Уншăн ан хăра. Хырăм тени вăл çинĕ май хăех сарăлса пырать. Тата пĕлетĕн-и — вăтă хурама хăвăл пулать, тултар та тултар унта, тем те кĕрсе кайĕ. Çи!

Ырханов. Аптрамалла санпа, карчăк!

Праски. Аллă çул аптраманнине халь тин аптрамăн-ха. Ме, тыт! *(Икерчĕ таткине вăйпа тыттарать.)*

Ырханов еринен чăмлама пуçлать, хăй тек-текех карчăкĕ çине пăха-пăха илет.

Ырхановпа Праски çакăн пек тавлашкаланă вăхăтра юнашар койка çинчи Яклашкин ним чĕнмесĕр месерле выртать, хушшăн-хушшăн çеç хаш! сывласа старикпе карчăк çине пăхкалать, юлашкинчен — вĕсене курасшăн мар пулнă пек — çурăмĕпе вĕсен еннелле çаврăнса выртать. Праски çакна урăхла ăнланать, ку çын хăйне хăналаманшăн кӳренчĕ тесе шутлать. Çав самантрах вара тепĕр татăк икерчĕ тытать те, стариккине хулпуççинчен тĕрте-тĕрте, Яклашкин çине тĕллесе кăтартать. «Çитер çавна!» — тени пулать ĕнтĕ ку. Ырханов пуçне пăркалать: «Кирлĕ мар, çимест вăл!» Анчах Праские чарма çук ĕнтĕ, вăл пукан çинчен тăрать те кравать пуçĕпе çаврăнса кайса Яклашкин умне пырса тăрать. Çав вăхăтра палатăна Марук-санитарка кĕрсе урай шăлма тытăнать.

П р а с к и. Хӑта... Хӑта, тетӗп...

Яклашкин чӗнмест.

Ы р х а н о в *(чӑмлама пӑрахса, хуллен).* Ан чӑрмантар ҫынна, сывӑрать пуль вӑл.

П р а с к и *(ун ҫинелле ҫилӗпе ал сулса илет).* Эппин, мӗн... начальник юлташ! Эс каҫар-ха мана, ват ухмаха, малтанах сӗнме ӑс ҫитмерӗ... Ҫисе пӑх-ха ҫак икерче. Паян ирпе кӑна пӗҫертӗм, ту-ут-лӑ пулчӗ, тӑпӑрчи ҫине песок ярса, ҫӑмартапа ҫӑрсах пӗҫертӗм. Сивӗнсе те ҫитмен-ха. Чирлӗ ҫынна тӑпӑрчӑ икерчи усӑллӑ, теҫҫӗ...

Яклашкин чӗнмест.

Ан тирке ӗнтӗ, тӑванӑм, кӑмӑл ту. Эп илсе килнисене ман старик пӗччен пурӗпӗр ҫисе яраймасть, кайран, типсе-кӑвакраса каять те, ахалех сыснана памалла пулать. Сыснана париччен...

Я к л а ш к и н *(тӑпӑлт! сиксе тӑрса кӑшкӑрать).* Эсӗ ху сысна! Ҫӗр хут сысна! Ӑнлантӑн-и? Хып хӑвӑн икерчӳне, мана кирлӗ мар вӑл! Ак! *(Праски аллинчи икерче ҫапса ҫӗре ӳкерет те палатӑран чупса тухса каять.)*

П р а с к и *(шак хытса тӑрса).* Пӗтрӗ пуҫ... Мӗнле арҫурилле этем пулчӗ ара ку?! Хӑйне ҫӑкӑртан та аслӑ тесе шутлать пулас... Ҫут тӗнчере утмӑл пилӗк ҫул пурӑнса та курман кун пеккине...

Ы р х а н о в. Каларӑм-ҫке сана ан ҫыхлан тесе!

П р а с к и. Кам пӗлнӗ ара, кам пӗлнӗ! Пӗлнӗ пулсан, ҫывӑха та пырассӑм ҫукчӗ! Ну, пулать те усал этем...

Ы р х а н о в. Ытти чух чипер ҫынахчӗ те-ха вӑл, юлашки кунсенче картинчен туха пуҫларӗ.

М а р у к *(урайне шӑлма пӑрахса, вӗсем патне пырать).* Э-эх, чиперрине ан кала ӗнтӗ, Василь Васильччӑ! Эпӗ вӑл ҫынна пит лайӑх пӗлетӗп. Пӗр хушӑ эпир юнашарах пурӑннӑччӗ. Нумай курнӑ...

П р а с к и. Ун чухне те ҫавӑн пекех усалччӗ-и?

М а р у к *(шӑпӑр аврине ыталаса хыҫҫӑр пукан ҫине ларать).* Ун чухне те чӗр шуйттанахчӗ! Малтанхи арӑмне мӗн кӑтартмарӗ пуль!

П р а с к и. Кай-кай-кай...

М а р у к *(асӑрханса, алӑк ҫине ҫаврӑнса пӑхать).*

Пумай вĕренне сын та мар вăл, тăвата класран малалла каяйман та пулĕ, анчах хăйне тепĕр министĕртен те мăнаçлăрах тыткалатчĕ. Çав тери шукăль тумланса лартать те, мăн кушель пек портфельне йăтать те, урампа сăмсине каçăртса кăна утать, пĕрле ӳснĕ çынсене те палламасть... Авалхи улпут-хуçасем пек!

П р а с к и. Хăй ăçта ĕçленĕ вара вăл? Тен, пысăк комиссарах пулнă? Порхвĕлĕ пысăкка, терĕн-иç?

Ы р х а н о в *(ал сулать).* Хальхи вăхăтра çынна портфель тăрăх пĕлме çук, карчăк. Час-часах тăрпалтайсем те тем пысăкăш сăран кушелсемпе çӳреççĕ. Солитнăрах пулма тата велосипедран та кая мар куçлăхсем тăхăнаççĕ. Пăхма — чăн-чăн ученăй, профессор, анчах та хăй пулăшу кассинчен кивçен укçа ыйтса заявлени çырма та пултараймасть. Чисти ял кулли! Хам бухгалтер пулнă май эп ăна пит лайăх пĕлетĕп, куркаланă...

М а р у к. Пурăнма пĕлетчĕ ĕнтĕ. У-у, çав тери пултаратчĕ. Килĕнче мĕн кăна çукчĕ унăн! Çынсем хушшинче те ялан пысăк хисепреччĕ,. паллакансем ăна урам урлах саламлатчĕç, тĕлме-тĕл пулсан, аллине силле-силлех пăчăртаççĕ, Куçма Иллич та Куçма Иллич теççĕ кăна, ма тесессĕн — пуриншĕн те çав тери кирлĕ çын пулнă-çке! Сана пурнăçра мĕн питĕ шутсăр нушнă — пурне те, тем те тупса пама пултарать. Унпа тĕл пулса пĕр-ик сехет ресторанта лар кăна, вара хăвна мĕн кирли йăлт пулать санăн!

П р а с к и. Кай-кай-кай... Анчах ăçтан пĕлетĕн-ха эс кун çинчен? Çынсем каланă тăрăххăн-и?

М а р у к. Мĕн пĕлменни пултăр? Хамăн кĕрӳ, ĕнелаша тухтăрĕ, заемпа мăн укçа выляса илсен, пĕчĕк аптомобиль туянма шут тытрĕ те пĕр çултаłăк асапланчĕ — никак та тупса илеймест. Унтан тахăшĕ ăна çак Яклашкинпа çыхăнма ăс панă... Пĕрре ĕçтерчĕ ăна, тепре хăна турĕ, пĕр икçĕр тенкине укçан та тыттарчĕ пулмалла та — хайхи «Москвич» коттовă! Рас анчах пырса ларчĕ картишне!

П р а с к и. Кай кай-кай... Чăнах та пултарать, эппин, çынни!

Ы р х а н о в. Эх, пур-ха çав ун пек жуликсем, мĕн тăвас тетĕн! Тытаççĕ-тытаççĕ вĕсене, çаплах тытса пĕтерейменççĕ.

П р а с к и *(тăрук ун çине пăхса).* Ай-уй, пĕтрĕм! Ара, эс те унран кая мар шулĕк иккен-ха! Тин пĕлтĕм!

Ы р х а н о в *(тӗлӗнсе).* Мӗн сӳпӗлтететӗн эсӗ, карчӑк! Хӑш енчен жулик пулам эпӗ?! Ӗмӗрне те жулик пулман, ни ҫыннӑнне, ни патшалӑхӑнне пӗр пӗрчӗ тӗкӗнмен...

П р а с к и. Эс мӗншӗн ҫиме пӑрахрӑн? Ма чӑмламастӑн? Ӑҫта пытартӑн икерчӗ таткине?

Ы р х а н о в. Эп... эп... ҫӑтса ятӑм ӑна.

П р а с к и. Ан суй! *(Ҫитарне ҫӗклет те икерчӗ таткине тупса старикkине тыттарать.)* Чӑмла, чӑмла тавай!

Ы р х а н о в. Ах, карчӑк... хӗрхен-ха ӗнтӗ, пултараймастӑп!

П р а с к и. Пултаратӑн, пултаратӑн, хирӗҫсе ан лар!

Ырханов ирӗксӗрех ҫиме тытӑнать.

М а р у к. Стариккуна юрататӑн иккен эсӗ, тӑхлачӑ... Хӗрхенетӗн ӑна, тӑрӑшатӑн уншӑн...

П р а с к и. Эп хӗрхенмесен, кам хӗрхентӗр ӗнтӗ ман хӑрӑк старике? Ачапа пӗрех-ҫке вӑл, хӑй тӗллӗн апат ҫиме те пӗлмест. Хам пулмасан, тепӗр чух кунӗпех выҫӑ ҫӳрет.

М а р у к *(кулать).* Пӗчӗк ача — пӗчӗк хуйхӑ, пысӑк ача — пысӑк хуйхӑ, теҫҫӗ...

П р а с к и. Ҫапла, ҫапла! *(Упӑшкине.)* Ҫи, ҫи тавай, хастартарах чӑмла. Унтан ак ҫакна тутанса пӑх тата... *(Пӗчӗк кукӑль кӑларса тыттарать).* Иҫӗм ҫырлипе турӑм, чӗлхӳне ҫӑтса ямалла тутлӑ! Ларса ывӑнтӑн пулсан — выртса та пулин ҫи!

Ырханов ахлатса сывласа ярать.

М а р у к *(вӗсем ҫине кӑмӑллӑн пӑхса).* Чӑхпа автан пӗртӑван тесе ахаль каламан ҫав...

П р а с к и. Ун пек пулмасан, мӗнле пурӑнан ҫӗр ҫинче? Эпир пӗрлешнӗренпе кӗҫ-вӗҫ аллӑ ҫул ҫитет, анчах ҫав хушӑра старик мана пӗрре те хӗнемен-ха. Тупата туршӑн *(хӗрес хывса илет)* пӗрре те ал хуман! Хам чышкаласа илетӗп тепӗр чух! Ун пекки пулкалать, тунмастӑп. *(Пӗр куклине Марука тыттарать.)* Ме, эс те тутанса кур ман кукӑле. Хамӑн та тем хырӑм выҫнӑ пек туйӑнма пуҫларӗ-ха... *(Тепӗр кукӑль илсе ҫиме тытӑнать.)*

М а р у к *(чӑмласа).* Кукли чӑнах та лайӑх пулнӑ.

П р а с к и *(мухтанарах).* Хам старике эпӗ ялан ҫавӑн пек тутлӑ кукӑльсем ҫитеретӗп, вӑл пур — ҫаплах

ырхан. Тем тумалла! Халь тата темле сурăх чирĕпе чирлесе кайрĕ, çĕр çăтманскер, манран мăшкăлланă пекех.

Марук. Мĕнле сурăх чирĕпе тата?

Праски. Пĕверĕнче чул пур, тет. Чулне таçтан тупнă-çке, эп ăна пĕрре те чул пĕçерсе паман...

Марук. Этем валли тем те тупăнать мар-и!

Палатăна Яклашкин кĕрсе алăк патĕнчех чарăнса тăрать те, кăмăллăн калаçса ларакан виçĕ çын çине пĕрре темле çиллессĕн пăхсанах, аллипе сывлăша касса илсе каялла тухса каять.

Праски. Ай-уй, ку çынна чăнах та тем пулнă пулмалла! Ухмаха ерме пуçламан-и вăл?

Марук *(кулса).* Çавăнталла çитет пулмалла çав.

Праски. Апла ман старикĕн унпа юнашар выртса пурăнма та хăрамалла? Çĕрле тăрĕ те пĕр наччасра пăвса пăрахĕ! *(Упăшкине.)* Кала тухтăрсене, урăх пӳлĕме куçарччăр сана. Темрен тем курса ларăн ватлăхра!

Ырханов. Ун патнех çитмест пулĕ-ха, лăпланать пуль.

Праски. Çапах та мĕн пирки ун пекех тискерленсе кайнă ара вăл? Сăлтавне пĕлетĕр-и хуть?

Марук *(ал сулать).* Пĕлетпĕр! Арăмĕ пирки... Паçăр калама пуçларăм та эпĕ, каласа пĕтерейменрĕм.

Праски. Кала-ха, эппин, кала!

Марук. Çак Яклашкин, шутсăр пуйса, хăйне ĕмпӳ выраннех хуракан пулса пынă май, килĕнче чип-чипер арăмĕпе хĕрĕ пур çинчех аякка чупма тапратнă. «Кашни урамрах пĕрер ăшă йăва, мамăк тӳшек пур унăн, хăйма вăрлама вĕреннĕ кушак аçи вĕт вăл»,— тетчĕç ун пирки... Ну, пĕлетĕн ĕнтĕ, ун пек чух пурнăç арканса каять вара, каруççел пек çаврăнма тытăнать. Харкашу та ятлаçу, тапкă та çупкă, темтепĕр. Килĕштерсе, пĕр пурнăçпа пурăнасси пĕтет...

Праски. Ийййя çав, ийййя! Калăпăр, ман хамăн çак хăрăк Ваçли ун пек хăтланас пулсан, эп ăна пĕр кун мар, пĕр çеккунт та усрас çук. Тухса кайтăр хăйĕн йĕпе аркисем патне!

Ырханов *(кулса).* Ĕлкĕрейменрĕм çав ун пек тума. Шутсăр ӳкĕнетĕп çавăншăн. Халь пултарас çук ĕнтĕ, ватăлтăм...

Праски *(ун еннелле варт çаврăнса).* Шан сире, арçынсене! Сире, мурсене, ватлăхра та сăнасах тăрас

пулать. Кунта та çамрӑк сестрасем çине пӑхкалатӑн пуль-ха, ватсупнӑ!

М а р у к *(кулса).* Çук пу-уль, тӑхлачӑ, ват лашаран ӑйӑр тӑваймастӑн, тенӗ ваттисем. Тӗрӗснех каланӑ пуль...

П р а с к и *(пуçӗпе алӑк еннелле сулса).* Ак ку... Çаклашкин, терӗр-и-ха çав?

М а р у к. Яклашкин.

П р а с к и. Вӑл пулнӑ-çке? Ман Ваçлирен ытла çамрӑках та мар пуль-ха? Пуç тӳпинче пӗр пӗрчӗ çӳç те юлман, пуçӗ мӑлированнӑй турилкке пекех яп-яка, хырӑмӗ те сакӑр уйӑх çине кайнӑ пӗтӗ хӗрарӑмӑнни пек...

М а р у к. Вӑл урӑх йышши поротӑ пулмалла çав...

Алӑкран каллех Я к л а ш к и н кӗрет, анчах, паçӑрхи пекех, пӗрре сиввӗн пӑхса илсенех, каялла тухса каять.

П р а с к и. Ай-уй, мана сыхламасть-и ку этем? Эп мӗн те пулин çаклатса тухса каясран шикленмест-и?

Ы р х а н о в. Апла мар... Арӑмне кӗтет вӑл.

П р а с к и. Çапах та, хӑй чупкӑн пулсан та, арӑмӗпех пурӑнать-ха, эппин?

Ы р х а н о в. Çӗнӗ арӑм халь унӑн, çап-çамрӑкскер. Çирӗм пӗррере çеç, тет. Киввине виçӗмçулах пӑрахнӑ.

П р а с к и *(пӗççине шарт çапать).* Кай-кай-кай!.. Çакӑн пек ват сӑса çирӗм пӗррери хӗр качча тухнӑ-и?! Эй, тӗнче-е! Ара, эп хам та тиркемелле-иç ӑна! Мӗнле пулма пултарать ун пек япала?

М а р у к. Пултарать çав ку чухне. Ку хӗрӗ, çамрӑк пулин те, питӗ опытлӑскер, терӗç. Çак Яклашкинӑн кукша пуçне çавӑриччен иккӗ-виççӗ те качча кайнӑ, тет. Анчах темшӗн ӑнман-ха ун пурнӑçӗ: малтанхи упӑшки çакӑнса вилнӗ, иккӗмӗшӗ куна пӑрахса таçта Сахалина тухса тарнӑ, тет, виççӗмӗшне — вӑл магазин директорӗ пулнӑ та — пысӑк растратӑшӑн вунӑ çуллӑха хупнӑ имӗш. Растратине çак саркайӑках тутарнӑ, тет.

П р а с к и. Мӗнле саркайӑк?

М а р у к. Яклашкин еркӗнӗ ара.

П р а с к и. Кай-кай-кай... Пулать те çӗр çинче вӗре çӗлен!

Ы р х а н о в. Пӑхсан — пӗрре те вӗреçӗлен тӗслӗ мар хӑй, канфет хучӗ çинчи картинка пекех...

П р а с к и. Ан палкаса вырт! Эс те куç хыврӑн-и-ха

ун ҫине? Кăтартăп эп сана канфет хучĕ! *(Марука.)* Ку ват шуйттанĕпе мĕнле ҫыхланса кайнă вара?

М а р у к. Хăй парикмахер вăл. Ҫӳҫ касать те сухал хырать, кирлех пулсан, такам ҫӳҫне те ҫăвăр путек ҫăмĕ пек кăп-кăтра туса яма пултарать. Ҫак Яклашкин пĕррехинче вĕсен парикмахерскине пынă та ун пуканĕ ҫине ларнă пулать. Ку унăн пур-ҫук сухалне пит типтерлĕн хырнă, шыҫмак питҫăмартисене тĕлĕнмелле ачашшăн лăпка-лăпка массаж туса янă, ҫав вăхăтрах пĕр чарăнмасăр чĕвĕлтетнĕ. Ирĕлсех кайнă ҫавăн чух Яклашкин! Ик кунта пĕрре ҫӳреме тытăннă ҫавăн патне массажсем тутарма... Унтан лешĕ, саркайăкĕ, ăна хăйĕн хваттерне кĕрсе тухма йыхăрнă... Ку хаклă йышши эрех чиксе кайнă. Ĕҫнĕ-ҫинĕ хыҫҫăн кукша пуҫ хăйĕн хваттерĕ пуррине те манса кайнă, килне таврăнман...

П р а с к и. Кай-кай-кай... Епле намăссăр! Кукшин ҫемье пуррине пĕлнĕ пулĕ-ҫке лешĕ?!

М а р у к. Ăна пăхса тăраҫҫĕ-и? Вĕсене хăйсене пурăнса пултăр, тепĕр хĕрарăм макăрни вĕсемшĕн — апчху! Ҫавăн хыҫҫăн вара вăхăт нумай та иртмест — Яклашкин арăмĕпе вунулттăри хĕрачине килĕнчен хăваласа кăларса ярать те лешне, ҫамрăккине, илсе пырать...

П р а с к и *(пĕҫҫине шарт ҫапать).* Ах, эсрелĕ! Ах, аҫа ҫапманскер!

М а р у к. Юрать-ха, кайран ыр ҫынсем тупăннă та Яклашкинне ҫамрăк арăмĕпе нумаях ыр курса пурăнма паман, хăваласа кăлармалла, хваттерне малтанхи арăмĕпе ачине таврăрса памалла, кусене еркĕнĕпе иккĕшне те хӳтерсе ямалла тунă.

П р а с к и. Ҫав кирлĕ, ҫавă чух!

М а р у к. Кусем вара ирĕксĕрех саркайăк хваттерне куҫса кайнă, анчах лешин хваттерĕ — пĕтĕмпе те вунă метрлă пӳлĕм ҫеҫ пулнă, унта тăваттăн пурăнма тивнĕ: ни тăма, ни выртма!

Ы р х а н о в *(тăрса ларать).* Ҫапах та ку герой аптраман, тепĕр уйăхранах хула варринче виҫĕ пӳлĕмлĕ хваттер илнĕ! Уйрăм кухня, ваннăй, туалет, урамалла — балкон.

П р а с к и. Вăт шуйттан! Эпир пур, миҫе ҫул ĕнтĕ ҫиччĕн икĕ пĕчĕк пӳлĕмре тĕпĕртетсе пурăнатпăр! Ни шывĕ, ни газĕ ҫук пирĕн... Калатăп-калатăп старике, кайса ыйт, тепĕр пӳлĕм хушса паччăр пире, тетĕп,

анчах унăн ялан пĕр сăмах: çынсем пирĕнтен те хĕсĕкрех пурăнаççĕ, эпир аптрамастпăр-ха, тет. *(Упăшкине.)* Илтрĕн-и халь, çынсем епле пурăнаççĕ? Иккĕн виç пӳлĕмре саркаланса пурăнаççĕ!

Ы р х а н о в. Эп жулик мар-çке, Прасковья Ивановна, эп честнăй çын! Жулик пулман, пулассăм та çук.

П р а с к и. Пуçлăхсем патне кайса ыйтни — шулĕкленни мар-иç вăл?

Ы р х а н о в. Ан кулян, вăхăт çитсен параççĕ. Черете çырăннă эпир.

П р а с к и. Э-эх-ха-хай! Теприсем хăяккăн выртсах хăйма çиеççĕ те çав... Çĕр çинчи пĕтĕм ырлăх вĕсемшĕн...

Ы р х а н о в. Çиччĕр! Кӳпчĕр! Ун пек çиекен хăйма вăл хăçан та пулин пурĕпĕр пыра ларать.

М а р у к. Çапла, çапла, ларать вăл, ларать! Эсир мĕн, тĕрĕс мар пурнăçпа пурăнакансем ĕмĕрех пылпа çу хыпаççĕ, тетĕр-и? Çук, çук! *(Алăк çине кăтартса.)* Ак çак Яклашкинах илер. Халь вăл ырă курса савăнса пурăнать-и? Апла пулмасăр! Çамрăк арăм ăна икĕ çул хушшинчех вунă çуллăх ватăлтарнă, ун халь темиçе тĕслĕ чир, иккĕмĕш этажа хăпарнă чух та, чĕринчен тыта-тыта, кивĕ пăравус пек хашкать, анчах леш саркайăкĕ, кĕрхи панулми пек тулса, малтан та, кайран та çавракаланса пырать...

Ы р х а н о в. Çапла çав. Ытармалла мар. Хуть те мĕнле арçынна та антăхтарса ямалла илемлĕ, эсрел!

П р а с к и *(упăшкине)*. Эс мĕскер лăпăртатса выртатăн тата? Антăхтарăп эп сана... ак çак графинпа пуç урлă ярсан!

Ы р х а н о в. Эп ахаль çеç ара... Илемлĕ япала илемлех ĕнтĕ вăл, ăна усал теейместĕн.

П р а с к и. Сан ĕç çук унта!

М а р у к *(шăппăнтарах)*. Чупать, тет, халь саркайăкĕ. Мана вĕсен кӳрши каларĕ. Темле артистсемпе çыхланса кайнă, тет. Вĕсен хваттерĕнче кашни каçах асар та писер музыка яраççĕ, юрлаççĕ-ташлаççĕ, хайкашаççĕ, тет. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл! Малтанах, ку Яклашкинне больницăна килсе пăрахсанах, çӳрекелетчĕ, ăна-кăна илсе килкелетчĕ, халь çӳреме те пăрахрĕ...

Ы р х а н о в. Вунпĕр кун килмен ĕнтĕ. Санитаркăсем урлă ку темиçе çыру парса ячĕ, анчах лешне ниепле те тупаймаççĕ. Ялан килте çук, тет...

М а р у к. Çавăнпа ниçта кайса кĕме пĕлмест ку. Ăшĕ хыпать пулмалла. Темиçе хут та больницăран тухса каясшăн пулчĕ, анчах тухтăрсем ямарĕç.

П р а с к и. Э-э, çавăн пирки урать, эппин-ха, вăл? Мана та, авă, хăйне ыр суннă çĕртех çвер пек кăшкăрса пăрахрĕ.

М а р у к. Çавăнпа ара, çавăнпа! Эп ăна пит лайăх пĕлетĕп!

П р а с к и. Çавă чух тата, тепĕр тесен! Эккей, çамрăкки, чăмăртараххи кирлĕ пулнă ăна! Тьху! Ватсупнă! Шуйттан!

**Палатăна Я к л а ш к и н кĕрет, паçăрхи пекех алăк патĕнчен малалла иртмест. Темиçе самант куç харши айĕн сиввĕн пăхса тăрать.**

М а р у к *(пукан çинчен тăрса)*. Эс мĕн çав териех салху паян, Куçма Иллич? Питӳ-куçу эс кунĕпе кикен чăмланă пек?

Я к л а ш к и н. Шăл ыратать. Çавăнпа.

М а р у к. Ыратать те пуль çав. Ват çыннăн тем те ыратать унăн. Çанçурăмĕ те, чунĕ те...

Я к л а ш к и н. Эс аяла анса пăх-ха, ман пата кам та пулин килмен-и унта? Пĕр çын килмеллеччĕ паян.

М а р у к. Юрĕ ара, кайса пăхăп, маншăн пĕрре анса хăпарасси темех мар... *(Алăк патнелле утать, Яклашкин чӳрече умне пырса тулалла пăхать.)*

П р а с к и *(тăрать)*. Манăн та каяс пуль, чылай лартăм. Кĕпе çумалла-ха паян, ĕнер шыва чиксе хурсаттăм. *(Сумкине пушă кĕленчесем, банкăсем тултарнă май, упăшкине.)* Эс çи тавай, ытларах çи. Эп илсе килнĕ çимĕçсене пĕрне те сая ан яр! Кунта выртса пурăннă чух пăртак та пулин ӳт хушас пулать санăн. *(Пуçĕпе Яклашкин еннелле сулса илет.)* Куран — çынсем епле тĕреклĕ. Юри самăртма хупнă сысна аçинчен те кая мар... *(Çурăмĕпе çаврăнса тăнă Яклашкина чышкипе юнаса илет.)*

Ы р х а н о в. Ытла час-час килсе чăрманма кирлĕ мар, карчăк.

П р а с к и. Ăна санран ыйтса тăмăп-ха. Хăçан май килет, çавăн чух персе çитетĕп. Троллейбуспа çӳреме питĕ ансат халь, пружинлă пукан çинче йăнк та йăнк сиккелесе çеç пыратăн. Ну, чипер вырт, эппин. Ытларах çиме тăрăш. Пĕр вĕçĕм çи, вара часах çын пулатăн!

Ы р х а н о в. Юрĕ, эс каланă пек тăвăп.

П р а с к и тухса каять. Вăл палата алăкне хупсанах, Я к л а ш к и н Ы р х а н о в еннелле çаврăнса тăрать.

Я к л а ш к и н. Пит лайăх карчăк сан, Василь Васильч. Тăрăшать саншăн.

Ы р х а н о в. Утне кура турти пуль ĕнтĕ. Хĕрĕх çул ытла пурăнатпăр, çич ача ӳстертĕмĕр. Аптраман. Яланах килĕштернĕ. Упăшкипе арăмĕн пĕр сак çинче лармалла, тенĕ те ваттисем...

Я к л а ш к и н. Миçере вăл санăн?

Ы р х а н о в. Утмăл улттăра. Тантăш эпир.

Я к л а ш к и н. Пăхсан, ун чухлĕ памалла мар-ха ăна. Питĕ çивĕч тата, тепĕр хĕрĕх çулхинчен те ирттермелле.

Ы р х а н о в *(мухтанарах).* Кăвак чаппанпа кĕрĕк япăхмасть, ырă арçынпа арăм ватăлмасть, теççĕ. Çавăнпа пуль.

Я к л а ш к и н. Пустуях кӳрентертĕм эп ăна пасăр. Чун кӳтсе çитнĕ тĕлне пулчĕ. Тепре килсен, каçару ыйтатăп-ха...

Ы р х а н о в *(ал сулать).* Э-э, нимех те мар! Ун пеккисене йывăра илме пĕлмест вăл. Санăн хăвăн мĕнле, паян та килмерĕ-и-ха?

Я к л а ш к и н *(ассăн сывласа ярса, чӳречерен пăхать.)* Çук-ха çав! Тем амакĕ пулчĕ-çке эсремете! Йĕп пекех çухалчĕ! Киле запискăсем яратăп — унта та тупаймаççĕ. Аптрал! Мĕн те пулин пулман-ши, тетĕп. Кам пĕлет, тен, машин айне лекнĕ, тен, шыва кĕме кайсан, Атăла путнă. Тăванĕсем çук унăн ку хулара, вилсе выртсан та хыпăнакан пулмĕ. Эп хам кунта, ним те пĕлместĕп...

Пауза.

Ы р х а н о в *(шухăшласа выртнă хыççăн).* Э-эх, арăм тени çăпата мар çав, ăна салтса ывăтаймастăн. Шухăшлаттарать.

Я к л а ш к и н. Шухăшлаттарать çеç мар, пĕтĕм чуна тавăрса кăларать! Мĕн пулнă, ăçта кайса кĕнĕ?..

Ы р х а н о в *(кăшт вăхăт иртсен).* Итле-ха, Кузьма Ильич...

Я к л а ш к и н. Мĕн?

Ы р х а н о в. Эс мана, тархасшăн, каçар-ха та, ун пек-кун пек ?ан пултăр та-ха... Темле каламалла...

Я к л а ш к и н. Мĕн тата? Пуҫа шухăш пычĕ пулсан — ан пытар, эппин, кала!

Ы р х а н о в. Пĕлетĕн-и, арăмсем пирки ваттисем тĕрлĕрен каланă.

Я к л а ш к и н. Мĕн каланă?

Ы р х а н о в. Сăмахран... «Ҫӳрен лаша ҫул ҫути, савнă арăм — чун ҫути»,— тенĕ.

Я к л а ш к и н. Питĕ тĕрĕс каланă! *(Тăрук хаваслanса.)* Савнă арăма ăна хĕвелпе танлаштарма пулать! Вăл пурнăҫа ҫутатать, чуна ăшăтать, кăмăла ҫĕклет тата ытти те...

Ы р х а н о в. Анчах ҫапла каланисем те пур-ҫке: «Арсăр арăм йĕвенсĕр кĕсре», «Ютран илнĕ арăмна пĕччен ан яр хăнана»,— тенĕ.

Я к л а ш к и н *(кăмăлсăрланнă пек).* Тата мĕн тенĕ?

Ы р х а н о в. Тата-и? Тата ҫапла каланă: «Илнĕ лаша ăнмасан — ҫулталăка хуйхă, илнĕ арăм ăнмасан — ĕмĕрлĕхе хуйхă»...

Я к л а ш к и н. Эс чим-ха, чим, Ырханов юлташ. Ку сăмахсене эсĕ мана тĕртсе калатăн-и?

Ы р х а н о в. Никама та тĕртместĕп, ваттисен сăмаххисене аса илетĕп ҫеҫ.

Я к л а ш к и н *(ҫилленсех каять).* «Йĕвенсĕр кĕсре»... «Пĕччен ан яр хăнана»... Тен, эсĕ ман Лисук ҫăмăл шухăшлă хĕрарăм, чупкăн тесе шутлатăн?

Ы р х а н о в. Ним те шутламастăп.

Я к л а ш к и н. Ма-ха, эппин, ун пек каларăн?

Ы р х а н о в. Каламарăм-ҫке нимĕн те! Ваттисен сăмахĕсене аса илтĕм кăна!

Я к л а ш к и н. Тен, малтанхи арăмпа уйрăлнă хыҫҫăн манăн тек авланма та кирлĕ пулман тесшĕн эсĕ?

Ы р х а н о в. Ун пек шухăш пуҫа та кĕмен. Пĕлетĕн-и, ваттисем авланасси пирки мĕн каланă?

Я к л а ш к и н *(пĕҫҫине ҫапать).* Каллех ваттисем! Ăҫтан мурĕнчен тупса кăларатăн эсĕ вăл пословицăсене?

Ы р х а н о в. Манăн фольклор кĕнекисем пур. Иккĕ тан. Пурнăҫра йывăр килсенех, эп ҫавсене уҫа-уҫа пăхатăп.

Я к л а ш к и н. Библи вырăнне-и? Е евангели вырăнне?

Ы р х а н о в. Ун пек каласан та юрать. Вăл кĕнекесенче халăхăн пĕтĕм ăсне пухнă.

Я к л а ш к и н. Пулĕ, хирĕçместĕп. Ну... авланасси пирки мĕн каланă-ха вара?

Ы р х а н о в. «Вĕçен кайăк та мăшăрлă», «Арсăр пурнăç — туратсăр йывăç»,— тенĕ.

Я к л а ш к и н. Тĕрĕс каланă! Вăт, манăн шăпах çавăн пек туратсăр йывăç пулас килмерĕ те, тепĕр хут авлантăм эпĕ. Каллех мăшăрлă пултăм. Питĕ лайăх арăм лекрĕ, çитменнине. Каçса кайса юрататăп ăна.

Ы р х а н о в. Вăл та юратать-и?

Я к л а ш к и н. Вилет маншăн. Чунне кăларса пама хатĕр!

Ы р х а н о в. Апла пулсан, пит аван. Савăнатăп кăна саншăн. Анчах ваттисен тата тепĕр сăмах пур...

Я к л а ш к и н. Тата мĕнле сăмах?

Ы р х а н о в. «Тăван — пылак, ют çын — йӳçĕ...»

Я к л а ш к и н. Ку сăмах мана хăш енчен пырса тивет-ши?

Ы р х а н о в. Ара, сан малтанхи арăм пулнă-çке? Эсир унпа иксĕр икĕ хĕр ӳстерсе качча панă, тепĕр хĕрачи халь амăшĕпе пурăнать. Такампа мар, тăван арăмупа пулнă пуль вĕсем?

Я к л а ш к и н. Мĕнех вара? Хальхи арăм маншăн тăван мар тесе тиркесшĕн-и эсĕ? Эпир пĕрле пурăнатпăр, пĕрле çиетпĕр-ĕçетпĕр, пĕр вырăн çинче выртатпăр пулсан, епле-ха тăван мар пулать?

Ы р х а н о в. Анчах та эсир унпа саккун йĕркине кĕнĕ-и-ха? Хут уйăрттарнă-и, урăхла каласан — çырăннă-и?

Я к л а ш к и н *(ал сулать)*. Э-э, тупнă калаçмалли! Ку вăл эсĕ шутсăр кая юлнă çын пулнине çеç кăтартать! Атомпа космос ĕмĕрĕнче хут уйăрттарса хăтланни ниме те пĕлтермест! Мĕн вăл хут татки? Çурнă та пăрахнă ăна! Чи кирли — юрату вăл, Василь Васильч! Çынсем пĕр-пĕрине юратаççĕ пулсан, урăх нимĕн те кирлĕ мар! Çапла мар-им?

Ы р х а н о в. Юратăвĕ лайăх япала та-ха вăл, ăна чухлатăп, анчах утмăлалла çитсен е, иксĕмĕр пек, унтан та ирте пуçласан...

Я к л а ш к и н *(Ырханова пӳлсе)*. Сан пеккисене лайăх докладчиксем консерватор, кивĕ йăласем айне пулнă çын, теççĕ, Василь Васильч! Пурнăç çине кăштах современнăрах пăхас пулать. Тата вырăссен чаплă поэчĕ Сергей Сергейч Пушкин мĕнле каланине пĕлетĕн-и эсĕ? Илтнĕ-и?

Ы р х а н о в. Пӗлместӗп.

Я к л а ш к и н. Пӗлместӗн ҫав! Маҫаксемпе мамаксем мӗн лăпăртатнине ҫеҫ астуса юлнă. Высши литературăна вуламан эс нихҫан та!

Ы р х а н о в. Вуласси нумаях вуламан пулӗ те, анчах Пушкин ячӗ Сергей Сергейч мар, Александр Сергейч пулнине астăватăп.

Я к л а ш к и н *(ал сулать).* Васканипе пăтратрăм. Алексей Сергейч ҫапла каланă *(каҫăрăлса сылтăм аллине ҫӗклет):* «Любви все поколения покорны, ее влияния боготворны!»

Ы р х а н о в. Кă-ăшт урăхларах каланă вăл, Кузьма Ильич. Поколения мар, возрасты, тенӗ, влияния боготворны та мар — порывы благотворны, тесе каланă.

Я к л а ш к и н. Эппин, мана Лисук йăнăш вуласа панă пуль... Анчах шухăшӗ, смыссăлӗ ҫавах вӗт, улшăнмасть! Эппин, эпир те юратма пултаратпăр. Эпӗ те, эс те! Ҫамрăксем пек те мар хытă юратма пултаратпăр, мӗншӗн тесен вӗсен нимӗнле опыт та ҫук-ха, анчах эпир хамăр ӗмӗрте...

Ҫак самантра алăк ярр! уҫăлса каять те палатăна Яклашкин еркӗнӗ Л и с у к кӗрсе тăрать. Питӗ капăр тумланнă, хăй ҫине тем те ҫакса тултарнă, этем майсăр сăрланнă. Пӗр аллинче пысăк хӗрлӗ сумка, тепринче — чечек ҫыххи.

Л и с у к. Здрасте! Пионерла салам пурне те!

Я к л а ш к и н *(аллисене тăсса ун патнелле ыткăнать).* Лисук! Чунăмҫăм! Ҫут хӗвелӗм! *(Ыталама пикенет, анчах Лисук тăрук каялла чакать те, аллисемпе картланса, ыталаттармасть.)*

Л и с у к. Тăхта, асатте, тăхта... Так не пойдет! Во-первых, эс мана упа пек ыталаса платьене лутăркама, прическăна пăсма пултаратăн, тата, во-вторых, санăн малтан хăвăн йăнăшна тӳрлетес пулать. Халех!

Я к л а ш к и н *(тӗлӗнсе).* Мӗнле йăнăша? Эп нимӗн те туман-ҫке, чунăм? Выртса пурăнатăп кунта пӗрене пек...

Л и с у к. Прогрессивнăй склероз санăн, асатте. Нимӗн те астумастăн. Миҫе хут каламалла сана: Лисуксем вӗсем пӗр-пӗр Янсакассинче е Калайкассинче пулаҫҫӗ, столицăра мар. Эп — Лизета!

Я к л а ш к и н. Ах, каҫар, каҫар, Лизета! Тархасшăн, каҫар! *(Ыталама тăрать.)*

Л и с у к. Ҫук, ҫук, асатте, хальхинче ун пек ачаш-

ланмасăрах ирттерсе ярăпăр. *(Аллине тăсса парать.)* Ме! Çакна чуптусан та çитĕ сана. Анчах асăрхансарах чупту, пăру пек çулласа ан пĕтер, тӳсме пултараймастăп сан сĕлекӳ çыпçăннине!

Яклашкин, кăмăлсăрланнă пулин те, ун аллине тытса иккĕ-виççĕ чуптуса илет.

Я к л а ш к и н. Ирт, ирт, Лизета, иртсе лар, тен, эс паян ывăннă та пуль... Ак сана пукан...

Яклашкин Лисука пукан лартса парать те малтан ăна халат аркипе шăлкаласа илет. Хăй ăна хирĕç тепĕр пукан çине ларать. Лисук çине айăпа кĕнĕ йытă хăйĕн хуçи çине пăхнă пек пăхать.

Л и с у к. Ывăннă çав! Халь эпĕ кашни кунах йытă пек ывăнакан пултăм. *(Пукан çине ларать, пĕр урине тепĕр ури çине хурать, Яклашкина аллинчи чечек çыххине тыттарать.)* Ме, чиксе хур мĕн ăшне те пулин. Йăлăхрăм кунĕпе йăтса çӳресе. Театр умĕнче пĕр ухмахĕ тыттарчĕ те...

Я к л а ш к и н *(асăрханарах)*. Кам вара... вăл ухмах?

Л и с у к. Артист пекки. Те юрлать, те ташлать, те кутăн тăрса кăтартать — пĕлместĕп. Ĕлĕкрех пирĕн мастерскоя çӳçне сăрлаттарма çӳретчĕ. Ватă ĕнтĕ, çапах та çулăхма пăхать тата, тăмсай!

Ы р х а н о в *(аякран итлесе тăраканскер)*. Любви все возрасты покорны... Çапла калаçатчĕç-и-ха? *(Койки çине выртать.)*

Л и с у к. Фи! Мĕн любовĕ пултăр ун çумĕнче? Шăлĕсем те хăйĕн мар. Виçĕмçул алла чуптума тăчĕ те, çавăнтах протезĕ çăварĕнчен шăкăрт тухса ӳкрĕ. Уй, ирсĕр! Чут хăсса яраттăм!

Я к л а ш к и н. Ирсĕр çынсем нумай çав, çыхланас пулмасть вĕсемпе.

Л и с у к. Эп халь те никампа та çыхланмастăп. Çывăха та ямастăп, манăн саккунлă упăшка пур, тетĕп. *(Хăйне хирĕç ларнă Яклашкина питçăмартинчен лăпкаса илет.)* Эс пур вĕт манăн, асатте, эсĕ пур, вилме маннăскер! Пĕр саншăн çеç асапланса пурăнатăп çĕр çинче... *(Кукшинчен чуптунă пек тăвать. Яклашкин ирĕлсех каять.)* Кăнтăрла та, каç та асран тухмастăн!

Я к л а ш к и н *(ун аллине чуптуса)*. Тавтапуç, Лизета, ман телейĕм, çут хĕвелĕм... *(Ăна куçĕнчен лăхса.)* Эп кунта саншăн йăлт хуйхăрса пĕтрĕм... Мĕншĕн кил-

мест-ши, инкек-синкек пулман-ши куна, чирлесе ӳкмен-ши, тетĕп. Вунпĕр кун килсе курмарăн та! Вăл хушăра тем пулмалăх та пур!

Л и с у к. Каçар, асатте, чăн та вăрахчен килеймерĕм, анчах уншăн эпĕ пĕртте айăплă мар. Пĕртте, пĕртте!

Я к л а ш к и н. Çук, çук, эп сана айăпламастăп, пачах урăхла — эс чип-чипер сывă, тĕрĕс-тĕкел пулнăшăн савăнатăп, чунăм...

Л и с у к. Кĕтмен япала пулса тухрĕ мар-и! Хампа пĕрле ĕçлекен Иришкăна Кувшинкăна кайма путевка панă та — пĕччен каяс килмест, атя пĕрле, ултшар кун пурăнса килер, терĕ. Макăрас пекех ыйтать те, хĕрхентĕм вара çакна, кайрăм юлташла... Унтан, йĕпе сине сапа тенĕ пекех, туристсен пăрахучĕпе кайма путевка тупăнчĕ. Укçасăрах! Ăна та сая ярас килмерĕ-çке. Тата çуллахи вăхăтра канса та юлас пулать. Çапла вĕт, асатте?

Я к л а ш к и н. Çапла, тусăм, çапла. Май килнĕ чух канас та пулать çав. *(Аллине чуптуса илет.)* Унсăр пуçне епле те пулин çĕнĕ хыпарсем пур-и?

Л и с у к. Э-э... пур! Мансах кайнă калама... Эпĕ кĕçех хальхи ĕçе пăрахса артистка пулатăп пулмалла!

Я к л а ш к и н *(картах сиксе)*. Артистка?! Мĕнле артистка?

Л и с у к. Халăх хорĕ çумĕнчи ташă группине илеççĕ мана. Ташлама вĕрентекенĕпе, балетмейстерпа, эппин, канмалли çуртра паллаштарчĕç. Шыва кĕнĕ чух ăна ман фигура питĕ килĕшнĕ. *(Хăйĕн пилĕкне ик енчен тытса çаврăнкаласа илет.)* Мадонна фигури санăн, тет. Кун пек кĕлеткене сая ярса пурăнни — преступлени, эпир санран прима-балерина тăватпăр, пĕр-ик çултан тава тивĕçлĕ артистка ятне илетĕн, тет. Вăйпах заявлени çыртарчĕ. Паян тăватă сехетре пĕрремĕш репетици пулать. Эс хирĕç мар пуль вĕт? Ма чĕнместĕн? Ну, кала ĕнтĕ! *(Яклашкина пуçĕнчен ачашлать.)* Кала ĕнтĕ, асатте! Атту эп халех макăрса яратăп!

Я к л а ш к и н *(куçĕсене мăчлаттарса)*. Темле-çке... Темле... Кирлех-ши вăл?

Л и с у к. Епле «кирлех-ши?» Кам пĕлет, тен, эпĕ, çав балетмейстер калашле, чăнах артистка пулма çуралнă? Тур панă таланта мĕншĕн сая ярас?

Я к л а ш к и н. Вăл апла та-ха... Сая яма юрамасть те-ха...

Л и с у к. Эс тем ан шухăшла, асатте... *(Яклашкина куçĕнчен пăхса çурăмĕнчен ачашлать.)* Халăх хорне унта сан пек ват стариксем те нумаййăн çӳреççĕ. Ара, санăн та сассу лайăх вĕт-ха, кăшт сыпсассăн, леш «Ан авăн шĕшкĕ» тенине еплерех янрататăн эсĕ! Пӳлĕмри кантăксем чĕтреççĕ-иç! Кунтан тухсан, эп хăвна та илсе каятăп ак унта. Иксĕмĕр пĕрле çӳрĕпĕр. Çапла-и? Юрать-и? Ну?

Я к л а ш к и н *(макăрса ярас пек).* Ю... ю... юрать...

Л и с у к. Эх, ылтăн старик! Кăшт ухмахрах пулсан та, пурпĕрех ăслă! *(Кукшинчен чуптăвать.)* Ытармалла мар! Анчах халăх хорне манпа пĕрле çӳрес килнипе эсĕ кунтан ытлашши васкаса тухма ан тăрăш. Тухтăрсем мĕн чухлĕ вырттараççĕ, çавăн чухлĕ вырт. Уйăх пулать-и унта, иккĕ-и, виççĕ-и — пурĕпĕр вырт. Тӳрлен, вăй пух ытларах. Малашне сана вăй нумай кирлĕ пулать-ха. Пурнăç вăл — йывăр япала, асатте...

Я к л а ш к и н *(çĕрелле пăхса).* Ахаль те виççĕмĕш уйăх çине кайрĕ ĕнтĕ кунта килсе лекнĕренпе. Йăлăхрăм. Килте пурăнас килет.

Л и с у к. Ничево, ничево, асатте. Тӳсес пулать. Килте те сан валли ылтăн купаласа хуман. Пăхакан та çук, эп ерçместĕп. Апат-çимĕç енчен чиперех пуль кунта? Эп хам нимĕн те илсе килеймерĕм, çула май çеç чупса кĕтĕм те...

Я к л а ш к и н. Аптрамасть. Выçă вырттармаççĕ...

Л и с у к. Пит аван апла пулсан. Ну, эп каям-ха, эппин. Ĕç çав тери нумай. Халь тӳрех ательене чупмалла,— унта ман валли чи çĕнĕ модăпа *(аллипе чĕркуççирен чылай çӳлерех кăтартать)* икĕ платье çĕлеççĕ. Унтан манăн васкасах ваннăйĕнче çăвăнса тухас пулать, репетицинче çарамаслантараççĕ, тет, унта...

Я к л а ш к и н *(картах сиксе).* Епле... епле çарамаслантараççĕ?!

Л и с у к *(кулать).* Ан хăра, асатте! Пĕтĕмпех мар, частичнă анчах. Майкăпа, труççикпа ташлаттараççĕ. Ну, халлĕхе сывпул-ха, эппин. Сывал! *(Кукшинчен чуптăвать.)* Ерçӳ пулсан, тепĕр эрнесенче килсе курăп-и-ха, тен, ун чух йăлт каласа парăп. Интерессем нумай пулма пултараççĕ. Питĕ нумай! Чипер юл! *(Аллипе вĕл-вĕл туса алăк патнелле кутăн чакса каять; Яклашкин ун хыççăн ыйткалакан пек кăштăртатса утать. Алăк патне çитсен, çурăмĕпе Марук инке çине*

*пырса тăрăнать — лешĕ шăпах коридортан кĕрет-мĕн.)* Ай, кам ку?!

М а р у к. Эпĕ ку! Сана чĕнме ячĕç, темле охломонсем кĕтеççĕ картишĕнче, виççĕн тан, çăмăл машин ăшĕнче лараççĕ, часрах тухтăр, терĕç.

Л и с у к. Халь те тухатăп ĕнтĕ.

Я к л а ш к и н. Камсем кĕтеççĕ, Лисук?

Л и с у к *(ал сулса).* Э, пустуй! Хамăр министерствăн шоферĕ çула май лартса килчĕ те, эп ăна кăштах кĕтсе тăма хушрăм...

Л и с у к хăвăрт тухса каять. Яклашкин чÿрече патне пырса туталла пăхма тытăнать. Ун хыççăн Марук пырать. Юлашкинчен Ырханов та пырса пăхма пуçлать.

М а р у к *(ăмсаннă пек).* Пăх-ха, машин патнелле епле вĕçтерсе пырать вăл... Саркайăк темĕн!

Ы р х а н о в *(кăмăллăн).* Çунаттисем çук анчах...

М а р у к. Ха, леш ăйăрĕсем сиксе тухрĕç! Кур-ха, пĕри ыталама та хăтланать... Вăт намăссăр! Ыталарех вĕт! Пилĕкĕнчен те аяларахран лăпкать! Ай-уй! *(Яклашкина чавсипе тĕртсе.)* Ма чармасть ара вăл ăна? Ма çиçсе ямасть пĕрре?

Яклашкин чĕнмест, хашш! сывласа ярать çеç.

Ак япала! Машин ăшне йăтсах кĕрсе кайрĕ тем! *(Яклашкина.)* Вăрласа каймарĕç-и вĕсем сан арăмна, Куçма Иллич?

Ы р х а н о в. Çук пу-уль... Леш мăнттай арçынне паллатăп эпĕ, хула çынниех, таçтискер мар.

Я к л а ш к и н. Кам вара вăл?

Ы р х а н о в. Вилнĕ çынсене пытаракан бюро çумĕнчи духовой оркестрта ĕçлет. Чи пысăк трубине кăшкăртать. Хăш чух параппан çапать. Хăй отставкăри полковник ывăлĕ, анчах шутсăр тăмсай. Хулиган тата, пьянчук — пырса та ан çулăх! Ашшĕ ăна иккиç хут та килĕнчен хÿтерсе кăларса янă, анчах амăшĕ хĕрхеннипе каялла кĕртеççĕ услапа...

М а р у к. Тĕлĕнетĕп çавăнтан: темле ăслă çынсен те ачисем час-часах путсĕр пулаççĕ!

Ы р х а н о в. Мăнтăрпа вăл, Марук инке, мăнтăрпа! *(Яклашкин çине вăрттăн пăхса.)* Ытлашши çăмăл, ним хуйхă-суйхăсăр пурăнсан, çын яланах пăсăлса каять...

Я к л а ш к и н *(чÿрече умĕнчен пăрăнса, хăйне яна-*

*хӗнчен тытса шухӑша кайса тӑрать.)* Василь Васильч!

Ырханов *(вырӑн ҫине ларса).* Мӗн, Кузьма Ильич?

Яклашкин. Халь шутлатӑп та... Ваттисем тӗрӗс калана!

Ырханов. Мӗн пирки?

Яклашкин. Леш... кӗсре пирки! «Арсӑр арӑм — йӗвенсӗр кӗсре...» Аслӑ сӑмах. Ютран илнӗ арӑма хӑнана пӗччен яма юраманни ҫинчен те лайӑх каланӑ. Килӗшетӗп.

Ырханов. Мӗн, арӑмна тӳрех шанми пултӑн-им тата? *(Ал сулать.)* Ан шутла нимӗн те! Тухса тарман-иҫ вӑл санӑн? Унта-кунта кайсан та, килти выльӑх килех пырать, теҫҫӗ... Сана юрататъ пулас-ха вӑл, пуҫӑнтан ҫав тери ачашшӑн шӑлкаланине хам курса выртрӑм...

Марук *(урай шӑлма пӑрахса.)* Пуҫран шӑлать те кутран тапать, теҫҫӗ тепӗр чух...

Яклашкин койка ҫине тӑсӑлса выртать.

Ырханов *(таблетка хыпать).* Паллах, хӗрарӑма ҫирӗппрех тытни кирлӗ. Уйрӑмах — вӑл хӑвӑнтан ҫамрӑк пулсан...

Марук. Чипер чӑпӑркка чипере вӗрентет, тенӗ...

Ырханов *(шыв ӗҫет).* Тепӗр тесен, ҫынна амӑш сӗчӗпе тӑн кӗмен пулсан, качака сӗчӗпе тӑн кӗмест ӑна.

Пауза. Ырханов палатӑри радиорепродуктор тӳмине пӑрать те, тӳрех мӑн сасӑпа юрлани кӗрлесе каять:

Ан ҫиллен, савни, ан ҫиллен те,
Ан ҫиллен, савни, ан ҫиллен
Кӑштах сӑмах илтнипе те,
Кӑштах сӑмах илтнипе...

Яклашкин *(парт! сиксе тӑрса ларать).* Марук инке! Дежурнӑй врач пур-и халь кунта?

Марук. Ай-уй, мӗн тума тӑруках врач кирлӗ пулчӗ тата?

Яклашкин. Кирлӗ пулчӗ ҫав. Халех!

Марук. Пуҫу ыратма пуҫларӗ-и, вар пӑрса лартрӗ-и?

Яклашкин. Сан ӗҫ ҫук унта.

Марук. Чӗнес пулсан, мӗншӗн чӗннине калас пулать-ҫке.

Яклашкин. Киле каятӑп!!

Маруk. Ай-уй, мĕн тума? Арăму тин çеç килсе кайрĕ-иç?

Яклашкин. Пулин! *(Кăшкăрать.)* Мана ирĕк кирлĕ, сывлăш! Пĕтетĕп эп кунта, тепĕр ик эрне выртас пулсан — ухмаха ерсех кайма пултаратăп! Вольăра эп луччă вăй илетĕп, пĕлетĕн-и?

Ырханов. Нервăсем пуçĕпех пăсăлнă санăн, Кузьма Ильич.

Яклашкин. Нервă, нервă! Эс хăçан та пулин хăвăн арăмна ют арçын ыталанине курнă-и?

Ырханов. Турра шĕкĕр, ун пеккинех курма тӳр килменччĕ.

Яклашкин. Апла пулсан — ан та шарла! Нервă! Нервă мар, тилхепе те тӳсес çук ун пеккине курсан! *(Марука.)* Кайса чĕн часрах тухтăра! Киле каятăп! *(Урисемпе тапăртатать.)* Киле-е! Хале-е-ех! Çак самантра-ах!..

Марук. Ан çухăр, кунта хăлхасăрсем çук! Киле кайсан, арăму çине çухăр, усăллăрах пулĕ. Кунта эс никама та хăратаймастăн!

Яклашкин. Чĕнсе ки-ил!

Марук. Тăхта, урай шăлса пĕтерем.

Яклашкин. Итлеместĕн, эппин?! Апла пулсан, хам каятăп!

Марук. Каях ара, кам чарать сана, арçурине!

Яклашкин. Сан çинчен жалоба паратăп! Итленмешĕн!

Марук. Вĕçтер, вĕçтер! Анчах такăнса ӳксе сăмсуна ан çĕмĕр унта, катăк сăмсапа арăму вуçех те киле кĕртмĕ.

Яклашкин алăка шалт-шалт уçса хупса тухса чупать.

Ырханов *(кулать)*. Патне çитрĕ этем. Шапаш. Ухмаха ерет. Чӳречерен курчĕ вăл ют айăрсем хăйĕн арăмне ыталаса вылянине. Чĕринех пырса тиврĕ пулмалла.

Марук. Эх, ха-хай! Çапла çав вăл, ялан чап-чап уйăхĕ пулмасть *(щетка аврипе урайне шаккаса)*, топ-топ уйăхĕ те килсе çитет!

## Иккĕмĕш картина

Яклашкин хваттерĕн пĕр пӳлĕмĕ. Икĕ алăк — пĕри тултан кĕмелли, тепри кухньăна тухмалли. Сĕтел, диван, çемçе пукансем.

Стенасем ҫинче картинӑсем. Пӗрре пӑхсах курӑнать — пӳян иккен ку кил хуҫи...
Тултан кӗмелли алӑк патӗнче тӗрлӗ тумтирсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Уйрӑм пӑта ҫинче — духовой оркестрти чи пысӑк труба, ҫап-ҫутӑскер, йӑлтӑртатса тӑрать.
Чаршав уҫӑлнӑ чух пӳлӗм варринче Лисукпа Барабанов каҫса кайса чуптуса тӑраҫҫӗ. Пӗр-пӗрине ыталаса лартнӑ та, вӗсене пӑрлӑ шывпа сапмасӑр та уйӑрас ҫук пек туйӑнать. Пӗр-икӗ минут иртет ҫапла...

Лисук *(Барабанов ытамӗнчен вӗҫерӗнсе).* Ух! Вӑйлӑ-ҫке эсӗ, чутах вӗлерсе пӑрахаттӑн! *(Хашкать.)* Чылай арҫынсем ыталанӑ мана, анчах сан пеккине курман! Ывӑнтарсах ятӑн, мур... *(Диван ҫине лак ларать.)*

Барабанов. Юрататӑп-ҫке сана, Лизончик! Ҫавӑнпа ниҫта кайса кӗрейместӗп. Хамӑн ытамран пӗрре вӗҫертмӗттӗм сана. Ир пуҫласа каҫчен, каҫ пуҫласа ирччен чуптӑваттӑм! *(Каллех ыталама тӑрать.)* Ылтӑн вӗт эсӗ, Лизончик, ылтӑн муклашки!

Лисук. Чӑнах юрататӑн-и вара?

Барабанов. Юрататӑп! Ҫав тери юрататӑп! *(Ыталать.)*

Лисук *(вӗҫерӗнсе аяккалла сикет, Барабанова куҫӗнчен ҫав тери сӑнавлӑн пӑхать).* Темле-ҫке... Те мана хама юрататӑн-ха эсӗ, те... *(аллипе йӗри-тавралла кӑтартса)* ман хваттере, ҫак пӗтӗм обстановкӑна... Э?

Барабанов. Ан кӳрентер мана ун пек каласа! Маншӑн пулсан, пӗр сӗтел-пукан та, ак ҫак диван та, кравать те, кавирсем те — ним те кирлӗ мар, хуть те паянах сутса пӗтер вӗсене! *(Лисук умне чӗркуҫленет.)* Мана пӗр эсӗ кӑна кирлӗ, эсӗ кӑна! *(Пуҫне ун чӗркуҫҫийӗ ҫине хурать.)* Епле телейлӗ эп санпа тӗл пулнӑшӑн... Пӗлетӗн-и, эп халь ҫӗр ҫинчи чи телейлӗ этем... Анчах эсӗ ху юрататӑн-и мана, Лизончик?

Лисук *(Барабанова пуҫӗнчен ачашласа).* Ухмах, мӑн ухмах эсӗ, Ерёма! Кӑтра пуҫлӑ ухмах, айван така! Юратмастӑп пулсан, хамӑн старик пур ҫинче киле кӗртетӗп-и-ха сана?

Барабанов *(ҫӗртен тӑрса Лисук ҫумне ларать).* Старик тенӗрен, мӗнле вӑл унта? Халь те вилме шутламасть-и? Пӗр-пӗр кандрашкӑ пырса ҫапман-и ӑна?

Лисук *(ал сулса).* Нихҫан та вилмест пуль вӑл! Леш Кащей Бессмертнӑй пекех. Вилме мар, татах мӑнтӑрланнӑ пек туйӑнчӗ-ха. Э-эх, ман ҫине ҫуллӑ куҫӗсемпе пӑхать ҫав, ыталама хӑтланать... ват шапа! Фу, ирсӗр!

Б а р а б а н о в. Çапах та... вăл больницăран тухса килсен, мĕн тăвăпăр-ха?

Л и с у к. Эс мĕн, хăраса ӳкрĕн-им? Киле кĕртместĕп эп ăна — ĕçĕ те пĕтрĕ! Хваттер ордерне ман ятпа çырнă, кунта эп хуçа! Кайтăр хăйĕн кивĕ арăмĕпе ачи патне, пур вĕт унăн...

Б а р а б а н о в. Судпа-мĕнле тапаçланма тапратсан?

Л и с у к. Ним те тăваймасть, эп юристсемпе калаçса курнă ĕнтĕ. Маншăн вăл саккунлă упăшка мар, çыръăнман эпир унпа, кунта вăл квартирант пек çеç шутланать, çавăнпа та... тапнă та кăларнă!

Б а р а б а н о в. Ах, ытла та ăслă-çке эсĕ, Лизончик! Епле кăна пулма пĕлнĕ пуль...

Л и с у к. Пурнăç вĕрентет, Еремей! Хам ĕмĕрте эпĕ Яклашкин пек анра-сухрасене мар, унтан ăслараххисене те курнă, анчах пĕри те мана çĕнтерейменхăйсемех пĕтнĕ!

Б а р а б а н о в *(ун куçĕнчен пăхса).* Çынçиен эсĕ, Лизончик.

Л и с у к. Асту, сана та çисе яратăп акă! *(Шăлĕсене шатăртаттарать).* Хăрамастăн-и?

Б а р а б а н о в. Çук, хăрамастăп! Эп сана хам çисе яма пултаратăп... *(Чуптăвать.)* Ытлашши юратнипе!

Л и с у к *(тăрать).* Çитĕ ĕнтĕ пăрусем пек çулланма. Уçăлса çӳрес пулать пăртак. Пуç ырата пуçларĕ.

Б а р а б а н о в. Атя-ха, пĕр çĕре кайса килер, Лизончик. Пирĕн оркестрти пĕр услапăн заграничнăй плащ пур, тет. Зарплатине ĕçсе янă та çавна сутать халь, йӳнĕпех паратăп, терĕ.

Л и с у к. Тĕрĕс, ун пеккине вĕçертме юрамасть. Пурăнма пĕлес пулать. Ак çак ылтăн сехете те эпĕ пĕр шарлатанран вунпилĕк тенкĕпех илтĕм. Анчах вăл çĕр çирĕм тăрать.

Б а р а б а н о в. Вăрланăскер пулнă пуль вăл!

Л и с у к. Мана мĕн ĕç. Эп вăрламан, çынни пирĕн мастерскойнех пырса пачĕ. *(Тĕкĕр умĕнче çӳçне-пуçне тӳрлетет.)* Хваттер уççи пур-и сан?

Б а р а б а н о в. Пур. Эп ăна йĕм çумне кăкарсах çӳретĕп.

Л и с у к. Кайрăмăр, эппин.

Çутă сӳнтереççĕ те ыталансах тухса каяççĕ. Пĕр вăхăт сцена пушă. Радио çеç юрлать: «Эх, как бы дожить бы до свадьбы-женитьбы и обнять любимую свою...» Унтан алăкран хуллен шаккани илтĕнет. Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

Я к л а ш к и н с а с с и *(питĕ йăвашшăн).* Лису-ук! Лизета! Эс килте-и? *(Татах шаккать.)* Лизета, тетĕп! Уç-ха ĕнтĕ, эпĕ ку, Кузьмушка, Кузьма Ильич, ют çын мар, сан старикку! Вăран-ха, манăн часрах сана курас килет!

Шăп. Кăшт тăрсан, алăка тул енчен уççипе шакăлтаттарса уçни илтĕнет те, пӳлĕме Я к л а ш к и н кĕрсе тăрать.

Я к л а ш к и н. Эккей, хăямат... Лисук тĕрĕсех калать çав, прогрессивнăй склерозах манăн. Хам çумра хваттер уççи пуррине те манса кайнă, ватсупнă. Çур сехет шаккаса тăтăм, анчах хам паçăрах кĕме пултарнă иккен! *(Çутă çутса ярать, пушмакне хывса малалла иртет те диван çине ларать.)* Килте çук иккен ман саркайăк... Эп таврăнасса пĕлмен те-ха вăл, таçта кайнă ĕнтĕ. Çамрăк пуçпа пĕр-пĕччен камăн килте çĕрсе ларас килтĕр, мĕн интерес? Кĕтес пулать ĕнтĕ... Анчах та чим-ха... Мĕн каларĕ-ха вăл паçăр? Э-э, репетицие каятăп темерĕ-и çав? *(Сехет çине пăхать.)* Халь вунă сехет. Репетици тăваттăра пуçланать, терĕ. Нивушлĕ ултă сехет таранах ташлаттараççĕ? Ай-ай, йывăр пуль ун пек! Эп хам, темле хытă ĕçсен те, пилĕк минутран ытла ташлаймастăп... Ну, кулянар мар-ха уншăн, часах таврăнать пуль. Килти выльăх килех килет, терĕ паçăр Ырханов та... *(Урисене тăсса, аллисене сарса, диван хыçĕ çине тайăнать.)* Ах, килтех лайăх çав, килтине нимĕн те çитместь! Икĕ уйăх больницăри хăлтăр-халтăр койка çинче йăваланса пурăнтăм та, халь рая килсе кĕнĕ пекех туйăнса кайрĕ... *(Куçĕсене хупсах калаçать.)* Кĕçĕр ĕнтĕ кăштах Столичнăй ярсан та кансĕрлемен пулĕччĕ — кăмăла çĕклемелĕх, шăммашакка вăй кĕртмелĕх... Çылăх пулмасть! *(Куçĕсене уçать.)* Чăнах, Лисукăн çук-ши мĕн те пулин? Пăхасха юриех, тен, ман телее, мĕн те пулин тупăнĕ? *(Тăрать те арăмĕн стена çинчи хитре рамкăллă портречĕ патне пырать.)* Лисук, чунăм! Çут хĕвелĕм! Çук-и сан ман валли мĕн те пулин, кăштах ăшчике пĕçертсе илмелли? Çук-и, тетĕп. Ма чĕнместĕн? Çаплах кулса ларатăн пулать? Атя, кулах, кулах старикрен. Анчах хăвна ман пек вут-çулăмлăн юратаканни никам та çук, çавна пĕл эсĕ, саркайăк! Мĕнле юрлаççĕ-ха çав? *(Аллисемпе сулкаласа хуллен юрлать: «Манран лайăх, чипер каччă ялта тупаймастăн...»)* Эп шутсăр ырă кăмăллă çын вĕт, Лисук! Темле çилленсен те, ман наччасра иртсе каять.

Ак, паçăр кăна, больницăра, эп сан çине шутсăр çиллентĕм. Ара, ху унта ют арçынсемпе якăлтатрăн та... Анчах халь веç иртсе кайрĕ. Нимĕн те çук! Сана тата ытларах юратакан пултăм çеç. Хама хам ятларăм: ухмах эсĕ, Кукша Куçма, хăвна чунтан юратакан арăмна пустуях çылăха кĕртетĕн! Ухмах çав, ухмахах! Ман пек тăмпуç урăх çук та пулĕ... *(Кухньăна кĕрсе каять, темиçе самантран пуçланă перцовка кĕленчипе черкке çĕклесе тухать.)* Акă, тупăнчĕ те ман валли! Ку вăл хам больницăна выртиччен илнĕскерех пулĕха. Мана кĕтсе ларнă, шельмăскер... Закуски те тупăнĕ-ха, тен. *(Кухньăна тепре кĕрсе, пулă хӳри илсе тухать.)* Телей пурах иккен манăн... *(Эрехне тултарать.)* Ну, Кузьма Ильич, киле таврăннă ятпа салам сана! Ырлăх та сывлăх пултăр! *(Ĕçет, чыхăнса каять.)* Х-хаяр, шуйттан! Ĕлĕкрех эпĕ ку перцовкăна кĕленче пырĕнченех пĕрре сывламасăр тĕпĕ курăнакан пуличчен ĕçеттĕм, хăнк та тумастăм, анчах халĕ çук... Слабăланнă. *(Пулă хӳрине кăшлать.)* Çапах та аптрамастăп-ха! Хамран хĕрĕх çул кĕçĕнтерех хĕрарăма илĕртме пултартăм... *(Тепĕр черкке тултарать.)* Ку вăл — ой-ой-ой! Кунта, юратусăр пуçне, салтаксем пек каласан, хăюлăх, паттăрлăх, хастарлăх кирлĕ! Вĕсем пур-ха, эппин, манăн. Вырăссем: есть ишшо порох пороховницы, теççĕ. Çавăн пек ĕнтĕ манăн та... *(Ĕçет.)* Ах, лайăх касса анса каять-çке! *(Хырăмне шăлкалать.)* Халь тата пĕр пирус туртса ярсан аванччĕ... Хама больницăна хунăранпа туртман та-ха, тухтăрсем гипертонипе чирлекенсен туртма юрамасть, теççĕ, анчах перцовкăпа хутăш юрать те пулĕ. Тепĕр тесен, тухтăрсем мĕн пĕлеççĕ вĕсем?.. Таçта, кив пальто кĕсйинче, пулма кирлĕ-ха. *(Алăк патнелле каять те стена çумĕнче духовой оркестр труби çакăнса тăнине курать.)* Апайтурух, мĕнле япала ку? Мĕнле лекнĕ кунта, кам килсе çакнă ăна? Ман тавраштра ĕмĕрне те пулман хатĕр... *(Хăйне çамкинчен çат-çат-çат туса илет.)* Э-э! Астурăм! Лисук тахçан-тахçан каланăччĕ: ман кукка ывăлĕ музыкант, пирĕн хулана куçса килме ĕмĕтленет, тенĕччĕ. Çав килсе çитнĕ пулĕ-ха. Ну, вăхăтлăха пирĕн патра чарăннă ĕнтĕ. Ют çын мар, кĕртесех пулать... Анчах паçăр Лисук мана ун çинчен нимĕн те каламарĕ-çке? Маннă пуль ĕнтĕ, маннă, мăнтарăн. Çамрăксен пуçĕнче *(çамкине çапса илет)* çил вĕрет, çи-ил! *(Урайĕнче пушмак курса, ăна алла илет.)* Çынни пит здоро-

вăскер пулмалла. Пăх-ха, пушмакĕ мĕн пысăкăш! Сахалтан та хĕрĕх улттăмĕш номер ку, ай-ай! Кун пек пушмакпа ăнсăртран çынна пĕрре тапсан — виç чалăш ывăтса яма пулать, туршăн та! Пулаççĕ те çĕр çинче паттăрсем. *(Пушмакне пăрахать, тахăш кĕсъерен пирус тупса хыпать, чĕртет, унтан каллех диван çине пырса ларать.)* Çапах та, ăçта çӳрет-ши-ха ман Лисук? Кĕçех вуннă та çитет... Кичем пуласран тепĕр черкке ĕçес-ха. *(Ĕçет.)* Самаях пуçа кайрĕ так-тă. Ну ничево, темле склероз-гипертони пулсан та, ик-виç уйăхра пĕрре сыпни вĕлерсе пăрахмĕ-ха. Юн вылятмалăх кăна вăл. *(Татах ĕçет.)* Пользительнă теççĕ вырăссем... *(Ӳсĕрĕлсе кайрĕ ĕнтĕ. Диван хыçĕ çине тайăнса темле юрă ĕнĕрме тытăнать, анчах нумай та юрлаймасть — çывăрса каять. Майĕпе пуçĕ шуса анать те, хăяккăн выртса харлаттармах тытăнать...)*

Тултан Лисукпа Барабанов кĕреççĕ. Вĕсем диван çинче çывăракан Яклашкина тăруках курмаççĕ.

Барабанов. Мĕнле япала ку? Эп çуттине сӳнтерсе хăвартăм-çке, кам çутса янă?

Лисук. Ах, тур! Вăрăсем килсе кĕмен-и хамăр çук чух? Нумай та çӳремерĕмĕр-çке?..

Лисук васкасах малалла иртет те, сасартăк Яклашкина курса, хăйне пушăпа çапнă пекех каялла чакать, Барабанова хулĕнчен çатăрр! ярса тытать.

Лисук *(шăппăн)*. Пĕтрĕмĕр, Ерёма!

Барабанов *(ăнланмасăр)*. Мĕн пулнă? Чăнах темскер вăрланă-им?

Лисук *(ун çăварне хупласа)*. Хуллен калаç!

Барабанов. Мĕншĕн?

Лисук *(малалла кăтартать)*. Авă, кур! Леш сатана килсе выртнă. Сысна пек çывăрать... Мĕн тăватпăр?

Барабанов *(маларах иртсе Яклашкина курать)*. Мĕн тумалли паллă ĕнтĕ... Калаçса татăлтăмăр-иç? Халех тытатăп та кăларса ывăтатăп! *(Ывçă тупанĕсем çине сурать.)*

Лисук *(ăна хулĕнчен тытса чарать)*. Тăхта, Ерёма, ытла тăруках ун пек тăвас мар...

Барабанов. Мĕн, хĕрхенетĕн-им? Тен, ун вырăнне ман тухса каяс? Сире кансĕрлес мар? Çапла-и?

Лисук. Кирлĕ мара ан калаç-ха эсĕ! Ĕçе шăппăн, йĕркеллĕ тăвас пулать. Атту вăл кăшкăрма, качака

таки пек çухăрма тапратĕ, кравул кăшкăрĕ, кӳршĕсем чупса килĕç, милици чĕнтерĕç... Ун пек тăвас марччĕ!

Б а р а б а н о в. Мĕнле тумалла-ха тата? Вĕрент, эппин, эс упăшкасене муталас енпе маçтăр.

Л и с у к. Эп пытанатăп, эс унпа пĕчченех калаç. Йĕркеллĕ, кăшкăрмасăр-тумасăр, арçынпа арçын калаçнă пек... Лиза сан арăму мар, ку хваттер те сан мар, Лизăн, эсĕ хăвăн килне кай, те... Ăнлантăн-и?

Б а р а б а н о в. Тавçăратăп. Çухал, эппин. Пĕччех майлаштарăп. Анчах, çапас-тăвас еннелле кайсан, эс тухса чар мана, атту-тăк эпĕ, ăнсăртран... *(чышки çине пăхса илет)* хытăрах лектерĕп те, чунĕ тухса кайĕ ухмахăн.

Л и с у к. Юрĕ, чунăм! *(Тепĕр пӳлĕме кĕрсе каять.)*

Б а р а б а н о в *(пирус тивертсе, аллисене кĕсйисене чиксе, пĕр хушă Яклашкин çине хурчăка чĕпĕ çине пăхнă пек пăхса тăрать).* Та-ак, тейĕпĕр... Мĕнрен пуçлас-ха Лисук заданине пурнăçа кĕртме? *(Яклашкина уринчен кăрт-карт туртса вăратать.)* Эй, кĕтмен хăна, тăр-ха тавай! Калаçмалли пур!

Я к л а ш к и н *(тăрса ларать).* А? Мĕн? Мĕн пулнă?

Б а р а б а н о в. Кала-ха, гражданин, эс кунта мĕнле лекнĕ?

Я к л а ш к и н. Эпĕ-и?

Б а р а б а н о в. Эсĕ çав, кам пултăр тата?

Я к л а ш к и н. Хамăн уçăпа уçса кĕтĕм. Больницăран таврăнтăм та, арăм çук та...

Б а р а б а н о в. Кам вара эс çын хваттерне çакăн пек çĕрле çăраççи юраттарса кĕрекенскер?

Я к л а ш к и н. Епле кам? Çак хваттер хуçи. Кузьма Ильич Яклашкин... *(Барабанов çине куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса пăхать.)* Эсир... эсир ман арăмăн хурăнташĕ пулĕ-ха, çапла-и? Лисук каланăччĕ мана, ун куккăшĕн ывăлĕ, музыкант, килмелле, тетчĕ. Эсир ĕнтĕ вăл...

Б а р а б а н о в *(аллисемпе хăйĕн пилĕкĕнчен тытса, çывăхарах пырса тăрать).* Эпĕ Лисукăн нимĕнле куккăшне те палламастăп, гражданин Яклашкин. Эпĕ — Лисук упăшки. Акă кам эпĕ!

Я к л а ш к и н *(сиксе тăрса).* Мĕнле упăшка?! Каçарăр та... Хăвăр мĕн калаçнине чухлатăр-и эсир? Е манран кулма шут тытрăр-и? Аван мар ун пек, çамрăк çыннăм...

Б а р а б а н о в. Ним кулмасăр, тĕп-тĕрĕссипе кала-

тап сана: эпе, Еремей Барабанов, Лисукăн чан-чан упăшки!

Я к л а ш к и н. Ан сÿпĕлтетĕр кирлĕ мара! Темскер пăтрататăр эсир! Ун упăшки эпĕ вĕт, эпĕ, Кузьма Ильич Яклашкин, эпир унпа икĕ çул çурă арлă-арăмлă пурăнатпăр. Ан шÿтлĕр-ха, тархасщăн, йĕркеллĕ калаçăр!

Б а р а б а н о в. Халь те пит йĕркеллĕ калаçатăп. *(Яклашкина хулпуççинчен пусса диван çине лартать те хăй те çумне ларать.)* Тăнла лайăхрах, старик. Ним пăлханмасăр-тумасăр, хăлхусене чанк! тăратса итле. Эп каланисене лайăхрах ăнланма тăрăш. Ку вăл хăвăншăн усăллă пулĕ...

Я к л а ш к и н *(хытă пăлханма пуçласа)*. Ну, итлетĕп, итлетĕп.

Б а р а б а н о в. Эсĕ, кукша пуç, нихçан та Лисук упăшки пулман, пулма та пултарайман. Икĕ çул ытла эсĕ унăн шăршлă еркĕнĕ пулса кăна пурăннă. Ăçта сан документ? Ăçта авланнине пĕлтерекен свидетельство? Çук вăл санăн. Пурри пур та ĕнтĕ... вăл урăх хĕрарăмпа çырăннине пĕлтерет. Анчах манăн — пур! *(Кĕсйинчен темле хутсем кăларать.)* Акă свидетельство, акă паспорт çине паллă туни... Малашне Лисук хушамачĕ Барабанова пулать, ăнлантăн-и?

Я к л а ш к и н *(ухмаха ерме пуçланă пек)*. Чим-ха, юлташ, чим-ха... Хăçан апла...

Б а р а б а н о в. Виçĕмкун çырăнтăмăр. Питĕ вăйлă туй турăмăр. Кухньăра курмарăн-и,— мĕн чухлĕ пуш кĕленче унта? Пĕтĕмпех туй юлашки вăл. Ăнлантăн-и? Кала, эппин: кам халь Лисук упăшки? Эсĕ-и, эпĕ-и?

Я к л а ш к и н. М-м... м-м... Л-л... Лисукĕ хăй ăçта халь?

Б а р а б а н о в. Ташлать.

Я к л а ш к и н *(кăшкăрать)*. Эпĕ ăна ташлаттарăп! Юлашки кĕпине хывса илсе ташлаттаратăп!

Б а р а б а н о в. Çухăрма кирлĕ мар, старик. Лисук сансăрах пит лайăх ташлать. Ăна балет артистки пулма йышăннă ĕнтĕ.

Я к л а ш к и н. Кăтартăп ăна балет!

Б а р а б а н о в. Лăплан. Халь тин нимĕн те тăваймастăн. Вăл хăйĕн пурнăçне саккун йĕркипе туса пырать, сан пек мар. *(Сĕтел çинчи кĕленче çине кăтартса.)* Ку перцовкăна эс хыпса ятăн-и?

Я к л а ш к и н *(вăкăр пек пăхса)*. Мĕн, шалккă-им?

Б а р а б а н о в. Ăна пирĕн иксĕмĕрĕн пĕрле, черккесене шаклатса, ĕçмеллеччĕ. Эпир санпа пуçанасемçке-ха...

Я к л а ш к и н *(сиксе тăрса кăшкăрать).* Апла пулсан, халех ман хваттертен тухса вăркăнăр! Паянах! Çак самантрах! Вон ман хваттертен!

Б а р а б а н о в *(Яклашкина каллех хулпуççинчен пусса диван çине лартать).* Ан çухăр, старик. Тата сăмаха ăна тĕрĕсрех калаçас пулать... Пĕлетĕн-и, ку хваттер нихçан та сан пулман. Ордерне Лисук ячĕпе çырнă. Ăна панă ку хваттере, ма тесессĕн санăн урăх хваттер пур. Пĕр çынна кам ухмахĕ икĕ хваттер парать, шухăшласа пăх-ха эсĕ хăвăн кукша пуçупа! Çапла вара, ку ыйту таталнă, тесе шутламалла...

Я к л а ш к и н. Обстановки, япалисем пĕтĕмпех манăн! Эп илнĕ, хам укçапа! Йăлт илсе тухса каятăп, пĕр çӳпĕ те хăвармастăп çав сучка валли!..

Б а р а б а н о в. Ку та кирлĕ мар калаçу, старик. Кунти япаласене пĕрне те эс илмен, пурне те ман арăм илнĕ. Свидетельсем пур, эпир вĕсене алă пустарнă ĕнтĕ...

Я к л а ш к и н. Укçи, укçи камăн пулнă?!

Б а р а б а н о в. Укçи вăл... патшалăхăн, совет укçи.

Я к л а ш к и н. Кам ĕçлесе илнĕ ăна?

Б а р а б а н о в *(Яклашкина çурăмĕнчен лăпкать.)* Вăт, старик, сан вырăнта пулсан, эпĕ ку ыйтăва вуçех те хускатмăттăм. Вăл укçана эсĕ ĕçлесе илменнине пĕтĕм тĕнче пĕлет, темелле.

Я к л а ш к и н. Суя! Суя ку! Эп ĕмĕр-ĕмĕр ĕçленĕ!

Б а р а б а н о в. Вăрланă тесен, тĕрĕсрех пулать пуль, старик. Ахальтен-им эс хальччен тĕрмере ларманнинчен пурте тĕлĕнеççĕ?

Яклашкин пуçне усса, ăна ик енчен хĕссе ларать, Барабанов кухньăна кĕрсе эрех илсе тухать.

Б а р а б а н о в. Телейлĕ эсĕ, старик! Пăх-ха, хăвăн арăмун туйĕнчен сан валли армути эрехĕ пытанса юлнă... Ĕçер-ха иксĕмĕр паллашнă хыççăнах тинĕсри карапсем пек уйрăлса кайнă ятпа!

Черккесене эрех тултарать.

Ĕç, старик! Ак, ятăм сан валли...

Я к л а ш к и н *(ал сулать).* Ĕçместĕп, аюк. Эрехсĕр те йӳçĕ.

Б а р а б а н о в. Ухмах пулатăн. Ун пек чухне эрех чуна епле çĕклентерсе янине мантăн-им? Малтанхи арăмна пăрахнă чух ĕçнĕ-çке эсĕ, ма-ха хальхи арăму хăвна пăрахнă чух ĕçмелле мар? Тавай, тавай, яра пар!

Ĕçеççĕ.

Я к л а ш к и н *(Лисук портретне чышкипе юнаса кăшкăрать).* Йытă! Хура юн! Çĕлен! Пĕтертĕн ман пурнăçа, явăлтан çуралнăскер!..

Б а р а б а н о в. Çитĕ, старик! Ман хваттерте кун пек харкашма юрамасть, пускилсем илтсен, тем калĕç. Эп культурнăй çын, музыкант, ман арăм халь ĕнтĕ артистка, ху пĕлен... Эпир санпа пурин çинчен те калаçса татăлтăмăр, пĕр-пĕрине ăнлантăмăр, çапла-и?

Я к л а ш к и н. Ăнланман эпĕ нимĕн те! Мĕн пулса пырать ман пурнăçра? Мĕншĕн çав териех телейсĕр эпĕ? Мĕншĕн хам виличченех ман арăм качча каять?!

Б а р а б а н о в *(ун çывăхнерех пырса).* Сăмахпа каланине ăнлансах çитеймерĕн пулсан, ак çакăнпа ăнлантаратăп... *(Чышкине Яклашкин сăмси патнех илсе пырать.)* Анчах ыраттарасран хăратăп. Хăнăхман эпĕ сан пек ват стариксене хĕнеме.

Я к л а ш к и н *(сиксе тăрать).* Çап ара, çап!

Б а р а б а н о в. Ытлашширех пулма пултарать. Таçта, вĕлерсе пăрахăп, тата.

Я к л а ш к и н. Вĕлер! Вĕлер! Эс мана ахаль те вĕлертĕн!

Б а р а б а н о в. Ан янра, старик. Атя, тумлан та часрах — тухса вĕçтер хăвăн çулупа. Атту часах çур çĕр çитет ĕнтĕ. Хăрамалла, тĕттĕм çĕрте йĕмне хывса илĕç.

Я к л а ш к и н. Эс мана хăвалатăн-и?

Б а р а б а н о в. Халлĕхе ырăпа калатăп, анчах эс кутăнланса тăрсан, тапса кăларса яма та пултаратăп. Кун пирки иккĕленмеллиех çук.

Я к л а ш к и н *(макăрса ярас пек).* Ăçта каям-ха эпĕ, тусăм? Ăçта кая-а-ам?

Б а р а б а н о в. Ăна-кăна пĕлместĕп, анчах санăн хăвăн килӳ, арăму, ачу пуррине пĕлетĕп. Çапла-и?

Я к л а ш к и н. Кĕртмеççĕ вĕсем мана! Çывăха та ямаççĕ, пĕлсех тăратăп.

Б а р а б а н о в. Вăл енне кайсан, Лисук та сана текех кунта кĕртме хушмарĕ. Хваттер хуçи вăл вĕт,

эпир санпа иксĕмĕр мар. Çапла-и? Атя, тепрер черкке ĕç те — яра пар, старик.

Ĕçеççĕ. Яклашкин лĕр-р макăрса ярать.

Я к л а ш к и н. Пĕтрĕ ман пурнăç...

Б а р а б а н о в. Ничево, ничево, старик. Пĕтмен-ха сан пурнăçу. Кив арăму патне кайса ун умĕнче пĕр эрне чĕркуçленсе тăратăн та — каçарать вăл сана. Хĕрарăмсем хăйсене тархасланине юратаççĕ... Васка, васка, старик. Кӳр-ха, сан çăпата кантрисене çыхса ярам, атту сана хырăму кансĕрлет пулмалла. *(Шнурокĕсене çыхса ярать.)* Ну, халĕ ĕнтĕ çулу такăр пултăр. Пит лайăх паллашрăмăр, çавăн пекех ырăпа уйрăлăпăр. Ут, старик, ут... *(Яклашкина çурăмĕнчен хуллен тĕрте-тĕрте алăк патнелле илсе пырать.)*

Я к л а ш к и н *(чарăнса каялла çаврăнса тăрать)*. Лисукĕ хăй ăçта халь? Ăçта, тетĕп!

Б а р а б а н о в. Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

Я к л а ш к и н. Сывпуллашас килет ман вăл çĕленпе!

Б а р а б а н о в. Çук вăл. Килмест кĕçĕр.

Я к л а ш к и н *(Лисук портречĕ çине пăхса)*. У-у, шуйттан! Вуник майракалли! *(Сасартăк урайĕнчен мăн пушмак илет те пĕррех çав портрета перет, лешĕ чăнкăр-р тăвать.)* Ак сана, асăнмалăх!

Б а р а б а н о в *(Яклашкина ĕнсинчен ярса илет)*. Эс мĕн ухмахланатăн, ватсупнă? Эп сана куншăн... *(Яклашкина пуçне çĕрелле пĕксе силлеме тытăнать.)* Кантăк ванчăкĕсене чĕлхӳпе çулласа пуçтаратăн акă!

Тепĕр пӳлĕмрен Л и с у к сиксе тухать.

Л и с у к. Мĕн турĕ вăл упăте?

Б а р а б а н о в *(Яклашкин пуçне çаплах пĕксе тăрса)*. Куран, сан портретна çĕмĕрчĕ!

Л и с у к *(Яклашкин патнелле ыткăнать)*. Ах, ирсĕр пуç, ах, ват тăмана! *(Яклашкина питĕнчен ик аллипе умлăн-хыçлăн çăтти-çатти, çăтти-çатти паркалать.)* Сĕтĕрĕнчĕк, килсĕр йытă! Тьфу! Тьфу! *(Яклашкин кукши çине сурать.)* Халех пусма тăрăх кутăн антарса яр ăна, Ерёма! Сăмси катăлтăр, пуçĕ çурăлтăр, алли-ури хуçăлтăр!

Я к л а ш к и н *(макăрать)*. Лисук... чунăм!..

Л и с у к *(урипе тăрст! тапать)*. Хуп шăршлă çăвар.

на! Чунăм тетерем эп сана! Хăвăн чунна кăларса илетĕп! *(Барабанова.)* Мĕн тытса тăратăн тата ăна? Тухса ывăт!

Барабанов Яклашкина пуçне пĕктернипе илсе тухса каять. Самантранах каялла таврăнса пăта çинчи трубана вĕçертсе илет те уçă алăкран кăшкăрать.

Барабанов. Эй, пуçана! Ан васка, эп сана музыкăпах ăсатас терĕм-ха! Акă, итле! Эс чи юратнă кĕвве калатăп! *(«Ан авăн, шĕшкĕ» кĕввине нăрлаттарать.)*

Чаршав.

1969

## ÇЫРАССИ ÇАПЛА ПУÇЛАНЧĔ...

*(Сатирик автобиографийĕнчен)*

Аллă икĕ çул ĕлĕкрех, 1925 çулхи март уйăхĕнче, чăвашсен «Капкăн» ятлă сатирăпа юмор журналĕ тухма тытăнчĕ.

Çак пĕчĕкçеç журнала вулакансем тӳрех питĕ юратрĕç, яла пыракан «Капкăн» номерĕсем, алран алла куçса çӳресе, ик-виç кунтапах пăру чăмланă пек сӳсленсе каятчĕç. Кĕçех «Капкăн» тени халăх хушшинче «милици» сăмахран та вăйлăрах пулчĕ. Калăпăр, хĕрарăмсем пĕр-пĕр Йăван-Пăваншăн хирĕçсе кайса пĕр-пĕрин çӳçĕсене тăпăлтарма тытăнсан та: «Сан çинчен «Капкăна» çырса кăлармалла-ха!» — тесе кăшкăратчĕç...

Шупашкарти хаçатсене эпĕ вунтăваттăрах çырма тытăннăччĕ, чылай киревсĕр çынсене ним шикленмесĕрех «продернуть» тунă, пĕрре, паллаңă çынсем çинчен çырса кăларнăшăн, аттерен чĕн пиçиххи лекнине те астăватăп, анчах 1927 çулччен «Капкăнра» пичетленме тӳр килменччĕ.

Ун чухне эпĕ Етĕрнери педтехникумра вĕренеттĕм. Пирĕн «чăваш чĕлхин методики» тенĕ предмет пурччĕ. Ăна пире Н. преподаватель, ватă хусах, вĕçĕмсĕр махорка мăкăрлантарнипе шултăра шăлĕсем сап-сарă пулса кайнă çын вĕренткелетчĕ. Унăн «лекцийĕсене» итлеме çав тери асапчĕ ĕнтĕ — те чăвашла калаçать, те вырăсла, ниепле те уйăрса илме çук. Пĕр урок вăхăтĕнче эпĕ унăн «лекцине» стенографист пекех çырса пытăм та, акă мĕнле «классикăлла япала» пулса тухрĕ (сыпăкне çеç илетĕп):

«...— И вот, если сирĕн свободнăй вăхăт пулсан, Афанасьев методикине валас полать. Можно кăтартма Афанасьевсăр пуçне еще Иванова, массовый практикăра кирлă полать. Кĕнеки в двад-

цать третьем году издать тунăскер полсан та, ничего. Кив источниксене если взять, то Михеевăн пор, первая, вторая, третья, четвертая книгăсем, инородцăсен школьсем валли. Потом в прошлом году анчах издали...» — тата ытти те, малалла та çавăн пекех анра-сухралла.

Каçхине çак «стенограммăна» хамран пĕр курс каярах вĕренекен юлташа кăтартрăм — вăл та Шупашкарти хаçатсене çыркалатчĕ. Ахăртăмăр кăна вара çавăнпа иксĕмĕр.

— Яр «Капкăна»! — терĕ юлташ.— Çапаççĕ! Хăй чăвашла икĕ сăмах сыпăнтарса калаймасть, çапах та «чăваш чĕлхин методикине» вĕрентет. Ял кулли вĕт ку! Мăшкăл!..

Çав каçах эпĕ «Мăшкăл» ятлă фельетон çыртăм. Унта çак çӳлте илсе кăтартнă сыпăка кĕртсе хутăм. Анчах хамăн чăн хушамата лартма шиклентĕм: епле пулсан та, фельетон геройĕ— ман учитель-çке-ха, кĕçех экзаменсем пуçланмалла, çынни усал, темрен тем пулса тухĕ, терĕм. «Тăри» тесе çырса хутăм аяла. Кăлăхах пытанма тăрăшнă иккен эпĕ! Ик эрнерен-и, виççĕрен-и, хайхи фельетонлă «Капкăн» персе çитрĕ те, ман «герой» урока урнă пек пырса кĕчĕ.

— Эп ку «Мăшкăлшăн» авторне суда паратăп! Нельзя честный çынсем çинчен клеветать тума! — «Капкăн» номерне сĕтел çине çат! çавăрса çапрĕ вăл. Хăй мана çисе ярас пек пăхать.— Хотя кунта псевдоним, но я знаю кам çырнине. Хам енчен могу подтвердить: ку «Тăрин» чăнах та тăрри тово... шáтăк! (Мана ухмах тени пулчĕ ĕнтĕ ку...)

Тытăнчĕ хайхискер мана хĕсме! Хам япăхах вĕренмен пулин те, çултаlăк вĕçĕнче «неуд» шаплаттарса хучĕ. Юрать чăваш литературине вĕрентекен тепĕр преподаватель хута кĕчĕ, атту-тăк пĕтеттĕм!

Çапла пуçланчĕ манăн сатирик «карьери». Самаях хурлăхлăн пуçланчĕ, тес пулать. Тепĕр тесен, кунтан тĕлĕнмеллиех те çук: сатириксене, фельетонистсене вулакансем çеç юратаççĕ, вĕсен перисем вĕçне тăрăннисем вара — тӳсме пултараймаççĕ...

Техникум хыççăн мана тӳрех Шупашкара, «Канаш» хаçат (хальхи «Коммунизм ялавĕ») редакцине ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Килсенех эпĕ Иван Мучипе — «Капкăн» хуçипе — паллашрăм. «Санăн перу çивĕч, «Капкăн» валли ытларах çырма тăрăш»,— терĕ вăл мана. Пĕтĕм чăваш халăхĕ хисеплекен писатель çапла калани çунатлантарсах ячĕ. Çĕрĕ-çĕрĕпе тенĕ пек çыраттăм эпĕ. Халĕ «Капкăнăн» çавăн чухнехи номерĕсене пăхса тухрăм та — савăнсах кайрăм: 1928 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче Иван Мучи манăнултă калавпа фельетона пичетлесе кăларнă иккен. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене эпĕ манса та кайнă. 1929 çулхи пĕрремĕш номерте те манăн самай пысăк калав тухнă...

Паллах, çамрăк автор çырнисем ытла пур чух та ăнăçлă пулман-ха. Час-часах Иван Мучи манăн алçырăвĕсене каялла тавăрса паратчĕ.

— Ку пиççех çитмен-ха санăн, ачам. Ĕçле пăртак, паллă тунă вырăнсене тӳрлет! — Тата ялан вĕренме хистетчĕ: — Ытларах вулас пулать, ачам, Гоголе, Щедрина, Чехова!

— Вĕсене вуланă-ха эпĕ...

— Татах вула! Пилĕк хут, вунă хут! Хальхи вырăс писателĕсене те вула — Зощенкăна, Шишкова, Лебедев-Кумача. «Лапоть» журнала вула.

— Вĕсене тупма çук, Иван Иванч...

— Пыр хам пата, парса ярăп.

Чăнах та, хăй патне кайсан, вăл мана ун чухнехи вырăс сатирикĕсемпе юморисчĕсен чылай кĕнекисене вулама парса ячĕ. Вырăссемпе пĕрле пĕр украинец — Остап Вишня кĕнеки те пурччĕ. «Улыбки Вишни» ятлăччĕ вăл. Унччен эпĕ вăл автор çинчен илтмен те.

Эпир Алакĕр Васлейĕпе пĕрле пурăнаттăмăр. Вăл та «Капкăна» тăтăшах çыратчĕ. Иван Мучи парса янă кĕнекесене иксĕмĕр те канфет ĕмнĕ пекех вуласа тухрăмăр. Çавăн хыççăн эпир «Капкăн» валли хăшпĕр япаласене пĕрле çырма пуçларăмăр, çырнисем айне «Симĕс хырăм» тесе ал пусаттăмăр. Епле майпа сиксе тухнă пирĕн çав псевдоним — ниепле те аса илейместĕп... Иван Мучи хăй тавра пултаруллă авторсене пухса, вĕсене хавхалантарса ĕçлеттерме пит пĕлетчĕ. Çав çулсенчи «Капкăн» номерĕсене илсен, Иван Мучисĕр хăйĕнсĕр пуçне унта пĕрмаях Н. Васанкка, Ç. Шăпчăк, Н. Евдокимов, М. Аттай, А. Этмен, В. Алакĕр, И. Тукташ пичетленнине куратăн. Вĕсем хушшинче эпĕ те пулнă. Питĕ туслă, питĕ ĕçчен коллективччĕ вăл!

«Капкăн» пĕрмай ӳссе лайăхланса пычĕ. Унăн тиражĕ ытти пур журналсенчен те пысăкчĕ. Журналта пĕрмай çĕнĕрен çĕнĕ ятсем палăрчĕç.

1931 çулта сатирăпа юмор кĕнеки кăларасси пирки сăмах хускалчĕ.

— Чи лайăх калавсене суйласа илсе кăларас...

Кун пирки Иван Мучи пире темиçе хут та пухса калаçрĕ. Астăватăп, пĕррехинче уйрăмах вăрăм калаçу пулчĕ.

— Хăвăрăн ку таранччен «Капкăнра» мĕн пичетленнĕ, çавсене пурне те пăхса тухăр,— терĕ Мучи.— Ылтăн пĕрчисем шырăр...

— Леш юптарури автан тислĕк купинче ахах пĕрчи ширанă пек-и? — кулса илчĕ Шăпчăк.

— Çавăн пек тесен те юрать, Папай. Анчах çав пĕрчĕсене те тепĕр хут тасатса çутатас пулать...

Кӗнеке валли алҫырӑвӗсем часах пухӑнса ҫитрӗҫ. Темӗн пысӑкӑш купа пулчӗ. Иван Мучи ҫав «купара» чылай чакаланчӗ, кӗнекене кӗртме тивӗҫлисене суйларӗ. Кӗнекин ятне те хӑех тупнӑччӗ — «Йӗплӗ калавсем». Вӑл пире пурсӑмӑра та килӗшрӗ: питӗ тӗрӗс ят!

1931 ҫул вӗҫнелле «Йӗплӗ калавсем» кӗнеке пичетленсе тухрӗ. Хуплашкине Василий Макаров художник тунӑ — «Йӗплӗ калавсем» сӑмахӑн юлашки саспаллинчен ҫиҫӗм кукӑрӑлкаласа анать те кулак пуҫне пырса тивет, лешин ҫамкинчен юн пӗрӗхет... Кӗнекере ҫичӗ автор — Иван Мучи, С. Ялавин, Ҫ. Шӑпчӑк, Л. Агаков, Н. Ваҫанкка, А. Этмен, В. Алакӗр ҫырнӑ 22 калав. Хальхи виҫепе шутласан, пысӑк мар вӑл, унта пӗтӗмпе те 114 страница ҫеҫ, ку чухнехи сатириксем пӗчченшерӗн те ун пек мар хулӑн кӗнекесем кӑлараҫҫӗ, анчах 52 ҫул каялла пирӗншӗн те ку тем пекех пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ.

Тӗрӗссипе каласан, ҫав «Йӗплӗ калавсем» кӗнеке пирӗн сатирӑпа юмор литературин «пирвайхи чӗкеҫӗ», унӑн пуҫламӑшӗ пулнӑ. Ҫавӑнпа та эпӗ ӑна чи юратнӑ, чи хаклӑ япала пек упраса усратӑп!

...Хальхи вӑхӑтра пирӗн чӑваш совет литературинче сатирӑпа юмор жанрӗ вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пырать. Кула́ш ӑстисен ретне пултаруллӑ авторсем кӗре-кӗре тӑраҫҫӗ. Вӗсен сӑвви-юптарӑвӗсем, калавӗ-фельетонӗсем, камичӗсем, шӳчӗсем т. ыт. те пирӗн кӗнеке издательствинче те, «Капкӑн» журналӑн библиотекинче те тухаҫҫӗ, халӑх вӗсене питӗ ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнса вулать.

Пӗлетпӗр эпир: пирӗн социализмла пурнӑҫ йӗркисене пӑсакансемшӗн, халӑх пурлӑхне хапсӑнакансемшӗн, суя ҫынсемшӗн, юлхавсемшӗн тата ытти ҫавӑн пек путсӗр ҫынсемшӗн пирӗн сатира — питӗ лайӑх, витӗмлӗ эмел! Ун пек этемсене ҫак эмеле ытларах хыптармалла!

## ТУПМАЛЛИ


Вăрттăн упăшка . . . . . . 3
Пурте дипломлă!.. . . . . . . 18
Михал Михалчăн икĕ пурнăçĕ . . . . 28
Хаклă кĕрÿ . . . . . . . . 38
Вăрăм Васли — качака патши . . . . 57
Йывăр кун . . . . . . . 67
Пулă шăмми пыра ларать . . . . 77
Пăшăл-пăшăл . . . . . . . 88
Çуллахи калав . . . . . . . 96
Юлашки ревизи . . . . . . 108
Хăрушă тавăру . . . . . . . 116
Этем тусĕ . . . . . . . . 128
Самосвал . . . . . . . . 140
Аптрашкин аптрани . . . . . . 151
Чемпион . . . . . . . . 167
Ваталма майĕ çук . . . . . . 175
Хăшне юратас? . . . . . . . 183
Çакăн пек те пулкалать . . . . . 194
Çичĕ мăшăр çăпата . . . . . . 195
Хĕр шыратпăр . . . . . . . 201
Ыр çынсем çапла калаççĕ . . . . . 211
Ялан чап-чап уйăхĕ пулмасть . . . 212
Çырасси çапла пуçланчĕ . . . . . 243

Агаков Леонид Яковлевич

СЕКРЕТНЫЙ МУЖ

Сатирические и юмористические рассказы

На чувашском языке

Редактор А. А. Соколова
Художник В. Л. Агаков
Художественный редактор А. А. Макаров
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректоры: Н. З. Романова,
Л. А. Иванова

НТ 12908. Сдано в набор 9/VI-1977 г. Подписано к печати 31/X-1977 г. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 7,75. Усл. печ. л. 13,02. Учетно-изд. л. 12,78. Заказ № 3060. Тираж 15 000 экз. Цена 95 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР,
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

95 коп.

